К89
А-40924

Владимир КУЗЬМИН

# ТАМĂК ХУРАННЕ ВĂРЛАНИ



Национальная библиотека ЧР
4-040924

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | |
| | | | | | |
| | | | | | |
| | | | | | |
| | | | | | |
| | | | | | |
| | | | | | |

К Обязат. экз.





**Владимир Кузьмин**

# ТАМĂК ХУРАННЕ ВĂРЛАНИ




Шупашкар
«Çĕнĕ вăхăт» издательство
2007

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
К 89

Кузьмин В.П.
**К 89** Тамăк хуранне вăрлани. Памфлетсем, фельетонсем, кулăшла хайлавсем, шўтсем. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт» издательство, 2007. – 164 с.

«Капкăн» лаççинче хĕрĕх çул ытла вĕркĕч вĕртерсе те йывăр мăлатукпа сунтал якатса ывăнма пĕлмен автор ку кĕнекере паянхи пурнăç тумхахĕсене туптать.

Ч-40924
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Кузьмин В.П., 2007.

ПРОВЕРЕНО
20 10




## ТИПÇЫРМА КИМĂНĔ

Хăйсем манса кайнă вăхăтранпах Çавал тăрăхĕнче пурăнакан чăваш арĕсем те çунат çапса ячĕç: «Камран начар çынсем эпĕр? Пирĕн те хамăрăн хум кимăнĕ пулмалла!»

Ĕмĕр мухмăрне нимпе пусарайми шая çитнĕ Типçырма пуçĕсем тинех çамка ăшĕнчен тăн кăларма пуçларĕç. Тăна тăмпа пăтраштарса ямастпăр-ши тесе чăрт-чарт сурса тавлашнă хушăра вĕсен хушшине тахăшĕн манерлĕрех шухăшĕ кĕрсе ÿкет. Çав хаклă «япалана» хыпала-хыпала, типçырмасем те Чăваш тĕнчине тĕлĕнтермелли янăру çавăрттарса хучĕç:

Çавал пире шыва ярсассăн,
Пуçа усмарăмăр эпир.
Типçырмана куçса ларсассăн,
Пуçланчĕ пирĕншĕн çут ир.
Типçырма, Типçырма, Типçырма,
Ĕмĕр пулнă-çке эс Тĕп çырма.
Çавă ирпе колхоз тусассăн
Пуя пуласшăнччĕ кашни.




***ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров палăртнипе 2006 çул “Ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкĕ” ятпа иртрĕ. Ăна Чăваш Республикинче пурăнакан халăхсен пĕрлĕхĕн, малашлăх аталанăвĕн, чун тата кăмăл-сипет хаклавĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе ĕмĕрлехех тăсар.***

Сывланӑ пурте пӗрле ассӑн,
Пулман эртеллӗх айкашни.
*Хушса юрламалли.*
Ҫӗршывӑма аҫа ҫапсассӑн,
Вӑрҫа кар тӑчӗ Типҫырма.
Тӑшман ҫарне ҫапса хуҫсассӑн,
Пуҫларӗ ҫӗнӗлле ҫӗре ҫырма.
*Хушса юрламалли.*
Эпир нихҫан пӗтмен, мӑнаҫлӑн
Ытакланса юрлатпӑр савӑнса.
Пирӗн ҫине пӑхса, ӑмсаннӑн
Ҫавал юхать-ха хумлӑн, сарӑлса.
*Хушса юрламалли.*
Нихҫан ҫунман Типҫыр пуясшӑн,
Мухтать ыт-ҫитлӗ пурнӑҫа,
Вилсен те, вилӗмсӗр юласшӑн
Алӑ парсах Мӑн Ҫавала.
Типҫырма, Типҫырма, Типҫырма,
Ӗмӗр пулнӑ-ҫке эс Тӗп ҫырма.

Ҫурхи Ҫавал пек шарлаттарса юхать Чӑваш Типҫырмийӗн мухтав юррийӗ-кимӑнӗ ял-ял, тӑхӑр хула тӑрӑх. Пӗри тепринчен юласшӑн мар. Ӑҫтан чап илес темӗн-ха. Ара, авалхи кӗрексем те кӗрӗк арки йӑваласа ларман-ҫке, хӑйсен паттӑрлӑхне мухтаса тӗнчене янратнӑ. Кашни патшалӑхӑн, ӗрлешӳ-кӗрлешӳ, вӑрҫӑ-харҫӑ вӑхӑчӗн хавхаланупа мухтав юрри пулнӑ. Тӗн тӗнчийӗ те хӑй майлӑ ҫавӑрса пӗрлештернӗ турӑ чурисене кимӑн тавра. «Патшана сыхла, туррӑм», «Мухтав», «Юлашки хут хӑватлӑ ҫапӑҫу ҫӗкленет, Интернационалпа этемлӗх вӑй илет», «Нихҫан арканми Союза пӗрлештернӗ пур ирӗк республикӑсене аслӑ Русь» хӑвачӗпе хастарланнӑ, кӗрешнӗ, ҫӗнтернӗ вӗтха. Мӗншӗн паянхи чуралӑхпа чухӑнлӑх умӗнче мӗскӗннӗн пуҫ усмалла? Хӑватланмалла! Ҫунатланмалла! Ҫӑва тухмалӑх хырӑма саплаштарма тырри-пуллинҫ ӳстерейместӗ, какӑриччен пӗрре шӳрпе ҫимелӗх выльӑх-чӗрлӗх самӑртаймасҫӗ, ҫулталӑкра пӗр хутчен ирччен хуп турттармалӑх укҫи-тенкине ӗҫлесе илеймеҫҫӗ пулин те, кимӑн юрла-юрла чунпа хӑпартланассишӗн, пуш хырӑма каҫӑртса пӗлӗтелле кармашассишӗн ӗмӗтленсе, ҫынран юлас килмест пуль ҫав хураҫырмасемпе хӑвӑлҫырмасен те, хӑймалакассисемпе чӗрӗпкассисен те, шалчакассисемпе шатракассисен те... Шетмӗ тӑрӑхӗнче Трак-

Красноармейски, Чулхула чиккинче Хĕрлĕ Чутай-Красночетайски, Çавал пуçламăшĕнче Нурăс-Калинино, Кĕтне çумĕнче Каçал-Комсомольски кимăнĕсем хăш чĕлхепе чаплăрах та хăватлăрах янăрама пултарассине кам-кам татса парассине кĕтеççĕ, тет. Кипечсемпе асаматсен те пуçа ватмалăх пулнă: Канаш кимăнĕ çырмалла-ши е Шăхран кимăнĕ? Канашĕ те чăвашла, Шăхранĕ те чăвашлах – чăвашăннах. Хăшĕ хăватлăрах ĕнтĕ – çавна ярса илнĕ пуль вĕсем. Çавăнпа канăç тупĕç. Виç çавапа харăс çулса виç Çавал хушшине ылтăн капанĕ хывнă паттăрсем те сулнăка çапăнса юласшăн мар, патшалăх кимăнĕсем хушшинче хăйсен кимăнĕпе мухтав юррине кĕрлеттересшĕн. Район, хула, ял, урам, хапрăк-савăт, пасар-ясар, фирма-ферма, институт-проститут, ентешлĕх-ĕçтешлĕх, юлташлăх-хурăнташлăх, алсалăх-алхаслăх, ООО-Охо-хо алхасать хăйĕн кимăнĕпе. Калама çук пысăк хавхаланупа аталанса пырать çак ăмăрту. Çав ăмăрту юхăмне лекнĕ муза чурисем çĕнтерӳ тăвĕ тăрне пĕр-пĕрне тапта-тапта тапаçланаççĕ. Ту тăрринче вун-вун пинлĕ, çĕр-çĕр пинлĕ укçа купи йăлкăшать-çке. Кимăн тесен, хуçалăх хуçисем юлашки юлнă качака пек ĕнине те, хĕç пек сыснине те сутса яма хатĕр.

Иртнĕ ĕмĕрте, соцăмăртура çĕнтернĕ ĕçченсене хисеплĕн чысласа, хисеп хучĕ е хаклах мар парне паратчĕç. Халĕ «кимăн ĕçченĕсене», вĕлерес пек ытамласа, купи-купипе укçа, хаклăран та хаклă парне тыттараççĕ, хула-ял тата тем-мĕн эртелĕн хисеплĕ членĕсемпе гражданинĕсен ячĕпе чаплантараççĕ. Хуçипе юнашар палăк лартманни çеç, ыран çав «кимăн патшалăхĕ» куçран çухаласса ăнкармасăрах.

Ах, мĕн-ма асамçă мар-ши? Асамçă пулсан, пухасчĕ те çав укçа-тенке арпа кăрманне, «çурхи тĕнче вăраннă чух, чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух», радио «Россия священная наша держава» тесе пурне те илтмелле юрласа янă хыççăн, пуçлă-куçлă, тăнсăр-сукăр пуçлăхсене кăшăла çавăрасчĕ те ун тавра, мăнаçлăн тăсса ярасчĕ чăваш халăхĕн тĕп кимăнне: «Алран кайми аки-сухи...»

Мана çав кăрман карти умĕнчех çапса пăрахатпăр тесен те, эпĕ те хам юррах ĕнĕрлетĕп: пуçлăхсенчен ытларахăшĕ Раççей кимăнне те, Чăваш патшалăх кимăнне те, Чăваш наци конгресĕн кимăнне те умĕнчен пуçласа вĕçне çитиччен тĕплĕн пĕлмест. Сатту кашниех хăйĕн «Типçырма кимăнне» пуринчен те хастартарах, хăватлăрах, янравлăрах шăрантарать.

Çапах та, «Типçырма кимăнĕн» мухтавлă сасси те ан тухтăрччĕ вĕсен пуçĕнчен, кăрманти укçа та арпа пек вĕçсе ан кайтăрччĕ тесен, тен, кимăн фончĕ тумалла? Çав фонд шучĕпе кимăн ликбезĕн шкулĕсем уçмалла? Тем тесен те... Патшалăх мухтавĕн юррине йĕркеллĕ юрлама вĕренеймесĕр влаç тытăмĕн урхамахне епле-ха телей çулĕпе ĕрĕхтерсе пырăн?

*2006 ç.*

## АЧА ТАКАМРАН ТА ПУЛАТЬ

Шурхулара пурăнакан Ваççи-Каççи-Ваççилийĕ Ваçваç Ваççилиссине «Халăх хăлхи» хаçат тыттарчĕ:

– Вула!

– Мĕн?

– Хыпар. Мана орден панă.

– Мĕншĕн?

– Мĕншĕнне хăвах чухлама кирлĕ, – пăркаланса тăракан арăмĕн вунă ача çуратса та çемçелме пĕлмен купарчине шăлса илчĕ Ваççили.

– Кĕртлешсе ан кай-ха. Вĕçсе таракан кайăк çук унта. Тăхта. Вулам: «Ачасене воспитани парас тата çемье йăли-йĕркине çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн акционерсен «Пăра» хупă ушкăнĕн пăралакан мехколоннин çĕр пăралаканне, нумай ачаллă ашшĕне Василий Васильевич Васильева «Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденпа наградăлас». Паттюшки! Ман упăшка та герой. Вăт тĕнче.

– А якшĕ, – куçне-пуçне чалкăштарчĕ Ваççили. – Ма мухтанас мар. «Ача амăшĕ героиня» орденпа тĕртнĕ хыççăн юлнă сăмса çинчи çырма халĕ те пĕç хушши пек сарăлса выртать. Мутри эс. Мĕн, эс пĕччен çуратса тултартăн-им çемье кĕтĕвне? Эп хутшăнман-им унта?

Ваçваç Ваççилисси упăшкине чăп чуп туса илчĕ те:

– Йĕркеллĕ пул-ха эс, – терĕ Ваççилин тути хĕррине йĕпетсе. – Хутшăнмасăр ара. Эс хутшăнмасăр,эс аташса утияла мачча таран вĕçтермесĕр Арăсланпа Венера та, Патриспа Элеонора та, Марспа Аврора та, Ангелпа Афродита та, Сетнерпе Нарспи та кашăк тытса ларас çук çак вăрăм сĕтел хушшинче. Сĕтелĕпе пĕрлех аппетичĕ те çухалчĕ. Темскер, тăварлă çиес килекен пулчĕ. Хаçачĕпе пĕрлех селедка та туянмаллаччĕ.

– Каллех-им? – уçӑлнӑ халат арки айнелле пӑхрӗ упӑшки.

– Ӑхӑ. Çӗнӗ ӗмӗр паттӑрӗ йӑшӑлтатать.

Ваççили лавккана тухса чупрӗ.

Упӑшки тулли сумкӑпа хӑшӑлтатса çитнӗ хыççӑн сӗтел хушшинче питӗ пӗлтерӗшлӗ хыпарсене хыпкалантарса ларнӑ хушӑра телефон шӑнкӑртатрӗ. Мехколонна паянах Пӑрачкава тухса каять иккен. Пуян çӗр айӗнчен вӗсен минерал шывӗ пӗрӗхтерсе кӑлармалла. Ваççили хатӗрленме пуçларӗ. Эрех ӗçсе хӗрнӗ хӗрарӑмӑн чӗлхи пӑрчӑкан чӗлхинчен çӗлен чӗлхине куçрӗ:

– Ача хуйхи çук сан. Тухса каян та... Çӗр пӑраласах ӗмӗрне ирттертӗн ӗнтӗ. Воспитанийӗ те, çемье йӑла-йӗркине çирӗплетесси те йӑлтах ман çинче. Ай, пета санпала, нумай ачаллӑ ашшӗпе. Ман пӗчченех...

Пӗччен тӑрса юлсан Ваçваç Ваççилисси пурнӑç хултӑрчне çавӑрттарса ларчӗ:

«Ах, юратӑвӑм-çунатӑмçӑм Африканӑмçӑм. Эсӗ комсомол тилхепине тытса пыраттӑнччӗ ларкӑч çинче, эпӗ çемçе кӑрманта сана хавхалантарса юрласа килеТТӗм. Вӑйӑран вӑкӑр пулчӗ те, мана качча илмерӗн, пулас ачупа пӗрлех урӑххине парнелерӗн. Комсомол активисчӗ, коммунизмла ӗç ударникӗ Ваççили хӑй хулаком секретарьне качча илнӗшӗн савӑннӑ пек чӗчӗ ӗмме пӑрахнӑранпа та савӑнманччӗ пуль. Ывӑл çуралсан, ухмахскер, «Хамӑн чи юратнӑ аслӑ юлташ, пӗрремӗш секретарь ятне хуратпӑр», – тесе тӑнран ячӗ вӗт. Африкан Африканч ан пултӑрччӗ тесе-çке сана, тӑнсӑра, ывӑлӑма Африка Арӑсланӗ ятне паратпӑр тесе аран-аран лӑплантартӑм. Тӑн çитместех сирӗн, арçынсен, ку енӗпе. Шахвӑртма пулать иккен сире темле те. Эх, ачи хыççӑн ачи пулса пычӗ, ашшӗ хыççӑн ашшӗ тупӑнать. Хырӑмрин, вун пӗрмӗшӗн те, ашшӗ тени Ваççили марçке? Орден та илтӗмӗр, анчах юрату тени çеç кӗмерӗ-çке иксӗмӗр хушша, упӑшкамçӑм. Эх, Африканӑмçӑм, эс уçнӑ çерем çулӗ Африкӑна та çитерчӗ. Йӑрӑмлӑ-йӑрӑмлӑ хура çӳçлӗ, тӗксӗм ӳтлӗ, шыçмакрах туталлӑ Патрисӑн ашшӗпе тӗнчери çамрӑксен аслӑ пухӑвӗнче паллашнӑччӗ. Итальянсен вӑрлӑхӗ те тухӑçлӑ пулчӗ – Венера юрласа тӗнчене тӗлӗнтерет. Венгрири Балатон кӳллинче шыва кӗни те усӑсӑр юлмарӗ – Будапешт йӗкӗчӗн йӑх тымарӗ Шурхулара чӗрӗлчӗ. Хура тинӗс çыранӗнче ӳте сӑрланӑ хушӑра та хырӑм шӑлакансем юнашарахчӗ: пӑлхар, украин, грузин йӑхне чӑвашла тӑсмалла пулчӗ... Епле савӑкчӗ сирӗнпе, кавалерсем. Ӗçрен ӗçсе килсе çухӑрса выр-

такан упăшка мар. Шăтарма та, пăралама та чăн-чăн Антеях кирлĕ. Çавăнпа пулас ывăлăма Чăваш Ене таçтан муртан килсе лекнĕ грек-ашшĕ ячĕпех – Антей теес терĕмĕр. Ваççили, чунăмçăм, уншăн та шутсăр хĕпĕртерĕн-çке эсĕ. Антей ман еткерçĕ пулать тесе мухтанатăн. Мухтанах. Нумай ачаллă ашшĕ ятне илнĕскерĕн, халĕ санăн савăнмалăх орден та пур. Маххă памастпăр-ха, чăваша та, Раççей халăхне те пĕтерттерместпĕр. Халăх йышне хунаттарсах пыратпăр».

*2006 ç.*

## ПУРĂНАТПĂР МАЛЯЛЛЯ!

Сарă Саррă сарă чечек улăхĕнчи пек сарăлса чечекленнĕ. Хитререх те пиçĕрех туналлă, сăмсана кăтăклантаракан, чуна уçăлтаракан шăршăллă чечеке ясар куçлă ар çурисем ытарлăн сăнаса, япшаррăн татса киленме яланах хатĕр-çке. Сарă Саррă та, хăй кĕтнĕ пекех, Сарă Сариван аллине лекнĕ. Таврара çук чипер ар çури, чечек шăршипе йăлтах ӳсĕрĕлсе кайнăскер, Сарă Саррăран хĕр ар майлаштарса та хурать. Вутлă ыталашу пурнăç çулĕн урапи çумне çыпçăнаймасть пулин те, юрату пăттинче пиçсе тухнă пурнăç ямшăкĕ хăй вăхăчĕпе тĕнчене çухăрса вăратать: «Уа-лля, ма-ля-лля!» Çавăнтанпах ĕнтĕ ăна амăшĕ Уалля-малялля ятпа ыталаса ачашлать.

Сарă чечек улăхĕнче шаннă Сарă Саррăна тахçанах маннă Сарă Сариван урăх улăхра тарласа улах çаранĕ çулать пуль, ывăлĕ Уалля-Малялля вара хĕвел ăшшинче ӳсет те ӳсет пĕлĕтелле. Пилĕкĕ пин те пилĕк çĕр пиллĕке çити шутлама вĕреннĕскерне амăшĕ пĕрремĕш менелник туса пачĕ.

Тĕнче чечекĕ вĕçĕмсĕр чĕрĕ-çке, çут çанталăк улшăнăвĕн йĕркипех майлашăнса пурăнать: симĕсленет те, çурăлать те, шанать те, канать те, унтан каллех чĕрĕлет. Сарă Саррин те, çут çанталăк чечекĕн, тапхăрăн-тапхăрăн ниçта кайса кĕме май çук самант килсе тухать. Хăть турат çине хăпарса лар. Туратти диван çинче хаçат шăтарса выртать пулсанччĕ... Чӳрече уçса çывăрсан та вырăн çине пырса ӳкмест-çке. Турри те çăтмах садĕнчен пăрахса памасть. Шырамасăр, тупмасăр, кĕлеткери пăлхава пӳрне пуçĕпе пусарма май çук.

Акă, куммисене ăсатнă хыççăн Сарă Саррă çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе кăштах канма тесе выртрĕ. Канлĕхĕ çеç

тупăнмарĕ. Юнашарти чĕç пўлĕмĕнчен хĕрарăм шухăшĕпе ăмăртмалла шыв юхать. Уйăх хушши ĕнтĕ хăлхаран каймасть çырмари шăкăртатнă сасă. Юсавçă чĕнме те вăхăчĕ тупăнмарĕ-çке унăн, пĕрмай ырантан ырана хăварса пычĕ. «Кăна чăтма пулать-ха, ах, ак çак çăлкуç таппине чăтса ирттерме май çук. Васкавлă юсавçăсăр вилеп вĕт», – тесе вăл çемçе тўшек çинче асаплăн, çĕлен пек авкаланчĕ. Çав хушăрах савнийĕсене аса илчĕ, анчах пĕрне те кăмăллас темерĕ. Кĕç вĕсене сирсе куç умне Сарă Сариван сиксе тухрĕ. «Ара, эсĕ пур-çке ман хулари чи аслă çăлаканăмçăм – чи юратнă та хастар кавалерăмçăм. Сантехникра чухне самаях кĕркелесе тухаттăнччĕ, ăна-кăна юсаса хăвараттăнччĕ, халь вĕреннĕ-вĕренмен полковнике çитрĕн те, мантăн пать. Маймар, таса начальник. Суя хўтĕлевçĕ. Çапах та, эс мана кирлĕ». Сарă Саррă, кравать пуçĕнчи тĕкĕр çинче вылякан тулли пĕççисем çине шеллĕн пăхса илчĕ те, мобильникпе шăнкăравларĕ: «Салам, чунăмçăм. Мĕн сиксе тухрĕ, тетĕн? Вилеп. Чир-чĕр мар-ха. Сан пульниццу-качку. Ăнлантăн пулсан, килсе чĕрт. Тульккăш сантехник пек пулса кил. Атту шăхличĕмĕртен намăс пек».

Çăлăнăç алăк хыçĕнчех иккен. «Сантехник» туххăмрах персе çитрĕ. Тăваткал чăматанĕнчен уни-куни кăларма пуçларĕ.

«Юсама килтĕн-и, тяття? – сиккелет ун умĕнче Уалля-Малялля. – Аннен те уйăх хушши пĕтнĕ, чĕç пўлĕмĕн те паянтан вĕçленет. Ур-ра!»

Мăнттай арçын аллинчи мăн хыпкăчпа ача сăмси умĕнче шач! шач! тутарса илчĕ. Амăшĕ ывăлне кутран çат! çат! çапрĕ: «Марш хăвăн пўлĕмна! Тухнă пул тулĕк сана, шутла вунă пин те вун пиллĕке çитиччен!»

Уалля-Малялля çур пине суса çитернĕ тĕлелле чĕç пўлĕмĕенчен ўлесе макăрнă пек те, ахăрса çухăрнă пек те тĕлĕнмелле янравлă сасă илтĕнме пуçларĕ: «Ах вилеп! Вилеп-вилеп, вилее-еп... Ах, хытăрах, хытăрах, хыт-тăр-рах. Ах тур-тур, мĕн тăвас? Ах, халь вилтĕм-вилтĕм-вилл...тĕм... Уохх!» Чĕç пўлĕмне юсама килнĕ арçын хулăн сассипе: «Çаплах çитмест-и сана? Тата кирлĕ-и?!» – тесе кĕрлесе ярсан, Уалля-Малялля нĕр! макăрса ячĕ, телефон патне чупрĕ: «Нуль пĕрре-и ку? Аннене вĕлереççĕ. Çăлăр! Панулми урамĕ, 101-мĕш çурт, 13-мĕш хваттер». Ача амăшне пулăшасшăн вĕткеленет, автоматне шатăр-

таттарса алăк патнелле ыткăнчĕ, анчах амăшĕ алăка питĕрсе хăварнă çав. Чĕç пӳлĕмĕ енчен чуна çуракан сасă вăйланса-вăйланса килет: «Ах, вилеп, каллех вилеп!..»

Кĕç пӳрт умĕнче машинăсен оркестрĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ сасăпа янраттарса ячĕ. Милици, чрезвычайлă лару-тăру служби, «васкавлă пулăшу», пушар команти хашка-хашка чупать: малта – кашкăр пек йытă çавăтнă, мăйĕнчен автомат çакнă милици майорĕ, ун хыçĕнче – ятарлă шалпар тум тăхăннă «чрезвычайщик», хĕрлĕ хĕреслĕ чăматан йăтнă хĕрарăм-тухтăр. Пушарниксем ăçтан сĕрĕм-тĕтĕм тухнине тĕрĕслеме хĕрлĕ пусмине тăсса ячĕç. Çăлавçăсем шалтан питĕрнĕ алăка сулимĕнĕпе туххăмра кăларса ывăтрĕç те хĕрарăм сасси илтĕннĕ çĕрелле васкарĕç. Çывăрмалли пӳлĕм алăкне уçсанах йытă хам! вĕрсе ячĕ. Чĕркуççи çинче тăракан çара кутлă полковник пуçне пăрса кам?! тесе кăшкăрчĕ. «Кап...» теме ĕлкĕрчĕ кăна «чрезвычайщик», «Ça мар-и эс?« – илтĕнсе кайрĕ тарăхнă хĕрарăм сасси. «Ça» мар, «çын» эп», - тӳрлетрĕ ăна каплатаканни. – Капсин капитан. Полковник юлташ, докладлатăп: чĕннĕ çĕре пурте вăхăтра çитнĕ, чрезвычайлă лару-тăру пирки тĕп хулана çийĕнчех пĕлтернĕ, Шуйхуй «саранчапа» хăй вĕçсе килет».

Вĕрентнĕ-вĕрентмен йытă та урăх хамлатмарĕ, хырăм çумне сиксе тухнă хĕрлĕ патаккине ниçта хума пĕлмесĕр, нăйкăша-нăйкăша вырăн еннелле туртăнчĕ. Полковник та камлатмарĕ, аптранипе хĕрарăм йĕмне каялла тăхăннăскер, туххăмрах хурмăллă çын пулса тăчĕ, кокардăллă карттусне шакла пуçĕ çине пусса лартрĕ: «Отбой!» Вăтаннине пула çурăмпа çаврăнса тăнă çап-çаврака купарча çĕр чĕтреннĕ пек чĕтреннине асăрханă милици майорĕ ассăн сывласа ахлатса илчĕ. Чӳречерен пушарник брандспойтпа тĕлленĕ.

«Нушаланакан çынна вилсе чĕрĕлме те паман ку пĕрлĕхлĕ çăлăнăç «нуль утинне» кам шутласа кăларнă-ши?» тесе Сарă Саррă çăлавçăсем çăлнă ывăлне çупăрларĕ. Чĕрĕ юлнă амăшне мăйĕнчен ыталанă Уалля-Малялля йĕре-йĕре калаçрĕ: «Урăх ан вил нихçан та, анне, атту эс паян пин хут вилме пуçларăн та...»

«Капан айĕнче шăши вилмен, тенĕ мăн асламусем. Эпир те вилместпĕр. Чĕрĕлнĕ халь, пурăнатпăр малялля», – чун-хавал çĕкленĕвĕпе канăçланчĕ амăшĕ.

## МУХМУРДИНИ

Анаслукассинчи Анис Аниссин пĕртен-пĕр савнă арне те аякра тăратса хăвармарĕ ахăр саманан аншарли чирĕ. Яка Яккун та якалчĕ карланки кунĕн-çĕрĕн хаяр та йӳçек шĕвеке хырăм тĕпнелле юхтарса. Нихçан чĕрĕлме пĕлмен мухмăрĕ юман каски пек çирĕп кĕлеткерен кукăр ĕмĕлке туса хучĕ, кунтăкланнă пуçĕнче канма пĕлмен пĕр шухăша астарса вылятрĕ: «Ĕçмелле!» Ĕç çинчен те, арăмпа йăпанасси пирки те вуçех манчĕ. Килте сăра-эрех лармасть. Ял тăрăх ута-ута тухнă май кам та пулин ярса паратех. Аншарли завочĕсĕр урам та юлмарĕ те. Ăслăрах анаслукассисем мухмăрла анраса выртмарĕç, хаяр шĕвек сутсах вĕр çĕнĕ çуртсем каплантарса лартрĕç, тăватă урапаллă ăйăрсем туянса ячĕç. Яка Яккун вара кĕсйи те, пĕтĕм пурнăçĕ те майĕпенех якалса пычĕ. Халран кайнă упăшки хăйне хăçан ачашшăн хыпашланине те астумасть ĕнтĕ Анис Аниссин. Пиçнĕ анис пек пит çăмартийĕсем хуралчĕç хуйхă-суйхăпа. Юнашар арçын пур çинчех хăрса, нише кайса пырать. Пĕтĕм çанçурăм тамăкри пек асапланать. Темле эмел те хыпса пăхрĕ, ним те пулăшмасть. Упăшки венчет çĕррине сутса ĕçнĕ хыççăн вырăнпах выртрĕ, пульницана лекрĕ.

Чирлĕ çын ушкăнĕ тепĕр тухтăртан та ăслăрах, ăстарах пулма пултарнине Анаслукасси хĕрарăмĕ те туйса ĕненчĕ. Уколпа таблеткăран чаплăрах эмелсене этем тахçанах шухăшласа кăларнă иккен. Юнашар выртакан ватăрах хĕрарăм ăна çапла вĕрентрĕ: «Вăрманти шăна кăмпин хĕрлĕ шĕлепкисене пуçтармалла та пластик мишука чиксе холодильникра икĕ талăк тытмалла, унтан кăларсан тураса банкăна тултармалла, çур литр шурă эрех ярса холодильникра икĕ эрне усрамалла. Ун хыççăн хаяр шĕвекне тăкса кăмпине çăрмалла. Çав пăтăпа ыратнă вырăна вăрах вăхăт сĕрсен ревматизм та, ради-



кулит та таçта кайса кĕрет. Пуç, юн тымарĕ чирĕнчен, ангинăран ăна, тасатнă шывпа хутăштарса, апат умĕн пĕрер тумлам виçĕ хутчен ĕçмелле».

Киле таврăнсан Анис Аниссисти тӳрех ял çумĕнчи кăтра вăрмана васкарĕ, пĕр мăн хутаç чечек пек хитре кăмпа тултарса килчĕ. Упăшки шăпах Мускава укçа çапма кайнăччĕ. Вăл пульницари кӳрши каланă пек турĕ те эмел пулса çитессе кĕтсе пурăнать, тепĕр виçĕ кунран усă курма та юрать тĕлĕнмелле эмелпе. Анчах чирлĕ хĕрарăмăн ĕмĕтленни кăлăхах пулчĕ. Пĕррехинче, фермăран ĕне суса таврăнсан, ăна хирĕç вилесле юратнă упăшки тайкаланса тухать. «Укçа çапнă та сапса салатнă!» – тесе мăнкăлтатать. Арăмĕ часрах холодильник патне чупрĕ. Банкăра – хаяр шĕвек вырăнне шыв.

Анис Аниссин те сываласах килет. Çĕнĕ эмеле тĕрĕслесе пăхмаллах! Çав карчăк рецепчĕпех хатĕрленĕ тепĕр банкăна уйăхлăха сарай хыçне чавса лартрĕ. Яка Якку арăмĕн эмелне унтан та тупса ĕçсе ячĕ çав. Тепрехинче Анисса банкăна тислĕк купине пытарчĕ. Уйăхран чавса пăхрĕ те, банка каллех пушă. Вилесле тарăхнă арăмĕ: «Сана, Якку, наркотик шыраса тупмашкăн йытă вырăнне тамăшньăна ярас пуль, унта лучăккăн усă парăн», – тесе йĕре-йĕре ятлаçрĕ. Лешĕ кула-кула кӳршĕри эрех заводне тухса сулланчĕ. Упăшкин кивçенĕсене Уках Укахвине тӳлесе те ывăннă ĕнтĕ Анисса.

Чăтăм вĕресе хурантан тăкăнса кайсан аптранă хĕрарăм питĕ хăрушă, усал шухăш тытрĕ, кĕтессе тăрсах Турăран ыйтрĕ: «Упăшкана вĕлерсен çылăх пулать-и?« Чунсăр турăш сив куçне те мăчлаттармарĕ. Анисса усăсăр хăма татăкки çине алă сулчĕ: «Çав чунилли алкашшăн çылăх та пулас çук, çавăнпа чĕнместĕн».

Пульницари хĕрарăм эрех вырăнне денатурат ярсан та юрать, тульккăш пит асăрханулла пулмалла, тенине аса илчĕ те Анис Аниссин, вара çав рецептпах усă курма шутларĕ. Самайланма пуçланă упăшки каллех Мускавран «укçа çапса» килнĕ, холодильникри çур банкăна пушатнă. Хăй мунча хутса янă. Çамрăк чухнехи юрăсене шăхăркаласа юрласа шыв йăтать. Упăшки вилсе выртнă пуль тесе хăраса ӳкнĕ арăмĕ, çакна курса тĕлĕннипе, аллисене пĕç çумне шарт çапрĕ: «Епле-ха капла, çынна ĕçме юраман сакăр вунă градуслă денатуратпа хутăштарса йӳçĕтнĕ шăна кăмпи шĕвекĕ те тĕп тăвайман ман алкаша. Ахальтен каламан пуль çав чăваш хырăмĕнче пăта та çĕрнĕ тесе. Ĕçкĕçсем юратса пăрахнă

Дина-Динушка та ним те мар, мухмӑрӗ те нимле мур мар. Эх, тур-тур. Упӑшка банка тӗпне ҫуллама пуҫличчен хамӑн та ӗҫсе юлас. Яка Якку леш тӗнчене ӑсанманскер...»

Пӳрте йӑкӑртатса кӗрсе тухнӑ арӑмне упӑшки сасартӑк ыталаса илчӗ, хӑрӑмлӑ пӳрне вӗҫӗпе сӑмсинчен пусрӗ, мунчана кӗнӗ-кӗмен хӑйне те пусса антарчӗ. Ак тӗнче! Тепӗр майлӑ ҫаврӑнса кайрӑн-шим? Мунча хыҫҫӑн та ҫывратмарӗ хӗрарӑма арҫын. Ҫапла ҫур ҫул курманнине курчӗ Анис Аниси. Тӗлӗнтермӗш эмелпе сывалма тытӑннӑранпа пит-куҫне анис улма тӗсӗ ҫапрӗ, чирӗ-чӗрӗ те таҫти ҫӑвана кайса кӗчӗ. Хусана йӑкӑртатма пуҫларӗ. Уксус завочӗ кӑларакан денатурата йӑтать те йӑтать. Вӑрманти шӑна кӑмпине йӑлт пуҫтарса пӗтерчӗ, хӗлле валли те типӗтсе хучӗ. Упӑшкипе иккӗшӗ те ҫӗнелсе ҫамрӑкланса кайрӗҫ. Вӗлерес тенӗскер халӗ Яка Якку хӑйне ахлаттарса вӗлерет. Фермӑра Тени кӳлли чухлӗ сӗт суса та пуйӑйманнишӗн хуйхӑракан, Укак Укахвиййӗ аншарли кӳллинче ял арҫынне иштерсе пуйнишӗн тахҫантанпах кӗвӗҫекен Анис Аниссин те бизнес тума пуҫларӗ. Ял алкашне кӳршипе ӑмӑртмалла эмел сутать. Укахвин «эмелӗ» арҫыннипе хӗрарӑмне те типӗтсе хӑртса пынӑ хушӑрах, Аниссан эмелӗ ял халӑхне ҫамрӑклатса ячӗ. Радио-телевидени итлесе-курса ӑсланнӑ бизнесменка тӗнче шайнех тухма шутларӗ, ҫавна май пӗлтерӳ-реклама хатӗрлерӗ:

«Мухоморпа динӑран тунӑ тӗнчере ҫук «Мухмурдини» препарат мухмӑртан та яп-яка чӗртет, арҫынсен арлӑх хӑватне тӗлӗнмелле ҫӳллӗ шая ҫӗклет. Мухмӑртан ирхине пӗр стакан, утиял айне вӑрттӑн кӗрсе выртас умӗн ҫур сехет маларах ҫур стакан ӗҫмелле. «Мухмурдини» пуҫ мими склерозӗнчен, юн тымарӗ пӳлӗннинчен, вӑраха кайнӑ пыр шыҫҫинчен, вар-хырӑм тата ӳт ракӗнчен, ревматизмран, полиартритран, шалкӑм ҫапнинчен, вӑрах анасланинчен сипленме пулӑшать. Хакӗ – пурне те тивӗҫтермелли. Адресӗ: Чӑваш Республики, Анаслукасси ялӗ, ООО «Яка-Анис».

Анаслукассисем пек анаслама пӑрахса ҫамрӑкланас, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас тесен васкӑр Анис Аниссин анис тӗслӗ «Мухмурдинине» туянма!

*31.08.2006 ҫ.*

## ЧАПАЙКĂПА ЧУПАЙКА

Çирĕммĕш ĕмĕр йӳтесе пынă тĕлелле Чăрăш лăсси айне пулнă Курпун сысна хăйăртан купаланă «кăмунă керменĕ» лаштăрр! ишĕлсе аннине те сиссе юлаймарĕ пулас. Патша майри Райка-пултарайка хăйне кукăр хӳринчен тытса çĕклесе тăратсан, вăл хăйĕн халăхне тытăнчăклăраххăн евитлерĕ: «Малашне кам мĕнле пурăнма пултарать – çапла пурăнать». Çĕршыва асар-писер çанталăк çавăрса илсен, тахçан Мĕкĕте патша вăхăтĕнче лавккасенче аш вырăнне сутнă сысна пуçĕсем те чĕрĕлсе нăрхлатма-нĕриклетме тытăнчĕç. Кремĕльти иккĕмĕш çӳл тӳпе картлашкине улăхма ĕлкĕрнĕ Мускаври пĕр Сысна пуçĕ, шăршлă хӳрипе алă пусса, Раççей халăхне самантрах йĕмсĕр тăратса хăварчĕ. Çĕнĕ Тимук ăраттисем çухăрашса кармакланнă хушăра çаппа-çарамасланса юлнă арçынĕхĕрарăмĕ кам намăсран вăтанса, кам намăс-симĕсе уямасăр, вĕри çатма çинчи пек сиккелеме-ăшаланма пуçларĕ. Асар-писер йĕркесĕрлĕхре Чăвашстанри Малкас та, ытти нумай-нумай ял пекех, Кайкас пулса юлчĕ. Ĕлĕкхи ятне асра хăварас тесе-ши, халăхра вара ăна Малкайкас теме пуçларĕç.

Çапла çĕнĕ пурнăçри Малкайкас çемйисенчен пĕринче, нуша кулачне мăн эртелпе тавралла тытса кăшланă-чăмланă чухне, танатаран тухма пулăшакан калаçу пуçланчĕ.



– Шăлаварна вуннă сапларăм пулин те, çут çамку çине саплăк лартаймарăм-ха ку таранччен те, хăлхаллă кунтăккунта ылтăн пĕрчи юлнах пуль, пăтрат, – терĕ пĕррехинче сак çинче хăяккăн выртакан упăшкине арăмĕ. – Çынсем кил сыхласа лармаççĕ. Çурçĕре тинĕс пăрĕ катма каякан та, Пăрачкав шахтинче гипс кăларакан та, Сахалинта краб тытакан та, таçта тем тăвакан та пур. Пурте пуйса килеççĕ. Ман старик анчах... Ял хуçа-

лăх юлташлăхĕнче çулталăк кутĕрленсе те юлташусемпе çур талăк савăнмалăх укçа ĕçлесе илеймерĕн. Тьфу, санпа.

– Чарăн! Ыранах Мускава тухса каятăп.

– Мĕнпе?

– Йĕмпе.

Кивĕ арчине пăтратакан арăмĕ тăватă кантраллă шап-шурă пир йĕм туртса кăларчĕ те, упăшкине тыттарчĕ:

– Саплăклă шăлаварпа намăс пулĕ, аслапун йĕмне тăхăнса кай. Халь унта, мăн хулара, телĕкпе куратăн та, намăс вырăнне пальма çулçипе кăна мар, вĕрене çулçипе хупласа çӳрекенни те тем чухлех. Эс те Мускавра çĕнĕ мутă кăтарт. Çара кутăн çӳрени мар.

Мишук Мишутки тепĕр кунах тĕп хулана укçа çапма тухса кайрĕ. Телейна пăх та Мускава кай тесе ахальтен каламан пуль çав. Телей алăкĕ Малкайкас платникĕшĕн те яриех уçăлчĕ. Вăл Федераци Канашĕн çуртĕнче мачча çĕнетнĕ çĕре лекрĕ. Раççейри тăхăр вун сакăр область, автономи республики тата наци округĕ шанса янă аслă çынсем çĕршыва мĕнле тытса пырасси çинчен хытă тавлашнине-шавланине мĕн чăттăр ĕнтĕ. Вĕсем йышăннă саккунсем маччана шăтарса уçлăха вĕçе-вĕçе кайса тăраççĕ пуль çав. СШАри пекех вĕсем хăйсене сенаторсем тесе мухтанаççĕ. Мишук Мишуткин вара вĕсене çунатсăрсем тесе калас килет. Çуртĕнче кушак хунаса кайнă. Кашни сенатор хăйĕн çĕрĕн-шывĕнчен ятарласа илсе килнĕ тейĕн. Вĕсен хушшинче вăл чăваш кушакне çеç курмарĕ. Чăваш Республикине çак аслă вырăнта чăваш мар, аякран шыраса тупнă пит кирлĕ чин претставлять тăвать иккен.

Мачча шăтăкĕсене сапланă çĕрте ĕçĕ мăй таран. Ĕçне кура – укçи те. Çимелĕх те, ĕçмелĕх те çителĕклех. Мишук Мишутки асламăшĕн йĕмĕпе çиççе çӳремест ĕнтĕ Мускав урамĕсем тăрăх. Йĕркеллĕ çынлах тумланчĕ. Манерлех. Сĕт нумай туянать. Хăй те тăраничченех ĕçет, кушаксене те тăрантарать. Чĕрчунсемпе этемсен те пĕрпеклĕх пур иккен. Ай парса тухнă та вара ячĕсене шăлйĕренсем. Федканашра час-часах «хăнара» пулакан хуравлă çынсен ячĕпе те пур кушаксем. Çара çамкаллă, хĕсĕкрех куçлă мăнтăркка сăхăм усач каснă-лартнă Тимур ачи сăнлă. Патшалăх Думин депутачĕ пек кăна мар, тахçан патшалăх пуçĕнче вăхăтлăха тăнă мăн пуçлăх пек мăнаçлăн уткаласа çӳрет. Сĕт тарелки ăшне Хрущ Мĕкĕтин Сысни пуçĕ пекех пуçĕпе кĕрсе ӳкет те, ытти

кушаксем пек чĕлхипе леп-леп тутарса ĕҫмест сĕте, выҫса ҫитнĕ чăн-чăн сысна пекех чаплаттарать. Ярса пама ĕлкĕр! Хĕрлемес пуҫлă, шурă йăрăмлă кĕрĕк тăхăннă Чупайка теkenни ытти хурăнташĕсем хушшинче намăссăр пит-куҫне ҫутăлтарса мăн кăмăллăн пăркаланса ҫӳрет, пурне те сĕмсĕррĕн хăмсарать. Электровыключательсем ҫине чалт та чалт сикме вĕреннĕ тата шельма. Мишука тăп-тулли укҫа тултарас шутпа каҫа юлса ĕҫлекен Мишук Мишутки, ҫав ăрсурник ҫутта сӳнтернине пула, пуртăпа аллине кастарчĕ. Чупайка мăрлатса ун ҫумне ҫыпҫăнчĕ те, суранран палкаса юхакан юна чыхăна-чыхăна ĕҫме пикенчĕ. Платник ăна тапса сирпĕтрĕ те тин вăл мĕншĕн сысна пуҫĕ пек сĕт ĕҫменнине те, ытти кушаксем пек сенаторсем пăрахса панă шăмă татăккисене кăшламаннине те, шăши тытма шутламаннине те пĕлчĕ. Этем юнне ĕҫсе пурăнать иккен Чупайка. Кăнтăрла ҫунатсăр Сената чинлă халăх пухăнсан, Чупайка тӳрех шăратнă пек мăнттай Чубайс патнелле ыткăнчĕ. Патшалăх пурлăхне ултавлă сутса чапа тухнă, халĕ ҫĕршыв электроэнергийĕпе хуҫаланакан Питĕр «паттăрĕ» Чупайкăна хулпуҫҫи ҫине лартрĕ те канашлăва кĕрсе кайрĕ.

«Килти Чапайка пулсан-и халь ҫакăнта, ямăтра асса кайнă кушак аҫисене пĕрерĕн-пĕрерĕн юсаса тухмалла. Пирĕн Чапайка Атăл тăрăхĕнчи пĕр кушак аҫине пуҫ пултарманччĕ», – тесе шухăшласа шăлне ҫыртрĕ Мишук Мишутки.

Каҫалапа ăна ҫыру пырса пачĕҫ. Арăмĕнчен иккен. Машук-Машутка сăмахĕсене упăшки васкамасăр, пит тăнлăн вуларĕ. «Сансăр пурнăҫ ҫук ман, кил Мишукки-Мишутки, – тенĕ куҫҫуль тумламĕсемпе тĕрленĕ хут ҫинче. – Ҫу каҫрăн, пĕр пус укҫа та ярса памарăн. Кĕркунне те ҫитет. Манăн пилĕк ачана шкула, университета мĕнле хатĕрлесе ҫитерес? «Комсомольская правдăра» сана курни правдах пуль ҫав. Эпĕ ялти кил-ҫурта, ҫемьене йĕркеллĕ тытса тăрассишĕн вĕткеленнĕ вăхăтра эсĕ, уйăхне 30-40 пин илсе, Ҫунат кушакĕсене сĕтпе тăрантарсах шик шăхăрса пурăнатăн иккен. Ман килти Чапайкăпа ачасене памалăх та сĕт ҫук. Нуша ĕнене Ишек пасарне ҫавăтса кайрĕ. Аллă-Алка качака сĕчĕпе унпа... Картара така тытса та хĕсĕр юлчĕ, Кĕркуркки енне хӳрине те пĕлтĕртеттерсе пăхмасть, хĕрне те, Шăрчăкне, мăйракипе хăмсарать. Виҫҫĕшĕ виҫĕ тĕрлĕ сасăпа ҫухăраҫҫĕ. Чапайки те килти шăшисене тытасшăн мар, аяккалла пăхать. Ах, мĕн

тăвас-ши? Хаçачĕ çинче Патшалăх Думинче те, Кремĕльте те кушак кĕтĕвĕ туллиех тесе çырнă та... Сан укçу вĕсене пурне те тăрантарма çитĕ-ши, анчах хăв выçăпа ан хăр. Сана халь эпир, Малкайкас халăхĕ, Федераци Канашĕн представителĕ тума шутларăмăр. Эсĕ унта влаçа кĕр, вара кушаксене çеç мар, пире те тутлăхлă усрăн. Çакна та пĕлтерем. Чалăшнă кил картине кӳршĕри Ванька юсаса пачĕ. Ан кулян, ялта пăта çапакан вилсе пĕтмен...»

Арăмĕн çыруне вула-вулах тĕлĕрсе кайрĕ Мишук Мишутки.

Акă вĕсен юсавçăсен ушкăнне Патшалăх Думине чĕнсе илнĕ пек. Депутатсем халĕ ĕлĕкхи пек халăх тарçи мар, халăх вĕсен тарçи-мĕн. Улпутран та ытларах улпутланса кайнă. Хăйсем пĕр-пĕринпе вăрçса-çапăçса та çухăрашса пурăннине пула çурт стенисем хăпăна-хăпăна тухнă. Ĕçĕ кунта та виç мишук укçалăх пур. Вăл укçапа тăрантарса усрамалăх кушакĕ те кĕтӳпех. Чаплă ят илнĕ мăр-мăрсем хушшинче мĕн-мĕн тĕрли тата мĕн тĕслĕ йышши çуккă-ши? Митька Родинка, Панулми, Митрофанушка, Хĕрлĕ Çухан, Улат Шыçмак пĕрпĕрне хӳрисемпе çапса йĕкĕлтесе çӳреççĕ, шăши тытнă чухнехи пек туртса çурма хатĕр, маччаран çакса янă влаç кăрманне кĕрсе ӳкесшĕн ăмăртмалла сикеççĕ. Укçа мишукĕнчен йăшăлтатса тухнă Аксак текен кушак аçи Мишук Мишуткипе чăвашла мяуклатрĕ, ентешне кĕлетки çумне çыпçăннă укçатенке пулăшма парас вырăнне Аксаков писателĕн «Шăши ухутникĕсен калавĕсене» парнелерĕ.

Мишук Мишутки йĕплĕ мăйăхлă ашкăнчăксене сĕт ярса пачĕ. Пуçтахсем пĕр-пĕринпе çапăçса кайрĕç. Вăрçа чарнă хушăра ăна тахăш кушакки хытах чавса илчĕ. Юн шăршине сиснĕ Чупайка ӳте чăртлаттарсах çуллать, çут куçĕсемпе леш тĕнчери Шуйттан пек пăхать.

Тем вăхăтра сарайран та анлă пӳлĕме «виçĕ лашаллă» тачанка кĕрлеттерсе тухрĕ. Турта хушшинче – Кĕркуркка качака таки, пичевре – Аллă-Алкăпа Шăрчăк. Ванька кӳршисен Петька кушакĕ ямшăк ларкăчĕ çинче, Чапайка кушак аçи кăрманта сарăлса ларать, хыçалта, пулемет умĕнче, Чапайкăн Малкайкас çунтармăшĕ Анка-манка. Качакасем çухăрнипе, урапа хăлтăртатнипе тата пулемет траттатталатнипе чăрсăрсен каманти чăл-пар саланчĕ. Хăрах атăллă Улат Шыçмак (тепĕр аттине вăл Ирака кайсан кăнтăрти тинĕс амазонкисене сутса хăварнă-имĕш) чутах таканланă Кĕркуркка ури айне

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-40924

пулмарĕ. Чупайка электропроводка тăрăх чакаланса хăпарса кайрĕ. Вăл «Ильич лампочки» патне çитиччен Чапайка унăн лапсăркка хӳри вĕçне хĕçпе касса татрĕ.

Думăри кушаксем думать тума пуçларĕç. «Çуркунне кушак амисемпе кушак аçисен кăшкăрмалли нормисем çинчен калакан» саккуна пăхса тухаççĕ. Ванькăсен Петьки çухалса каймарĕ, тилхепине Чапайкăна тытттарса хăварчĕ те укçа ĕçлесе илме вĕçтерчĕ. Суйлаканĕ сахал та, Петька пĕр çĕртен тепĕр çĕре чупать пĕччĕнех ик çĕр кушакшăн та суйларĕ пуль. Элетроника экранĕ çине пăхса савăнать.

Кăшкăрмалли-çухăрмалли норма валеçнĕ вăхăтра кĕç кушаксем тытăçса ӳкрĕç. Урайне çавăрса çапнă пĕр пуçтах кушак аçине тӳнĕ хушăра Улат Шыçмакăн шăлаварĕ хыçалтан чарр! çурăлса кайрĕ те, вăл «кушак корпусĕ» умне мĕнпур ар пуянлăхĕпе çуталса тухрĕ. Чапайка та çухалса каймарĕ, хĕçĕпе сулса ячĕ. Кавир тăрăх кусса кайнă юнлă чĕрĕ çăмартасем хыççăн Чупайка ыткăнчĕ. Чапайка ăна çурăм тăрăх нухайккипе çунтарса юлчĕ.

Вăрçă-харçă вĕçленнĕ хыççăн Аслă Кушак аçи Чапайкăна Кушак вăрçин паттăрĕ ятне пани çинчен пĕлтерчĕ, мăйĕнчен I степеньлĕ «Леопольд» ылтăн медаль çакса ячĕ.

Чупайка Мускав тăрăх кĕтӳ пушши пек вăрăм хуралпа çӳрет, чее шăшисем пурпĕрех пуçтаха вăрттăн ăшаласа сехĕрлентереççĕ. Нимле лăпкă пурнăç çук тĕнчере. Чапайка хулана тухас пулсан-и? Шупашкарти Чапаев музейĕнче арендăна илнĕ тачанка çинче никамран хăрамасăр ларса пырать. Вĕсен умĕнче – Раççей патшине çул уçса панă пек çул уçă. Паттăрсен камантине генерал-мент та чыс туса ăсатать.

Акă вĕсем аслă чинсен Мускав хыçĕнчи дачисенче шăшисене пĕтерсе таврăнчĕç. Кушак Думи укиян пек шавлать. Чапайкăн канас килет. Ыран унăн шăшисен çарĕпе Чупайкăна хирĕç çапăçăва тухмалла, мĕншĕн тесен Чупайка каллех çутăпа выляма хатĕрленет. Вĕр çĕнĕ тумланнă Çĕнĕ Петька трибуна умне тухрĕ те, «Шăпăрт! Чапайка думать будет!» – тесе мяук! тутарчĕ маччаналла.

Укçа мишукки çинче выртакан Мишук Мишутки хытă лаплатнă сасăпа вăранса кайрĕ. Ток çапнипе мачча çинчен персе аннă хĕрлемес Чупайка ун умĕнче мяуклатса выртать.

*3.08.2006ç.*

# Суйлавçăсемпе депутатсем хушшинче

## Чĕресĕр тăрса юлсан

ТУХТĂР: – Мĕн пулчĕ? Мĕн ыратать?

ПАЦИЕНТ: – Чĕресĕр тăрса юлтăм. Ыйхă çухатрăм.

ТУХТĂР: – Ăçта? Мĕнле майпа?

ПАЦИЕНТ: – Кĕрешӳре.

ТУХТĂР: – Мĕнле кĕрешӳре?

ПАЦИЕНТ: – Аслă Канаш суйлавĕ умĕнхи кĕрешӳре. Мĕнле пурăнас халь ман? Ни депутат пулаймарăм...

ТУХТĂР: – Кулянма кирлĕ мар, пирĕн экс-кандидатăмăрçăм. Сире суйлавра пулăшаймарăм пулин те, кунта пулăшма эп хавасах. Халĕ киле кайăр та, тĕкĕр хыçне куç хуралса киличченех пăхăр. Чĕрӳ те, ыйху та, сăну-питӳ те сирĕн йăлтах çавăнта.

## Икĕ чĕлхеллĕ

– Чăваш Ен депутачĕсем икĕ чĕлхеллĕ теççĕ.

– Ан сӳпĕлтет, арçын вăл... икĕ пуçлă пулĕ, икĕ чĕлхеллĕ пулма... хĕрарăм мар вĕт.

– Туршăн та суймастăп, пĕр чĕлхипе вĕсем халăха суйлавччен тутлă сăмах çитереççĕ, тепĕр чĕлхипе вара, суйлав хыççăн, тути-çăварне çулла-çулла халăх пĕçернĕ çăмаха какăриччен çиеççĕ.

## Чаплă уяв

– Тата мĕн уявĕ кĕрлеттереççĕ-ши паян Шупашкарта?

– Патшалăх Тăм хуранĕнче тăм çăракансем Мускавран хăнана килнĕ куна чаплăн паллă тăваççĕ.

## Пысăк уйрăмлăх

Суйлавçăпа депутат тĕл пулнă.

СУЙЛАВÇĂ: – Иртнĕ ĕмĕрте Аслă Канаш депутачĕсем çĕршер пин çын тарçиччĕ. Пурнăçа лайăхлатассишĕн эпир мĕн хушнине-сĕннине пĕр сăмахсăрах пурнăçлатчĕç.

ДЕПУТАТ: – Ухмах пулнă ун чухнехи халăх тарçисем. Сатту эпир çĕршер пин çынна хамăра пуççаптаратпăр. Пурнăçа улăштармалли саккунсем йышăнса вĕсене тарçăлла пăхăнтаратпăр. Тарçăн, паллах, хушнине çăвар уçмасăр пурнăçламалла.

– Сирĕн депутат суйлавçăсенчен мĕнпе уйрăлса тăрать?

– Суйлав хыççăн Мăнкăмăллăх тăвĕ çине улăхса халăхпа турăлла калаçма тытăннипе.

*23.12.2006ç.*

## СĔЛĔХЛĔ-ШАПАЛЛĂ ЫЛТĂН ЕНЧĔКĔ

«Кӳльмăйраки» яхăпăкă кантурне сысна аçи пек самăр кĕлеткеллĕ, япшар чĕлхеллĕ Пиявкин, ялта Сĕлĕх Селиванĕн Йăванĕ текен шукăль ентешĕ, Мускавран персе çитрĕ. Унччен колхоз вырăнне тăрса юлнă ял хуçалăх производство кооперативĕ (ЯХПК) Сĕлĕх Йăванĕшĕн нихçан та ютă пулман. Сарлака тарăн кӳлле така мăйраки пек ытамласа ларакан ялĕ – Кӳльмăйраки – унăн та тăван ялĕ. Кӳлĕре вăл ачасемпе пулă, шапа, сĕлĕх, калта тытнă, уйра комбайн хыççăн тырă пучахĕ пуçтарнă, шкулта вĕреннĕ, çĕр ĕçĕ чунне туртман пирки – хуланалла тапнă. Тăнлă-пуçлă ача пурнăç картлашкипе хăпарнă-хăпарнă та, çĕршыв тĕп хулинче йăва çавăрнă. Самай мăн кантуртах хуравлă вырăна кĕрсе ларма мехел çитернĕ. Май килнĕ таран вăл пĕрлешӳллĕ хуçалăха пулăшнă, уншăн ăна хăйне те ахаль туман. Ялтан кайнă чухне ăна, ĕмĕрне тăранма пĕлмен чиновниксене йăпăлтатса майлă çавăрмашкăн тесе, станцие çитиччен ашпăш, пыл-çу тиенĕ тракторпах ăсатнă. Самана пушши кутран сисĕмлех тивертнĕ хыççăн Сĕлĕх Йăванĕ те чееленет. Мускав ĕмĕтсĕрĕсем таврари хапрăк-савăта, тем мурĕ тĕрлĕ пĕрлешĕве çавăрса илнĕ вăхăта унăн та пуянлăх тапхăрĕ туса хурас килсе каять. Тăван ял яхăпăкăвĕ панкрута тухнă тенине илтнĕ-илтмен – Хусан вокзалневаскать. Акă ĕнтĕ Пиявкин çуралнă ялĕнче. Унăн якалнă сăран портфелĕнче – кӳлле чăмма пуçланă хуçалăха çĕмрен пек малалла илсе каймалли ĕçлĕ хут тĕрки.

– Пуçлăх алăкĕ умĕнче хăй тăрăх темиçе хут пăхса илнĕ хыççăн вăл пуç пӳрнине хуçлатса алăка хуллен шаккарĕ:

– Кĕме ирĕк парсамăр? Чăрмантарса çӳретпĕр те çав...

– Тархасшăн, иртсе ларăр, хаваспах итлетĕп сире, – хыçлă пукан еннелле тĕллесе кăтартрĕ сĕтел хушшинче ларакан пулă пуçлĕ, мăн хырăмлă арçын.

– Тавтапуç, – пуçне пĕксе ун патнелле утрĕ лешĕ, аллине тăсса, Пиявкин, терĕ. – Хам малтан алă тытма хăйнăшăн каçа-

рăр эсир мана. Йăли-йĕркипе сирĕн хăвăрăн памаллаччĕ те ĕнтĕ аллине, тархасшăн ан кӳренĕр.

Пӳлĕм хуçи шапанни пек хырăмне сĕтел хĕррине сăтăрттарса тăчĕ те, килнĕ çынна тачка аллине пачĕ: Карасев Карп Карпович. – Эсир техника ыйтăвĕпеччĕ-и? Халĕ çĕр сухаламастпăр, тырă акмастпăр. Мĕн тума кирлĕ, терĕмĕр те... Э-э, сассу палланăн туйăнчĕ. Мускавран мар пуль эсир? Телефонпа калаçнăччĕ.

Паллашнă май, иккĕшĕ ытаклансах илчĕç.

– Шăпах сирĕн йышши хăюллă çынсене юрататăп та эпĕ, хаклă Иван Селиванович, унашкаллисем яланах пуçаруллă пулаканччĕха... – лăх-лăх турĕ Карасев. – Пулăшас тетĕр апла. Районта та, ял хуçалăх министерствинче те халĕ шăпах шав тăрать: пирнешкел панкрутсене ăмăртса, конкурспа ертсе пыма вăшталанаççĕ. Ĕнер çав ыйтупа пирĕн патра пĕтĕм Чăваш илтмелле шавларĕç те, икĕ ферминчи хама валли сыхласа хăварнă юлашки хĕл каçнă вăкăрпа сыснана пустарса республика шӳрпи пĕçертĕм. Панкрут кампанийĕн компанийĕ Кӳльмăйракинчен юрласа саланнă хыççăн пушă витесене çăраççипе питĕртĕм те, акă, выляса ларатăп халĕ ылтăнран тимĕр пăхĕ вырăнне тăрса юлнă уçăсемпе. Пĕтрĕ пулас пирĕн мухтавлă ял хуçалăхĕ, çав шутрах Кӳльмăйраки те, тăванăмçăм. Кашни районта виç-тăватă яхăпăкă шампань эрехĕн кĕленчи пăкки те чăваш патшалăхĕн маччине çапăнса шаплатать те... ытти çĕршер хуçалăх çыннисем çав пăкă сирпĕннĕ сасăпа тата такамăн пуçтах автанĕ авăтнă пек сассипе чунне лăплантарса пурăнаççĕ. Тĕш тырă, çĕр улми туса илмен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмен, хыт хура пусса илнĕ хуçалăх кама кирлĕ-ши вăл? Пире, хресченсене, ĕмĕр-ĕмĕр çĕр тăрантарнă...

– Пире те тăрантарнă-ха вăл – çĕрĕ. Çавăнпа эпĕ те тăван çĕр çумнех туртăнатăп. Анчах... çĕр – шывсăр мар. Паян çĕр никамах та кирлĕ мар, унсăрах выçă халăха ют çĕршыв апат-çимĕçĕпе тăрантарма йӳнĕрехе ларать, теççĕ мускавсем. Çавăнпа эпĕ хамăн тăван Кӳльмăйракине персе çитрĕм те. Шывпа усă курма тытăнар малашне. Çапах та, хамăр пучти пĕтĕм шывран тăратпăр пулсан, пире малашне шыв тăрантармалла. Наука çапла хушать. Эпир унта, Мускавра, кун пирки тем тĕрлĕ çынна та кутăн-пуçăн çавăрса пăхнă. Пурин те пĕр шухăш: Чăвашăн ун ĕмĕрне хăйне тăрантармалăх тырripулли çитмен, сатту Атăлĕ те, тинĕсĕ те, кӳлли-пĕви те, лачаки те, çырми-çатри та никамран нумайрах. Эпир, пуçаруçăсем, чăваша çăласшăн. Çавăнпа чи малтан хамăр ялта, Кӳльмăйракинче, çав эксперимента туса пăхасшăн килтĕм эпĕ. Ман

хыçра, ай-яй мĕнле мул хуçисем... Кивçенлĕх, усăллăх укçитенкине никам та ытахальтен кĕсьерен шыва кăларса пăрахмасть. Хамăр яла, чăваш ялне, çĕклес пулсан, пирĕн чи малтан сĕлĕх-калта ĕрчетме тытăнмалла. Çурăмĕ тăрăх икĕ йăрăм тăсăлакан сĕлĕх сире те, пире те, икĕ йăрăмлă тупăш пама пултарать. Калти те калама çук тупăшлă.

Карасев чăтса тăраймасть, хăнана тулалла сĕтĕрет, кантур умĕнче йăлкăшакан тем мăнăш «Нисан» ăшне чăмтарать: «Атя пуçлăхсем патне. Унта тӳрех татса паратпăр. Ку ман – виççĕмĕш лимузин. Çулталăк хушшинче виçĕ хуçалăхра, конкурсра çĕнтерсе, ăмăрту хуçи пулса пăхрăм, панкрута тухнисен те ман валли машинăлăх ăпăр-тапăрĕ юлать иккен. Çавăрса илме пĕлес пулать çеç ăна. Тахçан трактор çинче «Прокати меня, Ванюша, на тракторе» тесе юрласа коммунизăмалла ишнĕ кӳльмăйракисен сирĕн валли те пуянлăхĕ пĕтмен. Усă курса юлăр».

Районтисем Пиявкин сĕнĕвĕсемпе ассах каяççĕ, ун пирки шупашкарсене пĕлтереççĕ. Тĕп хуларан вашнăн персонăсем капланса килеççĕ. Вĕсенчен чи асли сăмах илет:

– Коммунистсем хулапа яла çывăхлатса пĕрлештермелли кĕперне хывса пĕтернĕ пулсанах пирĕн нимле хуйхă та çуккăччĕ, анчах вăл кĕпере лаштăрах шыва путарчĕç. Халĕ, авă, ăслă мускавçăсем сĕннипе, пирĕн çав кĕпере юшкăнран туртса кăларса хăпартма, сыпма тивет. Вăл ĕçпе аппаланакан çук. Пурте эпир ансатрах та çăмăлрах меслет шыратпăр. Революцилле шухăш. Ытлашши пуça çĕмĕриччен, килĕшмеллех Пиявкин сĕннĕ генеральнăй планпа. Унсăрăн чухăнлансах çитĕпĕр. Тĕрĕссипе, пирĕн Кӳльмăйраки кӳлли çеç мар, мелиораторсем парнелесе хăварнă мĕн чухлĕ пĕве пур. Вĕсенче сĕлĕх-калта хуп-хура явăнать. Шутласан, сĕлĕхĕ, шельма пуçĕ, питĕ усăллă иккен. Пульницара выртнă чухне манне хамăнне те, арăмăнне те юна, кĕвĕленесрен, сĕлĕхе ĕмтернĕччĕ. Ку отрасле аталантарма пултарсан эпир кӳршĕсене кăна мар, тĕнчене те хыçала тăратса хăварăпăр-ха. Çавăнпа «Сĕлĕх-калта – пирĕн ылтăн енчĕкĕ» чĕнӳпе ĕçлемелле малашне ял хуçалăхне çĕклессишĕн. «Кӳльмăйраки» яхăпăкă вырăнне, акционерсен «Сĕлĕх-калта» хупă хуçалăхĕ туса хурар пуль. Ман шутпа, конкурсра Пиявкин господин çĕнтернĕ, тесе йышăнăпăр, «Сĕлĕх-калта» пуçне ăна лартăпăр.

Пиявкин сĕннипе, пуçлăхне Карасевах хăварчĕç. Пиявкинсен каманти унпа та, ытти çĕрте туса хума палăртнă «сĕлĕхсемпе» тата «калтасемпе» те Мускавран хăйсемех ертсе пырĕç. Акцисен ытларах пайĕ пур-пĕрех вĕсенче юлать-çке. Кӳльмăй-

ракисем валли ачисене вылямалли трактор илсе памалăх укçине парсан та, çителĕклех терĕç.

Мускавран Пиявкин тата тепĕр сĕнӳ пачĕ:

– Сĕлĕх-калта ĕрчетсе кăна чапа тухар марччĕ, ентешсем! Малашне пирĕн шапа хунаттармалла пулать. Ку ĕç, тăвансем, сĕлĕх-калта ĕрчетессинчен те ансатрах. Акă-ха тухса пăхар хамăр çумри пĕвесен хĕррине? Шывра мĕн чухлĕ йыт пулли кĕшĕлтетет? Паянтанах пирĕн вĕсене кашнинех сыхласа хăварма тытăнмалла. Кĕркуннеччен вара миçе эшелон шапа çитĕнет? Миллионшар пуç. Вĕсене ют патшалăхсене ресторансем валли ăсатсан? Акă сире валли валюта. Ылтăн купи. Шапасене, опыт тума, вĕренӳ заведенийĕсене те, наука тĕпчев институчĕсене те, лабораторисене те сутса эпир çулталăкрах çĕршер миллион тенкĕ укçа çапма пултаратпăр вĕт.

Пиявкин Мускавран укçа пама пуçласанах пур çĕрте те «Ква-ква» ЗАОсемпе ОООсем йĕркеленсе кайĕç, акă. Раççей анлăшĕпе кваклатса ахăрĕç.

Пуçлансан хайхи çĕнĕ кампани: юхăннă сысна комплексĕсем, выльăх-чĕрлĕх витисем вырăнĕнче сĕлĕхпе калта, шапа ӳстермелли террариумсем, акватеррариумсем васкавлăн ӳсме тытăнĕç...

Пиявкин çĕнĕрен çĕнĕ сĕнӳ, укçа сĕнет. Çулла вăл уйри пĕтĕм лĕпĕше пуçтарса тĕнчери наука учрежденийĕсене суттарасшăн чăваш хресченĕсене.

Авă епле тасатать тулăхлă та пулăхлă ĕçлеме пĕлмен пуçлăхсен усал юнне Кӳльмăйракинчи Сĕлĕх Йăванĕ. Чăвашра апат-çимĕç ыйтăвне çĕнĕлле, Мускав шухăшле татса пама пулăшасшăн, чĕрĕ ӳт çумне çыпçăнать.

*23.12.2005 ç.*

## Пуринчен те чи-чи...

* * *

– Саншăн тĕнчере кам чаплăрах?
– Арăм.
– Кам хитререх?
– Арăм.
– Мĕн тутлăрах?
– Арăм.
– Еркĕн тата?
– Ай-вай, еркĕн-и? Унран чаплăраххи, хитререххи, тутлăраххи çукрах пуль тĕнчере.

– Мĕншĕн?

– Ара вăл сайра-хутра тĕл пулакан деликатес-çке!

* * *

– Хăнана кайсассăн, эсĕ кам çине ытларах пăхатăн?

– Кам çуллăрах пек, кам пыллăрах пек, кам хĕвеллĕрех пек – çавăн çине.

– Арăму çинчен мансах-и?

– А-а-а? Çук-çке. Ман арăм вĕсенчен пуринчен те çуллăрах, пыллăрах, хĕвеллĕрех. Çавăнпа эпĕ ун çинчен те пĕр минутлăха та куçа вĕçертместĕп. Анчах та вăл – килти чечек-çке.

* * *

– Эсĕ хĕрарăм нумай курнă, теççĕ.

– Паллах, курнă. Тĕнче хĕсĕр мар вĕт.

– Вĕсенчен хăшĕ чи-чи асра юлнă саншăн?

– Арăм.

– Унран хитререххи-ясартараххи пулман-и вара?

– Çук. Мĕншĕн тесен вăл манăн Чи-чи Кăсăя Ваçлейĕн тĕнчере çук пĕртен-пĕр хĕрĕ-çке, мана пур хĕрарăмран та чи-чи хытăрах юратаканни.

## Ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкĕ малаллах чуптăр

### Шăпчăксен юрри

Кăнтăртан вĕçсе килнĕ Шăпчăк хăйĕн ĕмĕрхи йăвинче сар сăмсине каçăртса ларакан ютта курать те, ыйтать:

– Кам пулатăн çак эсĕ?

– Указ Шăпчăкĕ. Эсĕ тата ху кам?

– Эпĕ – халăх Шăпчăкĕ. Атя-ха юрлар ăмăртса.

Вĕçсе ывăннă Шăпчăк тăван çĕрĕнче-вăрманĕнче çĕнелнĕ вăйпа тăсать кăна чуна кантаракан юррине.

Ют йăваран сиксе тухнă Шăпчăк та çăвара карса мекĕрленет: «Чĕрик-чĕрик,чĕрик-чĕрик!»

Хăйĕн йăвинчи Шăпчăкăн тĕнчене илемлетсе янă сасси çурăк сасса хупласа хурать.

Ют ушкăна лекнине туйса илнĕ Указ Шăпчăкĕ вара сала кайăксен тăван «Чĕрик-чĕрик» оркестрне вĕçсе тарать.

## *Хисеплемеллех*

*Культура пуҫӗнче тăракансем!*

*Эпир хамăра Чăваш Республикин халăх артисчӗ, тава тивӗҫлӗ артисчӗ, искусствăсен тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, культура ӗҫченӗ ятсене кăна панипе ниепле те ҫырлахма-ҫураҫма пултараймастпăр. Эпир вӗт – ытти артистран уйрăлса тăракан ҫăлтăрсем. Ҫавăнпа та «Чăваш халăхӗн ҫăлтăрӗ» хисеплӗ ят туса хума ыйтатпăр. Питлӗх ҫапсах савăннă пулăттăмăр вара.*

*Пысăк шанăҫпа – чăваш эстрадин ҫăлтăрӗсем: Ҫăпата Куршукӗ, Шăпчăк Ҫерҫийӗ, Тимӗрҫӗ Шăлакӗ, Паллă Ҫеруш, Сӗрмен Кусатăран, Купăс Качаки.*

### Чапла уяв ячӗпе

Чăвашăн ҫăпата сырма пăрахса ату-пушмак тăхăнма пуҫланине палăртмалли аслă-чаплă кун ҫывхарать. Ăна сцена ăстисем те мӗнпур ăсталăхпа кӗтсе илеҫҫӗ. Кашни пултарулăх ушкăнӗ – хăйне майлă. Хӗвеларманӗнче те пăшăл пăтти вӗресе пăсланать. Пăшт та пăшт! сирпӗнет сывлăшалла вӗрекен хăват.

Хӗрарăм сассилле ҫуралнă Тискăнат пуҫлăх хăйӗн вак-вак хуҫалăхне ывăҫ тупанӗ ҫине лартса ҫинҫен юрласа ярать: «Эсир, манăн тăлăх хӗр пӗрчисем, эсир, манăн утаман-улăпсем... Мӗн тумалла-ши сирӗнпе? Пурте эсир – пулас тава тивӗҫлӗ те чăваш халăх артисчӗсем. Чаплă ятсăр халăх умне мӗнле питпе тухан? Уяв умӗн кама парăпăр-ха хамăрăн ҫак хисеплӗ ятсене?«

– Купăс Ваҫҫине! – нăрт-нарт тăвать хыҫалти ретре. – Вăл вăтам аҫиатсен кӗввине чăвашла месерлетсе, Атăл хумӗ ҫинче чӳхентерсе, чăваш халăхӗ умӗнче ҫӗр сывăрмасăр, кунӗн-ҫӗрӗн йăлăх саслă кӗвӗ киммипе ярăнать. Халăх хăлхине хăй еннелле ҫавăрма пултарнăскер вăл нивушлӗ халăх артистне тивӗҫлӗ мар?

– Кăкшăм Микулайӗ унран начар-им? – сиксе тăрать кăкăрӗ ҫине Ҫеҫпӗл Мишшин сăнне ҫаптарккăланă ҫамрăк. – Артистла вӗренсе чăн-чăн артист пулса ҫитеймесӗрех микрофона чуптума вӗреннӗшӗн, тен, ăна тава тивӗҫлӗ питлӗх артисчӗ ятне памалла? Унашкал хисеплӗ ят илнисем халӗ пирӗн чăваш тӳпинче ҫăлтăр калпакӗ пек.

– Тимĕрçĕ пăхĕн хĕрĕ тата хăйĕн алăк чĕриклетнĕ сассипе арçын ассине епле тыткăнлать? Анатоми урокĕнчи пек. Ай вăл та тава тивĕççĕр?

– Музыка алтăрĕсерех чăваша шĕв шўрпепе тăрантарма ăс çитернĕшĕн те пама пулать халăх артисчĕ ятне пăсара-пăсара мекĕрленекенсене хальхи ăссăрлăх саманинче. Пур пирĕн ун пеккисем. Вĕсем – хăвăр çумрах.

Сĕнĕвĕсене итленĕ май, Тискăнатăн пуçĕ улăх çаранĕн утă капанĕнчен капашсăртарах хăпарса каять.

– Пурте эпир, тăванăмсем, – тет вара вăл Кăмпаçитăр Карачăмĕн качаки пек мăйракасăр пуçне ухса, – пурте эпир çĕр пин юрă çĕршывĕн ачисем. Атьăр-ха никама та сулнăка çапса хăварар мар, хамăрăн чăвашла параппан çапма пултаракан Параппанова чăваш халăх артисчĕ ятне памашкăн культура министерствин алăкĕ умне хут кайса пăрахар. Пурте чăваш халăх артисчĕ пулар, мĕншĕн тесессĕн, кашни чăваш вăл – хăй артист.

Тăратнă кандидат хушамачĕ тепĕр темиçе кунранах хаçатра чăваш тĕнчи илтмелле параппан çапса ячĕ.

## Хыт кукар мар

Ачисене тĕнче çутлăхне кăларассишĕн çунакан амăшĕ çăмарта тăвасшăн ăшаланакан чăх пек кускалать. Аслă ывăлĕпе хĕрĕшĕн института 10 пин тенкĕ кайса пачĕ кăна, шкулта вĕренекен икĕ хĕрĕпе тепĕр ывăлĕ анратма пуçларĕç:

– Анне, ыран ман хамăр класс ертўçине, акăлчанкăна репетиторшăн 2 пин тенкĕ памалла. Уроксем хыççăн юлса вĕренмесен вăл мана эсĕ Лондона тĕтре витĕр те кураймастăн тесе хăратрĕ, – куçран кушак çури пек пăхать вăталăх хĕрĕ.

– Эрнере манпа ятарласа пилĕк сехет вĕренмесен санран нимле Архимед та, Менделеев та пулмасть тесе тытса юлать мана класс пуçлăхĕ. Кашни сехетшĕн 200-шер тенкĕ ыйтать.

– Пирĕн русскăянкă сехетшĕн 150 тенкĕ çеç илет. Сирĕн аçупа аннўне йĕмсĕр тăратса хăварас килмест ман тет. Ан хыт ĕнтĕ, анне. Акă, вула, ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкĕнче ачасене вĕрентмешкĕн ним те хĕрхенсе тăмалла мар тенĕ.

Пепкисене ыталанă амăшĕ çумне ашшĕ пырса тăрать те, арăмне кашни ача валли пĕрер пачка укçа тыттарать:

– Ăс-хакăл çутлăхĕн çулĕ ĕмĕрĕпех çап-çутă тăсăлтăр вĕсемшĕн. Кĕсьене укçа шыв пек юхса кĕрекен саманара хытса тăрар мар-ха çав чухăн учительсен умĕнче.

## Çĕнĕ çулпа – ял пуçне

Турикассем туран анаталла – анаткасалла вашкăртса пыраççĕ, пĕрне-пĕри сывлăх сунаççĕ:

– Аван-и? Ăçта каян?

Кам мĕне хăнăхнă, çапла хуравлать:

– Ялсуветне.

– Ял администрацине.

– Ял тăрăхне. Эс тата ăçталла çул тытатăн?

– Ял тăрăх – ял пуçне. Анаткас ял пуçеленийĕн хурал пӳртне.

## Уявран – уява

Кив чăвашпа çĕн чăваш пуçлăхĕсем калаçаççĕ.

КИВВИ: – Кашни пысăк уяв умĕн ĕç халăхĕ ячĕпе çĕршыва рапорт параттăмăр, социализмла ăмăртура çĕнтернĕшĕн Хĕрлĕ ялав, орден-медаль çĕнсе илеттĕмĕр.

ÇĔННИ: – Эпир те начар ĕçлеместпĕр. Уяв ирттересси-пе пыракан ăмăртура мала тухнăшăн мухтавсăр юлмастпăр. Мана уншăн виçĕм çул Канар утравĕ çине канма ячĕç, пĕлтĕр миллион тенкĕ тăракан çăмăл автомобиль парнелерĕç, кă-çал Мухтав орденĕ пачĕç тата Китая фейерверк академине вĕренме кайма загранпаспорт тутарттарчĕç. Унтан таврăн-сан мана республикăри тĕп салютчик-фейерверщик тума шантараççĕ. Хамăрăн тулăх пурнăç илемне турăсене те кă-тартса мухтанма пĕлмелле.

КИВВИ: – Аса илмелĕх пур пирĕн. Уявран уява савăнăçлăн утса коммунизмалла çывхараттăмăр.

ÇĔННИ: – Çапла, эпир те уяв хыççăн уяв ирттерсех капита-лизмалла кĕрсе пыратпăр. Урра кăшкăрса, алă çупса, тавралла çулăм сирпĕтекен пурнăç çуртине илемлĕн çутсах.



Савăк уяв çĕршывĕнче

– Мархва кумма, пасартан «выçлăх хутаççипе» ма пушăллах таврăнан?

– Хваттершĕн тата темшĕн тӳленĕ хыççăн кишĕр туянмалăх та укçа юлмарĕ те... Темпе тăранса пурăнас халĕ?

– Ма кулянан, ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкĕ тăршшĕпех сĕрме купăс каласа тăранса пурăнтăм эпĕ. Искусство вăл – тутлă çăкăр.

– Тавтапуçах сана, кумма, ырă канашшăн. Апла эпĕ те киле çитсессĕн питлĕх çапса ташша ярăп. Савăк уяв çĕршывĕнче пире урăх мĕн кирлĕ çак.

*16.01.2006 ç.*

## ПУРНĂÇРА ПУРТЕ ХĂЙ МАЙЛĂ – ХĂЙМАЛЛĂ

Ватталла сулăннăскерне тăвар улмипе те уйранпа, кăшманпа та кавăнпа тăрантарса усрасан та пырĕ-ха тесе пурăннă хушăра сухаллă арĕ чăхăмлама пуçласан, хăй те чун-хавалĕпе тăранайми пулсан, кăмака умĕнчи арĕ ăна çивчĕ чĕлхипе сисĕмлех кастарса илчĕ:

– Эп кил пуçĕ те кил тĕрекĕ тесе мухтанаканран санран мĕн усси халь. Пушаннă пуçна çакса яр ак çекĕлрен.

– Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ ман шакла пуçăма чăнк тытмаллăх хал çитмесен? Кӳршелле пăхасси çеç юлать. Мархван кравать айĕнче пыл чĕресĕ те туллиех, чăланта сĕчĕ те витри-витрипех кĕвеленсе хăймаланать, йăвара чăх çăмарти те купаланать, сарайĕнчи сысни те çĕçĕ кĕтсе çухăрашать пулас-ха, – ăнман каçшăн урса хăлтăкланакан амана тавçăруллантарма шутларĕ намăс курнă сухаллă ар.

Çакăн хыççăн кăмака умĕнчи ар кут хыçма мансах вĕткеленчĕ: килте çуккине лавккара, пасарта туянчĕ, «Сывлăх» хаçат вулама та ĕлкĕрчĕ.

Вĕренекен мăнукĕшĕн университета укçа тӳлеме кайса килнĕ кил пуçĕ, акă, пӳрт алăкне уçса ячĕ те... йывăрăшне чăтаймасăр тайăлса ларакан тулли сĕтеле курнипе автанлах кăшкăрса ячĕ:

– Ку кам валли?!

– Ку йӑлтах сан валли, – чупса пычӗ ӑна хирӗç кӑмака умӗнчи арӑмӗ. – – Аллусене çу та часрах...

Сӗтел çинче ӗне ашӗ те, чӑх тукмакки те, пылӗпе хӑйми те, чӗрӗ çӑмарти те, качака сӗчӗ çине янӑ аçтӑрхан мӑйӑрӗ те, хывӑх шӗвекӗпе пӗçернӗ пӑрça та, женьшеньрен, ыраш кӗпçинчен, кӑвак çеçпӗлтен хатӗрленӗ шӗвек те, тураса тӳнӗ спиртлӑ ыхрапа сухан та, семгӑпа кальмар та, арçын тымарӗ текен Паллас хурхухӗ те, хальччен тутанса курман тата темле апат-çимӗç те хӑйсен тутлӑ шӑршипе сӑмсана кӑтӑклантарса ларaççӗ. Варринче – пилӗк çӑлтӑрлӑ коньяк.

– Автанран тем те кӗтме пулать, килтех çунат çапса авӑттӑр терӗм-çке, – кил пуçӗ умне пырса ачашланчӗ сухаллӑ ара тутӑ тыттаракан кӑмака умӗнччи арӑмӗ. – Уç иçӗм çырли пичкине.

Килти автан, авӑтса, пӳрт ӑшчиккине çекӑс саманин савӑнӑçӗпе тултарчӗ. Кӑмака умӗнчи арӑмӗ те, çемье пуçне ачашла-ачашла, шурӑмпуç киличченех чӑпар чӑх пек кӑт-кӑтиклетрӗ. Арçынна арçын апачех кирлӗ иккен.

*21.01.2006 ç.*

## ВАСКАМАН «ВАСКАВЛӐ ПУЛӐШУ»

### Илем чирӗ ерсен

Пӗр хӗрарӑм пульницана пынӑ та ыйтать:

– Хисеплӗ тухтӑр, тархасшӑн пулӑшӑр?

– Мӗн ыратать?

– Хам сывах, упӑшка чирлерӗ-ха.

– Мӗн чӗмери тытнӑ тата ӑна?

– Ара Шупашкара «Нарспи» опера курма кайса килнӗ хыççӑн манпа юрласа çеç калаçакан пулчӗ. Ӑсран тайӑлман-ши вӑл? Тен, психпульницара сыватмалла ӑна? Ыран çавӑтса килес пуль.

– Ман шутпа ним хӑрушши те çук. Эсир хӑвӑр та «Сарпике» балет курса килӗр те, балерина пек тумланса упӑшку тавра ташласа çеç çӳрӗр, сире те вара ун чирӗ ерет.

– Мӗн чирӗ? Ухмах чирӗ мар пулӗ те?

– Çу-ук, искусство, илем чирӗ.

* * *

Шыҫмак арҫын тухтӑрпа канашлать:

– Мӗн тумалла, хырӑм арӑм хырӑмӗпе пӗр тан ӳсме пуҫларӗ. Вӑл кӗҫех декрета тухӗ. Манӑн ӑҫта кайса кӗмелле-ши?

– Хӑҫантанпа ӳсет?

– Экстрасенс сеансӗсене диван ҫинче выртса телевизорпа курма тытӑннӑранпа.

Тухтӑр так-так-так таклатса ӗнсине хыҫса илет:

– Куратӑп. Чӑнах та лаштах анса ларнӑ хырӑму. Ай-яй, аптрамалла ку псих... апчхи! Пета ку психотерапи маҫтӑрӗсемпе... Вилме выртнӑ ҫынна та тӑратса лартаҫҫӗ, СПИДран та хӑтарма пултараҫҫӗ. Арҫынран хӗрарӑм та, хӗрарӑмран арҫын та тӑваҫҫӗ...

– Мана та ҫавнашкалах вӑлтрӗ-ши ку экстрасенс? Ял кулли мар-и? Нивушлӗ ача ҫуратмалла пулать-ши вара ман?

– Пӗлме хӗн. Пулма та пултарать. Хальлӗхе сире декрет отпускӗ... Унпа пӗрле тепӗр хаклӑ сӗнӳ те паратӑп.

– Мӗнле ҫуратмалли ҫинчен-и?

– Мӗнле ҫӑмӑлланмаллине пӗлтереп.

– А-ах, мӗнле-ши? Кӑвапаран аяларах тем йӑшӑлтатма пуҫларӗ.

– Чупмалла сирӗн. Диванран уйрӑлмалла.

– Мӑн хырӑмпах-и?

– Аха, хы-ытӑ чупмалла. Ҫурхи ӑйӑр пек.

– Ун хыҫҫӑн вара?

– Вара, вара... Акӑ мӗн вара... Чупсан-чупсан, сисмесӗрех пушататӑр хырӑмна, ҫӑмӑлланатӑр. Унсӑрӑн... Хырӑму ҫак хӑвӑртлӑхпа хӑпарса пырсан, арӑмна та урӑх ҫураттарайми пулатӑр.

– Апла пулсан! халех тухса чупатӑп. Тек итлеместӗп нимле экстрасуеҫсене те. Пулас килмест ман хӗрарӑм. Ҫуратас килмест! Арӑмах ҫураттарас.

* * *

Тухтӑр чирлӗ ҫынна йышӑнать.

ТУХТӐР: – Сирӗн стул чиперех-и?

ЧИРЛИ: – Ӗҫме пӑрахнӑранпа упӑшка пӗрне те ҫапса ҫӗмӗрмен-ха.

ТУХТӐР: – Эпӗ, мӗн, леш, кукленсе лармалли пиркиччӗ.

ЧИРЛИ: – Ия, эпӗ те ҫавӑн пиркиех калатӑп. Йӗркеллех. Лак ларсан та, шак ларсан та, ни шӑтӑрт-шатӑрт!, ни пӑтӑртпатӑрт! тумасть.

ТУХТӐР: – Ӑнланмалла. Апла малалла конституципе интересленӗпӗр. Хывӑнӑр-ха?

ЧИРЛИ: – Конституци панӑ сывлӑха сыхламалли правапа лайӑх усӑ курас тесе килтӗм ӗнтӗ сирӗн пата паян.

ТУХТӐР: – Эпӗ, чирлӗ ҫыннӑм, тӗп саккун пирки мар, сирӗн ӳт-пӳ тытӑмӗ пирки ччӗ.

ЧИРЛИ: – Ҫапла пулмасӑр ара, куратӑр пуль, хальлӗхе алӑ-ура та, кӗлетке те хӑй вырӑнӗнчех-ха ман, пуҫ та арпашӑнман. Сирӗн вара... ненай, пурте хӑй вырӑнӗнчех мар пулас.

## Суккӑр пыршӑсем

Пӗррехинче Василий Васильевичӑн кӑвапаран аяларах сылтӑм енче шалтан тем чавтарнипе ҫурӑм тӑрӑх сивӗ тар шапӑрах юхса анчӗ.

– Пӗтрӗ пуҫ, касаҫҫӗ ӗнтӗ...

Ирпе ирех вӑл поликлиникӑна тухса шутарчӗ. Чирлӗ ҫын хырӑмне хыпашласа, шӑлса, шаккаса, пусса тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн хирург аллисене саркаласа пӑрахрӗ те:

– Аппендикс таврашӗ те ҫуккӑ. Ним ҫинчен шухӑшламасӑрах кӗрлеттерсе ҫӳреме пултаратӑр, – терӗ.

– Ҫаплах кансӗр-ҫке, тем йӑшӑртатать...

– Пустуй япала ҫеҫ вӑл. Тӑвар ытлашши ӗнтӗ. Ҫавӑ канӑҫсӑрлантарать. Ку вара пирӗн енӗпе мар. Урологпа канашласа пӑхӑр.

Хирургӗпе урологӗ иккӗшӗ те пӗр пӳлӗмрех кун сиктерсе йышӑнаҫҫӗ-мӗн. Тепӗр кунне Василий Васильевич пысӑк шанчӑкпа хыпӑнса ҫитрӗ.

– Вӑт ҫак вырӑнта темле суран пурах. Йӑштӑр-яштӑр тусанах чӗре тапма чарӑнса ларассӑн туйӑнать, – тухтӑр куҫӗнчен ыйтуллӑн пӑхса чӗтревлӗн калаҫрӗ вӑл. – Хирург унта тӑвар тулса ларнӑ, тет те...

– Пустуй япала. Нимле тӑвар купи те ҫук. Суккӑр пыршӑн хурт евӗр турачӗ силленкелет пулас та, шӑпах ҫавӑ аса илтерет ӗнтӗ хӑй пурри ҫинчен. Анчах, шел те, пирӗн енӗпе мар вара ку.

Уйӑх иртет-и, иртмест-и, вӑрттӑн суран татах аса илтерет. Василий Васильевич поликлиникӑна чупать.

– Ҫук, ҫук, пирӗн енӗпе мар ку. Урологӑннах тӗплӗн тӗрӗслемелле. Хӑйӑр пухӑнма пултарнӑ, – лӑплантарса ӑсатать ӑна хирург.

Урологӗ хӑйӗннех перет:

– Вӑраха тӑсӑлнӑ аппендикс шыҫҫи.

Сывлӑх хуралҫисемпе пуплекеленӗ самантра, пит тӗлӗнмелле-ҫке, ыратни те лӑпланнӑ пек туйӑнать тата, киле ҫитсенех таҫтан муртан чӗрӗлет. Ирӗксӗрех поликлиника ҫулне такӑрлама тивет Василий Васильевичӑн.

– Çакăнтах çĕр тĕпне анса каям та, анчах эпĕ хам шухăшран пăрăнмастăп: унта сирĕн тем тесен те чул купи хытса ларнă. Ку вара... – ырана хăварать хирург.

Унран урологĕ кулать:

– Сирĕн хырăмăрта тăвар, хăйăр, чул карьерĕ уçасшăн мар-и вăл тата? Çук, пирĕн енĕпе мар ку. Аппендицит сирĕн, хронически текенни.

Чылай вăхăт иртрĕ унтанпа. Василий Васильевич хырăмра йăшăртатнине-чавтарнине майĕпенех хăнăхрĕ. Çапах та хушăран, сых ятнĕ тесе, пулкалать-ха вăл çак хăнăхнă пÿлĕмре. Ĕнер кăна хирург ку сирĕн пÿре е шăк хăмпи чирĕ, терĕ. Паян уролог çав хурт евĕр турат вĕçех кăтăклантарать хырăмна, терĕ пăхмасăрах, темле таблеткăсем çырса панă май. Иккĕшĕ те питĕ кăмăллăн йышăнаççĕ, шутсăр çепĕç чĕлхепе ку пирĕн енĕпе мар çав тесе лăпкăн ăсатаççĕ. Хăйсем пуç çĕклемесĕр тем çыраççĕ. «Сывлăх кĕнекин» виççĕмĕш томне тултараççĕ, ак, медицина наукин кандидачĕсем. «Ну-умай çул хушши пухăннă тишкерÿ тăрăх доктор диссертацийĕ хÿтĕлеме те, монографи пичетлесе кăларма та пултараççĕ вĕт, шереметсем», – тесе шухăшласа илме кăна ĕлкĕрнĕччĕ вăл суран лăш пулнă чух... Акă, кăкăр айĕнче тем йăванма пуçларĕ, хырăм тĕпне анса çитсе сылтăм енне куçрĕ, çине-çине йĕппе чикнĕ пек тире пуçларĕ, хăсăк килчĕ, пуç кунтăкланчĕ. Ыратнине чăтаймасăр тата сехри хăпнипе çын часрах телефон трубкине çĕклерĕ те 03 номерпе шăнкăравларĕ:

– Алю, «Васкавлă пулăшу-и» ку? Вилетĕп.Васкăр...

Пĕлтернĕ адреспа персе çитнĕ фельшер ăна туххăмрах пульницана леçрĕ. Дежурнăй врач вырăнĕнче шăпах тата палланă хирург пулчĕ.

– Кама куратăп! Ырă сунсах кĕтсе илетпĕр, Василий Васильевич! Анчах та... юлашки хут ăнлантаратăп: суккăр пыршă турачĕ мар алхасать пулас унта сирĕн, тем тесен те шĕвĕр вĕçлĕ чул муклашкиех.

Варĕ чăтма çук хытă пăрса килнипе хуçланса ÿкнĕ Василий Васильевич йăлăна-йăлăна ыйтрĕ:

– Тур пулăрах маншăн. Эпĕ те юлашки хут ыйтатăп. Суккăр пыршăн хурт евĕр турачĕ-и унта е тăвар-хăйăр-чул купи-и, маншăн халь пурпĕрех, хăвăртрах касăр, тасатăр хырăма, вилĕмрен çăлăр çеç. Ой-ой! Ай-вай-вай!..

– Çук çав, пирĕн енĕпе мар. Ыран килĕр. Ыран – уролог йышăнать.

– Ай, эсир те çав, хăвăр суккăр пыршăран та суккăртарах пулас, – теме ĕлкĕрчĕ те Василий Васильевич, урайне йăванса кайрĕ.

## Нимепе – сывалма

Мĕтри Мĕкĕти сакăр вуннă урлă каçсан ăш ыратнипе аптăрарĕ.

– Карчăк, пульницанах каймалла пуль, вилеп.

– Хвельтшерĕ те çаплах калать çав, – хыпăнса алăкăнтĕпелĕн кумать Марья кинеми. – Эп ĕнерех хатĕрленме пуçланăччĕ-ха. Тӳшекне Натуç кум çапса пачĕ. Утиялĕ, çитарĕ, простынĕ, алшăллийĕ хатĕр. Краватьне те хăвăннех илĕпĕр. Ара, ним те памаççĕ тет-ха халĕ унта, пульницинче. Ай тĕнче...

– Кĕрĕве вăкăр пусма чĕнес, аш яшкисĕр хырăм тăранмасть ман, – тумланма пуçларĕ Мĕкĕте. – Пĕр лава кĕрес çук улмикупăстисемпе. Тăварланă купăста, хăяр-помидорĕ... Газ памаççĕ тет тата унта укçа куçарманшăн. Çав плитапа баллона хăварас марччĕ. Чейник, чашăк-тирĕк... Тата мĕн манса хăваратпăр-ши?

– Астурăм: хур, кăвакал, чăх... Ним те тĕксе памасан халь унта сестрисем те эмел вырăнне шăкпа укол туса яраççĕ тет. Пăру ашĕсĕр пуçне сысна ашĕ те хурса парăп.

– Апла эп кӳршĕсене чĕнсех хăварап, лашапа килччĕр. Машинпа кайма ялта бензинĕ çук тет.

Халăх хĕвĕшет Мĕтри Мĕкĕти патĕнче – кил тулли. Хĕл каçнă вăкăра пусса тирпейлерĕç, шӳрпине те çакса ячĕç. Темлешкел, те сирĕнпе урăх çак кĕрекере лармалла пулать, те пулмасть тесе Мĕкĕте ĕçкĕ пеккиех туса ячĕ.

Ирпе кӳршĕ-аршă, тăванĕ-пĕтенĕ Мĕтри Мĕкĕтине районăн тĕп хулине Вăрнара нимепе ăсатрĕç. Пульница килкартине пилĕк лав йывăррăн кĕрсе кайрĕ. Ывăлĕсемпе мăнукĕсем çав вăхăтра Шупашкартан апат-çимĕçпе эмел тиесе хаклăран та хаклă çынни патневаскарĕç.

Акă мĕнле хаклаççĕ иккен пирĕн çĕршывра çынна!

## Палатăри шкул

Нерв чирĕ çурăм шăммипе ура тăрăх анма пуçласан Роза Ивановна шкула утса çитейми пулчĕ, ирĕксĕрех пульницаналла шурĕ. Мăкăртаткаласа йышăнчĕç те ăна вун виççĕмĕш хутах хăпартса пăрахрĕç. Эрне выртать, иккĕ... шĕв яшкапа пăтă хырăмра вĕренине итлесе. Шур халатлă хаяр сăнлă çынсем пĕрмай ун кӳршисем тавра кускалаççĕ. Темле министр амăшĕпе, гендиректор еркĕнĕпе, хур-кăвакал ĕрчетекенпе, пасар хуçин ясарĕпе, патканаш депутачĕн арăмĕпе лекнĕ иккен вăл.

– Мĕн илен ĕнтĕ унран, чухăн учительницăран... Тепĕр эрнинче шанчăксăр пациентка шучĕпе кăларса яратпăр, – тухтăр сестрапа калаçни хăлхана кĕрсе кайрĕ.

Шухăшларĕ-шухăшларĕ те вара çакăн хыççăн Роза Ивановна, пур-пĕрех йĕме шутламарĕ, нервисене хытарчĕ, пуринпе те акăлчанла çеç калаçма пуçларĕ.

– Английка ку, – тухтăр хăлхинчен пăшăлтатрĕ ватăрах санитарка. – Эп пĕлмес вăл таçти çăва патĕнчи ют чĕлхене, эсĕр вĕреннĕ çын, ыйтса пĕлĕр ăна мĕн кирлине. Тухтăрсем...

Тухтăр акăлчанла пĕлмест пулас, латинла мăнкăлтаткаларĕ те нимĕçле виç сăмах кукăрткаласа хучĕ. Нимĕçле те, латинла та ăнланнине пĕлтермерĕ учительница.

Тепĕр кунне тĕп тухтăр, уйрăм пуçлăхĕ, сиплекен тухтăрсем чирлисене ушкăнпа тĕрĕслеме тухнăччĕ. Роза Ивановнапа тĕп тухтăр чĕлхине хуçкаласа калаçма пултарчĕ. Вăл ăна ытлашши хуйхăрма хушмарĕ, тимлĕ пулманшăн сиплекен тухтăрсене тăн кĕртме сăмах пачĕ.

Çак самантран хăйĕн пурнăçĕ йăлтах тепĕр майлă çаврăнса кайнине Роза Ивановна часах туйрĕ. Ăна ятарлă палатăна, телефонлă, телевизорлă, холодильниклă, кондиционерлă, туалетлă пӳлĕме куçарчĕç. Чирлĕ çын мĕнле вырнаçнине, ăна мĕн-мĕн кирлине тĕплĕн тĕрĕслесе ыйтса пĕлчĕç уйрăм пуçлăхĕпе сиплекен тухтăрĕ. Темле хаклă, аптекăсенче çук эмелсем сĕнчĕç. Тӳлевсĕрех. Унччен кашни шприцшăн, кашни уколшăн тӳлесе виçĕ уйăх ĕç укçине усăсăр пĕтерчĕ. Халĕ ĕнтĕ ăна çĕнĕрен тĕрĕслесе урăхла, чăннипех сиплеме тытăнчĕç. Сăлтавĕ кĕçех паллă пулчĕ. Лăпкă сехет хыççăн палатăна пульницан тĕп тухтăрĕ хĕр ачине çавăтса пычĕ.

– Паянтан эсир, Роза Ивановна, иккĕн пулатăр. Манăн ачана акăлчан чĕлхине уйрăммăн вĕрентме ыйтатăп. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç пулĕ.

Пĕр вĕренекенпе ĕçлесси мĕн вăл Роза Ивановнăшăн. Хаваспах килĕшрĕ. Хĕр ачи тăнлăскер пулчĕ, вĕсем питĕ тăрăшса вăтам шкул программине шĕкĕлчесе тухрĕç, университет шайĕпе пуçпа чĕлхе ăсталăхне туптарĕç. Апачĕ те хăймаланчĕ, ашланчĕ чирлĕ çыннăн. Утакан-ташлакан пулчĕ. Тĕп тухтăр ачи хыççăн урăххисен ачисем çӳреме пуçларĕç. Консультацисем, диплом ĕçĕсем, рефератсем купаланчĕç сĕтел çине.

Роза Ивановна ĕнтĕ, сипленессинчен ытларах, ĕçлет. Хăй те сисмерĕ вăл инвалид пенсийĕ илме пуçланине. Чылай çăмăл-

лăх парать иккен çак пенси. Çавăнпа ăна илесшĕн пит çунатчĕç-çке малтанхи палатăра выртнă пуянсемпе паллă çынсен хĕрарăмĕсем. Роза Ивановна та паллă çынсен шутне кĕчĕ. Çынсем Атăл хумĕпе вылякан университетсем уçса пĕтернĕ пулсан, унăн та халĕ палатăра хăйĕн шкулĕ пур.

## Хĕрĕпе ашшĕ

ХĔРĔ: – Аттеçĕм-туррăмçăм, ман тухтăр пулас килет.

АШШĔ: – Чĕппĕмçĕм-пепкемçĕм, ан макăр, туяннă эп сан валли тухтăр дипломĕ – шкула кайнă çулах.

ХĔРĔ: – Аттемçĕм-пӳлĕхçĕм, ман доктор пулас килет.

АШШĔ: – Хĕрĕмçĕм-пикеçĕм, ан хуçăл, наука кандидачĕ мар ĕнтĕ тек эсĕ, Доллар, Марка, Фунт стерлинг хаспатинсен мул канашĕ ĕнерех сана медицина докторĕ ятне панă.

ХĔРĔ: – Аттемçĕм-ĕмпӳçĕм, ман академик пулас килет.

АШШĔ: – Илемпиçĕм-пĕрчĕкĕмçĕм, ан хуйхăр, суйлавччеенех хам серепене туртса кĕртнĕ эп кирлĕ академиксене, паянтан эсĕ те – академик!

## Мурсем

– Хăш мурĕ хăрушрах: СПИД е спирт?

– Спирт.

– Мĕншĕн?

– СПИД уйрăм çынсене вăрттăн çиет, спирт вара куçкĕрет халăха ĕçкĕ кӳллине путарать.

## Ултавçă тухтăрсем

Чир-чĕр этем ӳт-пĕвĕпе шутсăр вăйлă çыхăну тытать. Пурькка Пурисĕ те çавна пулах ĕнтĕ чутах чирлесе каятчĕ. Виçĕ хĕр хыççăн аран-аран шыраса тупнă шăхличĕ качака çинче утланса пынă вăхăтрах çĕре персе анчĕ. Арăмĕ, Шухă Шури, ылтăнран та хаклă ар пепкине Вăрвар райпульницине илсе çитерчĕ те сывлăх сыхлавçисенчен пулăшу ыйтрĕ:

– Турă пулăр, çăлăр ман ывăла.

– Çăлма яланах хатĕр. Çиччас... анчах через час... ĕç хыççăн пирĕн вăрмана шашлăка каймалла, пĕр паранишка çавăтса килĕр.

Сусăр-мусăршăн тем тума, тем пама хатĕр-çке кашниех. Чĕрĕлсе сываласчĕ кăна.

Шухă Шури яла таврăнса уйран кĕтӳ кĕртнине кĕтсе илчĕ, чӳк уйăхĕнче Арсланĕн менелникĕ ячĕпе çут тĕнчерен уйрăлмалли паранишкăна Вăрвара çавăтса çитерчĕ. Арсланĕ патне амăшне кĕртмерĕç. Юрамасть терĕç.

Кун иртет те çĕр килет... Качака юланутçи те майĕпен тăн илет. Сиплевçĕсен те шашлăк кампанийĕн вăхăчĕ килет те килет... Паранишка хыççăн Пурькка Пурисĕ шурă халатпа витĕннĕ тухтăр текен сĕмсĕр çăхансене тата виçĕ сурăх «парнелерĕ». Арсланăн юратнă качакине-урхамахне те кăшласа ячĕç тăранма пĕлменскерсем. Хайсем пĕрмай лăплантарнă пекки тăваççĕ ачан ашшĕ-амăшне:

– Кĕçех сывалать сирĕн паттăру, анчах... профессорпа канашламалла-ха. Шупашкартан ятарласа чĕнетпĕр. Тулькăш вăл вилет сысна ашне юратса, тушкине йăлтах çисе яма хатĕр, мур илесшĕ.

Профессор-консультант валли тесе икĕ мăн самăр сыснана çухăртса ăсатнă хыççăн Пурькка Пурисĕпе Шухă Шура хирĕç ларсах кулянчĕç:

– Мĕн тумалла? Хĕл каçнă вăкăра та ăсатмалла-ши пульницари çăткăнсен пырне? Хамăрăн аш-пăшсăр юлмалла-ши?

– Ыйтаççĕ вĕт, чунăмçăм, ыран...

Ыранĕ çитнĕ хыççăнах Пурькка Пурисĕ хĕрлĕ вăкăра çавăтса Вăрваралла уттарчĕ. Санар çырми урлă каçсан вăл хирĕç чупакан ачине курах кайрĕ.

– Атте! Эпĕ чĕрĕ! Ман тахçанах нимĕн те ыратмасть. Чӳречерен вăрттăн сиксе тухса тартăм, – тесе Арслан вăкăр купарчи çине сикрĕ, йăпăр-япăр упаленсе ăна кĕске мăйракинчен çавăрса тытрĕ: – Атте, эс те лар! Кайрăмăр – килелле.

*2006 ç.*

## ЯЛ-ЯЛ ТĂРĂХ ЯЛТ СИКСЕ

Чăваш та Çĕр çинчи юлашки ухмах пулман, тен, Çут тĕнчере те чи ăсли пулнă, ахальтен мар пуль вăл халĕ хамăр çĕр пин юрăпа тăранса пурăнакан Атăл тăрăхне тухăçри Типĕ ту енчен Кашкăр çине утланса персе çитнĕ те, ăш хыпнипе пуçне тӳрех Çăл куçне чикнĕ. Ĕçнĕ-ĕçнĕ, ниепле те ĕçсе тăранайман, вара, çырма пуçне ватă çăка-юманран тасатса уçланкă тунă, Кашкă-

ра кӳлсе тырӑ ӳстернӗ, йывӑҫ турттарнӑ, пӳрт лартнӑ, Атӑл пирӗштийӗпе ҫемьеллӗ пулнӑ, вӑлча сапса йышланнӑ, ҫырма пуҫӗнчи пӗчӗк ҫӑлкуҫран Пысӑк ҫӑлкуҫ ҫӗршывӗ туса хунӑ. Ҫав ҫӑлкуҫ ҫӗршывӗн ачисем Ҫӗр имӗсӗр пурӑнайман – пуҫӗсене ҫӑлкуҫран кӑларман. Самана улшӑнса пынӑ май вӗсем ҫав ҫӑлкуҫран пӗтӗм пурнӑҫ сӗткенне, хӑйсен пӗтӗм ырлӑх-пурлӑхне, кулӑш-пулӑш хумне ӑша хывса, чунне кантараҫҫӗ: хӗреҫҫӗ, ӗҫлеҫҫӗ, вӗҫеҫҫӗ, хӑйсен ӑслайлӑ шӳчӗпе пӗр-пӗрне юсаҫҫӗ, вар тытса ахӑртаттарса, тухтӑрсӑрах сипленеҫҫӗ. Укҫасӑр сиплекенсем кашни ялтах пур. Кулӑш ял-ял тӑрӑх уйри шӑрчӑк пек сиксе ҫӳрет. Ҫӗрпе пӗлӗт хушшинчи Ҫӑлкуҫ ҫӗршывӗн варринчи ҫичӗ ҫӑлкуҫ тавра карталанса ларнӑ Кашаман ялӗнче те авалтанах ҫуралса паянхи кунччченех шӑл йӗрсе пурӑнаҫҫӗ иккен халӑх халапӗн хултӑрчне ҫавӑрттаракансем. Мӗн кӑна курман-ши, мӗн кӑна пӗлмеҫҫӗ-ши вӗсем? Акӑ, Карачӑм мучинех илер. Вӑл хӑҫан ҫуралнине те, хӑҫан кӑвапа таран сухал ӳстернине те, хӑҫан канма пултарнине те никам та астумасть. Вӑл пӗрмаях кулать, култарать те...

## Хушамат тупни

Сухаллӑ пулсан та мана таврара мучи текен ҫук, пурте Салакайӑк Карачӑмӗ теҫҫӗ. Уншӑн пӗртте кӳренместӗп, кил кайӑкӗ ячӗпе хисеплесе чӗннӗшӗн хӗпӗртетӗп ҫеҫ. Пурнӑҫ хумӗ ҫапнипе пит-куҫӑма ҫапӑннӑ хушма ят ятне ярас килмест. Мӗн ӗнтӗ, пурнӑҫӗнче те курманни юлмарех пуль. Тӗрӗссипе, Уйӑх ҫинче ҫеҫ пулаймарӑм. Пур пӗрех ӑна никамран ҫывӑхрах куратӑп. Ҫӗрле, ял-йыш ҫиччӗмӗш ыйхӑра чухне, пушар каланчи тӑрне хӑпарса пинукӑльпе пӑхатӑп. Кӑшт ҫӳлерех тӑссан-и ҫав вышка, ун ҫине тата пушар сӳнтермелли вӑрӑм пусмана хӑпартса тӑратсассӑн-и, ним те мар улӑхса каймалла. Анчах хӑратать ҫав. Ман хамӑн яхӑпӑкӑ улпучӗн Хрюшка Хрисанӗн «Ниссан» машинине, яппунсен ик ҫӗр лаша кӳлнӗ тӑрантасне, хӳтӗлемелле-ҫке. Килӗнче ҫунтарса ярасран хӑрать, ҫавӑнпа пушар насусӗ ҫумӗнче упрать. Эпӗ яппунсен сехрине хӑпартнӑ трехлинейка-винтовкӑпа хамӑн чӗлӗме хуралланинчен те ытларах сыхлатӑп ӑна.

Шӑхлич каласа кӗтӳ те кӗтнӗ, шӑхличпе шӑйӑрттарсах ҫемье пурнӑҫне те тума ӗлкӗрнӗ, шӑпӑр каласа килти шӑпӑрлансене кӑна мар, ял-йыша та, такам мурне те тарличчен ташлаттарнӑ. Шӑллӑм авланнӑ чухне Туҫирен вӑйлӑ туй кӗрлесе

çитрĕ. Шăпăрçисем кĕвĕ илĕнтерме пуçларĕç. Эпĕ те хамăн вăкăр хăмпине мекĕрленсе вĕрсе хăпартрăм. «Ăн-на, ăн-на, ăнна-на!» – вăрăм тунасен хушшине кĕрсе кайнă пăван пек пурне те хупласа хучĕ шăпăрăм. Туçисем те тар юхтарсах ăмăртаççĕ. Туйрăм: вĕсем виççĕн – çĕнтермешкĕн чеелĕх кирлĕ. Вăшт çеç çухалтăм шилĕк умĕнчен. Кӳршĕ шăпăрçисене ытларах хăналама хушрăм. Вĕсем пыл кăрчамине курка хыççăн курка ӳпĕнтернĕ хушăра эпĕ сарай çунаттинчи йăваран патвартарах салакайăк чĕппи суйласа илтĕм те ăна шăпăр çумне сиппе çыхса хутăм. Акă ман шăпăр каллех хăй юррине тăсать: ăн-на, ăн-на, ăнна-на! Шăпăр кĕпçинчен салакайăк чĕппи сиксе тухать те, чăр-рик! чăр-рик! туса каллех çухалать. Туçисем тин мана хăйсене çĕнтернĕ ятпа саламларĕç.

Çĕн хăтара та аптăрасах ӳкмерĕм пулас çав, шăпăра ăнлаттарнă-ăнлаттарнă хушăра сисмен те пĕр чиперкке саппунĕ айне пулнине. Хам таврăниччен усал сăмахĕ вĕçсе те çитнĕ. Арăмран вĕри турчка вĕçĕ лекрĕ, тута хĕррине самаях пĕçертсе ячĕ. Катăк пулса юлнă тута хĕррине намăсран пытарас тесе ватăлмасăрах сухал ӳстерме пуçларăм. Çав туй хыççăнах мана ялта кăна мар, пĕтĕм таврара Салакайăк Карачăмĕ тесе чĕнме тытăнчĕç.

Каланча тăрринчен хамăр ялсем мĕн-мĕн туни алă тупанĕ çинчи пек курăнать. Хĕвел ăшшинче те, уйăх çутинче те çывăрмасть ял. Акă Хрюшка Хриссанĕсем патне икĕ енчен икĕ машина кĕрлеттерсе çитсе чарăнчĕ: пĕри – çăмăлли, тепри – йывăрри. Кĕç вĕсем фермăна çитрĕç. Витерен виçĕ мăнтăркка сысна çавăтса тухрĕç те мăн машинине чăмтарчĕç, хăйсем пĕчĕкки çине ларса шăхăрчĕç. Эпĕ те шăхăрас терĕм те, анчах... шăла çыртрăм, перес терĕм, анчах... пăшала кутăн çакса хутăм. Хрюшка Хриссанĕ тахçанах «кури куçа курмăш пулмалла, кил хушшине сапса панă тырă пĕрчи чăхсем хушшинче сан валли те çитет», тени аса килчĕ-çке. Машинăсем куçран курăнми пуличченех ассăн сывласа шухăшласа тăтăм вара: Мана пар лашаллă «Ниссан-тăрантас» та çитмелле те...»

Ку вăл ачаллă шухăш çеç-ха ман. Ĕмĕрте ют япала кĕсьене чиксе курман. Яхăпăкă текен ял хуçалăх пруисвутствă кууперативĕ аран-аран сывлать пулин те, унăн улпучĕ Хрюшка Хрисанĕ ик çĕр лашаллă «Ниссан» тăрантаспах кĕрлеттерсе чупать-ха. Фермăри юлашки сыснине сутса-парнелесе пĕтерсессĕн, тен, унăнне те хушаматне улăштарса, ăна хушма хушаматпа Ниссан Хриссанĕ тесе чĕнме пуçлĕ хура халăх.

Унччен хуп турттарса юлас-ха, тесе Салакайăк Карачăмĕ канма выртрĕ.

## Тикрӑ ҫверӗпе тӗл пулни

Ҫӗрпе пӗлӗт хушшинчи Кашаман ялӗн хисеплӗ Салакайӑк Карачӑмӗ лӑпках пурӑнать-ха пушар хуҫалӑхӗнче. Насус справнах. Икӗ уралла кашкӑрсем Хрюшка Хрисанӗн «Ниссанне» вӑрласа каяс хӑрушлӑх ҫук. Яхӑпӑкӑ улпучӗ ик ҫӗр лаша кӳлнӗ ҫапҫутӑ тӑрантасӗ ҫине ҫӗнӗ арӑмне лартса туй катаччине тухса кайнӑ. Хурал пӳртӗнче аяк пӗрчи шутласа ывӑннӑ хыҫҫӑн Карачӑм уҫӑ сывлӑша тухать, каланча ҫине улӑхать. Куҫса ҫӳрекен циркачсен ула тикӑрӗ читлӗхе уҫса Вӑрнар станцийӗ ҫывӑхӗнче пуйӑс ҫинчен сиксе юлнӑ хӑрушӑ хыпар сарӑлнӑ хыҫҫӑн пӑшалне тӗрӗслесех тӑрать, манса хӑвармасть. Шӑпӑрӗ те ҫумрах.

Хрюшка Хрисанӗ ӗлӗкхи пек махорка ӳстерсе пуйма шутланӑ. Махра анийӗ пушар каланчи ҫумӗнчех. Махрине, хӑнӑхнӑ йӑлапа, чӗлхе ҫемҫелӗхне пула, кашамансем те табак мар, тапак теҫҫӗ. Тапак патӗнче, паллах, хӗрарӑм йӑшӑлтатать. Арҫын вӑл тапак туртса тавралӑха шӑршлӑ пӗлӗтпе кӑна хупламa пултарать. Акӑ, Салакайӑк Карачӑмӗ те, ял улпучӗн парнине кӗсийинчен кӑларчӗ, тапак ҫулҫине ҫавӑрса чӗркесе хытарнӑ, хӑйӗн сӑмси пек тачка, икӗ шит тӑршшӗ сигарӑна зажигалкӑпа чӗртрӗ, сывлӑшалла ункӑ кӑларса ячӗ.

Махра-табакӑн хаярлӑхӗ вӑйлантӑр тесе ӑна ҫурӑлма памаҫҫӗ. Паян та хӗрарӑмсем тапак тӑрри татма тухнӑ. Америксен сигарине туртса чуна кантарнӑ хыҫҫӑн Карачӑм ӗҫлекен халӑха хавхалантарма шутларӗ, вӑкӑр хӑмпине мекӗрленсе вӗрсе хӑпартрӗ... Апата ларнӑ хӗрарӑмсем, чӑваш ташшин кӗввине илтнипе, ассах кайрӗҫ. Пӗри каланча патне пычӗ те чӗнет: «Эй, Карачӑм?! Ҫитет сана ҫӳл тӳпере вӑкӑр хӑмпи вӗрсе, ан пирӗн пата шапа хырӑмӗ вӗрсе хӑпартма! Шӑпӑрна та пӗрлех ил!»



Махра-тапак каманти пĕве çыранĕнчи çерем çинче сăпас кунне паллă тăвать. Пыл кăрчамийĕ те, аншарлийĕ те никамăн пырне те лармасть. Хĕрнĕ хĕрарăм купине хуралçă юрлаттарса-ташлаттарсах, чечеклентерсех ячĕ. Халапĕ-юмахĕ те ун çумĕнчен уйрăлмарĕ. «Эс яла тикăра ан кĕрт, сыхă тăр каланча çинче», – кулкалаççĕ унран. Пĕр суймасăрах каласа памалла пулчĕ вара Салакайăк Карачăмĕн хăй тикрă çверĕпе тĕл пулни çинчен.

– Выртатăп хайхи каланча айĕнче, – тет вăл сухалне шăлса. – Пăшала айккине тăратнă хам, çӳл тӳпене сăнатăп. Пы-ысăк пĕлĕт варрипе уйăх пăхать ман çине. Уйăхĕ, тĕрĕссипе, хăй мар ĕнтĕ, а, пĕлетĕр-и, кĕвентеллĕ хĕрĕ ман çине пăхать. Пăхать те кулать хĕр, пăхать те кулать. Мутри сана, тетĕп, ытлашши ан ирĕл ман умра, çитетĕп сан пата, тăрататăп та ак пушар пусмине... Çав хĕр куллиех ман пит-куçа асамланă пуль çав, хам та сисмен, тĕлĕрнĕ те кайнă. Тĕлĕкре те çав кĕвентеллĕ хĕрпех аташса выртнă. Карачăм, илтетĕн-и, Карачăмçăм, эс шыв ĕçес тенĕччĕ-çке ман витререн, акă, ĕç тăраниччен. Сана валли юри ăсса килтĕм хăвăр умри çăлкуçран, ĕç, вăйлан, тет ачашшăн. Алла тăсрăм çеç витре еннелле, сăмсаран тем шакканипе шартах сиксе вăранса кайрăм. Пăшал ӳкнĕ иккен, тӳперен çумăр шăпăртатать, умра хайхи тикрă çверĕ мăшлатса тăрать, янах айĕ сирĕн çыхман кăкăру пек усăннă, ман хырăма вут пек пĕçертет. Унччен те пулмарĕ, пуçне сулларĕ те, ăр-ră-пĕф! турĕ. Туйрăм, хушамата асăнать: «Вăррăпьĕв» ĕнтĕ. Ара, тискер кайăк-çке, пирнешкел уççăн калаçаймасть. Эрр-арр-çием! илтĕнчĕ унтан. Ку, сначăт, «Керрасим» Хушамата та, ята та пĕлет, мур илесшĕ, улталаса, Хрюшка Хрисанĕн «Ниссанĕ» çине ларса Ахрикăна шăхăрасшăн мар-ши тесе шухăшласа иличчен, хыв-юл! сасса илтнипе, тухса тарма тăнă чĕрене ал лаппипе хупласа хутăм. «Вăрăпьĕв Керасим, сывă юл!» – тесе алă парса хăварчĕ мана çапла тикрă. Сăмса çине ӳкнĕ пăшала çĕклесе трехлинейкăран пĕр виççĕ кĕрслеттерес те килсе кайрĕ, анчах карчăка тирĕ кирлĕ мар, çуралнă кун ячĕпе ăна ял улпучĕ тикрă кĕрĕкĕ парнеленине хăвăрах лайăх пĕлетĕр. Юрĕ-çке, çӳретĕр-и ирĕкре кулять туса терĕм те, куçа мăч хупрăм.

Тапак тăрри татма маннă хĕрарăмсем халапçа çăвар карсах итлеççĕ, суятăн та суятăн тесе ăна пушшех хавхалантараççĕ. Салакайăк чарăнма пĕлмесĕрех чĕриклетет:

– Туршăн та, хĕвелшĕн те суймастăп, акă, хĕрес хуратăп. Сире тыттарап пулсан çакăнтах аçа çаптăр мана. Çапла, инке-

минке-минресем, паян пĕве хĕрринче çывăрса юлсан эсир те тикрă çверне курма пултаратăр, çитĕ те, хы-ыв! тейĕ...

– Тикăрр! – тесе хăрушла çухăрса ячĕ тахăшĕ çав самантрах.

Вĕсем патне чăнах та тикрă çверĕ текен тискер чĕрчун васкамасăр çывхарать. Пурте чăл-пар саланчĕç. Карачăм та шăпăрне пăрахсах вĕсем хыççăн лăкăштатрĕ, ватă йăмра вулли тăрăх чакаланса хăпарса кайнине хăй те сиссе юлаймарĕ, хăрăк турат шартлатса хуçăлнипе çĕре персе ансан тин тăна кĕчĕ: ун айĕнче тикрă кĕрĕкĕпе пĕркеннĕ, кĕвĕçсе вилекен юратнă карчăкĕ айлатса выртать. Ун çине шаплатнă иккен вăл.

Ура çине сиксе тăнă «тикрă çверĕ» Салакайăк Карачăмне хăрăк туратпа ислетнине пăхса тăракан махра-тапак ушкăнĕн шавĕ пĕве çийĕн савăк кулă хумĕ çĕклерĕ.

*21.02.06 ç.*

## Хир сысни инкекĕ

Пурнăç тытамакĕнче Кашаман ялĕ те сисĕмлех чĕтренсе илчĕ. Тимĕрçĕ лаççипе ял улпучĕн хупахĕ Салакайăк Карачăмĕ куçĕ умĕнчех çунса кайрĕç. Вăрнар пушарникĕсен машини çул çинче ваннă. Алă вăйĕпе хашлаттарса сирпĕтмелли насуса ĕçлеттерееймерĕç. Çил хупах вутпуççине пушар хуçалăхĕн хурал пÿрчĕ тăррине çавăрттарса персе хăварчĕ. Инкеке çийĕнчех асăрханă Карачăм ăна хăйĕн пушар кĕпçинчен сирпĕтсе сÿнтермен пулсан-и... Хрюшка Хрисанĕн «Ниссанĕ» те пĕтетчĕ. Çакăн хыççăн ял улпучĕ ăсланчĕ, яхăпăкă шучĕпе вĕр çĕнĕ пушар машини туянчĕ, иртнĕ ĕмĕрхи вăтăрмĕш çулсенчи алă насусне тимĕр-тăмăра ăсатрĕ, сыхă хуралçине сысна фермине куçарчĕ. Ик çĕр лаша вăйлĕ тăрантасне халĕ унăнне Вăрнартан тара тытнă ула-чăла тумлă маттурсем сыхлаççĕ.



Çĕнĕ вырăнта уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕрпе киленме те, пÿртре аяк пĕрчи шутласа выртма та вăхăт çук. Канăççăр çĕре лекрĕ Салакайăк Карачăмĕ. Картихури ишĕлсе юхăннă пирки тавраллах яр-

уçă. Хĕрарăмсем сыснисене уçăлма кăлараççĕ. Выльăх ăна-кăна ăнланать-и? Ăна ирĕклĕх кирлĕ. Чупаççĕ-чупаççĕ те сыснасем вите тавра, çавăхри вăрмана, çерем çĕтме, йĕкел пуçтарма йăркаççĕ. Вĕсем хыççăн ăçтан хăваласа çитен? Пĕринче хуралçă асăрхарĕ, витерен инçех те мар, тислĕк купи çумĕнче, темле ют сыснасем нăйкăшаççĕ, вăрăм хÿреллĕ, ула-хăмăр тĕслĕ хăйсем. Аран-аран тавçăрса илчĕ хуралçă, ара хир сыснисем-çке, кÿршĕри заказникрен. Хутăш аçисем те пулнă çав. Аçан мĕн шухăш ун – çут санталăк панă ырлăхпа усă курмалла. Аман та çавнашкалах ĕнтĕ. Çапла вăрмантан фермăна улах ачисем час-час чупма тытăнчĕç. Юрату вăйĕи пуçланчĕ. Кăмăла кайрĕ пулас, ферма сыснисем те ăмăртмалла ютта йăркаççĕ.

Карачăмăн хăнасене хăваласа яма вăй-хал та çитмест ĕнтĕ. Кăмăллăн сăнать. Алла çитнĕ, качча кайман Крахьян вара, таçтан писĕ хулă тупнă та, шурă сыснапа савăшса тĕлĕрсе кайнă хир сыснине çурăм тăрăх касать те касать. Лешĕ, юрату вăйĕинче чăрмантарнăшăн хаярланса, хĕрарăма хирĕç сиксе ÿкет. Темле пусма картлашкинчен хăпарса тарма ĕлкĕрчĕ Крахьян, урнă аçа асавĕпе ярса илнĕ пулсан-и, ахаль...

Карачăм та пĕрлех вĕçсе кĕчĕ ферма пÿртне. Ват хĕр сывлăш çавăрса яраймасть, чÿречерен пыра-пыра пăхать. Хир сысни каллех ун сысни патнелле юрттарчĕ. Хуралçă калать:

– Ухмах эс, хĕрĕм. Çынна та тапăнать вăл хир сысни, ахаль чух мар, хăйне мĕн те пулин ырă тума чарсан. Эс те тупнă çав хăш вăхăтра хăваламаллине.

Ĕнси хыçнелле юхса аннă тутăрне майлакан Крахьян такăлтатать:

– Мĕн вăл тата ман сысна аминчен мăшкăллать? Темле çура пулать унран. Чăтса тăрăн унта.

Крахьян питĕ пăркаланать те, тен, кăна хăйне те çак самантра чăтма çав тери йывăр пуль тесе, ват çерçи ячĕ илчĕ хайхискерне çемçе пилĕкĕнчен. Хĕрелсе хĕрсе кайнă Крахьян каялла вăрт çаврăнчĕ те, кăмăл кантрине салтса янă ясар мучука кĕреçе сухалĕнчен ярса илчĕ, вырăн патне туртса çитерчĕ, унтан вăльт! çĕклесе печĕ. Хăй тухрĕ те вĕçрĕ, алăкра шăл йĕрсе хăварчĕ:

– Сана, ват супнăна кĕтсе, качча каймасăр пурăнман эп. Вырт кăмака хыçĕнче йăваласа-йăваланса.

Шухлăх намăсне курнă хыççăн Карачăм хир сыснисене хăвалама вăрăм пушă languagesврĕ. Хăваламасан май çук. Сыснасем улах ларнине пĕлнĕ Хрюшка Хрисанĕ пырса хуралçа тăн кĕртсе хă-

варчĕ. Салакайăк, сиккелесе çӳресе, вăрман каччисене сыхламалли вырăн тупрĕ. Вите хĕррине пусма тăратрĕ. Случайĕ чĕву хăпарса тарма пулать.

Акă, килеççĕ кĕтнĕ хăнасем, вăрмантан тухрĕç те тӳрех вите патнелле çул тытрĕç. Инçех те мар Крахьян сыснисем çĕр чавалаççĕ. Çитрĕç. Карачăм шарт! тивертрĕ пушă вĕçĕпе хĕрринче тăраканнине. Тепре çапма хатĕрленнĕччĕ кăна... Хăрт-харт! турĕ хайхискер, курпунне тата çӳлерех çĕклерĕ, асав шăлĕсене кăларчĕ те йĕтре пек вирхĕнчĕ хуралçă еннелле. Карачăм пусма тăрăх вите тăрне ракета хăвăртлăхĕпе вĕçсе хăпарса кайрĕ. Çитрĕ те сысна аçи пусма патне, картлашкаран малти урисемпе уртăнчĕ, тăшманĕ çине шур куçĕпе пăхать. Хуралçă ăна çӳлтен пушăпа тепре касрĕ. Улахçă пушшех асса кайрĕ, урнăскер, сăмсипе хирет те хирет пусма кутне. Чалăштарса, чалăштарса ячĕ те, пусмана такки туртса антарчĕ. Виткĕçрен тытса аран-аран çакланса юлчĕ Карачăм. Пусмапа пĕрле шаплатнă пулсан-и... Пĕр хушă çаврăнкаларĕ те аçа, хăртлатса, ферма сыснисем патнелле мăнаçлăн уттарчĕ. Мĕн, вĕсен, вăтанчăк таврашĕ пур-и, хальхи çамрăксем майлах хăтланаççĕ. Ку та ним пулман пекех юрату юрри ĕнĕрлеме пуçларĕ.

Ларать Карачăм çиле хирĕç шăла йĕрсе. Сикес – çӳллĕ. Кăнтăр апачĕ те çитрĕ, çын таврашĕ курăнмасть. Ирхине уйран кăна ĕçсе тухнăскерĕн, хырăмĕнче мусăк пуçланчĕ. Сыснасем выля-выля вăрманалла юртрĕç. Крахьян сыснисем вĕсене ăсатсах ячĕç. Çын пек. Ютти тутлă пуль çав. Çын патĕнче уйран та сĕт пекех те... Вăл тĕлĕрсех кайма пуçланăччĕ. Сасăпа куçне уçрĕ. Аялта Крахьянпа тепĕр хĕрарăм шăла йĕрсе тăраççĕ.

Çапла хир сысни инкекĕ кашамансен пуçĕ çине татăлса анчĕ. Метиссем çуралма пит чипер çуралаççĕ, ӳсме – ӳсмеççĕ, хăлтăртатса çӳреççĕ. Ферма пĕтме пуçланăшăн Хрюшка Хрисанĕ хуралçа айăплать. Ял улпучĕ каллех тепĕр революци турĕ. Салакайăк Карачăмне карта тытакансен пуçлăхне лартрĕ.

Вăрман касса, йывăç çурса фермăна çĕнĕ картапа çаврăнă хыççăн Кашаман сыснисемпе хир сыснисем ракатка хушшине сăмсисене чиксе чуптăваççĕ ĕнтĕ. Салакайăк Карачăмĕпе Крахьян тек вĕсене пушăпа та, хулăпа та ăшаламаççĕ, тĕнче чĕрĕлĕвĕн çеммине итлесе тăнă май пĕр-пĕрин çине ăшшăн пăхса йăл кулаççĕ.

*21.02.06 ç.*

Çивчĕ сăмах чĕлхе çинчех

*Иккĕн калаçаççĕ.*

ПĔРИ: – Вырăн тухтăрĕпе этем тухтăрĕ хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур?

ТЕПРИ: – Вырăн тухтăрĕ çăмарта касса тăранса пурăнать. Этем тухтăрĕ çăмарта касса хĕрарăма выççа тăратса хăварать. Сан хăшĕ пулас килет?

ПĔРИ: – Хирург.

ТЕПРИ: – Мĕншĕн?

ПĔРИ: – Ман арăм сана куç хывнăран. Сан тата кам пулас килет?

ТЕПРИ: – Коновал.

ПĔРИ: – Мĕншĕн?

ТЕПРИ: – Сан арăму мана пĕрмай така-вăкăр-сысна çăмарти тутлă ăшаласа çитернĕшĕн.

* * *

Ялти лавккара никам та çук. Сутуçăсем юмах янă. Унта йăмра тураттипе тăклаттарса сухаллă арçын кĕрет те:

– Сочкуем, да? – тесе ыйтать.

– Аха, аха, сучкуем, – куларах хуравлать пĕр чиперкки. – Купăл Павăлĕ шăлавар кĕсйине пушатса анчах тухса кайрĕ-ха.

– Купăл вырăнне тепĕр кубель çитрĕ те, – пăркаланса илет лешĕнчен те хитререххи. – Атьăр шалти пӳлĕме. Сучоку тӳрех пулсан сучкасем сочковать тумаççĕ.

* * *

Чылай çулланнă арçын автобусра тăрса пырать. Малти ларкăчсене хĕрсем йышăннă. Кондуктор вĕсене аса илтерет:

– Ватă çынна вырăн парсамăр?

– Çак кавалера-и? Хэ, арçыннăн унăн тăмаллах. Çавăнпа арçын пуль вăл? – тесе ихĕрет те пĕри, пурте малалла ларсах каяççĕ.

## Пурнас йытта вӗлерсе

Сурӑм вӑрманӗн хӳттинче ларакан «Тураткуҫ» кооперативӗн генеральнӑй директорӗ Геннадий Николаевич Юманов Шупашкарти пуҫ кумус-кӑмӑсӗн аслӑ шкулӗнче ӗҫлекен Сармантей Михайлович Сарра профессорпа епле туслӑ пулнине ҫӗр ҫинче ҫук турӑ ҫеҫ пӗлет пуль. Тӗп хуларах вӗсем ҫӑкӑр-тӑварне те, ҫекӑставарне те ялан ҫурмалла пайланӑ та... Ӗмӗрне вӗҫленмен парас-илес пурнӑҫ юххипе Юманов бизнесмен хӑй ҫур ӗмӗр каялла кун ҫути курнӑ Сурӑм тӑрӑхне ишсе ҫитет те, вӑрман уҫланкинче йывӑҫран юмахри пек кермен каплантарать, утар ӗрчетсе ярать, ҫырма пуҫне чавтарса кӳлӗ тӑвать. Хӑйӗнчен чылай ҫамрӑк арӑмпа уҫӑ сывлӑшра рехетленсе пурӑнать. Пӗртен-пӗр чиперкке хӗрӗ кумӑс-кӑмӑс шкулӗнче вӗренет.

Юмановпа Сарра, тунсӑхласа ҫитсен, е шӗкӗр хулара тӗл пулса «Ма хитре-ши Шупашкар урамӗ...» юрра янраттараҫҫӗ, е «Сурӑм вӑрмань варринче пирн телей»... тесе ытаклашаҫҫӗ. Тунсӑх кӗҫтевӗ хальхинче те, акӑ, Сарра профессорӑн пуҫ миминe кӑтӑклантарса ячӗ, вара вӑл ҫӳл тӳпере ҫӗр тавра ҫаврӑнакан ҫыхӑну спутникӗнчен ҫакӑнчӗ те хӑрах хӑлхипе, тусне туххӑмрах пӗлтерчӗ: «Ген-ге-нерал, хӑнана пыратпӑр. Ман Чӗмере паттӑрӗ хурарах аш ҫиме кӑмӑллать».

Сарра профессор хӑйсен аслӑ шкулӗнче ют ҫӗршывран вӗренме килнӗ ҫамрӑксемпе хуравлӑн ӗҫлет. Индусӗ те, арабӗ те, некӑрӗ те сухаллӑ Сармантей Михайловича «атте» тесе хисеплеҫҫӗ. Хӑй те вӑл вӗсене «ывӑлӑмсем-хӗрӗмсем» тесе юратанҫи пек пулать. Пӗр ачамккипе вара ҫывӑхлансах кайрӗ.

Ют пусмӑрҫӑсенчен ирӗкленнӗ некӑрсем те иртнӗ ӗмӗр варринче ассӑн сывласа янипе тӗнче кисренсе кайнине астӑватпӑр-ха. Африка варӗнчи Лумумба Патрис Эмери некӑра Мускаврa хӗрлӗ кӗпе-йӗм тӑхӑнтарса янӑ хыҫҫӑн Конго юхан шывӗ те там-там ташши хӗрнипе вӗреме кӗнӗччӗ. Кӑмунӑ шевлипе





çиçекен ёлккен ахриканец хура йăхташĕсене хĕрлĕ шыва кĕртсе хастарлантарать те... Ăша анăç астармăшне хыптарнипе анкăминкĕленнĕ баконгу-банту йăхĕсем çуллпуçĕ хыççăн ăратлă ăйăрсем пек вирхĕнеççĕ, тропикăра çĕнтерӳ ялавĕ çĕклеççĕ. Çĕнĕрен çуралнă Конго патшалăхĕн пуçне Патрис Лумумбăна хăпартса лартаççĕ. Анчах хирĕç тăру чарăнмасть. Çулталăкранах влаçа урăх йăх çавăрса илет те, Конго выранне Заир патшалăхĕ туса хурать. Хĕрлĕ çытмаллă çуллпуçне вĕсем те вут çинче ăшаласа çисе яраççĕ, те шыва путараççĕ, анчах... Мускав хӳрешки йĕп пек çухалать. Мускав дикторĕ «Лумумба ăçта?!» тесе ирех шарт! сиктерсе вăратнине халĕ те манмастăп.

Кĕçех тупăнчĕ хайхи Лумумба Патрис Эмери-Чĕмери. Пĕррехинче Сарра профессор та Шупашкар çыннисемпе пĕрле агрегат заводĕнчен çырма хĕрне çитиччен некăр урамĕпе лаплаттарса анчĕ. Лумумбăран хисеплĕ çын çук пек Чăвашра. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, Мускав хистет-çке «аслă пăлхавçăсен» ятне ĕмĕрлĕхе асра хăварма. Сармантей Михайлович та ĕнсине хыçать те, анчах сар чăххи сар çăмарта тунă пуль те, çăмартине никам та ан çĕмĕрттĕрччĕ тесе, васкаса утать ылтăн йăви еннелле. Çавăнтанпа ĕнтĕ Сарра профессор банту йăхĕнчи Патрис Лумумба некăр ячĕллĕ урамра пурăнать. Хулан çав енчи хутлăхне халăх Конго теме пуçларĕ.

Некăр çуллпуçĕн-патшин йăхĕ чухăн мар çав. Лумумба Патрис Эмерин мăнукĕ те Атăл çыранне ишсе тухрĕ, Саррăсен аслă шкулĕнче тухтăра вĕренет. Браззавиль ачине, «хĕрлĕ аслашшĕ» пекех тем мыскари те кăтартаканскерне, «Чĕмере паттăрĕ» ят панă. Вăл ют çĕрте те çухалса каймасть, вырăсла яп-яка калаçать, чăвашла та сутса ярать. Сарра профессор унпа чăвашлабантулла пакăлтатма юратать. Студент «ашшĕне» Африкăна хăнана чĕнет-çке. Чĕлхе пĕлни пăсмасть. Там-там сассипе ӳснĕ некăр пирĕн параппан сассиллĕ туй юррисене шăрантарать кăна!

Патрис Эмери-Чĕмери шăхличĕ Юманов хĕрĕпе пит çуллăн пăшăлтатнине профессор та асăрханăччĕ-ха. Чĕмере паттăрĕ: «Конго юхан шывĕпе Атăлăн çыранĕсем те пĕрлешме пултараççĕ

вĕт», – текеленине те илтнĕ. Экватор енчи хĕвел хĕрĕвĕ Шупашкар хĕрĕсен пилĕкĕсене хĕртсе яни те вăрттăнлăх марччĕ. Тусĕн мăшăрĕ тĕлĕнтерсе пăрахрĕ тата. «Юман хаспатинăн пыл та ҫу пурнăҫ усланкийĕ тăварланма пуҫларĕ, чун уҫҫалла туртать», – терĕ вăл. Некăр каччине илсе килсе кăтартма ыйтрĕ. Акă ҫав ыйтăва пурнăҫлас терĕ пулас Сарра профессор.

Чĕмере паттăрĕн автомобилĕ пек чапли Шупашкарта та сахал. Посольствăри тăванĕ те Мускавран ҫавăн пек лимузинпах килсе кайнăччĕ ун патне. Вăл ямшăк вырăнне Заирти тусне тара тытать.

*Акă хайхи чаплă тăрантас Сурăм вăрманне ӳхĕрсе ҫитрĕ.*

*Сĕм-сĕм вăрман,*
*Сурăм вăрмань,*
*Сурăм вăрмань варринче*
*Пирĕн туссем... – юрласа анчĕҫ вĕсем ҫерем ҫине.*

Уҫланкăра – анчахрах ҫулса типĕтнĕ утă куписем, вĕллесем тавра пыл хурчĕ сĕрлет, сăмсана Петрав пылĕн шăрши кăтăклать. Сарай умĕнче – кутăн ҫакнă тушка. Юманов арăмĕпе хĕрĕ хаклă хăнасене ҫăкăр-тăварпа, кăпăклă сăра тултарнă пĕчĕк алтăрпа тараватлăн кĕтсе илчĕҫ. Арҫынсем тирне сӳнĕ тушкана юман шалчи ҫумне урисемпе майласа ҫыхрĕҫ те юплĕ икĕ юпа ҫине майлаштарчĕҫ. Аялта вутă ҫунать. Майĕпен ҫавăркаласа, хĕрлĕ эрехпе тата ытти техĕмлĕ шĕвекпе сапса тăраҫҫĕ. Мĕн мăнăш шашлык ăшаланать!

Пуҫ кутне кăштах кайсан, арҫын куҫĕ хĕрарăм купарчине хыпашлама, хĕрарăм куҫĕ арҫын ытамнелле туртăнма пуҫлать ҫав... Шавлă савăнăҫ ăрши вылять уҫланкăра. Хăюллăх ҫӳл тӳпене ҫити ҫĕкленнĕ. Шӳт ҫине шӳт. Мухтанма маҫтăр Геннадий Николаевичăн та чĕлхи сӳтĕрĕлсе пырать.




– Манран пуянни таврара ҫук, – лĕхлетсе илет вăл. – Унччен виҫĕ колхоз пулнă ялсен ҫĕрĕ те ман алăра. Эпĕ – помещик. Сурăм вăрманĕ те ман алла куҫать. Пĕвере – пулă, комплексра – кролик. Кĕҫех ҫавăрса илетĕп

мěнпур Элěк тăрăхне. Арăм та çамрăк ман, хěрěм епле чипер... Эпě – хуçа, сирěн Лумумба пек çулпуç... Кам така хўрине çыртса татать – хěрěме çавна качча паратăп. Кам така пěççине пěр харăс çисе ярать – çавна арăмпа ташлаттаратăп.

Пуçланчě хайхи хěрў ăмăрту. Чěмере паттăрěнчен ěç тухмарě, питне-куçне çеç çупа вараласа пěтерчě. Юмановпа Сарра икě енчен çавăрса тăракан така хўрине Заир некăрě кашкăрăнни пек çирěп шăлěсемпе татса илчě-илчех. Лумумба мăнукě те, эрех сыпа-сыпа, така пěççине çавăрттарса хучě, чěрě аш шăршине туйса умра явкаланса тăракан кил хуçи хěрарăмě çине тигр пек çăткăннăн куçне ывăтрě, «Хăвăр каланă пек пултăр, Юман патша», – тесе уçланкă майрине ташша чěнчě. Юманов хěрěшěн Заир каччи те ютах мар пулас, Чěмере паттăрě çинчен мансах унпа якăлтатать. Кěрлет ěçкě-çикě. Америкăри Поль Робсон некăртан та ирттерет Чěмере паттăрě, Африка варěнчи йăхташěсем илтмелле юрлать:

*Çакă пирěн туй тесе,*
*Э-эй, туй тесе,*
*Пурнас йытта вěлерсе,*
*Параппан туса килтěмěр...*

– Эх, Сармантей тусăм, санăн та сар чăхху сар çăмарта турě пуль, çăмарти ўксе те çěмěрěлчě пуль, – хăлхаран пăшăлтатать Юманов. – Манăн та юратнă Кампурăм... вут çинче ăшаланчě, некăр хырăмне тăрантарчě. Эс хурарах аш, тенěрен... Юратнă йыттăма пусса çакрăм вěт эсир çитнě çěре... Халě хěрсěр те, арăмсăр та тăрса юлас марччě.

– Сăмахпа хуçа пулмалла, – тесе некăрсем çав вăхăтрах вăшт! çěклерěç те хăйсен «парнисене», хура йăлтăркка машина патнелле вăрăм утассемпе яртлаттарса васкарěç. Хěрěпе амăшě те хирěçлесе тапкаланмарěç.

Уçланкă варринчи кěлленме пуçланă вучах çумěнче тапăртатса тăракан Геннадий Николаевич Юманова çамрăк арăмě алă сулса хăварчě:

– Ыран вăкăр пусса Шупашкар варěнчи Конго хутлăхне çěн хăтана пыр. Туйне Лумумба урамěнче малалла кěрлеттерěпěр! Ак çапла шăранттарчě Чěмере паттăрě туй такмакěсене:

*Эпир туя кайманни (2 хут)*
*Нумай пулать пулманни –*
*Туй мыскари курманни,*
*Така пуç яшки çименни.*

*Ҫакӑ пирӗн туй тесе (2 хут)*
*Э-эй, туй тесе,*
*Пурнас йытта вӗлерсе*
*Шашлӑк туса ҫирӗмӗр.*

*Йытти питӗ лайӑхчӗ,*
*Пӑруран та пысӑкчӗ.*
*Пире хирӗҫ вӗрместчӗ (2 хут)*
*Пулас кин пек туйӑнатчӗ.*

*7.03.06 ҫ.*

## ЯНСАРИНА САССИ ЯН КАЯТЬ

Темиҫе ӗмӗр каялла ултӑ юплӗ Асан хӑтлӑхне тымар янӑ Янсарина ялӗнче те, ытти ҫӗрти майлах, ӗҫ кӗр-кӗр шавӗ те, ӗҫкӗ-ҫикӗпе уяв шӑв-шавӗ те таврана ян каять, ҫав хушӑрах пӑшӑл пӑтти те тутлӑн пиҫет. Нихҫан та выҫӑпа аптӑрамаҫҫӗ ку енӗпе те янсаринсемпе янсаринкӑсем. Ӗҫе те вӑрт-варт тытса тӑваҫҫӗ, чӗлхине те шӑлпа хӑйраса ҫивӗчлетеҫҫӗ, ясар-пасар ҫӗрӗн-кунӗнче те пӗрне-пӗри астарсах тӑраҫҫӗ. Сӑмсана та усмаҫҫӗ, хӑлхана та хупламаҫҫӗ утаманланса, симӗсленсе, чечекленсе пыракан чӑваш ялӗн хастар та савӑк ҫыннисем:

### Пуҫ пулма пӑрахнӑ

Тырӑ вырса ҫапассипе ялта та, районта та ялан кӗрешӳ пуҫӗнче пынӑ Шахалккӑ Хӗветӗрӗ, ҫӗнтерӳҫӗ япавне ывӑлӗ туртса илсен, вӑлах купӑсҫӑсен ӑмӑртӑвӗнче те, кире пуканӗ ҫӗклессипе те ашшӗне хыҫала хӑварсан, ӗмӗрхи калпакне хывса ачин пуҫӗ ҫине хӑлхи таран пусса лартать те, ӑна турӑш умне ҫавӑтса пырса пиллет:

– Малашне ҫак килте те чи вӑйли – ҫемье пуҫӗ пул.

### Чӗлхе мӑкатмалли меслет

Юман каска ҫинче иккӗн юмахласа лараҫҫӗ:
– Касать хӗрарӑм чӗлхи, пуҫа татса илменни ҫеҫ...
– Ман мӑкалчӗ, пуҫран ҫеҫ шӑлать.
– Ан суй-ха, сана та чӗрӗллех кӑшлатчӗ-ҫке?
– Ман арӑм халь – тӗнчере ҫук савӑнӑҫлӑ хӗрарӑм.
– Мӗнле мӑкатрӑн ун чӗлхине? Вӗрент-ха мана та.
– Утиял айӗнче арӑмун чӗлхине кӑвак ҫутчен чӗлхӳпе ывӑнмасӑр хӑйра та... тӑм пуҫна та тӑн пырса кӗрет вара.

## Майне кура – апачĕ

Афоня сарай тума пуçланă, кӳршĕри Ваньккӑна пулăшма чĕннĕ. Иккĕшĕ кунĕпе тăрмашаççĕ. Çапать-çапать Афоня мăлатукпа, пăти пĕрмай кукăрăлать. Ванька та унран кула-кулах шачлаттарать. Яшка çитерме пынă арăмĕ пăхса тăрать-тăрать те вĕсем çине, вара Ваньккӑн чашăкне чышкă пек аш татăкки хурса парать, упăшкинне шĕвĕ шӳрпе чăппи тултарать.

Афоня арăмĕн куçĕнчен ыйтуллăн пăхать.

– Сан пăту ялан кукăр. Ваньккӑн пĕрре эхлетнипех яшт кĕрсе каять, – тесе вăрт çаврăнса утать арăмĕ.

## Ула ĕне мыскари

Купăс Павăлĕ, кăшт хĕрĕнкĕрехскер, якăлти кино курса ларать. Çара кут майрасем анчах экран тулли авкаланса ӳкнĕччĕ, телевизор сасартăк сĕтел хĕрринелле шуса тарма пуçларĕ, ахух, çеçтепесемпе пĕрлех уçă чӳречерен тĕттĕмелле вăшт кăна сиксе çухалчĕ.

– Кĕтерук? Часрах тăр-ха?!

– Мĕн пулчĕ? – çывăрмалли пӳлĕмрен сиксе тухрĕ арăмĕ.

– Такам чӳречерен телевизора йăтса тарчĕ. Атя хăваласа тытар!

Иккĕшĕ те урамалла сиксе тухаççĕ. Кĕтерук ял çурасла çухăрса ярать:

– Хурах! Вăрăсем тапăнчĕç!

Хăрушă сасса илтсе кӳршĕсем карах пухăнчĕç. Пурте унталла чупаççĕ – кунталла. Нимле вăрă таврашӑ те курăнмасть. Ĕне вăрăммăн му-уклатнипе шартах сикеççĕ. Пăхаççĕ – кӳршĕри Улькан мăйракисене антенна кабелĕпе çыхлантарса лартнă каскăн ула ĕни тăра парать пуçа каçăртса. Умĕнче телевизор йăванса выртать. Акă епле тĕлĕнмелле вăрă иккен!

Кӳршĕсем саланнă хыççăн Кĕтерук Павăла куçранах каларĕ:

– Виçĕ çул хăвалап сана çав çĕрĕк картана юсама. Эс пур, ял тăрăх купăс нартлаттарса çӳресе нателă ярса лартан та, çĕрĕпех телĕк майрисене суйласа-юсаса тĕлĕрсе ларан. Чăтмастăп урăх, ак, ыранах Ванюш ват хусаха чĕнеп те картине те, телевизорне те, мĕн тумаллине пурне те юсаттарап. Упăшка ячĕпех хырăма та, кăмăл-туйăма та тăрантараймăн.

Çылăхлă тутăр

Тĕнче çаврăмĕ парнеленĕ юрату чирĕпе аптăраса ӳкнĕ Хăвакла хăйсен умĕнчи пĕвери вакка сикес патнех çитрĕ. Хăйсенчен çырма урлă пурăнакан Ваççук пуçа çĕмĕрет те çĕмĕрет, чĕрене ыраттарать те ыраттарать, ыйхăсăр нушалантарать те нушалантарать. Ваттисем каларăшле, чир çумне чир хушăнса пырать тенĕ майлах тата пиçсе çитнĕ хĕршĕн тепĕр ăшвăркатмăшĕ çуралчĕ: кĕвĕçӳ. Ку та канăç памасть, асаплантарса чуна илет. Мотор апачĕн шăрши çапнă Ваççука вăл анчах мар, пĕр çулта çуралнă, пĕрле шкулта вĕреннĕ, юнашар ташласа-юрласа ӳснĕ, сысна ферминче ăмăртса ĕçлекен Анюта та хăй çумнелле туртасшăн-çке. Кĕр сăри каçĕнче Ваççук тракторист кам саппунĕ айĕнче суха тунине пĕле тăркачах Хăвакла юрату пасарĕнче ухмах сутти турĕ. Вăл, нумай вĕреннĕ тепĕр йĕкĕт хăйне хула майри тăватăп тесе чĕркуçленсе тупа тунине сивлесех, çырла пек пиçсе çитнĕскер, юрату чирĕпе суккăрланнăскер, вăйăра куç хупса выляна пек хăлаçланса, кĕтнĕ телейне çавăрса тытрĕ. Савăннипе уяв тумĕ тăхăнса янă Ваççук юпа уйăхĕ ячĕпе çемье юпи чавса лартрĕ. Иксĕмĕрĕн юратăвăм тавра çӳллĕ тимĕр карта çавăрăпăр тесе вĕри ытамран вĕçертме те хăрарĕ упăшкине кĕçĕн çын пулса тăнă Хăвакла.

Хĕр хĕртлĕхĕн чирĕнчен сывалса чĕрĕлнĕ Хăвакла инке япшарлăхне чечеклентерсех пычĕ, уйпа яла хура тĕтĕмпе тĕтĕрекен хастар сухаçа умлă-хыçлă икĕ шăхлич парнелерĕ. Çуйхашса-аташса, пĕрне-пĕри тĕрте-тĕрте утланса лараççĕ те ар çурисем ашшĕ çине, ăна ик хăлхаран тытса хăвалаççĕ: «Но, тлактăл, малалла!» Амăшĕ вĕсене пăхса тăранаймасăр савăк чунне арçын вăййинче кантарать. Ачисене урайĕнче упаленсе чуптаракан ашшĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх тракторĕпе те хытă кĕрлеттерет. Ялта унпа танлашаканни çукрах-ха. Кĕр уявĕнче Вăрнартан яппунсен чи чаплă кăтартакан телевизор-парне илсе килчĕ. Ĕçре мала тухнăшăн Хăваклана та хытă хакланă: икĕ сысна çури парнеленĕ. Нуфнуфсене вĕсем пĕччен пурăнакан амăшне-хунямăшне парса хĕпĕртеттерчĕç.

Кĕсре кĕçеннĕ сасса нимле çӳллĕ тимĕр карта та хуплаймасть çав, аяккалла пăхакан ăйăра та темле çирĕп сăлăп та тытса чараймасть. Хăвакла хыççăнах хăйсен ялне качча кайнă Анюта вĕçкĕн Ваççана манайман иккен. Ваççукĕ те, Анюта панă пиçнĕ-пиçмен кукăле тахçанах тутанса пăхнăскер, унăн пылак-

рах-кăвасакларах тутине çухатман, ăна пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çырта-çырта тăрансах пынă. Çапах та, уй анчах мар, ял та куçлă, вăрман анчах мар – халăх та хăлхаллă иккен. Сывлăша сарăлнă усал сас-хура сĕрĕмĕ Хăваклапа амăшĕн сăмси витĕр хăлхине кăтăкласа илет. Унччен шăв-шав илтĕнмен пӳрт чӳречинчен урама чашăк-кашăк шăкăртатнă сасă тухкалама пуçлать. Ваççука улах чирĕ урараи ӳкмеллех çавăрса тытать. Астаракан ют эмел унăн пуçне тепĕр майлă çавăрса лартать. Унччен те ĕçмесĕр пурăнман-ха вăл, ял ачи. Трактористшăн хаяр шĕвек кашни утăмрах кӳленсе тăрать. Халĕ вара уншăн вăл хăй тахçан мăн тинĕсре ишнĕ чухнехиллех сарăлса кайрĕ. Тинĕс алхасăвĕ пекех килĕнче пӳртрен çӳллĕ хум çĕклентерме пуçларĕ. Пустуйранах сăлтав çине сăлтав шырать. Сăлтавсăрах кĕвĕçет. Ун арăмне пурте юратасшăн иккен, уяв-вăйăра та ăна пĕрмай ташша туртаççĕ. Чăркăшланать. Хăвакла тутлă апат та пĕçерме пĕлмест, мунчара çурăм çунă чухне те пĕр вырăна çеç сăтăрать, çекăсла выляса та кантараймасть чунне... Ачисем çине те йытăлла вĕрет.

Кун çутипе çĕр тĕттĕмлĕхĕ вĕсене те малаллах уттарчĕç. Кунĕпе ĕçре нушаланса, киле таврăнсан ача-пăчапа айкашланса, алăкран аран-аран кĕрсе урайне йăванакан упăшкана хывăнтарса-çуса, таса вырăн çине вырттарса çамрăк ĕмĕре кĕскетсе пыракан Хăвакла ялти ытти хĕрарăмсем пекех, чĕре чикнине пăхмасăр, чăтăмлах пурăнкалатчĕ-ха. Пĕр ыйхăсăр каç, ӳсĕрпе аташса выртакан Ваççук «Анютта, кил кунта!» тесе çухăрашса ярсан, чунĕпе кӳтсе çитнĕ Хăвакла чăтаймарĕ, упăшкине туртса антарчĕ те урайне, хырăмĕ çине хăпарса сикрĕ:

– Чарăнатăн-и эс, е чарăнмастăн?! Хăçан пăрахан Анюта патне чупма? Сана-и? Сире-и? Пурпĕр тавăрап!

– Пуш сăмах, – мăкăртатрĕ упăшки.

– Сăмах мар пушă – çăмарту! – тесе арăмĕ ăна çурăмĕнчен улма тӳмелли тукмакпа çапрĕ.

Арăмĕ тепрехинче кăмака умĕнчен вăрăм çĕçĕ йăтса тухрĕ те упăшкин сăмси умĕнче сывлăша хĕç пек касса татрĕ:

– Кут айĕнчи ăйăрна ĕрĕхме чармасан, ӳсĕр чухне шĕвĕр сăмсуна та, шакла пуçна та ак çапла касса ывăтатăп!

Эх, чупакан пурнăç! Вăл пурне те хăйĕн парнине парса хăварать. Савăнăç. Чап. Хурлăх. Куççуль. Çул вĕçĕ. Масар. Ăнакăна пăхмасăр, ясарлăх ĕмĕр-ĕмĕр пурăнать. Кашни çынра. Арçынне те, хĕрарăмне те чарăнма пĕлмесĕр кăтăклантарать,

астарать. Çавна пулах ёнтĕ усал-ырă сас-хура хыпарĕ пурнăç тĕтриллĕн ял çийĕн йăсăрланать, хумлăн-хумлăн ял чӳречисене пырса çапăнать. Çав хум Хăвакласен чӳречинчен те хĕсĕнсе кĕресшĕн кантăккине шăкăртаттарса, çĕр çывăратмасть упăшкине кĕтсе выртакан çамрăк хĕрарăма. «Мĕншĕн арçын чурийĕ пулса нушаланмалла-ха хĕрарăмăн, атте-анне пире пĕрешкелех çуратса-пăхса ӳстернĕ, саккунпа та пире пĕр права панă, эпĕр, хĕрарăмсем, тĕнче тытăмĕшĕн арçынсенчен ытларах нуша куратпăр, çав хушăрах пур енĕпе те вĕсен айĕнче пулмалла-и, вĕсенчен ухмах-и эпир, вĕсем тунă ĕçе тума пултараймастпăр-и, туратлă çуралнă тесе вĕсен куçĕнчен пăхмалла-и, пирĕнсĕр сирĕн пурпĕрех пурнăç çук», – тесе халтăрланчĕ халсăр выртакан упăшки çине хĕрхенӳллĕн пăхса Хăвакла.

Ачисене тăрантарса майласа хăварнă хыççăн вăл амăшне пăхма кайрĕ, сыснисене ăшă витерен кăларса апат пачĕ, çăмарта илме тесе аслăк çине хăпарчĕ те... Ак тамаша! Типĕтнĕ утă çинче тутăр выртать. Тытса пăхрĕ вăл ăна, çилли тулса килнипе чутах кайса ӳкетчĕ. Ара çуралнă кун ячĕпе тантăшне, Анютăна, чунтан-вартан юратса парнеленĕ йăпăрка тутăр-çке ку? Çынсем ахальтен кулăш çаврăмĕ çавăрмаççĕ-мĕн вĕсем тавра.

Амăшне те, упăшкине те, никама та шарламарĕ вăл астару япали пирки, ăна илсе кайрĕ. Аскăнчăксене тавăрмалли майсем шырарĕ. Тупрĕ. Çемьере арçын алли пулман пирки вăл амăшĕпе пĕрле пуртă-пăчкă майлăн тытма та, мăлатукпа тӳрĕ çапма та пĕчĕкренех хăнăхнă.

Каллех кун иртет, çĕр иртет... Çĕр çаврăмĕнче Ваççукăн улах арманĕ хăлтăртатсах авăрать-ха. Шăм-шака хыпашласа шăнтакан усал çилпе арăмĕн çилĕ те тăвăлланса хăпарать. Чăтăм хуранĕнчи куççуль тахçанах сиксе тухасла вĕрет. Хăйне хăй ниçта хума пĕлеймесĕр вăшталанакан Хăвакла  сарай пусми тăрăх хăпарчĕ,  утта сирчĕ, ал пăчкипе вите маччине витнĕ хăмасене татрĕ, вĕсене пăтапа çапса пĕрлештерчĕ, пĕр пуçне икĕ петле лартрĕ, тепĕр пуçне хăлăп вырнаçтарчĕ, унран вĕрен çыхрĕ, алăка, кăшт тытăнса тăмаллăх, çӳхе хăма татăккипе çапса хучĕ, çиелтен уттине витрĕ, хураллама утă хыçне кайса выртрĕ.

Амăшĕсенчен виç кил урлă пурăнакансен çав каç ача ĕçкиччĕ. Амăшĕ те чĕннĕ çĕре хăнана кайнăччĕ. Вăл чӳречерен пăхса сăнать. Акă Анюта та, упăшки хыççăн йăкăртатса, куммисем патнелле иртсе кайрĕ. Курка-стакан пушатассипе ун упăшки те Ваççукран кая маррине пĕлекен Хăвакла туйрĕ: ерк-

ёнсем кӗҫӗр серепене лекеҫҫех. Анюта упӑшки, ним майсӑр ярса лартаканскер, ӗҫкӗ-ҫикӗрен нихҫан та талӑксӑр таврӑнман. Кун пирки те, арӑмӗн чупкӑнлӑхӗ пирки те ял ҫаптарккӑлӑхӗнче пур вӗсен ят-сӑнӗсем. Хӑвакла хӑйӗн тантӑшӗ кӗҫӗр те ясарлӑх йӑвине якӑлтатса килессе хумхануллӑн кӗтет.

Уйӑх пӳрт хыҫнелле пытанма пуҫланӑ вӑхӑтра, акӑ, урам алӑк сасси илтӗнчӗ. Уйӑх ҫуттинче Анютапа Ваҫҫук мӑнкӑлтатса сарай патнелле ҫывхараҫҫӗ. Пусма чӗриклетет. Пӗрин хыҫҫӑн тепри аслӑк ҫине хӑпарчӗҫ. Ик ҫунтармӑш чун палкавӗ савӑшлӑх кӗввине куҫма пуҫласан, Хӑваклан чӗрийӗ, кӑкӑртан тухса кайса, уйӑхран ҫакӑннӑн туйӑнчӗ, вара вӑл, сарай тӑррине тур-тур-турлатса, ҫӑмарта тума хӑпарнӑ чӑхпа кукарекленме хатӗр автан мӗн тӑвасса кӗтрӗ. Еркӗнсен юрату юррийӗ Хӑваклан хӑлхине ҫурсах пӑрахрӗ. Урса кайнипе вӑл вӗсене ҫурса, тулласа тӑкӗччӗ, анчах... чӑтмаллах. Анюта Ваҫҫука васкатать. Ваҫҫук Анютана утӑ ҫине ҫавӑрса хучӗ. Ҫав самантрах витере хаплатнӑ сасӑ илтӗнсе кайрӗ. Хӑйсем ҫине ӳкнӗ темскертен хӑранипе сыснасем ҫухӑрса ячӗҫ. Хӑвакла шӑтӑк патне упаленсе ҫитрӗ те, мачча каштинчен ҫакнӑ вӗрене туртма пуҫларӗ, хӑй майлаштарнӑ алӑка хӑпартса ӑна малтанах хатӗрленӗ патакпа ҫиелтен ҫирӗплетсе лартрӗ. Ҫумрах – упӑшкин йӑрӑмлӑ шӑлаварӗпе еркӗнӗн чечеклӗ йӗмӗ выртаҫҫӗ. Вӗсене вӑл йӗрӗнсе ҫӗклерӗ те, вещественнӑй доказательствӑ вырӑнне тесе, пӳртумне пытарса хучӗ. Ӗҫкӗрен таврӑннӑ амӑшне пӑркӑчласа хӑварчӗ: «Сысна ҫимесӗр эрне те пурӑнать, ясар-пасар та ҫав вӑхӑтра выҫӑ вилмест. Кӑлар тулӗк вӗсене. Пурне те вӗлереп».

Тепӗр кунне хуҫалӑх хуҫи хӑйӗн ӑмӑртса чупакан тракториастне, ферма пуҫлӑхӗ хӑйӗн ясар сысна амине ҫухатнӑ. Ялта хӑрушӑ хыпар сарӑлать: ҫын ҫухалнӑ! Ял тыткӑчӗ ун пирки Вӑрнара пӗлтерет: «Милици, тархасшӑн тупӑр пирӗн ҫынсене!»

Хӑвакла телевизор пӑхса ларать. Экран ҫине кӗҫ унщӑн тахҫан вилме хатӗр Ваҫҫукпа пӗр-пӗрне ӗмӗрте те сутмастпӑр тесе тупа тунӑ Анюта епресе тухрӗҫ. Диктор вӗсен сӑнӗ-пуҫӗ, тумтирӗ, вӗсем хӑҫан ҫухални ҫинчен тӗплӗн пӗлтерет, вӗсен чун-чӗринче мӗн ларнине ҫеҫ хыпарламасть. Кулсан та кулас, макӑрсан та макӑрас килмест мыскарашӑн.

Амӑшӗн килӗнчи сарай аслӑкӗнчен аннӑранпа ҫиччӗмӗш куна пуссан, Хӑвакла ял старостине тата Анюта упӑшкине амӑшӗсем патне чӗнчӗ. Вӑл вите алӑкне яри уҫса ячӗ те, хаяррӑн кӑшкӑрчӗ:

– Тухăр пĕрерĕн, аскăнчăксем!

Хĕç пек хытнă сыснасем ялт та ялт сиксе тухрĕç. Вĕсем хыççăн... мучук пек сухалланса кайнă, намăс вырăнне хура аллипе хупланă çара кут Ваççук тата вăрăм çӳçне пичĕ умнелле янă Анюта сулланса тухрĕç. Хăюлланнă Хăвакла, тĕрмерен тухнă упăшкин тăрмаланчăк пуçĕ çине еркĕнĕн йĕмне тăхăнтартса лартрĕ, сутăнчăк Анютана Ваççук шăлаварне персе пачĕ те, хăйĕн парнине, çылăхлă тутăра, намăса çухатнă пуçне каялла çыхса ячĕ.

Анюта хĕл çитсессĕн те, тек, вакка сикме шутламасть. Юрату чирне нимле те, нимпе те сыватма çуккине çеç кăштах ăнкартрĕ.

*22.01.2006 ç.*

## Шуйттан măйраки шӳрпи

Афонькăпа Пахомка тĕнче çути курни вăтăр çула та çывхарать. Кӳршĕсем пĕр хĕр хыççăн ăмăртса чупнăранпах ĕçре те ăмăртма пăрахмаççĕ. Çырмакасси ялĕнче вĕсене çитекен тракторист та сахал. Пĕри паян малта, ыран – тепри. Юрату чуппинче хăйĕнчен маларах тухса Алюнкана пилĕкрен çавăрса илнĕшĕн Пахомка Афонькăна туйранпах кĕвĕçсе пурăнать. Афонькăпа Алюнкан хăйсен умĕнчи çырма тулли ача шыври йытпулли пек йăшăлтатать пулсан, Пахомкăн кушак çурисĕр пуçне йăпанмалăх пепке те çук. Пахомка хуйхăрнипе юрату хĕнне кайнă-мĕн. Ашшĕ-амăшĕнчен тăлăха тăрса юлнăскер, вăл пĕчченех нушаланать. Ял нихăçан та хĕсĕр мар та çав, анчах уншăн темшĕнçке Çырмакасси те, кӳршĕ ялсем те хĕсĕр. Пӳрт алăкĕн урати урлă саппун çакнă пĕр шăлйĕрене те ярса пустармасть. Витинче автанпа виçĕ чăх, ĕне усрать. Ĕне чĕччи туртас, качча пырса хăйĕн карăннă чĕччине пепкене ĕмтерес шухăшлă шухă пикесем те унăн чӳречи умĕнчен хаш та хаш! сывласа иртеççĕ. Пахомкăн ăшĕнче мĕн вĕренине кам пĕлсе çитертĕр-ха.

Çуркунне тракторпа анкарти сухаласа панăшăн кӳршĕсем Пахомкăна качака путекки парнелерĕç. Хăй йышшисене хурах пулчĕ тата. Пĕчĕк путекшĕн вăл мĕн тери хĕпĕртенине машина-трактор хуçалăхĕнчи хура халăх çав кунах ял хушшине сарчĕ.

Пахомкăна та турă телейлĕ турĕ. Ăнсăртран тупăннă чун кантармăшне вăл Афонька ятлă хучĕ, ĕне сĕчĕпе, ачашласа ӳстерчĕ. Тракторпа ĕçлесе ывăннă хыççăн, иккĕшĕ пĕр савăт-

ран хӑйма леп-леп-леплеттереҫҫӗ те, урайӗнче выляма пикенеҫҫӗ: пӗрне-пӗри тӑрсст-тӑрсст! тутараҫҫӗ ҫамкисемпе. Путекӗн ҫамки мӑкӑрӑлса пынӑ май, Пахомка урӑх урама кӑвакарнӑ ҫамкине ҫутӑлтарса тухма пӑрахрӗ. Тек вӑл Афонька каҫтакапа тӗкӗшмест. Тӗкӗшмелли унӑн ахаль те пур: Афонька кумӗ. Алюнка пӗр шӗвӗрккине чиркӳре ӑнах тыттарас терӗ-ҫке.

Ӗҫсӗр аптӑранӑ хушӑра Пахомка сӑнать те сӑнать Афонькӑсен кил картине, пахчине. Уншӑн ытти нимех те мар, мӗн те пулин тунӑ чухне Алюнка пӑркаланса, пӗшкӗнсе, явкаланса ҫӳрени темрен те хаклӑ. Пӗррехинче унӑн ҫамрӑклӑх юратӑвӗ, качча илме ӗмӗтленнӗ пирӗштийӗ кӗпине ялт ҫӗклерӗ те... тӗнчери мӗнпур хӗрарӑм хӑй вӑхӑчӗпе ҫав майлӑ кӑна тумалли ӗҫе тунине кӑтартрӗ – ун еннелле кутне ҫутатсах саркаланчӗ. Хӗрарӑмӑн пушату саманчӗ ӑша тулса ларнӑн, Пахомка урайне тӗшӗрӗлсе анчӗ, мӑйракаллӑ Афонька хырӑмӗ ҫинче ташлама пуҫласан тин тӑна кӗчӗ. Хӑйӗн ӗмӗтленнӗ хӗрӗн хура варӗнче вӑл мар, ачаран выляса ӳснӗ тусӗ Афонька ыр курса хуҫаланнӑшӑн тарӑхнипе, тӗнчене тепӗр майлӑ ҫавӑрса лартма та хатӗрччӗ. Тепрехинче ват хусаха Алюнка хӑйӗн тем тӗслӗ, хитре йӗмӗсене силлесе, майласа, пӑха-пӑха кашта ҫине типме ҫакнӑ вӑхӑт каллех тӑнран ячӗ. Тӗлӗкре те вӑл ҫав йӗмсене аялалла туртса антарчӗ, анчах кам пӗҫҫинчен, – куҫа уҫсанах манса кайрӗ. Туслӑ кӳршӗсем ӗҫке-ҫике пухӑнсан... Пахомкӑн ҫуркуннесӗр тӑратса хӑварнӑ кушак аҫинни пек куҫӗ Алюнкан сиксе тӑракан ҫавра ҫӑкӑр пек купарчипе хушӑран уҫӑлса куҫа шартарса яракан тӑпӑлкка пӗҫҫисем ҫинче кӑначчӗ.

Афонькӑн та туйӑмӗ кӑрчама курки тӗпнех путман-ха, куҫӗ те чӑл-чӑлах, пуҫӗ те арпапа тулман. Сисет. Туять. Чӑтать.

Качака этем ҫури мар, хӑвӑрт ӳсет. Пахомкӑн Афоньки те самӑрӑлса тӗрекленчӗ, йӑрӑмлӑ мӑн мӑйракине кукӑртса хучӗ, шӗвӗр сухал ӳстерчӗ. Йӑхташӗсен йӑлине ҫӗнетсе, ӑрсурник пулса тӑчӗ. Хуҫи ирӗке янине пула вӑл кӳршӗсем хушшинче хирӗҫӳ хӳми тытса лартрӗ. Куҫа курӑнман инкек ҫитрӗ. Вӑл кӗрсе тухса йывӑҫ кӑшламан, купӑста пуҫне тӗрӗслемен кил юлмарӗ. Афонька вырӑнне качака таки Шуйттан мӑйраки пулса тӑчӗ.

Афонька пӗррехинче чӳречерен пӑхрӗ те, аташӗ пӗчӗк улмуҫҫие ним пулман пекех ҫивӗч шӑлӗсемпе якатать. Кӗҫӗн ачи ячӗпе лартнӑ улмуҫҫисене хӗлле те ҫав Шуйттан мӑйракиех саваласа тухнӑччӗ. Тарӑхнипе Афонькӑн пырӗнче тем капланчӗ. Ҫавна сиссе арӑмӗ витререн ӑсса панӑ шыв куркине ҫӳп шӑ-

тăкне вăрнлаттарчĕ те вăл пўртумне сиксе тухрĕ, алă айне лекнĕ мăйкăчпа сăнчăр тата çăраççи йăтса чупрĕ. Майлакаласа кайри ураран çулса илчĕ качакана, урисене сăнчăрпа хĕреслĕ çавăрса çыхрĕ, юман юпаран явакласа илсе çăраççипе питĕрсе хучĕ. Шуйттан мăйраки шуйттанла çухăрать.

Алюнка та чунлă-çке, чĕринче унăн Пахомка та пытанса ларать пулмалла пĕр кĕтесре. Упăшкине ĕçтерсе ўсĕртет те, ушшине пĕçертсе, мăйракаллă Афонькăна касмăкран хăтарать.

Тракторне юсама пуçланăччĕ те, качака мыскари хыççăн Афонька эрне урăлмарĕ. Килти ĕнсăна та тапăнчĕ. Спектакль малалла аталанать. Хĕрарăмсем вăрттăн улах ĕçки тунăччĕ те, Алюнкан унта каймаллаччĕ. Афоньки те юласшăн мар. Тулли куркапа сак çине йăвантарчĕ те вăл вара ăна кĕпе çакмалли çирĕп кантрапа явалаcа çыхса хăварчĕ.

Сахал выртнă-и Афонька, нумай-и, ăна астăвас çук, хайхискерĕн пичĕ кăтăкланнипе хăрах куçĕ тĕтреллĕн уçăлать. Умĕнче сухаллă, мăйракаллă, çăмламас шуйттан тăра парать. Самантрах сив тара ўкет Афонька. Чăлт-чалт, чăрт-чарт тутарать ула шуйттан ун питне йĕпе чĕлхипе, сăмсине хыпса лартать, ăна тĕке-тĕке тăрăшсах ĕмме тытăнать. Ярса илесшĕн çакна Афонька сухалран – аллине çĕклеме çук, тăрса тапса сирпĕтесшĕн – ури те тапранмасть. Ĕнтĕ кăтăкланмасть сăмса, çивчĕ шăл тивнипе пĕçерсе ыратса каять. Тин чалтăрах уçса ярать Афонька тепĕр хĕсĕк куçне, мăч-мăч тутарса пăхать: нимле шуйттан та мар, Пахомкăн качака таки нăчкать те нăчкать иккен унăн лаптак тукмак пек сăмсине: çăвар тулли. Кĕç пичĕ тăрăх юн йăрласа юхса анчĕ. Сурса хăваласа ячĕ-ха вăл чĕр Шуйттан мăйракине. Çĕкленесшĕн хăй – тăраймасть, мăйран кантра касать. Аптранипе пуçне пăркаласа пăхрĕ, качаки тата, килĕнче хуçипе аташма хăнăхнăскер, ку хăйпе вылять тесе пулас, тавралла сиккелесе çаврăнать те чĕвен тăрса ме-ке-кее-ек! тет вăрăммăн. Качча, Шуйттан мăйраки! тесе хăрăлти сассипе çухăрса ярать Афонька. Хăна каялла чакса талпăнса пырать те, пĕррех кăрслаттарать мăйракаллă пуçпа ăна. Сак тўнсе каять. Афонька хырăм çине хаплатать. Шуйттан мăйраки чупса çаврăм тăвать те кăрст! кăрст! сикме тытăнать сак çинче. Икĕ ура çине тăрса ташлать. Çĕнтерў ташши, тейĕн. Афонька ун айĕнче сăмсана лапчăтса, юн юхтарса выртать, хăранипе кăшкăрма тытăнать: «Хурах! Вилеп! Çăлăр!»

Ҫав вӑхӑтра Пахомка шӑпах ёҫрен таврӑнатчӗ. Кӳрши хурахлатнине тата хӑйӗн Афоньки мекеклетнине илтсе чупса кӗрет, кантрине салтса кумне ура ҫине тӑратать. Шуйттан мӑйраки тухса вӗҫнӗ ӗнтӗ.

– Качака мӑшкӑлӗнчен хӑтарнӑшӑн сана ҫур литр ёҫтеретӗп, анчах Шуйттан мӑйракине каҫармастӑп, – аран-аран чӗлхине ҫаварттарать Афонька.

Ялти хвельтшерсем патне сӑмсине ҫыхтарма кайсан Афонька ҫула май пуҫани патӗнчен тайкаланакан пуличченех тиенсе тухать те, ҫырма урлӑ юрласа каҫать. Тӑвайккирен хӑпарсан, хӑйсен хапхи умӗнче... хирӗҫ яртлаттарса килекен Шуйттан мӑйракипе иккӗшӗ те харӑсах тӑп чарӑнчӗҫ. Афонька пӑхать-пӑхать тӗлӗнмелле чӗрчун ҫине... Пӗрре хӑйӗн арӑмне куҫ хывса ҫӳрекен Пахомка пекех. Аснӑ-лартнӑ ҫавӑ: тӑрӑхла питлӗ, чармак куҫлӑ, шӗвӗр сухаллӑ... Ма мӑйракаллӑ-ха тата? Шуйттан манерлех. «Ак тамаша, пӗрмай ӗҫсе ухмаха тухап пуль», – тесе ҫамкине шаккаса пӑхрӗ. Сывах пек – ыратать. Ҫав самантрах ме-ее-ек! тенӗ сасӑ унӑн шухӑшне татрӗ. Афонька тӑнлӑн кӑртах сикрӗ, куҫне сӑтӑрса пӑхрӗ те – хӑй умӗнче Пахомка качаки Афонька мӑшлатса тӑнине тӗтреллӗн уйӑрса илчӗ. Тарӑхнипе ӑшра тӑвӑл ҫӗкленчӗ. Тата тӗсерех пӑхрӗ те... мӑйраки ҫинче темле япала асӑрхарӗ. Ара, Алюнка йӗмӗ вӗт ку? Яппунсен хӗвеллӗ йӗмӗ. Ҫавах. Авӑ, тӗпӗнчи хӗвел ҫаврашкинчен хырӑм ҫинелле те, икӗ пӗҫҫи тӑрӑх та ылтӑн тӗслӗ пайӑркасем йӑлтӑртатса саланаҫҫӗ. Пӗлтӗр ӑна вӑл, ҫӗнтерӳҫӗ трактористсемпе ют патшалӑха ҫулҫӳреве кайсан, арӑмне тӗлӗнтерме тесе, юлашки долларсемпе туяннӑччӗ. «Камӑн пултӑр-ха унашкал чаплӑ йӗм Ҫырмакассинче? Паллах, Алюнкан ҫеҫ. А мӗнле лекнӗ-ха вӑл Шуйттан мӑйраки ҫине? Нивушлӗ арӑм манран вӑрттӑн Пахумкӑпа савӑшать?» Ҫак шухӑш ӑна кӑштах урӑлтарчӗ, вара вӑл качакана тапас тесе урине ҫӗклерӗ, анчах лешӗ вӗльт ҫеҫ турӗ аяккалла. Афонька тусанлӑ ҫул ҫине питӗ майлӑн ҫаврӑнса ӳкрӗ. Шуйттан мӑйраки, кайри урисем ҫине ҫӗнтерӳллӗн тӑрса ҫаврӑнса илчӗ те, мӑйраки вӗҫӗнчи хӗвеллӗ кӗске йӗм пӗҫҫисене вӗлкӗштерсе тӗпӗртеттерчӗ.

Урам алӑкӗнчен кӗнӗ Афонька ҫӳллӗ пусма картлашки ҫинче каҫӑрӑлса тӑракан арӑмӗ патне ытарлӑн ҫывхарчӗ, уҫӑлса кайнӑ халат аркисем хушшине аллине тӑсма та ӗлкӗреймерӗ, кӑкӑртан тапкӑ лекнипе каялла кайса лаплатрӗ.

– Йӗм тӗрӗсличчен, картуна кайса ҫап! Типме ҫакнӑ кӗпейӗме Шуйттан мӑйраки тустарса тухса тарчӗ, – терӗ арӑмӗ.

Кам курнă-ши кунашкал мăшкăла? Пахомки чӳречерен те, ракатка хушшипе те арăмне сăнать. Качакийĕ сăмсине кăшласа амантрĕ, Алюнкан супер-йĕмне урам тăрăх силлесе çӳрет. Хăртнă улмуççисем тата...

Пахомка ĕçе тухса кайсанах Афонька Шуйттан мăйракине пахчара кĕтме тытăнчĕ, хăмисене анлăрах хăпăтса юри уçса хучĕ. Мухмăр ĕнтрĕкĕ пите çапма пуçласан, хайхискер пуçа пăркаласа çитрĕ, лартнă мăйкăча тӳрех лекрĕ. Арăмĕ пасартан таврăннă çĕре Афонька качакана пусса тирпейлерĕ, шӳрпе пĕçерчĕ. Пахомка кумне те хăнана чĕнчĕ.

– Çуллă вара ку сурăх сан, кум, – мухтаса тутине çуллать Пахомка. – Шӳрпе-тĕк шӳрпе. Чылайранпа çименччĕ-ха кунашкал тутлă апат. Тавах.

– Хăвна тавах мăнтăр качака ӳстернĕшĕн, – тесе Афонька кумне çурмаран пайланă пуç тыттарчĕ, çуррине хăй илчĕ.

– Черккӳсене шаккаса ĕçĕр те, – хĕр чухнехи савнийĕсем çине пăхса сар хĕвел çăвĕ пек ирĕлнĕн йăлкăшрĕ Алюнка. – Кăшлама пуçлăр. Шуйттан мăйракинчен тутли тĕнчере те нимле апат пулас çук.

*24.02.06 ç.*

## ТАВАХ ТУРРА!

Иван Мучипе Куçма Чулкаç рай пахчинчен Çĕр çине канлĕн пăхса выртаççĕ.

«Ах, хамăн пасара сутма кайнă кăммунхус сыснине вут çинче ăшаласа çиесчĕ», – какăрма хăтланать Утикасси чăвашĕ.

«Ман та арăслан хӳрин шӳрпине çиес килет, – мухтанасшăн лăнк тутарать пырне тĕнчере çук сунарçăн Лапшу Çтаппанĕн ашшĕ, Малти Ямашра хĕвел урине тытнăскер.

Аялта, çавра мăн чăмăрта, этем кĕтĕвĕ куç виççе илейми йăшăлтатать. Хура-хăмăр, шурă, сарă вĕлтĕрккесем хушшинчен «Хурах! Çăлăр!» – тесе чăвашла çухăрнине илтнипе вĕсем ялтах сиксе тăраççĕ.

– Мĕн пулнă? Кам хуптĕрленĕ пирĕн ентешсене кăмака хыçне?!

Хурахлатнă сасă, хумлăн-хумлăн тĕнче картине сирсе, куç-пуç алчăрса каякан çăлтăрлă Анлăша кайса çухалать.

– Сикрĕмĕр чăваша çăлма!

Юртан тасалсах пĕтеймен уя хаплатнă Иван Мучипе Куçма Чулкаç Çĕр çинче пĕрне-пĕри этемле палласа илеççĕ. Вĕсем чарăнма пĕлмесĕр юп юптаракан юмах тĕнчин канашне лекнĕ иккен. Чăваш юптаруçисене Хоттабыч мучи сарлака та вăрăм сĕтел çинчи хăйĕн вырăнне сумсăрах парса хăварчĕ.

Хĕремесленсе кайнă шакла пуççемпе маччана перĕнекен кăтралатнă çÿç-пуçлă «çĕнĕ чăвашсем» чĕлхе çапăçăвĕ пуçланă. Унтан та, кунтан та илтĕнет:

– Кам чăваш хресченне камантлама пултарать?!

– Кам çăкăрлă-ашлă тăвать чăваш халăхне?!

– Эпĕ! – тăрук ăнкарса илнĕ Иван Мучи шалт! шалтлаттарса илет кут хыçĕнчи капкăнне. – Эпир суккăр мар, пурне те куратпăр çÿл тÿперен. Чăваш çĕрне тырăсăр, чăваш ялне выльăхсăр тăратса хăварма мехел çитернĕ каппайчăкпа тăранма пĕлмен мăн хырăма «Капкăн» шăл хушшине хупса хĕстернĕ хыççăн, чăваш çĕршывĕн ял хуçалăхне хамăрла, чăвашла, хамăр тытса тăма пуçлатпăр. Ялта – ял çыннин хуçа пулмалла; ялта – ял хуçин укçа çапмалла; ял пурлăхне – ял халăхнех хăвармалла.

– Эпĕ! – Чăваш пуçлăхĕсенчен те çÿлерех çĕкленесшĕн каçăрăлать Куçма Чулкаç. – Атăл шывĕпе юхтарса янă, выльăх масарне ăсатнă мĕльюн ĕне, сысна, сурăх, качака, чăх-чĕп ячĕпе калатăп: çил шăхăрса ларакан пушă витесене эпĕ Ямаш вăрманĕнчи тусăмсемпе тултарса лартатăп. Çĕрпÿел енчен вĕсем кунталла кашăлах тапранса тухрĕç, авă. Чăвашăн пĕрлешÿллĕ хуçалăхĕсенче сурăх, сысна, ĕне выльăх çухалса пырать пулсан, эпĕ... Чăваш патшалăхĕн йĕрĕпе пырса, тăван халăхăмăн нушине туйса... мĕльюн куян, тилĕ, пăсара, кашкăр, упа ĕрчетме пултаратăп. Ман пăчăрсене, кăвакалсене, хур кайăксене, ăсансене нимле аçтаха кĕрипĕ те ермест, мĕншĕн тесессĕн эпĕ вĕсене çÿлти патшалăх имĕпе пилленĕ. Эпĕ... Енчен те, утаймиех пулнă пулсан Чăваш ял хуçалăхĕ, асăрхаттарса калатăп, Хоттабыч мучисем-таçти-мурти хыпкăчсем çине шансан çут пăр çине çара кутпа шаплатса ларатăр, эпир, Ямаш вăрманĕнчи Арăслан тусăмпа, ăна ним мар çÿле çĕклетпĕр. Пире нимле ним инвестици те кирлĕ мар. Эпир хамăрăн чăваш хăвачĕпех чăвашла çĕклетпĕр мăн эртелпе, нимепе, хамăрăн чăваш çĕрĕн хăватне. Чăвашăн инвестицийĕ ун яланах сарай хыçĕнче пулнă.

Чăваш пуçĕн сĕтелĕ Атăл хумĕ пек чÿхенсе илчĕ:

– Юмах – юпа тăрринче тет, – илтĕнчĕ тахăш енчен. – Пирĕн вара чăн сăмах – инвестици тÿпинче.

Иван Мучин пуç кунтăкĕнче ылтăн пĕрчисем пĕр-пĕринпе тĕрткелешсе илчĕç.

– Ин?.. – хăлхине анăçалла тăрататать вăл, унтан усаллăн вěрекен çиле аллипе сирсе. – Ин тени вăл, çапах та, таçти-аякри мур, пире çаратмалли май, ин страна – не наша сторона. Вестици – самăй хитре весенний птици – улетучилици. Вестици текен кăрасавицă вăл ют çěртен килет-и, хамăр çěршывран-и, пěр тěллевпе тапăнать сана, килет те, хырăмне тăрантарать те сан шутупа, пуять те, чěпě кăларать те, мăнтăрланса-йышланса, хăйěн тěп йăвине вěçет. Сан валли, ухмаххине валли, пуш йăвара пěр пус пек çутлăх хăварать. Чăваш вара, авалтанпа мěнле кăшланă тип йăвана, паян та, ыран та çаплах кăшлать, малашне те кăшлама пултарать инвесторсен хывăхěнчен пěçерне йăвана.

Шавлакансемпе тавлашакансем кěрлесе Атăла ею яраççě. Çурхи хěвел, вěсене юхăмпа анаталла ăсатнă хыççăн, Чăваш çěрě анчахрах юмахри пек чечекленнěшěн хěмленсе, паян Иван Мучипе Куçма Чулкаç аталантарнă сăнарлăх çěршывěн илемěпе хăйне евěр савăнать, йăлл кулса саламлать те вěсене, канса илет, вăрансан, тěнче сехетне ака уйăхěн 1-мěшě çине шаклаттарса куçарать.

Макулатурăна пырса панă Иван Мучипе Куçма Чулкаç, хăйсем шакла пуçсемпе маччана перěнекен кăтралатнă çӳç-пуçлă «çěнě чăвашсем» Чăваш çěрěнче юлнă ял мулне май килнě таран ытларах хăйсен кěсйине чикессишěн ăмăртса чупнине курса, Çěр нушинчен Çӳлти патшалăха улăхмалли вăрăм пусма патнелле шуса пынă май, сăхсăхса илеççě:

– Тавах Турра, пире ыран пурăнмалăх та çăкăр панăшăн.

*30.03.2006 ç.*

## ÇĂЛĂНĂÇ

Анчахрах çурăм хыçне юлнă хěрлě ялавлă ěмěрти виççěр хуçалăхлă, пěр соцěç паттăрлě, вунă ача амăшě героиньăллă ялтан ахăр саманаллă çěнě ěмěре кěнě вăтăр киллě Чăвашвар тăрăхěн пуçелěкě Саппа Кăмăсěн пěртен-пěр юлашки ар çурийě Арçук çăмарта ăшалама хěртнě çатма пек çулпа шалча пуçлě шěвěр пушмаккисене юрлаттарса пырать. Ача урапи тěкнě. Урапин кӳминче – яппунсен чи çěнě компьютерě. Самăртнă сысналии пек мăйěнчен ылтăнланă пысăк рама çакнă. Ун ăшěнче вырăссен Йăванăв Лексантăрěн «Христос халăха курăнни» чăн-чăн пурнăç ӳкерчěкě пек вилěмсěрленсе çěнелет. Саппа Арçукěн паян ача уявěнче чаплă сăмах каламалла. Капланнă шухăшне вăл халě ăс-тăн арманěнче майěпен авăртать:

«Хаклă ял-йыш! Тăванăмăрсем! Çěнě çемье тыткăчисем! Пěлетěр-и, этемлěх хăйěн çав тери хăватлă, ăслă-тăнлă, тěнчене тăруках тепěр майлă çавăрса лартма вăй-хал çитерекен чěппийě Çěр чăмăрěн çăмарта пек хуппине сăмсипе шаккаса тухасса çěршер çул кěтет. Эпир вара Чăвашварěнче хамăрăн çăлăнăçа виçě çултах кěтсе илтěмěр. Пирěн те тинех пěр ача çуралчě! Вăл хăрнă алкашсен сусăр генинчен мар, паянхи пурнăçăн çěнěрен чěрěлнě генинчен аталаннăскер. Ăна Шурхулара ылтăн керменě купаланă хамăр ялсемех, Канар утравне канма кайнă Шумер Генипе Типет Анюççи ăшă тинěс хěрринче тěвěлентерсе килнě, чăваш çěрěнче кун çути кăтартнă. Çěнě Гена-Кинати Çавал хăмăшě пек çӳллě çитěнсе кашлатăр. Ăна валли пирěн Чăвашвар халăхě ача ясли-сачě, икě хутлă ăс-тăн çурчě, илем шкулě, чаплă культура керменě, сывлăх охвисě, спорт хули, талăкěпе ěçлекен хупахлă суту-илӳ, йăла комплексě, пилěк тăраллă чиркӳ, ют патшалăхсене вěçмелли аэродром туса хăварнă. Унăн малашлăхě Чăвашвар, çěршыв малашлăхě пулнине шута илсе, ун валли ěмкěчпе çитак туянмаллăх та, садикре савăнмаллăх та, ялта кăçал уçнă çур класлă гимназире ăс туптамаллăх та, тěнчене тěлěнтернě Йăванăв Лексантăрěсемпе Праски Виттисем пек илем тинěсěнче ишмеллěх те укçа-тенкě ытлашшипех уйăрнă патшалăхě. «Доллар» пулăшу карапěпе «Евро» кӳмиййě ăмăртмалла васкаççě Чăвашвар еннелле. Пěтместпěр-ха хамăр пур чухне. Ăрăмçă Гена-Кинати хěвеле хирěç пăхса кулнă чухне кӳршěри Типçырма пек хăрса лармăпăр, Чăваш çěршывěн кăтартуллă тăрăхě те пулса тăрăпăр-ха виç-тăватă çулта пěрер гени хушса пырсан. Шумер Генипе Типет Анюççин аваллăх йăхěнчен нумай мěльюнлă этем укиянě сарăлса пынине те манар мар. Авă мěнле малашлăх кěтет пире...»

Тамаша мар-и? Савăнăç хěвелне вупăр çиме пуçларě. Чěнмен-туман çěртен вěçсе аннă çӳлти патшалăх дух оркестрě ял тăрăхěн пуçелěкне хирěç «Пирěн урам анаталла» юрă кěввине кěрлеттерсе килет. Ун хыççěнче – икě тупăк йăтнă тăйлăк-тайлăк. Иртнě ěмěртен тăрса юлнă халăх пекки «Малалла» ял хуçалăх пěрлешěвěн юлашки тракторисчěпе тата сысна пăхаканěпе сывпуллашать. Хăтăсă Ваççипе Чух-чух Улькийě умěнче вăл шлепкине хыврě. «Пире хамăра ыран кам ăсатě-





ши ёлёкхи Чăвашвартан темиçе хут ытларах сарăлнă масара», – илтĕнчĕ хура тум тăхăннă ушкăнран.

Утнă май Саппа Арçукĕ куçне икĕ еннелле те ывăтать. Мăян ашкăракан хресчен хуçалăхĕсенчен часрах малалла тарас килет. Ял пуçĕнче Шумерсен çулталăк хушшинче каплантарса лартнă килĕ-çурчĕ. Вĕсене йăлтах патшалăхран, банкран кивçен илнĕ укçапа тунă. Çамрăк çемьен пин çурă гектар çĕр пур. Унсăр пуçне – пĕрлешӳллĕ хуçалăхран юлнă

юхӑнма пуҫланӑ машина-трактор станцийӗ, мехарман, тырӑ склачӗсемпе ҫӗр улми пурттисем, сыснасӑр-ӗнесӗр ферма ҫурчӗсем... Пурте – ҫӗнӗ хуҫан. Хуҫи пулсан тарҫи тупӑнать. Пулӑшаканӗ те пур. Вӑл, юмахри пек ҫитӗнсе, кӗҫех сухапуҫ аврине ярса илӗ те...

Ял тӑрӑхӗн пуҫелӗкӗ пуҫне каҫӑртса утать. Майран ҫакнӑ ылтӑнланӑ рама ӑшӗнчен курӑнакан Христос сӑнарлӑн ҫывхарать Чӑвашвар ҫыннисем патнелле. Кивӗ тӗнче пӗтсе пынӑ хушӑрах ҫӗнӗ тӗнче ҫуталнӑн мӗлтлетет вилӗмсӗр ӳкерчӗк. Раҫҫей, чӑваш этемлӗхӗ историлле икӗ ҫул юппинче хытса тӑнӑ пекех. Ҫӗнӗ ӗмӗр мурӗ ҫиекен кивӗ ӗмӗр йӑли-йӗрки, ӑс-хакӑл хӑвачӗ леш тӗнче ҫӗнӗлӗхӗпе улшӑнса пырать. Хаяр шӗвекпе те, выҫӑллӑ-тутӑллӑ хырӑмпа пурӑнса сусӑрланнӑ, пӑчланнӑ генӑсем леш тӗнчери рай пахчине васканӑ вӑхӑтра Чӑвашварӗ ҫийӗн пӗчӗк ача сасси янӑрать. Акӑ, Шумер Генипе Типет Анюҫҫин Гена-Кинатийӗ сӑпкаран сиксе анчӗ те, хӑйне пехиллеме килекенсене хирӗҫ пӗчӗк урисемпе вӗлтӗртеттерсе чупрӗ.

*12.04.2006 ҫ.*

## ВӐРӐМ ҪУЛ ТЕЛЕЙӖ

Чӑваш «Улӑпӗпе» «Майри», кӗнеке издательствин кӑмиссарӗ панӑ мандата хӗстерсе, пичет ҫуртӗнчи типографирен кӑнтӑр-хӗвел анӑҫнелле шутарчӗҫ. Элӗке ҫитсен вӗсем кӗнеке лавкки шыраса сала тӑрӑх чупса ҫаврӑнчӗҫ, анчах ӑна тупаймарӗҫ. Элӗк ачисене вуншар ҫул хушши ӑс-хакӑл апачӗпе мӑй таран тӑрантарнӑ кӗнеке керменне пӑснӑ. Ҫӗршӗннӗ юман никӗсӗ ҫумӗнчи лапрана путнӑ Ашмарин словарьне курнипе хӑйсен малашлӑхӗ те ҫавнашкалах пулмӗ-ши тесе хуйха путрӗҫ. Хулӑн пуртфеллӗ арҫын вӗсене кӗнеке йӗрӗ ҫине ӳкме пулӑшрӗ. Культсуту лавккине лекрӗҫ. Ют ҫӗршыв кӗнеки куписем хушшинчен хӗсӗнкелесе сиксе тухнӑ сутуҫӑ, «Сирӗн валли вырӑн юлман» тесе вӗсене хурлантарса пӑрахрӗ, райпона ӑсатса ячӗ.

«Майрана» тӳрех куҫланӑ хитре арҫын «Улӑпа» та пӗрлех ыталарӗ.

– Таллеровран каҫалла аслӑ салам! – тесе тӳрех вӑрӑм сӗтел ҫине сарӑлса выртрӗ «Майра».

«Улăпĕ» хушса хучĕ:

– Лаврентий Васильевичăн юлашки «Майрийĕ» ĕнтĕ ку. Çĕр тенкĕпех киленме пултаратăр, тен, мана та, ӳт хӳтĕлевçине, тепĕр çĕр кăларса паратăр.

Вĕр çĕнĕ тумлă хăнасемшĕн хăпартланнă мăн пӳлĕм хуçи «Майрана» умĕнчен пуçласа хыçала çитиччен пит ăмсануллăн уçа-уçа пăхрĕ те, ăслă пуçне пăркаларĕ:

– Ай çивчĕ, хастар, ăста манăн ентешĕм, ватăлма та пĕлмест, «Сăпка юрри» юрла-юрлах «Майра» тупнă, вăт-тăк роман...

– Кĕтне тăрăхĕнчи «Хурăн шывĕ» имлĕх-сиплĕх парса тăрать ăна, хăйĕн ăратне чăваш халăхĕ хушшинче сарсах пурăнать. Ку «Майрин» те йĕкĕрешĕ пин çурă.

– Ай вай-вай, епле вăйлă. Çапах та, шел, элĕксем те вырăсланса пыраççĕ-çке, урам тулли майра утать. Çапах та... манăн паян сирĕн вăрăм çула татас килмест. Элĕкрех ытамран ан уйрăлăр-ха, туй хыççăнхи майлă хавас катаччийĕ чупăр Чăваш çĕршывĕ тăрăх. Шухăш çуралчĕ: Таллерова хăйне кунта чĕнетпĕр. Килтĕр те вăл хăйĕн майрисемпе ушкăнланса... Пичет майрисем пучах улăпĕсен пуçĕсене çавăрса ярĕç те, вара кĕнеке уявĕ – кĕнеке туйĕ кĕрлеттерĕпĕр. Чаплă «Майрине» кăтартса хавхалантарнăшăн, Талĕр Лаврентине Элĕкре ĕçлекен каçалсенчен çĕре çити пысăк тав.

Шупашкарсен çул çӳревĕ тунсăхлăн малалла тăсăлчĕ. «Улăппа» çавтăннă «Майрана» кӳршĕри Нурăс райповĕнче ытахаллĕн пĕлтерчĕç:

– Эпир хамăр та майрасем, пирĕн хамăрăн та патши – майра.

Таллеров вĕсене «Эсир тӳпенелле пăхса утăр, «Çăлтăр витĕр çул курăнать» тесе тăн парса янăччĕ. Сĕнĕве пурнăçласа туслă мăшăр Вăрнара çитрĕ.

Ахух, кунта та тĕлĕнтермĕш! Кĕнеке лавккинче – аптека. Вăр-вар провизорка çамрăксем умне мăн картун курупка кăларса лартрĕ:

– Сире, «Улăппа» «Майрана», савăшнă чух асăрханмалли кирлех пулма пултарать. Парне вырăнне йышăнăр. Утса ĕшеннĕ çинчен, акă, «катăркас», «шур çырли», «лимон», «пăрăç» эмелĕ те сĕнетĕп. Ку çĕрграммовкăсемпе эсир çара хырăма шăлма та, ыран ир мухмăр чĕртме те пултаратăр. Кĕнеке шăрши вара кунтан иртнĕ ĕмĕртех тасалнă. Райпо енчен çиле май вĕçсе килет тепĕр чухне типографи сăррин шăрши.

Райпон капашсăр мăнă çуртĕнче, темиçе алăк витĕр кĕрсен, «Ĕмĕр сакки сарлака, анчах...» юрра илтнипе вĕсем унталлаваскарĕç. Хавас кулăллă сутуçă аллипе тĕллесе кăтартрĕ:

– Авă, курăр. «Кипеч» те виççĕмĕш çул тусан çăтса выртать, хăяккăн çавăрса пăхакан та çук. Аптранă енне, çынсене илĕртме, магнитофонпа юррине те янраттаратпăр. Çав хушăрах акăлчан чĕлхинчен куçарнă «Нью-Йорк мэрĕн еркĕнĕ Вăрнар мэрĕ пуласшăн» кĕнекене çур кунта черет тăрса илсе пĕтерчĕç. Иксĕре те шеллетĕп те... Йĕпреçре телей тупсан кăна...

Йĕпреçсем те хăйсен тахçанхи чаплă кĕнеке лавкки çинчен маннă. Вăл çуртра кĕнеке вырăнне хĕрарăмсен витĕр курăнакан кĕпе-йĕмне сутаççĕ.

Вăрман урлă каçса хайхисем Кĕтне çыранĕнче тăп чарăнчĕç. Савăннипе «Майра» тăван тавралăх сывлăшĕпе пĕр хушă киленчĕ. Савăнăç нумая тăсăлмарĕ çав. Тахçан кĕнеке лавкки пулнă тăпăлкка йывăç çурт умĕнче каçалсем хăйсен ентешĕн çĕнĕ «Майрине» хыпашласа та, уçа-уçа та пăхрĕç. Пĕр йĕкĕчĕ ăна килнех илсе каясшăнччĕ, выçă хырăмĕ пăкăртатнинчен вăтаннипе нимлемарланчĕ, аллине кĕсйине чăмтарчĕ те, шăтăкран шĕвĕр пӳрнине ăсатуллăн вылятрĕ:

– Лаврентий Васильча салам калама ан манăр.

Елчĕк урлă тутарсем енне каçсан тин пĕр пуян чăваш «Майрана» майлăн çавăрса илчĕ те, савăнăçне ирĕке ярсах унпа чун уçса пуплеме пуçларĕ. Кĕвĕçӳллĕ «Улăпа» та тута тăсма памарĕç, пуян çĕршывăн хĕвелĕ айĕнчи сар пике ăна кăкăрĕ çумне тытсах чăвашла чуптурĕ:

– Хăçантанпа кĕтетĕп сана, сăнарлă тăван чĕлхемĕрĕн «Улăпне», санпа ирччен те куç хупмастăп ĕнтĕ халь. Тавах шупашкарсене!

Чăваш кĕнеке издательствин çĕнĕ «Улăпĕпе» «Майри» ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкĕнче Тутарстанра та пулин пурпĕрех пĕри качча тухрĕ, тепри киле кĕчĕ. Кăмиссар мандачĕ вырăнлах пулчĕ.

*12.04.2006 ç.*

## ÇЫРАВÇĂСЕН ПАЛКАВĚЧЕН

### Паллипе паллă марри

– Эсĕ «Тăван Атăлпа» «Ялава» пĕрлештерсе пĕр журнал тунине ырлатăн-и? – ыйтать паллă мар çыравçă паллă писательтен.

– Икĕ аллăма çĕклесех килĕштеретĕп! – сиккелесе илет палли. – Унччен ман икĕ журналĕнче те кашни уйăхра пĕрер роман пичетленетчĕ. Малашне пĕр журналтах уйăхсерен харăс икĕ роман тухма пуçлать.

Классик пуласшăн

Хăмпă çыравçă тăрук туяпа çӳреме пуçларĕ.

– Мĕн пулчĕ? – тĕлĕнеççĕ унран.

– Урана мăкăлтарăм-ха.

– Классика тухрăн апла.

– А какшĕ. Чăваш классикĕсем Çемен Элкер, Ухсай Яккăвĕ, Ваçлей Алентей, Георгий Краснов, Петĕр Львов, Николай Мартынов... пурте уксах. Эпĕ вĕсенчен мĕнрен кая халь? Тинех ман çине те хĕрхенсе пăхма пуçларĕç – романсене черетсĕрех пичетлеме шантарчĕç, – каçăрăлса уксахласа каять пулас классик.

### Хавас кун

Писательтен ыйтаççĕ:

– Халь эс кампа пурăнатăн?

– Хамăн кĕнеке геройĕсемпех.

– Арăмна куркалатăн-и?

– Куратăп: гонорар илнĕ кун.

### Романран – калав

Редакторсем калаçаççĕ:

– Ман шутпа, алçырăвне ăна мĕн чухлĕ ытларах кĕскететĕн, вăл çавăн чухлĕ лайăхрах, хăвăртрах вуланать.

– Апла пулсан, кӳрĕр-ха романунтан калав туса пичетлем.

– Эй, çук-çук, эпĕ хамăн хайлав-шедевр пирки каламастăп. Хамăр хуçа чухне пĕр-пĕринне тĕкĕнер мар-ха, авторсенне сухаласа арлан тăпри кăларни те çитĕ.

## Чаплăн чыслаççĕ

– Писательсен канашĕнче паян кама пит анлăн та чаплăн чыслаççĕ?

– Палкаш писатель çырма пăрахнăранпа аллă çул тултарнине паллă тăваççĕ.

## Пурпĕрех кĕнеке юлать

Хĕрарăм çыравçăсем кĕвĕçӳ вăййи пуçланă.

– Юрать-ха упăшку хӳттипе Писательсен союзне кĕрсе кайрăн, – çил çĕклет пĕри.

– Эс ху тата издательствăра лăпăртатса ларнипех хăвна ху чапа кăлартăн, – çиле хирĕç сурать тепри.

– Ман хăть хамăн пичетленнĕ кĕнекесем библиотекăсене шăнăçаймаççĕ. Хам вилсен те чăваш тĕнчи пĕтичченех вуламаллăх çитет. Сан мĕн пур пĕр кĕнеке те кăларайманскерĕн?

– Ытлашши ан хăмпăлан. Ман та пур – Раççей писателĕсен Союзĕн членĕн ылтăн саспаллипе çырнă кĕнеки. Вилсессĕн те музейра ĕмĕр-ĕмĕр упранать.

## Чулкаçран Чулкас пулни

Куçма Чулкаç «Капкăна» хашкаса пырса кĕнĕ те, редактортан чеен ыйтать:

– Вилĕмрен çăлатăн пуль, тусăм? Атăл шывне ĕçсе ятăм, мухмăра сӳнтереймерĕм. Мĕнпе чĕртмелле-ши?

– Типнĕ Атăл тĕпĕнчи чула касса, – питне-куçне кулă хĕмĕпе вылянтарса илет Иван Мучи. – Çапсан-çапсан хĕлхем кăларăн.

– Ах, тур-тур, чул касма вăй-хал çитмест. Чулкаçран Чулкас туса та пулин гонорар лартса пар-ха.

Мухмăр чĕртнĕ хушăра вара вĕсем Атăла пĕвелеме шутлаççĕ. Тинĕс шывĕ пур «вилекене» те чĕртме çитет.

## Кăмпара

Алаксандр Галкин Сурăм вăрманĕнче çĕтсе кайнă. Чăтлăхран йывăç тураттисене сиркелесе уçă çĕрелле тухать те, тĕлĕннипе шаках хытать: ун умĕнче Александр Кăлкан тăра парать.

– Эсĕ ман вăрманта упа-кашаман шыратăн-им? – куçлăхне хывса ыйтать Галкин.

– Çук-çук, сан тискер кайăкусене тĕкĕнместĕп эпĕ. Юптару кăмпи татма килтĕм те... пĕр шлепке те курмастăп типĕ çĕр çинче.

– Ку тата мĕн? – ихĕре-ихĕре пуçĕнчи шлепкине хывать Галкин.

*24.01.2006 ç.*

## ÇУРĂК ВАЛАШКА УМĔНЧЕ

Хыçвлаç Влаççийĕсен Пурьккисем влаçа çавăрса илнĕ кун эпĕ сыснасене пĕçернĕ çĕр улмипе симĕс курăк çăнăхĕн палттушкине çитереттĕм. Кухньăрăн пăрăхпа юхса килекен тутлăхлă апата нюх-нюхсем канлĕн нăрăхлатса вăлашкасенчен тасатаççĕ. Вĕрсе хăпартнă пек, куç умĕнчех чăмăрланса пыраканскерсене пăхса тăранаймастăп. Тăванла савăнатăп. Ара, анне мана витере сысна амисемпе ăмăртса çуратнă-çке. Ура çине тăрсанах нуф-нуфсемпе, наф-нафсемпе тата ниф-нифсемпе выляса ӳснĕ. Шкулта та вĕсемшĕнех пиллĕк илтĕм.

– Кам пине çитиччен шутлама пултарать? – ыйтрĕ Мари Палнă.

– Эпĕ! – тесе сиксе тăтăм та тытăнтăм алăри пӳрнесене хуçлатма: – Нуф-нуф – пĕрре, Наф-наф – иккĕ, Ниф-ниф – виççĕ, Шуркка – тăваттă, Хахлушка – пиллĕк,,, Пурьккă-курьккă – пин.

– Хрюшка-Люçкă – Чушкă-шушкă – пин те пĕрремĕшĕ, – ихĕлтетрĕ хăйĕн ятне илтнĕ Хыçвлаç Пурьмки.

– Эс ху Пурьккă-курьккă! – çĕнтересле тавăртăм та, хăраса, вĕрентекенĕн хулĕ айне чăмрăм.

Хăй, сакайĕнчи çинçе улма калчи пекскер, çĕре çитиччен те шутлаймарĕ, кайран та путлĕн вĕренеймерĕ, ашшĕ хӳттипе çеç... Ашшĕ район хуçин пуртвĕльне хыçра йăтса çӳрекенскер пулнă тет-и, çавăнпа Хыçвлаç Влаççийĕ ята тивĕçнĕ ĕнтĕ.

Пурьккă-курьккине хамах тупнăччĕ. Пĕррехинче телевизор ятăм та, пĕр майра «Ой, манăн Борька-горька» тесе хип-хитре сысна çурине чуптуса ларать. Аннене каларăм, атя эпир те пĕр çурине Пурьккă-курьккă ятне хурар. Анне килĕшрĕ. Çавччĕ ĕнтĕ вăл мана пиллĕк илме пулăшнă пинĕмĕш сысна.

Тулькăш Пурьккă-курьккă асси пулчĕ, ӳт хушаймарĕ. Хăй çавах, пĕр тăванĕсемпе юлташĕсене шĕвĕр сăмсипе аяккалла сирсе, пуринчен нумай хыпатчĕ. Чисти Хыçвлаç Влаççи ачи

пекчӗ. Эп шкулта тарӑхса персе янӑ хыҫҫӑн ӑна ялта пурте Пурьккӑ-курьккӑ тесе мӑшкӑллама пуҫларӗҫ-ҫке. Унта-кунта ҫапӑнса, ӗҫленӗ пекки туса пурӑнчӗ. Атя иксӗмӗр курьккӑ туса пӑхатпӑр, тесе ман ҫума та ҫыпҫӑнчӗ. Эпӗ сӗмсӗр сыснана вите пуҫӗнчи тислӗк шӑтӑкнех тӗртсе йӑвантарнӑччӗ.

Ой, пуянччӗ пирӗн ял! Пин сысна пӑхнӑ эп аннесемпе. Коновал Кӑнавалӗ фермӑна кӑтартуллӑ туса хунӑччӗ. Колхоз пуҫлӑхӗ Партти Улатимӗрӗ ҫӗнӗ витесем тӑвать, пире канмалли-сипленмелли, усӑ курмалли тата тем тӗрлӗ ҫурт-йӗр лартать. Асфальт ҫинче утса ҫӳретпӗр. Ушкӑнланнӑ-чушкӑнланнӑ «Малалла» хуҫалӑхӑн укҫи тимӗр арчана кӗми пулнӑччӗ, ытлашшине банкра упратчӗҫ. Мускав чанӗ те пире саламлама чанкӑлтатать, авӑ, тесе ташша яраттӑмӑр уявсенче. Аннен те, ыттисен те – кӑкӑр тулли орден-медаль.

Эпӗ те хамӑн ӑратлӑ сыснасене выставкӑна тӑратрӑм. Хахлушка ҫурисенчен виҫҫӗшне, чи правуррисене, ҫулленхи пекех, Нуф-нуф, Наф-наф, Ниф-ниф ят хутӑм. Ҫавсен вӑййипе киленнӗ вӑхӑтра алӑка темле ҫавра ҫил уҫса ячӗ те витене Хыҫвлаҫ Пурькки-курькkипе ҫывӑх тӑванӗ Хӑрӑм Хӗлӗпӗ тайкаланса кӗрсе тӑчӗҫ.

– Революци! – сысна аҫинчен хытӑрах ҫухӑрса ячӗ Пурьккӑ-курьккӑ. – Пӗлетӗн-и эпир камне?! Ял хуҫи малашне Партти Улатимӗрӗ мар. Шӑлтӑмӑр ӑна. Ял влаҫӗ тинех Тимук ӑраттисен аллине куҫрӗ. Коновал Кӑнавалӗ килӗнчи сысна ҫӑмартине кастӑр. Сан хуҫу паянтан – Хӑрӑм Хӗлӗпӗ. Ҫитет ӑна хусах маткасен мӑрйисенчи хӑрӑма тасатса. Сан та, Хрюшкӑ-Люҫкӑ – Чушкӑ-шушкӑ, ӑна шушкӑ тутантармалла пулать. Паян пирӗн историллӗ кун – Тимук ӑраттисен праҫникӗ. Сысна шаритлемелле!

Шари! ҫухӑрса ячӗҫ Хӑрӑм Хӗлӗпӗ ҫулӑхнипе ман чӑмӑркка «нуфнуфсем». Виҫ тӑвана миххе чӑмтарса юмахри Кашкӑр пек йӑтса кайрӗҫ. Куҫҫуль кӑларсах юлтӑм ҫав.

Ассах кайрӗ вара ял ассийӗ Пурьккӑ-курьккӑ. Парас-илес ясар пасарӗнче Хӑрӑм Хӗлӗпӗпе тата хӑйӗн шавккисемпе, хӗпӗртенипе ниҫта кайса кӗреймесӗр, аптӑраса ӳкнипе, хӑйсен пуҫӗсене кӑна мар, сысна пуҫӗсене те тӑнчах ҫухатрӗҫ. Путлӗн лаша чӗлпӗрӗ-тилхепи тытса курман Тимук ӑратти пуҫтах автанӗсем, пухусенче авӑта-авӑта, халӑх ҫӑварне хупларӗҫ. Партти Улатимӗрӗсем ҫыпӑҫуллӑ ҫавӑрнӑ хуҫалӑх йӑшса-юхӑнса, арканса пырать.

Укҫа нумай пулсан, арман тыт, ыраш нумай пухсан, сысна усра, тенӗ ӗлӗк-авал. Партти Улатимӗрӗсем ватӑсен сӑмахне асра тытнӑ – яла пуйтарнӑ. Пурьккӑ-курьккӑ, ҫакна шута илмесӗр, ял халӑхне армути хыптарчӗ. Тимук ӑраттисен вара укҫи хӑйсен мул чулӗ айне пулчӗ, арманӗн ҫунатти хуҫӑлчӗ, уйне ҫум пусса илчӗ, сысна фермине мур ерчӗ.

Пинрен юлнӑ юлашки сысна ҫине утланса уҫӑлма тухрӑм. Ман Шуркка аҫашӑн пулчӗ пулмалла, тапрӗ те сикрӗ. Киремет пӗви хӗррине чавтарса ҫитрӗмӗр. Пӗве хӗрринче Коновал Кӑнавалӗ ихӗрсе тӑрать. Ҫырма тулли – сысна.

– Ман та Пурьккӑ-курьккӑ пур, – тет.

Мӗн тӑвӑн, хамӑн та ҫумран ама шухӑшӗ кайман пуль ҫав. Ват хусахӑн та... Пурьккӑна пусрӑмӑр та, курьккӑ! турӑмӑр вара туй кӗрекинче.

Халӗ эпӗ Коновал Кӑнавалӗн ҫӗрӗ ҫинче ҫӗр сысна пӑхатӑп – чунтан савӑнатӑп.

Коновал Кӑнавалӗн фермер хуҫалӑхӗ мал кайӑкӗ пек малалла вӗҫет. Тимук ӑраттисен Хыҫвлаҫ Влаҫҫийӗн асси ывӑлӗ Пурьккӑ-курьккӑ тустарнипе армути вӑрманӗ ӑшне путнӑ «Малалла» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх – тӗттӗм чӑтлӑхра аташать.

Акӑ мӗнле ҫурӑк сысна валашки умне тӑратса хӑвараҫҫӗ ухмах халӑха Пурьккӑ-курьккӑсем.

*Сысна пӑхакан Люҫкӑ Хрюшкова–Чушкова халап ҫаптарнине Владимир Кузьмин итлесе тӑнланӑ.*

*2006 ҫ.*

## СЫХЛĂХ ХУРАЛĔНЧЕ

### Çăмăл меслет

Йĕрке хуралĕн пуçлăхĕсем калаçаççĕ.

ПĔРИ: – Эсĕ, Иванов, кашнинче мала тухан, преми илен. Мĕнле майпа пит хăвăрт тупса-тытма пултаратăн-ха вăрă-хураха?

ТЕПРИ: – Сана çеç уçса паратăп, тусăм, хамăн вăрттăнлăхăма. Урамра кам туртса илет тетĕн карас телефона е хĕрарăм хутаçне, кам хывса илет пуç çинчи чаплă çĕлĕке? Хамăрăн ятарлă çынсем – хамăра пулăшакансем! Çавăнпа çийĕнчех «ярса тытатпăр» вĕсене. Акă сана оперативлăх, маçтăрлăх. Преступление çийĕнчех уçса палăртнă. Кăтарту проценчĕ те ӳснĕ, чапĕ те... Ĕçлеме пĕлмелле!

### Сĕннине пурнăçламасан

Хула хыçне панулми татма пынă дача хуçи, хăйĕн пахчинчи капмар пӳрчĕ çĕлĕксĕр ларнине асăрхать те Шупашкар еннелле вашкăртать, милици пайне çитсе пăлхануллăн евитлет:

– Çаратрĕç. Тăрăсăр, пуçсăр тăратса хăварчĕç. Пулăшăр, тархасшăн?

– Пуçу вырăнтах-çке, мăшкăллатарса çӳрететĕп ак, – тесе милиционер ăна ăрсурниксене вăхăтлăха хупмалли читлĕх еннелле çапмалли патаккипе тĕллесе кăтартать.

– Хамăн пуç пирки мар эп, вăл вырăнтах-ха, дача пӳрчĕн тăрри пирки. Пĕлтĕр кăна витрĕм хумлă-хумлă алюмини шăвăçĕпе. Çур миллиона ларчĕ.

– Шăпланăр, гражданин. Ыйтасшăн, эсир пурнăçланă-и-ха пирĕн сĕнĕве? Хăвăрăн хуçалăха сыхлассишĕн хăвăрăнах тимлĕ пулмалли пирки радиопа каласа та ывăннă ĕнтĕ эпир. Сыхланмалли хатĕрпе усă куратăр-и?

– Паллах. Алăка та, чӳречесене те бронь йышши тимĕр листипе хупланă. Тăрă вĕт ку?

– Паллă, тăрă. Тăрри шăтăк пулнă çав хăвăрăн.

– А ман мĕнле сыхласа хăвармаллаччĕ-ха ăна?

– Тимĕр сетка кармалла пулнă пӳрт тăррине, йĕплĕ пралуклине. Шел те, пулăшма шантараймастпăр. Машина та, çын та çитмест. Каккуй унашкал вак-тĕвекпе аппаланма пирĕн вăхăт. Полковникĕн юратнă йыттине хваттерĕнчен такам çаклат-

са тухса кайнă. Иртенпех тревога! Пĕтĕм личнăй состав хула тăрăх йытă шырать. Туп-ха ăна, чышкă пек чихуа-чинехуана. «Гау!» тесе вĕрекен йытта асăрхасан, пĕлтерме ыйтатпăр. Садри пӳрт вăл тăрăсăр та ларать...

*15.03.06ç.*

## МИЛЛИОН ХУТ КУЛСАН

Чăвашсен тĕнче анлăш палăрнă Йăмра ӳнерçĕ, сăрла-сăрла, ӳкере-ӳкере тăнран кайма пуçланă, хăй пурпĕрех чухăнлăх читлĕхĕнчен виличчен те хăтăлса тухаймассине ăнланса, кăмăлне хăрăк турат шартлатнă пек хуçнă май, ăна вăл Мускав телекуравĕсем пулăшнипе сыпма шутларĕ.

Чее те çăтăх Леонид Якубович артист астарнипе «Тĕлĕнмелле уй» тăрăх чĕри чикекен пуличченех лĕскерĕ, умра тусан мăкăрлантарса пыракан çăмăл автомашинăна пурпĕрех хуса çитеймерĕ. Ухмах сутти туни çеç пулчĕ. Такама та шĕвĕртме пултаракан чее палкавçă тилле тĕлĕкре курнă хыççăн пĕлĕтелле сурчĕ: ултавçăпа вăррăн – пĕр çул. Пысăк шанăçлăн чунтан ĕненекен çынсен кăмăлĕпе сутă туса капланнарнă пурлăхне леш тĕнчере чĕртсе янă та сумлă шуйттансем çут тĕнчере тăранма пĕлмен йăскăнăнне, хăйне хурана пачлаттарнă. Вĕрекен сăмала ăшĕнчен Якубович çухăрни хăлхаран каймасть: «Ай, ай, ай! Тупсăмне хамах пĕлтерĕп: пуçламăш сас паллийĕ – «эр». Рай. Ма тамăкпа пăтраштаратăр эсир, шуйттан тусăмăрсем? Ай-рай-рай...»



Йăмран куçĕ умĕнче çурхи шапа пек ахăракан артист сăнарĕ мĕлтлетет. Алла киçтĕк кĕмест. Çамрăк арăмĕ ачашшăн юрлать: «Миллион, миллион йăмхĕрлĕ роза...» Ара, çуралнă кунĕ çывхарать-çке. Вăл ăна миллион чечек çыххи парнелеме тахçанах шантарнăччĕ. Шанса

типекен чечек выранне миллион тенкĕ пулсанччĕ. Йăмра вара еплерех сарăлмалла! Çак шухăшпа телевизор ячĕ. Тĕлех килчĕ тата. «Миллионер мĕнле пулмалла» ярăм ишсе тухрĕ куç умне. Тĕнчене камитле ахăрттарса та юрла-юрла тĕлĕнтернĕ Макçăм Галкин ăрăмçа пур теле шăв-шав ертӳçисенчен те ытларах килĕштерет вăл. «Макçăм шăллăм, манăн та миллионер пулас килет! – хăлаçланса илчĕ Йăмра. – Халех Мускава тухса пыратăп.»

Акă чăваш ӳнерçи мăн вылявра. Шăв-шав хуçийĕ ним кулмасăр ыйту хыççăн ыйту парать:

– Ăçтисем пулатăр-ха эсир, ырă çыннăм?

– Пăлхар патшалăхĕн хăрах çунаттинчен, тĕрĕссипе – Чăваш çĕршывĕнчен. Атăл çынни.

– Мĕнпе пуян сирĕн çĕршыв?

– Халăхпа, кăмăл-сипетпе.

– Тата мĕнпе?

– Вальс ташлакан улăп-тракторпа.

– Тата? Пĕç хушшинче мĕн пытарса ларатăр-ха?

– Э-э, вăл пирĕн наци эрехĕ. «Аншарли». Кукамай урпа салатĕнчен юхтарнăскер. Хамăр фирмăн. 1886 çулхи первач. Сире валли. Тутанса пăхсамăр. Вăйлă-и? Çыртмалли те çав вăхăтриех – сурăх шăрттанĕ. Халĕ мĕнлерех, эпĕ миллион выляса илме пултаратăп-и?

– Юрĕ, юлашки ыйту. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх сирĕн пурте пур: республика, герб, ялав...

– «Чăваш Республики умĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн» орден та пур. Енчен те манран миллионер тусан, пирĕн юратнă президентăмăр  ăна сан кăкăру çине те тирсе яма пултарать, Макçăм шăллăм. Тав сана! – хушса хурать ӳнерçĕ.

– О-о, куншăн тăрăшмаллах. Укçа пур-и сирĕн хăвăрăн?

– Çук çав... Ку – йывăр ыйту.

– Çавăн патне çитрĕмĕр те, ырă çыннăм. Вунă минут хушшинче тума пултаратăр-и чăваш укçине? Пурнăçлатăр – миллионер.

Ӳнерçĕ хутаçран киçтĕксем, ручкăсем, сăрăсем васкаса кăларать те самантрах 1000000 тенкĕлĕх укçа ӳкерсе хурать. Галкин ун çине алă пусать, ăна конверт ăшне чиксе хуçине тыттарать:

– Миллион сирĕн кĕсьере! Хăвăрăн республика банкĕнчен илетĕр.

Йăмра çул тăршшипех шавларĕ: «Конвертри валюта», «Конвертри укçа»...

Банкри сăпайлă хĕрарăм конвертне уçса вуларĕ: «Миллион тенкĕ илмешкĕн вылявçă-çĕнтерӳçĕн миллион хут кулмалла. Кулнине шута илмелли хатĕрне кăвапа çине лартмалла».

Ӳнерçĕ çавăнтанпах ĕнтĕ кунĕн-çĕрĕн кулать. Миллион кулнă хыççăн вăл банкран укçа илетĕпех тесе ĕмĕтленет. Максăм Галкина Шупашкара хăнана чĕнесшĕн. Атăлта пулă тытаймасан та шапа шӳрпипе те пулин хăналатех вăл шӳт ăстине. Вăйă çине вăйă пултăр мар-и?

*2006 ç.*

## КУЛĂШ ЛАВĔ ПУÇРА ПУЛСАН

* * *

– Çĕршыв картти çинче эсĕ мĕн çĕннине куратăн?

– Юн юханшывĕсем. Куççуль кӳллисем. Пуш сăмах тăвĕсем. Халăх тарăхăвĕн вулканĕсем.

* * *

– Шупашкарти хăш палăк хаклăрах саншăн?

– Нихăшĕ те. Кăлпасси палккийĕ – чи хакли.

* * *

– Шывармань курнă-и?

– Курнă.

– Ăçта?

– Шупашкарти опера театрĕнче.

– Çил арманĕ курнă-и тата?

– Паллах, курнă.

– Ăçта-ха?

– Чăваш драма театрĕнче.

* * *

– Эсĕ мĕншĕн матпа калаçатăн?

– Эпĕ шахматист вĕт.

## Вырăс патши мĕншĕн Шупашкарта çĕр каçман?

Пырать Ельцин анлă çулпа пырне канлĕн ярăнтарса, нихçан курман çулпа, тавралла сăнаса. Аэропортран Шупашкара çитиччен çул икĕ енĕпе те тăрăсăр чăрăшсем кĕтсе илеççĕ Раççей президентне. Хăйне Борис пĕрремĕш теме хăтланакан прораб курать те çавна, çурăм хыçĕнчи кĕлетке сыхлавçине вăрттăн пĕлтерет: «Раз тут и ели без верхушек, то тем более и нас могут обезглавить, махнем лучше прямо в Новочебоксарск, там хоть можно похимичить по-нашенски: по-русско-американски».

## Хăшĕ чеерех

Пулăçсем пулă тытса ывăннă хыççăн шўрпе пĕçерме хуранпа шыв çакса ячĕç.

– Эсĕ пуçне ĕмме юратаканччĕ-ха, – йăх-йăх кулса çăрттана çĕçĕпе кăчăрт-кăчăрт касать Михала.

– Эсĕ хўришĕн вилеттĕнччĕ-ха, – куç айĕнчен пăхса шампине сумкăран туртса кăларать Антуни.

Пуçĕпе хўрине хурана чăмтарнă хыççăн пулă ашĕсене каялла чиксе хураççĕ кусем. Ларсан-ларсан, Михала уланкăн хырăм çунаттине касса илет, Антуни – çупахăн сула çунаттисене.

## Хытă сарăлать

Иккĕн тĕл пулнă та, тĕлĕнеççĕ:

– Юлашки çулсенче Шупашкар хытă сарăлма пуçларĕ.

– Хăш еннелле?

– Пуянкассипе Масаркасси еннелле.

## Ака туйĕнче – «Хыпар» уявĕнче

Чăваш хăй тăн-тăн пурăнни çинчен тĕнче умĕнче кăштах шавласа илес мехелпе Мускавра кăçал та чан çапрĕ. Янравлă сасса илтсе çĕршывăн нумай-нумай вырăнĕнчен чăвашсем çу уйăхĕн вĕçнелле тĕп хуланалла шутарчĕç. Пире те анăçалла анакан хĕвел хăй патнелле кăчăк туртса каçхи çула кăларчĕ. Уйрăлаканĕсем чуп тусах ăшă сăмахпа ырă сунса ăсатнăшăн-

ши, хаваслăхра вăхăт иртни те сисĕнмерĕ. «Хыпар» хаçатăн пĕр ушкăнĕ пĕчĕк автобуспа ир енне çĕклеnекен хĕвеле хирĕç Пĕтĕм Раççей курав центрĕ тĕлне кĕрлеттерсе çитрĕ.




Тĕп алăк яри уçă. Раççей халăхĕсен çурчĕн анлă лапамне халăх тулса пырать. Чăваш кĕввисăмахĕ чуна çĕклентерет. Мăн Акатуйăн сцени патнелле капăр тумланнă, хавас сăн-питлĕ халăх çывхарать. Ун хушшинче пĕр ушкăн пурне те уйрăмах тĕлĕнтерсе утать. Чăваш халăхĕн тĕп хаçачĕ «Хыпар» та хăйĕн 100 çулхи менелникне пĕтĕм чăвашпа уявлать-çке. Муркаш чăвашĕ, пирĕн халăхăн улăпĕсенчен пĕри, «Хыпара» пуçарса янă Н.В. Никольский тата унăн ĕçĕсене хастар та ăста, çаврăнăçуллă тăсса пыракан Каçал ен йĕкĕчĕ А.П. Леонтьев хаçат аврисене çирĕппĕн тытнă, хăйсен пепкисене çавăтнă. Уяв халăхĕ чăвашăн «Хыпарĕпе» тата унăн кăларăмĕсемпе хаваслансах паллашать, Алексей Петрович янраттаракан çак сăмахсене тăнласа итлет: «Кирек ăçта пурăнсан та чăваш тымарне татма памĕç пирĕн хаçатсемпе журналсем, кĕнекесем. Чăн чăваш пулма сире тăван сăмах пулăшĕ». Паллах ĕнтĕ, çĕршывра та çуккă «Хыпар» пек йышлă ачапчаллă хаçат. Уншăн мăн аслашшĕ Николай Васильевич та еплерех хавхаланать пуль. Çумрах ентешĕсем купăс каласа юрлаççĕ. Муркашсемпе ăмăртмалла вăрнарсем сиксе тухрĕç Мускав халăхĕ хушшинчен. Хăй вăхăтĕнче Çĕрпелти культура çуртĕнче «Янгорчино» колхоз çамрăкĕсене сцена çинче культурăллă астарнă Хурăнсур Çармăс ачи Борис Никитин тĕп хулари ĕçтешĕсемпе анлă лапама янраттарчĕç. Вĕсен илем ертӳçи Никитин купăсне артистла ăста калать. Сцена çинчен вĕсем çине Атăлçи Пăлхар патши Алмуш, чăвашăн тепĕр улăпĕ Иван Яковлевич Яковлев ăслă куçпа ытарлăн пăхаççĕ. Юнашар утакан «Чăваш хĕрарăмĕ» патне уяв хĕрарăмĕсем кăна мар, арçынĕсем те чуна уçса калаçасшăн алă тăсаççĕ. «Çамрăксен хаçатне» маттур яшсемпе чипер пикесем

куçлаççĕ. Авă, Чĕмпĕр енчи чăваш каччи Денис Сетнеров кире пуканĕ ытти ăмăртакансенчен нумайрах йăтса Акатуй парнине – самăр така çĕнсе илчĕ, çав вăхăтрах «Çамрăксен хаçачĕллĕ» те пулчĕ. Милици офицерĕсем «Кримпа» паллашаççĕ. «Сывлăха» хаклакансем те йышлă, кулленхи пурнăçа çĕнетме «Килçурт» та питĕ кирлĕ-мĕн.

Капкăн та Сетнеров сурăхĕ çине ăмсанса пăхрĕ те çав, анчах пăхаттиртен маларах ĕлкĕреймерĕ. Чылай ăмăртура, тĕллулура пулнă хыççăн хăй капкăна çакланчĕ. Хăна апачĕ вăхăтĕнче вăл генералсемпе полковниксем ларакан вăрăм сĕтел хушшине лекрĕ, вăрçă ветеранĕсемпе фронтри «çĕр грамм нормине» хавaслансах тултарчĕ, така пуçĕ кăшларĕ, вĕсемпе ытакланса чăвашла юрларĕ.

Мĕн кăна пулмарĕ пуль уявра. Çиллĕ-çумăрлă çанталăкĕ алхасма пуçларĕ, сивĕтрĕ, тӳпере пĕлĕт юххи юхтарчĕ. Наум Микихверĕ – Мăчавăр: «Эй, çӳлти Турă!.. Сут çанталăка амалатса тăракан Аслă Турă! Паян эпир чăвашсен ырă йăлине пăхăнса Мускава Акатуя пуçтарăнтăмăр», – тесе кĕлĕ пуçласанах тӳпе карри уçăлса кайрĕ, хĕвел кулса ячĕ. Уява пухăннă мĕнпур халăх хĕвеллĕ кăмăлпа савăнчĕ, пĕрлĕх ытамĕнче хавхаланса хастарланчĕ.

Хыпарçăсемпе Капкăна та Шупашкар тепĕр çĕнĕ кунăн хĕвеллĕ ирĕпе тăванла кĕтсе илчĕ.

## МĂЛАТУКА ÇАПМА ПĔЛСЕН, СУНТАЛ ТА КĔВĔЛЛĔН ЯНĂРАТЬ

### Пĕлтерӳсем - Пĕлтерӳсем – Пĕлтерӳсем

«Газпром» ваучерсемшĕн кут хыçне çакмалли ГАЗ БАЛЛОНĔСЕМ парать. Пĕринчен миллиард тенкĕлĕх газ шăхăрса тухать. Çывăрса ан юлăр. Тюмене самолетпа та, пуйăспа та, çуран та хăвăрт çитме пулать.

Чана чĕппи Паллă Алкăпа юрату уçлăхне вĕçме Дублер шырать. Кашни вĕçевшĕн 1 миллион тенкĕ тӳлет. Адресĕ: Мускав, Останкино, Çиччĕмĕш пĕлĕт.

Çулталăкне 10 миллион кирпĕч çапма пултаракан кирпĕч завочĕ сутатпăр. Юлашки вунă çул хушшинче сутнă кирпĕчрен тунă çурт-йĕре пĕрле хушса паратпăр.
Йĕпреç районне шăнкăравламалла. Телефон (8352)67-80.

Брак валли пăрак мар арçын шыратăп.

Шупашкар, Якимовка çырми, Хысакри 1-мĕш çурт.

Сутлăхра – КАПКĂН. Упа, кашкăр, тилĕ, пăсара, каюра, йĕке хўре, шăши тата ытти те тытма пулать.

Адресĕ: Шупашкар, Иван Яковлев урамĕ, 13, 621-мĕш пўлĕм.

«Тав» фирма «АНДУЛИН» эмел сутать. камăн тăрри шăтăк – туянма васкăр. Хăвăрт сиплет.

Шупашкар, База хутлăхĕ, «За», тел. 62-86-10.

Мухмурдин мухмăртан чĕртет, ар вăйне ўстерет, Адресĕ: «Капкăн» журнал, 2006-мĕш çулхи 1-мĕш номер.

«Чăваш бибколлектор» патшалăх унитарлă предприятийĕ «Акăлчан чĕлхи», «Нимĕç чĕлхи», «Француз чĕлхи», «Иврит чĕлхи» шучĕсĕрех сутать. Тĕп пасартан виçĕ утăмра çеç. Хакĕ – чĕлхе пахалăхне кура.

«Чăваш чĕлхине» виç хĕрарăм пасарĕнче йўнĕ хакпах туянма пулать.

Чул касса якатакан завод пўрери тата шăк хăмпинчи чулпа та усă курма тытăнать. Кам чулпа пуян, ăна кăларса сутма васкăр!

Адресĕ: Шупашкар, Çул хĕрринчи 6-мĕш çурт.

Шупашкарти 1-мĕш типографи «Симфония цвета» кăтартать. Курма васкăр!

Адресĕ: Иван Яковлев урамĕ, 15.

«Росспиртпром» федераци унитари предприятийĕн «Ядринский» спиртзавод» филиалĕ авалхи, манăçа тухма пуçланă пахалăхлă эрех кăларать. Ĕçсе пăхсан – Таланцев пĕр тăвансене пĕлтерĕр.

Адресĕ: ЧР, Етĕрне хули, Шоссе урамĕ, 102.

## ПĔЛТЕРӲ УСӐЛЛӐ – ПУЛӐШАТЬ

### Ирĕксĕрех кайма тивет Çĕпĕре




*«2006 çулхи I кварталта вӑтамран пĕр уйӑхра кашни çын пуçне тивекен тупӑш 3815,8 тенкĕ, пурӑнмалли чи пĕчĕк виçе ĕçлекен халӑх валли уйӑхне 2730, пенсионерсемшĕн – 1906, ачасемшĕн 2480 тенкĕ пулнӑ».*

*(ЧР экономикипе социаллӑ пурнӑç аталанӑвĕн тĕп кӑтартӑвĕсенЧЕН).*

«Газпром» миллиард тенкĕлĕх баллон парать тени çинчен «Капкӑнӑн» 10-мĕш номерĕнче вуласа пĕлнĕ Атӑл варри хресченĕсем маччана пуçпа шӑтарасла чалтах сикеççĕ. Кашни сума-пуса перекетлеме хӑнӑхнӑ чӑваш кунта та тавçӑрулӑх кӑтартать. «Яла газ кĕртнĕ хыççӑн юлнӑ пушӑ баллонсене улӑштарсан укçа тата нумайрах пулать», – текен ӑслӑ шухӑша вĕсем пĕрне-пĕри ӑнлантараççĕ те вӑрӑм çула хатĕрленеççĕ.

Çӑмӑлттайраххисем самолетпа вĕçесшĕн. Анчах... Мускав урлӑ Тюмене çитме 7500 тенкĕ. Алла кĕсьене чиксе пӑхсанах ку ĕмĕт пӑчланчĕ.

Теприсем пуйӑспа канса каясшӑн. Униче патне çитнĕ чухне ахальтен мар çул урлӑ хура кушак каçса кайрĕ пуль çав. Тамаша мар-и? «Çĕпĕр упи» камитре вылякан артист рельсӑ çине пуçне хунӑ та...

Ура утать – ур-ра! Çурӑм хыçне газ баллонĕ çакнӑ Атӑл варри мушикĕсем шпал шутласа юрла-юрла тухӑçалла васкаççĕ: «Ирĕксĕрех кайма тивет Çĕпĕре...»

## «Чăваш чĕлхи» – чи хăватли



Ĕç укçи илнĕ Культпаш Павăлĕ Чăваш бибколлекторĕнче мăн сумкине кирлĕ кĕнекесем чыхса тултарнă хыççăн «Виç хĕрарăм» пасарне шырама пуçларĕ. Кумларĕ-кумларĕ Шупашкар тăрăх, пасарĕ кашни кĕтесрех, ăна кирли çеç çук.

Сăмса тĕлне пулнă хупахсене тĕрĕслекеленĕ май вăл тĕтреллĕн курах кайрĕ: умра виçĕ хĕрарăм мĕлтлетет. «Виç хĕрарăм» пасарĕнче тинех «Чăваш чĕлхиллĕ» те пулатăп ĕнтĕ», – тесе мăкăртатнă хушăра варринчи, чи патварри, пилĕкрен ячĕ илчĕ ăна:

– Каллех макулатура! Ăçта сан тахçантанпа шантарнă кăркка ашĕ, шăрттан, ĕне чĕлхи?!

– Мĕн... пулать, пулать, паянлăха... Акă, акăлчан, нимĕç, француз чĕлхисем туянтăм. Кĕçĕрех ют чĕлхе вĕренме пуçлатпăр. Ху ĕмĕтленнĕ пекех Лондон тĕтринче пытанмалла выльăпăр, Парижа çитсе Эйфель çӳллĕшĕнчен тĕнчене сăнаса киленĕпĕр, Берлинра нимĕçсен патшипе Ангела Меркельпе... тĕл пулса калаçăпăр.

– Юрĕ-ха. Ак ку тата мĕн ипричĕ? Ай мана чыхăнтарса вăхăтсăр вĕлересшĕн?

– Çук, иприт мар, иврит. Еврейсен пĕр чĕлхи. Пирĕн Сарра Израильна мана хăйĕн чĕлхи... Тель-Авивра миллиардер куккăшĕ...

– Ах, эс апласкер-çке? Парап сана Сарра! Кап... çара кут эс! Вунă çул хушшинче те путлĕ тум тăхăнайман çапкаланчăк Тимук ăратти. Мускаври Вульвĕр Улатимĕрĕн Хĕрлĕ тинĕс лачакине путса юлнă лĕпĕрист шăтăк атти. Аçтаха! Вĕре çĕлен! Эсрел! Анчăк! Тăмана! Хăрăк тунката! Кастарман така! Тăранман алкаш. Ак сана Сарра! Ак сана йиприт-кутрит чĕлхи...

Культпаш Павăлĕн куçĕнчен çулăм ялтратрĕ те «Виçĕ хĕрарăм» пасарĕ сасартăк саланчĕ. Пĕччен тăрса юлнă пасар хуçи упăшкин сумкинчен кăларнă «чĕлхесене» шкултан таврăнакан ачасене валеçсе пачĕ. Тăван «Чăваш чĕлхийĕ» çеç тăрса юлчĕ упăшки умĕнче.

Маюк упӑшкипе аптӑрарӗ. Ҫӗнӗ пӳрт тӑррине витес умӗн упӑшкин ыйхине такам вӑрларӗ. Мӗн кӑна ӗҫтерсе пӑхмарӗ пуль, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе чӑм тара ӳкиччен те ӗшентерчӗ, пур пӗрех нимӗн те пулӑшмасть, кӑтӑш пулать те, куҫне уҫсанах пуҫлать: «Чаплӑ тӑрӑпа яла тӗлӗнтерес килет».

Акӑ хайхи, пӗррехинче... почтальонка тухса кайсанах Маюк упӑшкине кӑчӑк туртрӗ: «Капкӑнра» пӗлтерӳ пур. «Тав» текен фирма тӗнчере ҫук эмел сутать. Ҫавна тутанса пӑхатӑн пуль, тен, пулӑшӗ, ҫывӑрса тӑраннӑ хыҫҫӑн хӑвӑн «архи тӑрӑ» текеннине те шыраса тупӑн».

Станьял Ваҫҫукӗ ҫав кунах Шупашкара хашкаса ҫитрӗ, «аптека» хуҫисене хӑйӗн хуйхи-суйхи ҫинчен пӗлтерчӗ.

– Ҫиччас сыватапӑр сире, хаклӑ «чирлекенӗмӗр», – тесе кулкаларӗ те пӗр тӑлпан арҫынӗ ӑна вӑрӑм склада ҫавӑтса кайрӗ. – Сире валли пӗлнӗ пекех пӗр машина «Андулин» тиесе лартнӑ. Яла ҫитерсех паратпӑр. Витсен ҫак хип-хитре те чӑтӑмлӑ, шыв яман тӗлӗнмелле япалапа ҫӗнӗ пӳрт тӑррине, виличченех лӑпкӑн ҫывӑрма пултаратӑр.



*«2006 çулхи кӑрлач-пуш уйӑхӗсенче кашни çын пуçне тивекен вӑтам ӗç укçи 5288,1 тенкӗ, ял хуçалӑхӗнче республикӑн çак кӑтартӑвӗнчен 3,1 хут пӗчӗкрех пулнӑ».*
*(»Чӑвашстат» хыпарӗнчен).*



Чукун çул çумӗнчи «Волонтер» хуçалӑх арканса пӗтнӗ хыççӑн Пӑртас хусахӗсем ӗççӗр аптӑраса хӑшкӑлчӗç, калымра эрех ӗçмелӗх, пирус турттмалӑх укçа иле-иле килкелесе пурӑнкалаççӗ. Минренӗ пуçпа чиперккесем хыççӑн лӗскесе халран кайрӗç. Хӑйсене сивленӗскерсем Мускава çӑмӑл ӗç шырама тухса тарсан вӗсен юлашки шанӑç тӗтӗм ӑшне путрӗ.

Юрать, «Капкӑн» пулӑшрӗ. Чана чӗппи çӗнӗ еркӗнӗпе юрату уçлӑхне вӗçме дублер шыранине пӗлсен, Пӑртассем ташша ячӗç: пӗр вӗçевшӗн – миллион тенкӗ!

Мӑкӑрлантарчӗç вара хусахсем те Мускавалла.

## ÇӖР АЛЛӐ ПАВӐЛӖ

Çырма-çатраллӑ, йывӑç-курӑклӑ Ухкассинче шик шӑхӑрса пурӑнакан Павӑл хӑй кӑмӑлӗн алӑкӗ çине нихçан та çӑра çакман. туслӑх кӑшӑлӗ унӑн питӗ пуянччӗ. Юхан, Уçӑп, Çтаппан тата Тит вара пуринчен те çывӑхрахчӗ, чӗри тавра карталансах тӑратчӗç вӗсем. Тантӑшсем, акӑ, сисмерӗç те ар çулне çитнине. Ача чухне пурте пӗрешкелрех пулнӑ пулсассӑн, халӗ кашнин кӗлетки хӑйне евӗр улшӑнчӗ. Юхан шыçмакланчӗ. Уçӑп, курпунӗ палӑрнипе, хуçӑлнӑ турат манерлӗрех. Çтаппан хӑмла шалчинчен кӑштах лутрарах пуль. Тит типӗтнӗ пулӑ пек хыткан. Павӑл çӗр аллӑ сантиметртан ытла ӳсеймерӗ, сарӑлчӗ, чисти каска пуканӗ евӗрлех çав.

Йӑхлатса çӳрекен хӗрсем унран тахçанах Çӗр аллӑ Павӑлӗ тесе мӑшкӑллатчӗç-ха. Ӗне фермине апат турттарма кӗрсен çак

хушамат ун çумне çилĕмрен те çирĕпрех çыпçăнчĕ. Лашапа çӳренĕ май кашни кунах ĕçкĕ-çикĕ тупăнса пырать-çке вĕсен. Камăнне те пулин пахча сухалать-и, кама та пулин утă-улăм кĕртсе парать-и – пур çĕрте те алла тулли курка тыттараççĕ. «Эп хам та çĕр аллă сантиметр çӳллĕш çеç, çĕр аллă грамм маншăн сывлăх норми. Урăх ан пусахлăр», – тет те вăл мĕн панине куç хупмасăр янклаттарать. Урăх вĕлерсен те ĕçмест. Праçниксенче те çавах. Ни ытлашши ӳсĕрĕлнине, ни сысналла пылчăкра йăваланса çӳренине ăна ялта никам та курман. Хăшĕн-пĕрин арăмĕсем упăшкисене, упăшкисем арăмĕсене «Вăт çав Çĕр аллă Павăлĕ пек ĕçме вĕренмелле» тесе вăрçа-вăрçа ăс панине час-часах илтме пулать.

Çĕр аллă Павăлĕ хăй ĕçкĕ-çикĕ тумасăр нихçан та ирттер-се ямасть. Килĕнче унăн хаярри яланах тупăнать. Çавăнпа ĕнтĕ ферма пуçлăхĕ Юхан, клуб хуçи Уçăп, ветеринари тухтăрĕ Çтап-пан Павăл патĕнчен тухма та пĕлмеççĕ. Сăри-эрехĕ ĕнтĕ çурхи шыв пекех шарласа юхать. Вун ик кăшăллă пичке пушаннă тĕлелле Юханăн хырăмĕ вĕрсе хăпартнă шапа хырăмĕ пек ка-рăнса каять. Павăлсен пичкинчен çĕпре тăрри юхма тытăнсан теприн патне куçать Юхан. Ĕçлесе мар, ĕçсе ят илчĕ вăл ялта. Ахальтен-и Лаххан Юханĕ тесе кулма пуçларĕç унран.

Уçăпĕн чунĕ Павăлăннинчен те уçăрах пуль çав. Кăшт хĕрсен вара кĕсйине тавăрса юлашки пусне ĕçсе ярать, ун хыç-çăн кивçен илсе кама кирлĕ ăна  хăналаса пĕтерет укçине. Уçă Уçăп пулса тăчĕ вăл çавăнпа та.

Çтаппанăн яланах пысăк çын пулас килнĕ. Чăнах та ĕмĕтлен-сех вĕреннĕ ача, ветеринари институчĕ пĕтернĕ. Шутласассăн, сиплемелле те сиплемелле ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕхе, халăха савăн-тармалла кăна. Анчах Çтаппан спирт кӳллине кĕрсе ӳкрĕ. Ĕçре усă курма панă хаяр шĕвеке типĕтнĕ хыççăн  вăл тусĕ патне тух-са сулланать. Павăл хирĕçлеймест, сĕтел çине ĕçмелли-çимел-ли кăларса лартать. Вăрăм аллисемпе хăлаçланса питĕ пысăк калăпăшлă татса пама тăрăшать Çтаппан хăть те хăш ыйтăва та, анчах шавĕ хăй таврашĕнчех лăпланать. Ялти шăлйĕренсем ăна çавăнпа Маштап хушамат парнелерĕç.

Ĕçкĕ-çикĕ уявĕсенче, халăхран юлас мар тесе, Тит та арă-мĕпе Пввăл патне хăнана сиктермесĕрех çӳрет. Ĕçме юратсах каймасть вăл. Ӳсĕрсем унран «Тит ялан тип тытать» тесе ку-латчĕç. Майĕпен-майĕпен унран писрĕç. Ытти çывăх тусĕсене кӳрентерес мар тесе Çĕр аллă Павăлĕ те Тит çине темле ют-

шăнарах пăха пуçларĕ. «Тип Тичĕ пирĕн çын мар» , – тесех алă сулчĕç юлашкинчен пурте.

Ун вырăнне вĕсен ушкăнне майĕпенех Павăл арăмĕ кĕрсе пычĕ. Çĕрĕн-кунĕн хăна пăхса хăй те хăна вырăнне тăрса юлас вĕçнех çитрĕ. Ĕнтĕ вăл упăшкин «сывлăх норминчен» те ирттерет. Ĕçет те выртать, ĕçет те çывăрать. Юлашкинчен Павăлăн хăйĕн яшка пĕçерме, ĕне сума, ача пăхма, кĕпе-йĕм çума черет çитрĕ. Лаххан Юханĕсемшĕн пулсан... Уçă Уçăппа тата Маштап Çтаппанĕпе пырса кĕреççĕ те кунĕпех тĕнче тавра çаврăнаççĕ. Аптăрарĕ Павăл. Мĕн тумалла?

Пĕррехинче вăл чăлана тухсан темрен такăнса стена çумне çапăнчĕ те çамкине мăкăль кăларчĕ. Ура айне пулнă япалана çĕкленĕ май хĕпĕртенипе унăн ыратни те таçта кайса кĕчĕ. Ун аллинче – Тип Тичĕ темиçе çул каялла менелникре парнеленĕ сăмавар! «Павăл, малашне çак сăмавар тавра ларса шăкăлшăкăл калаçмалла, тутлă чейпе кăмăла уçмалла пултăрччĕ», – тени аса килчĕ. «Тĕп-тĕрĕс каланă вăл. Пирĕн çĕршыва виçĕ ĕмĕр каялла лекнĕ асамлă «эмел» этемĕн кăмăлне çĕклет. Сар çип утинчен, пĕтнĕкрен, çăка чечекĕнчен, катăркасран, шăланран вĕретнĕ чей тата мĕнле техĕмлĕ!» – тесе шухăшласа илчĕ вăл. Çĕр аллă Павăлĕ вара тусан ăшне путнă сăмавара тасатрĕ, çурĕ, шыв ярса вĕреме лартрĕ. Чей хатĕрленĕ çĕре туссем пуçсене тытса, ахлата-ахлата кăптăртаттарса çитрĕç. Вĕсене хирĕç арăмĕ те пӳлĕмрен анаслакаласа тухрĕ. Павăл вĕсене те сĕтел хушшине чĕнчĕ, чей ĕçме сĕнчĕ. Пурте алă сулчĕç. «Лешĕ çуккăим?« текелесе тутисене пăркаларĕç. «Малашне ман кĕрекере четвĕртпе çур литр вырăнне ак çак мăн хырăм саркаланĕ», – тесе Павăл сăмавар еннелле тĕллесе кăтартрĕ.

Çакăн хыççăн унăн тусĕсем, хăнана чĕнсен те, асăрханса кăна пыраççĕ, сĕтел çинчи чашкăракан сăмавара курсанах каялла кайма пуçтарăнаççĕ. Хăна сĕтелĕ хушшине лартма та намăс ĕнтĕ хăйсене те. Этем нĕрĕнчен тухнăскерсем тискерленсе кайрĕç. Ĕçнĕшĕн ферма пуçлăхĕнчен кăларса çапнă Лаххан Юханĕ кил тăрăх çĕпре тăрри сăрхăнтарса çӳрет. Юлташĕсен арăмĕсен духи-одеколонне, пуçа сĕрмелли шĕвекĕсене ĕçсе пĕтерчĕ Уçă Уçăпĕ те ĕçкĕпе йăлтах хуçăлчĕ. Маштап Çтаппанне те тухтăртан кăларчĕç, хăйĕн ĕçне ниçта та шанса пами пулчĕç.

Унччен хыткан пулнă Тип Тичĕ вара ӳт хушрĕ. Сывлăхĕ те унăн пуринчен çирĕп. Ĕçĕнче те ӳссех пычĕ. Агрономран цех начальникне çитрĕ. Иртнĕ пухура ăна ял кооперативĕн пуçлăхне суйларĕç.

Ҫӗр аллӑ Павӑлӗ хайхи ӗҫкӗ тусӗсем хыҫҫӑн кайса хӑйне тахҫан сивленӗшӗн Тит пӗртте кӳренмен. Ун патне вӑл хисеплесех хӑнана ҫӳрерӗ. Хальхинче те савӑнсах пычӗ. Сӗтел варринче пӑс кӑларса ларакан сӑмавара курсан йӑлл кулчӗ. Ҫӗр аллӑ Павӑлӗ мӑшӑрне, тусӗпе арӑмне кӗрекене лартрӗ, куркасене чей тултарчӗ. Арӑмӗ кӗтеслӗ стакана ҫӗр аллӑ грамм эрех ярса упӑшкине тыттарчӗ.

– Эх, – терӗ Ҫӗр аллӑ Павӑлӗ стакана аяккарах лартса, – ҫӗр аллӑ грама эпӗ сывлӑх норми теттӗмччӗ. Йӑнӑшнӑ иккен, сывлӑх норми мар, сывлӑх тӑшманӗ пулнӑ вӑл, акӑ халӗ кашни кун ӗҫни пӗвере ӑшалать. Пирӗншӗн сывлӑх норми вӑл – тутлӑ чей. Ӗҫер тар тухиччен.

Тип Тичӗ тусӗпе килӗшсе кӑмӑллӑн пуҫне сӗлтрӗ. Ҫӗр аллӑ Павӑлӗ мӗнле шӗвек чи усӑллине те, хӑйӗн чи ҫывӑх та шанчӑклӑ тусӗ кам пулнине те тин чун-чӗрипех туйса илчӗ.

Ӑс-хакӑл ҫутлӑхӗн ӗмӗрӗнче вӑл халӑх умӗнче таса та ҫутӑ пурнӑҫ тӗслӗхне чӑнлӑхра кӑтартма пултарчӗ.

*2006 ҫ.*

## ЧӐВАШ ЭЗОПЛА КАЛАҪАТЬ




Сӑмах вӑл уҫҫӑн та, вӑрттӑн та чӗрӗлсе-якалса, этеме хӑйне аталантарма, аталанури чӑрмавсене питлеме, пурнӑҫ уттинчен пӑрӑнакансенчен, ултавҫӑ-кахалран тата ытти хирӗҫлеврен тӑрӑхлама пулӑшса пынӑ. Сӑнӑ, сӑнар чӗлхеллӗ ӑслӑ ҫынсем хӑйсен шухӑшне, чӑнлӑх тупсӑмӗн палӑрӑмне тӳрремӗн мар, шахвӑртса, юптарса, ытарлӑн хайлавласа вар тытса ахӑрттармалла та, ҫав хушӑрах сисӗмлӗн тӳнккесе илмелле те калама, ҫырма, юмахлама, кулӑ хӑвачӗпе ҫунтарма пултарнӑ. Хӑйсене тапкӑран хӳтӗлес тӗллевпе вӗсем мӗн авалтан хушма ят-хушаматпа, тискер кайӑксемпе вӗҫен кайӑксен тата ытти чӗр чунсен чеелӗх мелӗпе ӑнӑҫлӑ усӑ курнӑ. Вӑрт-

тăн питлес йăла илем тĕнчинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупнă: халăхра Эзоп чĕлхи ячĕпе çирĕпленнĕ.

Питĕ ăслă, тавçăруллă, витĕр куçлă, юптаруллă чĕлхи çăварĕпе такама та тăн кĕртме пултаракан Эзоп ятлă вилĕмсĕр ăрăмçă пирĕн эрăчченхи улттăмĕш ĕмĕртенпех ишет ăслăлăх тинĕсĕнче. Авалхи грексен шавлă пурнăçĕнче вăл урмăшрах, катăк ăслăрах, пулассине пĕлнĕ пек туса улталакан уксах чура вырăнĕнче кăна шутланнă пулин те, юптару ашшĕн анлă киммине тĕнче кулăшçисем лăкă-лăках тулса ларнă. Французсен Ж. Лафонтенĕ, вырăссен И. Крыловĕ, чăвашсен А. Кăлканĕ Эзопăн аслă пулăшаканĕсем вырăнĕнче юптару киммине ăшă кулă хумĕ çинче вылятса иштернĕ. Вĕсем çумне çĕр-çĕр, пин-пин кулăшçă, сатирик хутшăннă.

Акă çав тĕлĕнмелле кимĕ халĕ Шупашкар тинĕсĕн «Капкăн» хӳтлĕхĕнче яккăр ячĕ.

## Намăс курар мар

Чăваш кулли йăваш та ăшă, чăваш кулли хĕрхӳ те çивчĕ... Çут тĕнчери ытти этем çурисем пекех, чăваш та хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе-хĕмленсе, уйăх çутипе сăрланса, çăлтăр вăййипе киленсе ӳснĕ, кулă имĕпе аталаннă, кулă вăйĕпе çĕнтернĕ, кулă хумĕнче чӳхенсе ишет паянхи кун та. Кулă кăмăла çĕклет, кулă кахала питлет, хăйĕн çивĕчлĕхĕпе, хĕрĕвĕпе айванлăха, каппайлăха, мăн кăмăллăха халăх куçĕ умĕнче намăслантарать, пĕрне хавхалантарать, теприне хастарлантарать, хăшне-пĕрне тарăхтарать те. Çав хăватлă туйăм эмелĕпе пĕлсе усă куракансем ĕмĕр-ĕмĕр сипленĕ халăх хушшинчи кăмăл чирне. Пурнăç мунчинче типĕлле те, йĕпелле те тăн кĕртнĕ йăхтăр-яхтăра. Кулăш яланах çынна ĕçре, кулленхи хутшăнура пулăшса пынă, этемлĕх аталанăвĕн кашни тапхăрĕнче юхан шыв пек те шăнкăртатнă, укиян тăвăлĕ пек те шавланă. Халĕ те, пурнăç хумĕ пĕр çĕкленсе те, пĕр лăпланса та унталла-кунталла çапăннă тапхăрта, кулăшçăсем тĕлĕрмеççĕ, куç вăйĕпе, чун-чĕре хĕрĕвĕпе хăйсен ырă та йывăр ĕçне никам хĕтĕртмесĕр-хăваламасăр, никамран хăрамасăр, хăюллăн, танлăн туса пыраççĕ.

Çĕнĕ вăхăтăн çĕнĕ кулăшçисем, сатирикĕсем «Капкăн» вăйĕпе çĕнĕ талпăнăва тухнă. Вĕсен сăнарлă та сăнăллă сăмахĕ пĕрмай илемленсе, çивĕчленсе пырать.

Калама çук тертлĕ те хуравлă ĕç вăл кулăш сăрмаклавĕ. Чĕлхепе-и, киçтĕкпе-и, кам мĕнле пултарать, çыравçăпа ӳнерçĕ пĕр тĕллеве пурнăçа кĕртме хăтланать, хăй кăна витĕмлĕ курма пултаракан ене сирсе, ăна вулакан умне кулăшла кăларса тăратать. Ăнăçлă пулса тухсассăн мĕн шутлани-шухăшлани, хăй те каçса кайса кулса ярать, пичетре кун курнă ăнăçлă хайлавĕпе ыттисене те вар тытса ахăрттарать, питлев вăрттăнлăхне туйма пултаракансене – ниçта кайса кĕрейми тарăхтарать, хăйне хăй ыттисенчен урăхларах, тӳнтерлерех тытакана – йĕркеленме май пур таран пулăшать.

Атьăр-ха, ăшă та лăпкă кулă, çивчĕ те хĕрӳ сатира ăстисем, татах та маçтăрланар, хастарланар, авалхи вилĕмсĕр вĕрентекенĕмĕрсен умĕнче намăс курар мар, вĕсен таравачĕпе, ăс-тăн пуянлăхĕпе хамăр ĕçре пĕлсе усă курар, вĕсемпе пĕрле хăюллăнрах та çаврăнăçуллăрах, ăстарах çавăрттарар, силлер хамăрăн кулăш кунтăкне. Хамăр вăя шанса, халăх пулăшнипе «Капкăнăн» илемĕпе хăватне Иван Мучисемпе Çĕпритун Шăпчăксен, Леонид Агаковсемпе Аркадий Эсхельсен, Трофим Иванов-Таçуксемпе Виталий Енĕшсен, Николай Максимовсемпе Анатолий Юмансен, Герасим Харлампьевсемпе Анатолий Быковсен, Николай Яковлевсемпе Владимир Агеевсен шайĕнчен те ирттермешкĕн çине тăрар.

Адриатика тинĕсĕнчен тухса нумай-нумай укиян, тинĕс, юхан шыв тăвăлĕпе кĕрлевне çĕнтерсе Атăл юххине хирĕç Шупашкара çити çăрттанла хăпарнă «Эзоп» кимĕ-карап хуçисемпе пассажирĕсене чăваш куллипе ытамласа, тăван халăхăмăрăн кăмăлне уçса парар. Пĕрле çĕмĕрттерер.

**«Капкăн» лаççинчи Хурăнсур Ула Тимĕрĕ.**

* * *

«Эзоп» кимĕ-карапран Чăваш çĕрĕ çине аннă кулăш ăстисем Шупашкар районĕнчи Чăрăшкасси çеçпĕл çеçкийĕсен чĕрĕ хайлавĕсемпе хавасланса паллашрĕç, вĕсене «Капкăнра» шăварса ӳстерме сĕнчĕç. Хăйсем вара чăваш кулăшçисемпе сатира ăстисен çуралнă çĕршывĕпе паллашма васкарĕç, çула май çак пултарулла сăвăçсемпе те курса калаçма пулчĕç.

## Эзоп чăваш лачакинче те путман

Çу уйăхĕ çулланса çитнĕ вăхăталла «Капкăн» хÿтлĕхне лекнĕ тĕнче кулăшçисен «Эзоп» кимми-карапĕнчен çырана аннă «шăрт каманти» чăваш кулăшçисемпе сатирикĕсен шăллă ытамне кĕрсе ÿкнĕччĕ. Вăрăм çул хыççăн çурăм-хырăмне йĕплесе кăтăклантарнă-канлĕлентернĕ май вĕсем ытаклашса çул çÿреве тухрĕç. Çĕр айĕнчен сирпĕнсе тухакан мул çуккишĕн аптăраса ÿкмен чăвашсем мăян вăрри сутса та пулин пуйма хатĕрленни çинчен Интернет хыпарне хăлхана чикнĕскерсем, Раççейрен пурпĕрех пушă трюмсемпе таврăнмастпăр тесе хăйсем пырасси пирки Ула курака малтанах асăрхаттарса хунăччĕ-ха.

Эзопăн хвранцусланса, вырăсланса, чăвашланса кайнă Улаçкă çăварне карса кранклатнă çав аслă хăнасем килессине пĕлтерсе... Тилли çавна çеç кĕтсе ларнă.

Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствинче ĕçлекенсем ăслă пуçне тарлаттарнипе вун сакăр пин гектар çеремлĕ çĕре эрне хушшинче çĕнĕ техникăпа çĕтсе пăрахтарнă, аслашшĕсенчен юлнă пуракран алăпа тулă акса хăвартарнă.

«Вăт ку тăнлă-пуçлă çынсенчен чăн-чăн чăваш улпучĕ тухма пултарать, пире те мăян вăррисĕр тăратса хăварнăскерсем, чăваша çăкăр çитерме пултараççех пуль», – тесе савăк камантă çул кĕввине хурлăхлăраххăн тăсса малалла куçрĕ.

Чурачăкран иртсен тахăшĕн ăш хыпрĕ, çăлкуç шыраса пурте тарăн çырмана шуса анчĕç. Малта пыракан Эзоп кĕчĕ ларчĕ лачакана. Пуçне çĕклерĕ те хăйĕн умĕнче йăлт-ялт пăхакан шакла пуçлă арçынна курах кайрĕ. Палламан арçын ала тытнă та силле-силле шыв юхтарать. Çурăм хыçне четвĕрт кĕленчи çакнă. Алине çĕре лартса кĕленчерен куркана хаяр шĕвек тултарчĕ те вăл асап куракана сĕнчĕ:




– Аннен виличчен юхтарса хăварнăскерех, иртнĕ ĕмĕртенпех сире

кĕтет, вашт кăна çавăрса хурăр та тĕпне çитиччен, вăшт кăна сирпĕнсе тухатăр лачакаран.

Чăваш хĕрарăмĕн хăвачĕ пулăшнипе чăнах та çĕр тыткăнĕнчен мĕнле хăтăлнине те сиссе юлаймарĕ Эзоп. Четвĕрт черетленсе пушаннă май, пурте пĕр-пĕринпе паллашаççĕ:

– Эпĕ Аслут Лексантăрĕ пулатăп – чăвашсен кулăш классикĕ. Хамăн Аслут çырминче хăйăр юхтаратăп, ылтăн пĕрчи шыратăп. Акă, пĕр йĕкĕр ывăç пухрăм. Пăхăр-ха, епле йăлкăшаççĕ хĕвел çинче? Чăваша пуйтармалли çырма хуçийĕ вĕт эпĕ халĕ. Приватизацилесе-прихватизацилесси çеç юлать.

Тĕнче классикĕсем чăвашăн пулас миллионер-классикне каçса кайсах малалла итлеççĕ.

Аслă çулпа Канаш енчен иккĕн тăклаттарса çывхараççĕ. Кусем вăрнарсем пулчĕç. Хурăнсур Çармăсран кăвак çутлах çула тухнă Чăх Элекçи ачипе Калистратпа уйрăлми тусĕ Йăкăнат мучи пăравус тĕтĕмĕ пек мăкăрлантарса пыраççĕ пуç тӳпекинчен. Алла ярса илнĕ четвĕрт тĕпĕнчен Эзоп вĕсене черетпе хăналать. Ĕшеннĕ хыççăн пуça кайнипе Воробьев кутамккине салтать те, Лира сасси Аслут çырмине тултарса уй тăрăх саланать.

Тапранчĕ Шупашкарпа Вăрнар хушшинче кулăш ярмăркки. Сĕнӳ хыççăн – сĕнӳ:

– Сирĕн Чăваш министерствин хуравлă çыннисене тулă пучахĕнчен явса хресчен палăкĕ лартмалла.

– Аслут çырмине малашне Ылтăн çырми ят памалла.

– Салакайăк Калистратне Шăпчăк чĕппи темелле...

## Хумсем хăш çырана çапаççĕ?

«Тăван Атăл» журналăн Шупашкарти чĕнтĕрлĕ кĕперĕсем урлă хывнă ăмăрту çулĕпе чупса ялан мала тухнă Микулай Терентьев, кăштах сывлăш çавăрса яма тесе тăван ялне Кăшнаруйне кайса выртнăччĕ. Вăй пухнă май халăхпа пĕрле утă çулчĕ, тырă вырчĕ, çĕр улмипе уйран çисе хырăмне, кушакла хăйма çулласа сухал ӳстерчĕ. Ватă çын хурмине кĕнĕ çыравçă чăваш халăх писателĕн ятне ярас мар тесе аллине ручка тытнăччĕ кăна, хăлха çумĕнче янлакан кăмари сассинче çĕнĕ хыпар илтрĕ: «Эзоп – Аслут компание» ылтăн хăйăрĕ алакансем кирлĕ».

Çакăн хыççăн Теренти Микулайĕн ыйхă вĕçрĕ. «Манăн та «Хумсем çырана çапаççĕ» вĕт? Хĕрĕх çула яхăн Атăл хăйăрне пăтрат-

са ҫыранра ылтӑн тӑвӗ те купаланӑ пуль? Ҫав хушӑрах унӑн ял кӳршийӗ Лексантӑр Аслут писатель хӑйӗн тип ҫырминче ҫӑл куҫ уҫса ылтӑн пуҫса ҫиме пуҫланӑ, тӗнче мул хуҫийӗсен ушкӑнне кӗресшӗн. Мӗн енчен катӑк ҫуратса янӑха мана атте-анне?«



Акӑ хайхи чемпион, спорт тумӗ тӑхӑнса, ҫурӑм хыҫне «драмдруг» кутамккине ҫакса, Шупашкар еннелле ҫурхи тиха пек яртлаттарчӗ. Атӑл хӗрне ҫитрӗ те... Нимле ылтӑн тӑвӗ те капланса лармасть. Раҫҫейӗн аслӑ юхан шывӗн хумӗсем Чӑваш ҫӗрӗн сылтӑм ҫыранне йӑлтах ҫисе яма пуҫланӑ иккен. Кашни мӑн хапрӑк-савӑт хапхинчен шырлан хуралса тухать. Ҫав шырлансем кӗрлесе анлӑ канала пӗрлешеҫҫӗ. Ҫӗнӗ юхан шыв тӑрӑх укҫа-мул тиенӗ пӑрахутсемпе баржӑсем тӳрех Мускавалла куҫаҫҫӗ. Хӑйне куҫ кӗретех ҫаратса йӗмсӗр тӑратса хӑварнӑ тӗнче мул хуҫийӗсене ним тӑвайманнипе чунӗ кӳтнӗ чӑваш пролетариачӗ хысакра типӗ пулӑ кӑшласа ларать.

– Чупса ӑш хыпрӗ пуль, улӑх кунталла? – алӑ тӑсса пачӗ ӑна Улатимӗр Шупашкаров. – Хурҫӑ шӑратакансемпе паллаштаратӑп. Хам та мартен кӑмакинчен уйрӑлаймастӑп.

– Ан тӗлӗнтер-ха, – терӗ Терентьев. – Эс пенсие тухни... Писатель. Ҫыр та ҫыр, гонорар ҫап...

– Ҫамкаран хытах пырса ҫапрӗ-ха ку ҫӗнӗ пурнӑҫ тукмакки. Хӑвах пӗлен, гонорарӗпе курка сӑра та туянаймастӑн. Пенсийӗ вӑл виҫҫӗ пасара каймалӑх ҫеҫ, виҫ эрнене ҫитет, тепӗр эрнине хыр хӑййи кӑшласа вӗҫлемелле-и. Ирӗксӗрех тӑван агрегат заводне ҫул тытрӑм. Хырӑм саплӑкне ҫавӑнти укҫапа саплаштаркалатӑп. Ак ку ачисем те...

Вӗсенчен пӗри, улӑп кӗлеткелли, аллине лаш! сулса каларӗ:

– Сакӑр-вунӑ пин пӑрахса параҫҫӗ те пире, чурасене...

– Вӗри цехра тамӑкри пек ӑшаланнӑшӑн, вӑхӑтсӑр сывлӑха пӗтернӗшӗн пире сакӑр вунӑ пинрен кая мар тӳлемелле. Хуҫасем хӑйсем ай-яй, – пуҫне пӑркаларӗ ун ҫумӗнчи.

– Иртнӗ ӗмӗрте хурҫӑ шӑратнӑ чухне эпӗ завод директорӗнчен нумайрах ӗҫлесе илеттӗмччӗ, – ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫать Шупашкаров. – Халӗ...

– Хуҫасем халĕ пирĕнтен ҫĕр-ик ҫĕр хут пысăкрах шалу илеҫҫĕ. Эпĕр пĕлменни тата мĕн чухлĕ-ши?

– Уй куҫлă, вăрман хăлхаллă теҫҫĕ марччĕ-и, – чеен пăхрĕ хăна.

– Куратпăр-ха та... Авă, пирĕн тарпа ҫапса хытарнă укҫа куписем ăҫталла ишеҫҫĕ. Аякри ҫăмлă вăрăм алă ҫавăрса илмен хапрăк-савăт юлмарĕ пуль Шупашкарта.

– Калуш савăтне сыхласа хăварнă терĕҫ, – пулă шăммине шывалла печĕ хурҫă шăратакан улăп. – Унсăрăн...

*«Калуш тăхăнмасан,*

*Мĕн тăха́нас-ха халь,*

*Пирĕн валли-ҫке калуш анчах», – юрласа ячĕҫ пурте.*

Улатимĕр Шупашкаров ҫыравҫă спортсмена сĕнӳ пачĕ:

– Кунта хуйхăрса-юрласа лариччен, кĕрлеттер-ха тепĕр драма. Иртнĕ ĕмĕре кисретме хăтланнă «хумсен» геройĕсем тĕтрере курăнми пулчĕҫ. Ҫĕнĕ ĕмĕре силлекенсен ҫĕнĕ хумне кăларса кăтарт-ха халăха, Микулай.

Пăрахут кăшкăртнипе те илтрĕ ăна, те илтмерĕ, хысакран мĕнле шуса аннине те сиссе юлаймарĕ драма другĕ. Тинкеререх пăхрĕ те... Чăваш академи театрĕ енчен ăна хирĕҫ «Пушар лашине» кӳлнĕ тĕлĕнтермĕш ҫывхарать. Лаша ҫине утланнă Валерий Яковлев, театрăн илемлĕх ертӳҫи, Ламанчри Дон Кихот идальго пек мăнаҫлăн курăнать. Сулахай аллипе чĕлпĕр тытнă юланутҫă, сылтăм аллине арман ҫунатти пек ҫавăрттарса, сĕрмен кусатăран кĕввиллĕн юрă шăрантарать:

*«Савни, санăн тусу эп пулам-и?*

*Ĕмĕр санăн умра эп юрлам-и?»*

Урапи ҫинче, пушар насусĕ вырăнне, театр ăпăр-тапăрне купаланă. Урапи хыҫне театр сценине кăкарнă. Ҫаврăнакан сцена ҫинче артист ушкăнĕ камитленсе пырать. «Пушар лаши», хуҫине асăрханипе, Йăлăма хумхатмалла кĕҫенчĕ. Теренти Микулайĕ пырса ăна ачашларĕ те артистла юрласа ячĕ:

*«Ăҫта каян, Валери, каҫа хирĕҫ,*

*Ик куҫунтан куҫҫуль, ай, юхтарса?»*

– Пушкăрт енне, Микулай, репетици ирттерме. Театр та чухăнланчĕ. Ĕлĕкхи мар, хамăр та...

– Мĕн, Праски сив куҫпа пăхма пуҫларĕ-им? – йăл кулчĕ Терентьев.

– Эх, тусăм, пĕлес пулсанччĕ эс ман куҫран мĕнле савăнăҫ куҫҫулĕ юхнине? Праски инке мана хăй те юратма пăрахманха. Вăл мăнукне качча пама хатĕрленет-ҫке. Йăлтах ҫураҫрă-

мăр ĕнтĕ. Пушкăртран кăмăс ĕçсе хастарланса килетĕп те... Кĕркунне туя чĕнетĕп. Кĕрлеттерес тепĕр камит ватлăхра.

– Ăнăçу сунатăп! Манăн туй парни çук-ха. Çав пăрахута хуса çитсен çеç, – тесе театр тусĕ, «драмдруг» кутамккин çаккине хытарса, «Атăл-Мускав» шыв каналĕ хĕррипе пушар лашинчен те хытăрах чупрĕ. Чăвашăн ылтăн хумĕсем çийĕн ярăнса ишекен укçа пăрахучĕсемпе баржисем те хăвăртлăхне ӳстерсех пычĕç. Çĕнĕ юхăмри «Тăван Атăл» парнине çĕнсе илейĕ-ши хальхинче чăваш халăх писателĕ?

## Тамăк хуранне вăрлани

Чăваш сатира классикне Аслут Лексантăрне ылтăн хăйăрĕ алама пулăшнă хыççăн тĕнче ăрăмçин Эзопăн «шăрт каманти» пăрахут кăшкăртнă сасă еннелле çул тытрĕ. Нухрат хуйхи çук, пулас миллионер кашнинех ĕçшĕн тӳленĕ. 1272 тенкĕпе танлашмалăх ылтăн пĕрчиллĕ халь пурте. Çапах та...

– Пĕр уйăх хырăма саплаштаркалăпăр-ши кунпала? – иккĕленӳллĕ сасă пачĕ тахăшĕ. – Кило сысна ашĕ те ик çĕр тенкĕ ытла сирĕн. Сĕтне те ĕçес, хăймине те çуллас, çуне те çиес килет-çке.

Аслут çамкине картлантарса пуç кунтăкĕнче тем кăлтăрталтарчĕ те, кулам пекки туса, каларĕ:

– Эх, хаклă коллегăсем, намăс та пире çакăн пек начар «апат-çимĕç карçинккипе» кĕтсе илмешкĕн чаплă хăнасене, анчах мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ. Хырăм карçинккине те чăпи тултараймастпăр-çке какăриччен çимелĕх. Тутлă апат-çимĕç вырăнне унта – пуш сăмах хăмпи. Суя юмах купи. Çавăнпа чăвашсем Атăл тăрăхĕнче чи чухăннисен шутĕнче.. Раççей хырăмĕн карçинкки чăваш карçинккинчен 266, самарсен 362 тенкĕ хаклăрах. Эй, пуçа усар мар-ха, халĕ эпир те ылтăн хăйăрĕ çинче хĕртĕнетпĕр. Эсир таврăннă çĕре ылтăн тăвĕ пулать.

Çапла «апат-çимĕç карçинккине» тултарнă ылтăн пĕрчисене хĕвел пайăркисемпе хĕмлентерсе хавассăн пыраççĕ тĕнче кулăшçисем. Анлă шыв каналĕ çуммипе хашкаса чупакан Теренти Микулайĕ вĕсене хăй патнелле кăчăк туртрĕ:

– Атьăр-ха пĕрле хăваласа çитер çав пăрахутсене? Чăваш мулĕ аякка тарать-çке. Пĕр ылтăн курупкине те пулин çаклатса юласчĕ эртелпе.

– Пире ылтăн нумай кирлĕ мар! – кăшкăрса пĕлтерчĕ Эзоп. – Эпир Аслут çырминчех ĕçлесе пуйнă.

– Эпĕ хам та пăрахутсене хăваласа халран кайрăм. Хуса çитеес çук пуль вĕсене. Çавăнпа чупма чарăнса хăвăрт-хăвăрт утас та, Тĕнче кубокĕшĕн ăмăртса, ылтăн медаль çĕнсе илес, – тесе чăваш халăх писателĕ ылтăн караванне салхуллăн ăсатрĕ.

* * *

Леш тĕнче картлашкипе улăхнă Çĕрпел чунĕ рай алăкĕ еннелле сулăннăччĕ кăна, ун умне çут тĕнчере тĕл пулман мăйракаллă Эсрел тухса тăчĕ, хаяррăн çухăрчĕ:

– Кашкăрла тӳрех ан пăх ырлăхалла! Авă санăн вырăну унта – вĕрекен сăмала хуранĕнче!

Вут шаршанĕ хыçĕнчен сиксе тухнă Çĕпритун Шăпчăк Эсреле вăйлă хул-çурăмĕпе пĕрех хирсе ывăтрĕ:

– Ман ентешĕме кӳрентернĕшĕн пачлаттарап ак хăвна та хурана. Ха-ха! – чăваш кулăшçин хулăн сассипе силленнĕ пĕлĕтрен çĕр çине çумăр шапăртатрĕ. – Салам, Кашкăр тусăм! Сана та Турă пӳрчĕ апла кунта килмешкĕн. Тавах çур ĕмĕр хушши ман йывăр ĕçе туса пынăшăн. Юрать эс култарса-хавхалантарса пурăнтăн ял халăхне. Хĕç пек касакан, чĕрĕп йĕпли пек чикекен чĕлхӳшĕн тата кăра чунушăн çамку çине ахальтен мар Кашкăр хушма хушамат çаптарккăларĕç пуль çав ял шăлйĕренĕсем. Мĕнле унта? Коммунизм турăр-и?

– Хэ-хэ-хэ, – кула-кула ыталарĕ Паюк Куçки иртнĕ ĕмĕрти тусне. – Социализм евĕрлĕрех пурнăç турăмăр пек, коммунизмне вара... Маяковскин шăлаварĕ ăшĕнчи пĕлĕт евĕрех йăсăрланса саланчĕ вăл анлă уçлăха. Аса ил-ха хăвăн «Волонтерна»? Чăваш çĕршывĕнчи сăнавлă пĕрремĕш кăммуна хамăр районта мĕнле кĕрлерĕ те, пĕлĕте çити ӳхĕрсе хăпарсан, хĕвел çутине чăтаймасăр шап! çурăлса кайрĕ. Коммунарсен-волонтерсен çĕнĕлле пурнăçĕ çинчен ай-хай вăйлă çавăрттарса хайланăччĕ эсĕ вăтăр иккĕмĕш çулта. Кĕнекӳне тепре кăларчĕç те, вар тытсах вуларăмăр «Волонтерупа» ытти мыскарусене.

– Халь мĕнлерех-ши Волонтер ялĕ?

– Ялĕ-и? Ялĕ – чукун çул ку енчех, вырăнтан куçса ларман. Ушкăнланнă хуçалăхĕ саланнă, çĕрне такамсене сутса янă пулас. Вупшĕм, кăмуни те, пурте пĕтнĕ унта. Хамăрăн Çĕрпел вара, «Янгорчино» ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ ячĕпе вăрнарсене çĕклет, мухтавĕпе республикипе янăрать. Курасчĕ сан çав ырлăх пурнăçа паянхи куçпа? Тулькăш пĕр пысăк кăлтăк пур. Вăрă-

хурах мăян вăрри пек хупларĕ яла. Ирĕклĕ сывлама памаççĕ. Чукун тата алюмини йышши хуран, чашăк-тирĕк хăвармарĕç.

– Мĕн тума кирлĕ вĕсене хуран? Унччен хуран тавращĕ вăл лаçра-мунчара ирĕклех ларнă-çке?

– Вăрласа тимĕр-тăмăра ăсатаççĕ. Тĕслĕ металл хаклă-çке. Ĕçме укçи çук. Тар юхтарса ĕçлес килмест. Полнăй анархи ку енĕпе çĕр çинче. Пуçлăхсем те, милици те ун çине алă сулнă. Хайсен хуранĕсене çаратнă тĕслĕх нумай.

– Мĕнпе пĕçерсе тăранса пурнаççĕ вара ял çыннисем?

– Йăмра касса вуллине татаççĕ те, чавса хуран пекки тăваççĕ, кăвайтă çине çакса яраççĕ те, хуранĕ çунса пĕтнĕ çĕре апачĕ те пиçет, шывĕ те вĕреме кĕрет. Тĕнчене тĕлĕнтермелли çĕнĕлĕх! Эп юмаха çаптартăм-ха. Эс ху мĕнле пурăнатăн ку тĕнчере? Каласа пар-ха, Шăпчăк Папай. Эпир сана тахçанах райра тесе, тамăкра тĕл пулсан, тĕлĕнтĕм. Пирĕн юратнă Шăпчăкăмăр рай пахчине янраттарса савăнтарать-ха тесе мухтанни ахалех пулчĕ апла.

Шăпчăк сăмалаллă пит-куçне шăлса илчĕ те ассăн сывласа ячĕ, ентешĕ çине ăшă куçпа пăхса, васкамасăр калаçрĕ:

– Мана çеç мар, сана та, Кĕçтенттин тусăм, ямарĕç тӳрех рай алăкĕ патнелле. Çылăху лавĕпех пулас. Салтакри пекех кунта та, малтан сортировкăра пулатăн. Суйла-суйла, тĕрĕсле-тĕрĕсле, унтан унталла-кунталла ăсатаççĕ. Мана, чиркӳ çыннисене ултавшăн питленĕскерне, тамăка яма йышăнчĕç. Усал çын элекне пула вунă çул вутра ăшаланнăскершĕн маншăн кунта Сталин тамăкĕ хыççăн  райри пек кăна. Çур ĕмĕр хушшинче хăнăхрăм ĕнтĕ. Ял-йыш, тăван-пĕтен аса килнипе нушаланни çеç.

Çĕр çинчен хăнаран тин кăна тавраннă Паюк Куçки Шăпчăка хут татки тыттарчĕ. Ăна вăл куçлăх тăхăнсах вуларĕ. Çĕрпел хăйĕн ывăлне уява чĕнет. Ял 400 çул тултарать иккен! Шӳрпе çиме васкатать.

– Чĕннĕ çĕре каясахчĕ, – хыпăнса ӳкрĕ Шăпчăк. – Анчах мĕнле, мĕнпе?

– Мĕн, йăмра хуранĕнчи така пуçне кăшлама-и? – кулса ячĕ Паюк Куçки.

– Мĕншĕн апла калан? Пирĕн кунта хуран çук-им?

Вăрттăн итлесе тăракан Эсрел хуран айне типĕ вутă пуленки пăрахрĕ те çумри Шуйттанпа тем пăшăлтатрĕ. Иккĕшĕ те таçта кайса çухалчĕç. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, каварçăсем персе те çитрĕç. Çывракан Аслати урапине çап-çамрăк Шуйттана тытса кӳлнĕ, тамăкри саппас хурана хыçала лартнă.

Хĕпĕртенипе хăйсем качакалла мекеклетеççĕ. Çĕр çинче тухтăрта ĕçленĕ Çĕпритун çӳлти патшалăхра та хисепрех иккен. Вăл вут-çулăмпа пиçсе каякан шуйттансен суранĕсене сиплетмĕн. Акă мĕнле майпа лекрĕ Аслати урапи Шупашкар-Вăрнар çулĕ çине. Эзоп камантине хуса çитрĕ.

– Тпру, Шуйттан кĕвенти! – тилхепине карт! туртса чарчĕ ĕрĕхекен урхамаха ямшăк. – Аван-и, тусăмăрсем? Кутна тĕкĕр хам çума.

* * *

Çĕрпелте уяв кĕрлет. Ял халăхĕ савăнать. Çынсем тăват çĕр хут урра кăшкăрса пĕрне-пĕри ыталаççĕ. Çĕпритун Шăпчăк хăй ăçта çитнине хăй ĕненмест. Ĕлĕкхи армансенчен аяларах çĕнĕ урам сарăлнă. Икĕ хутлă капмар çурт умĕнче вĕтĕр-шакăр хĕвел юрри шăрантарать. Ясли-сада хирĕç охвис текен ял пульници умĕнче хĕрлĕ хĕреслĕ чиперкке сиплевçĕсем саркаланса тăраççĕ. Тĕп лапам тавра шкул, культура керменĕ, суту-илӳ çурчĕ, ял тытăмĕн кантурĕ...

Авалхи ватăлнă хыр умĕнче хăнасене Тимĕрçĕ Кеорки ачи Михаил Горбунов влаçлăн кĕтсе илчĕ, ял хуçалăх кооперативĕн пуçлăхĕпе Геннадий Романовпа пĕрле ял хапхине яриех уçса ячĕ:

– Ырă сунса кĕтетпĕр. Çĕрпел тĕпелнелле иртĕр.

Тĕнче ăрăмçисене чăваш халăхĕн хăна кĕрекине кĕртсе лартрĕç. Кĕр сăри сĕтелĕнури авăнать. Ял çынни хăйĕн çĕр пуянлăхĕпе мухтанать. Çулпуç палăкĕ патĕнчи сцена çинчен кĕрек, француз, нимĕç, акăлчан, вырăс, чăваш чĕлхи ял артисчĕсен пултарулăхĕнче хумлăн-хумлăн янăрать. Тĕнче ăрăмçисем, вĕсене хăлхана чикнĕ хушăрах, Чăваш çĕршывĕн варринчи Илем тĕнчине – Ял Третьяковкине кĕрсе хавхалануллăн çӳрерĕç, искусство чĕлхипе пурне те ăнланмалла çĕкленӳллĕн калаçрĕç. Çĕрпел ăсчахĕ Хрисан Васильев Шăпчăкран ыйтрĕ:

– Итле-ха, Çĕпритун, хăв ятунтан кил-çурт çавăрсан, çилçунат пек ăйăр ӳстернĕччĕ. Пирĕн те çавнашкал Милок-Мирок пурччĕ. Унпа Шупашкара вĕçсе кайса килеттĕмĕрччĕ. Иксĕмĕр ăмăртнине манман-и?

– Манман, Хрисан. Куратăн-и, паян та мĕнле ăрсурникпе яла таврăннине? Ай чупас, вĕçес, çырас килет, вырас килет тăн-пуç уйĕнчи тыр-пула...

Тыр-пул ăмăртăвĕнчи маттурсене саламланă хыççăн сĕт нумай сăвакан, аш купи купалакан паттăрсене чысларĕç. Мухтан-

малли çĕрпелсен нумай, ура тапса кăтартмалли те, урра кăшкăрса тĕлĕнтермелли те: кĕр сăринче вĕсем ялан республика парниллĕ. Çапах та... пĕр хуйхă: шӳрпе пĕçерме така хуранĕ çук. Çавăнпа вăкăр пусма тивнĕ. Пурне те чышкă мăнăш аш тыттарчĕç.

Уяв каçĕнче хурал та пуçне лăнк уснă пуль çав. Вăрăсем Эсрелпе Шуйттан Çĕприттун Шăпчăка шӳрпе пĕçерме парса янă тамăк хуранне пĕçертнĕ те ватса тимĕр-тăмăра ярăнтарнă, çамрăк Шуйттана качака ячĕпе аш-какай комбинатне кайса панă. Ăна пусса тирпейленĕ хыççăн «Натуральнăй шуйттан» кансервă кăларĕç. Эзоп камантин çулçӳрев малалла тăсăлать. Шăпчăкăн Тамăка вăхăтра таврăнмалла: çамрăк Шуйттансăр, хурансăр, урапасăр...

Кĕреке хушшинче çапла шухăшласа ларнă вăхăтра пуç тăрринче кĕмсĕрт-кĕмсĕрт! шăрт-шарт! турĕ, çиçĕм тепре ялтлатса илчĕ те, Шăпчăк сиссе те юлаймарпĕ хăй леш тĕнчене вĕççе хăпарнине. Тĕп тамăк хуранĕ çумĕнче хĕртĕнсе тăракан Паюк Куçки ăна шăл йĕрсе кĕтсе илчĕ:

– Ăçта лайăхрах пурăнма: хăнара-и е леш-ку тĕнчере?

Çĕпритун Шăпчăк хăйне туслăн çавăрса илнĕ шуйттансем çине ытарлăн пăхса, çирĕппĕн хуравларĕ:

– Хăнарах.

## Виталий Енĕшĕн кулăш тĕнчи вĕçĕ-хĕррисĕр анлă

Тĕнче кулăшçисен ушкăнĕ Вăрнар ен Çĕрпелĕнче ямшăксăр тăрса юлнăччĕ. Ямшăкĕ, Çĕпритун Шăпчăк, тăрук хăй вырăнне, леш тĕнчери шуйттансене сиплеме васканă, ял ăрсурникĕсем-вăррисем тамăк хуранне урапи-мĕнĕпех сутса янă, «ăйăрне» аша панă. Кулăшçăсем пуян ялта хăналаннă вăхăтра аш-какай комбиначĕ «Натуральнăй шуйттан» кансервă та кăларма пуçланă. Акă ăрсурниксем масар çумĕнчи пĕве хĕрринче мухмăр чĕртсе çав кансервăна тăранаймасла çисе лараççĕ. Шăпчăкăн вил тăпри палăкĕ патĕнчен таврăнакан хăнасене вĕсем кăчăк туртрĕç: «Активсе пăхмастăр-и? Чĕлхӳсене çăтса яратăр». Чăнах та пит тутлă иккен. Хăнасем те лавккара кутамккисене тултарчĕç. Шуйттан кансерви Çĕпритун Павăлчпа Паюк Куçки тусĕ валли те çитмелле.

Камантă та камантирсăр мар ĕнтĕ. Çуррансен тилхепине тавралăха лайăх пĕлекен Виталий Енĕш çавăрса тытрĕ. Вăл вĕсене Янсарина тăвĕ урлă, уйсем тăрăх Канаш районне çитиех илсе кайрĕ. Вăрмана кĕчĕç.

– Кĕрек мăйăрĕ пулсанччĕ кунта, – ун-кун пăхкаларĕ çул хĕррипе тĕмĕн-тĕмĕн ӳсекен йывăççем çине Эзоп.

– Ăна Шупашкар пасарĕнче те туянăпăр, – Çӳлелле кармашрĕ Енĕш. – Акă вăл пирĕн чăваш мăйăрĕ – тĕнчере çук тутлă мăйăр. Çисемĕр.

Кĕçех пурин кĕсйи те сап-сарă мăйăрпа тулчĕ.

– Ай вай-вай, ăçта-ши Пĕрремĕш Петĕр патша, ун валли кунта карап тумалли мĕн чухлĕ юман кашласа ларать, – парка йывăççенчен тĕлĕннипе шлепкине ӳкерчĕ урлă турат çинче ларакан ула курак çăварĕнчен сыр татăкки тухса ӳкессе Лафонтен французпа чăтăмсăррăн сăнакан Кăлкан Лексантăрĕ.

Чăвашла çĕре çитиччен шутлама вĕреннĕ Эзоп пӳрне хуçлатма пуçларĕ: пĕрре... утмăл тăваттă. Урăх çук-им?

– Акă вăл утмăл пиллĕкмĕшĕ! – сарлака хул-çурăмĕнчен сисĕмлех шаплаттарса илчĕ Иван Мучи Енĕше. – Епле мăнаçлăн тăрать улăпла пирĕн ертӳçĕ. Авă мĕнле пуян вăл хăйсен ялĕн вăрманĕпе пĕрле. Хăй те утмăл пиллĕкре. Саламлар тăван чĕлхе тусне. Чĕлхине лапаткалама манмасть. Ахальтен мар вăл «Капкăнăн» ман ятпа мухтакан премине çĕнсе илчĕ. Мĕн парнелемши сана, шăллăм, çак чаплă кун ячĕпе? Юрĕ ĕнтĕ, ман кулăш сăмахне тĕнче тавра çавăрнăшăн тав туса ыталасси çеç юлать.

Юнашар кукалесе тăракан пушкăрт паттăрĕ Селĕм Марсель е, тĕрĕсрех каласан Марсель Салимов, сенĕк вĕçĕнчи «Хэнэк» журналне вĕçертрĕ те, редакторла тӳрленсе, тусĕ умĕнче кулăш сăмахĕ каларĕ:

– Асран кайми Виталий Енĕшĕм, ман та пур сан валли хаклă парне: йышăнсам ыр кăмăлтан французсен Марсель хулине.

Вăрмантан тухса униче патне çитсен, кулăш камантине вĕтĕршакăр çавăрса илчĕ, пурин пуçĕ çине те чечек кăшăлĕ лартса ячĕ:

– Привет, братья! Салам! Ырă сунса кĕтсе илетпĕр! – çухăраççĕ вырăсланасшăн çунакан Пратьякасси Енĕш ачисем.

Енĕш вĕсене хăйĕн мĕн пур чăваш ачи, чăвашла вĕренекен ытти халăх ачи валли те тин кăна пичетленĕ хип-хитре кĕнекине парнелерĕ:

– Анваскăр тăван чĕлхерен уйрăлма, вулăр тăрăшсах «Чăн тĕн букварьне». Ăслă та таса чунлă пулатăр вара.

Тăван кĕтес ытаменчи Виталий Григорьевичăн куçĕ умĕнчен хăйĕн пурнăçĕ хумлăн-хумлăн юхса иртрĕ. Амăшĕн сĕчĕпе качака сĕчĕ ĕçнине, йывăç тирĕкрен йывăç çăпалапа тинкĕлепе салма яшки çинине, ашшĕпе тата Кеорки шăллĕпе тар юх-

тарса суха тунине, тăрмаша-тăрмаша хутла вĕреннине, йăмра айĕнчи пĕрремĕш юратăвне аса илчĕ.

Пакунлă тумтирпе пăшал йăтса утни, Пушкăртстанри заводсенче токарьте, слесарьте ĕçлени ăна пурнăç мăлатукне çирĕпрех тытма пулăшнă, пушкăрт халăхĕн паттăрĕ Салават Юлаев кĕрешӳллĕ ăмăртура чăвашла çĕнтерме хĕмлентернĕ. Майсăр тăратнă кĕрепле çине ăнсăртран пусса çамкине мăкăль кăларнă Витали пурнăçра пурте хăй вырăнĕнче майлă, çирĕп йĕркеллĕ пулмаллине ăнланнă, ун пирки ыттисене пĕлтермешкĕн катаччие тухма Пегас ятлă чарусăр урхамах çилхинчен çавăрса тытнă. «Капкăнăн» Леонид Агаков, Хветĕр Уяр, Аркадий Эсхель, Трофим Иванов-Таçук, Василий Тоймак, Надежда Черепанова вĕрентекен Аслă шкулне Мухтав хучĕпе пĕтернĕ хыççăн, сăнар пултарулăхĕн Парнас тăвĕ çинех улăхса каять, унтан хăйĕн сиплĕ те пултаруллă кĕнекисене тĕнче халăхĕн пуçĕ çине кĕрхи вăрман çулçи пек вĕçтерме пуçлать. Чăвашпа пĕрлех вĕсене тутарĕ, пушкăрчĕ, çармăсĕ, удмурчĕ, вырăсĕ, украинĕ, шур вырăсĕ, казахĕ, узбекĕ, мадьярĕ, чехĕ, нимĕçĕ, акăлчанĕ, еврейĕ тытса хăй чĕлхипе вулать.

Пегаса çăварлăхланă Виталий Григорьев писатель ĕнтĕ Анатолий Финько, Николай Максимов, Александр Кăлкан тата ытти тус-юлташĕсемпе майĕпенех хăйĕн кулăш тĕнчине кармакланă, «Сĕрекине» сарса пурнăçри йăхтăр-яхтăра сыватса юсамашкăн «Капкăн» мунчине чăмтарса пынă, халĕ те ăшши парса тăрать.

Тăван ывăлĕн менелникĕ ячĕпе Пратьякасси – чăваш кулăшçин тĕп ялĕ-çĕрĕ – Енĕше енĕшле мухтаса алă çине çĕклет, пĕлĕтелле ывăтать:

– Чăваш Республикин культурăн тава...

Марсель Салимов саламлакана чарсах тӳрлетет:

– Пушкăртстан Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Виталий Григорьевич–Енĕше сирĕнпе пĕрле мĕн пур пушкăрт халăхĕ саламлать. Малашне, тен, чăваш культурникĕн ятне те илĕ-ха вăл ертсе пыракан органсем орган сасси пек таврана уççăн янраттаракан чăваш талантне сума сăвас тесен.

Мĕн тăвăн, наградăна суйласа параççĕ. Тĕнче кулăшçисем те Енĕше Эзоп чĕлхин Маçтăрĕ ятне пама йышăнчĕç.

*2006 ç.*

Хир сысни шăрчĕ пек мăйăхлă, выçă анчăк куçĕ пек антăх куçлă, каска пуканĕ пек кĕлеткеллĕ Тунката Платунĕ кĕпер çинче Малтикасри Çиçĕм Çинахванне хуса çитрĕ те сĕрмен кусатăран сасси пек хăйăклатрĕ:

– А вĕт, хаклă çыннăм, пирĕн хуçа çемçе пукан çине ларнăранпа тырă хăш уйра акса тунине те, сĕт ăçтан чăрлатса тухнине те пĕлмест тет. Мĕнле пурăнмалла-ха капла?

Ахаль те фермăна васкакан Çинахван, хăйне çак кармаçăвар тытса чарнипе кăмăлсăр пулнăскер, пушшех тарăхрĕ, вара:

– Ан ухмахлан-ха эс, Платун, нивушлĕ ял кооперативĕн пуçлăхĕн хура ĕçпе аппаланмалла. Унăн тĕп ĕçĕ – пирĕн эртел хуçалăхне ăслă пуçпа ертсе пырса халăха пуйтарасси, пире çăкăрлă, укçа-тенкĕллĕ тăвасси, – терĕ.

Ун еннелле куçĕнчен сивĕ хĕлхем сирпĕтрĕ те Платун хăйăлти хултăрчне малалла çавăрттарчĕ:

– Çук çав, ăна  ту та, кăна ту тесе кăтартса çӳренипех  ĕç тухмасть. Çĕнĕлĕх тапхăрĕнче хамăр яхăпăкара нимĕнле улшăну та курмастăп эпĕ. Пирĕн çеç-и, пур çĕрте те йĕркесĕрлĕх. Сан фермунта та сысна вити пĕве еннелле чалăшнă.

Утса кайма тăнă Çинахван каялла çаврăнса Платун патне çывхарчĕ, ăшри тăвăл хумне ун еннелле çаптарчĕ:

– Эс ху анра-сухра! Ялта йĕрке пултăр тесе хăçан та пулин урлă выртана тăрăх çавăрса хутăн-и? Юмах çапса та çынна вĕрентсе ĕмĕрне ирттертĕн. Бригадир чухне ултавлă куçупа халăхран култăн, хуçалăх пурлăхне шанса парсан каллех вăрласа пуйрăн, ферма пуçлăхĕнчен те аяккалла сысна ярăнтарнăшăн тухса ӳкрĕн. Кăшт лăпланса пурăнкаларăн та страхагента кĕрсе ăшă вырăн тупрăн. Çӳретĕн халь ял тăрăх карма çăварăнти хура çĕлен сăнни пек наркăмăшлă чĕлхӳне епĕлтеттерсе. Ку таранччен те кăмăллă сăмах илтмен эп санран. Ялан пурне те сивĕ аллунти хура мелкепе сăрмаклатăн. Мĕн ĕç пур сан пирĕн фермăпа? Пуçлăхран мăшкăлласшăн-ха тата, ылтăн пек çынна хурлать. Ара вăл хăйшĕн кăна мар, маншăн та, агроном-зоотехникшăн та, такамшăн та вăй-халне, пĕлĕвне шеллемест, вăхăтне хĕрхенмест. Санашкал хăйшĕн кăна çунмасть. Эпĕр унта хамăр ĕçе хамăр пĕлсе тăватпăр, сан пата пырса пулăшу ыйтмастпăр. «Хаклă çыннăм» тет-ха тата мана. Каккуй çывăх пулма санпа, çĕрĕк тункатапа, юнашар кукленсе

лармастăп, халь çакăнта вăхăт çунтарса тăнăшăн та куляна-тăп. Халăх ахальтен тупса памарĕ пуль çав сана хушма хуша-матна та. Ниçта пĕр тус-юлташ çук санăн.

Платун вăкăрла пăхса илчĕ те ун çине, тем аса илнĕн ка-вăн пек пуçне вăлтăрт çавăрчĕ, унтан мăйăхне пĕтĕркелесе пырне хытарчĕ:

– Халăх çинче пулсан-и халь сана ку элекшĕн... актă çырмал-ла, çĕршывра революцилле улшăнусем пулса иртнĕ саманара çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларакан çĕнĕ демократа кӳрен-тернĕшĕн... Çапла эсир, чăтаймасăр чуна уçса калакана юратма стăр, унашкаллисене хĕсме хăтланатăр. Ахальтен-и ăçта килчĕ унта арпашу-харкашу. Шавлаççĕ, кĕрлеççĕ, шантараççĕ... Пирĕн яхăпăкă пуçлăхĕ пек кăтартса кăна çӳренипех ĕнтĕ пурнăç урапи ланкашкаран тухаймасть. Ăçта та пулин лăчăрт-лачăрт. шăтăрт-шатăрт тăватех. Эс, Çинахван, шутла-ха лайăхрах, мĕншĕн тинĕ-сре пăрахутпа пăрахут пырса çапăнать, чукун çул çинче пуйăспа пуйăс тĕкĕшсе чĕвен тăрать, атом вăйĕ уççа сирпĕнсе тухса аçта-ха пек алхасать... Йăлтах сынсем хуравлăха çухатнине пула. Ку-ратăн-и, çырма юппи ман пахчана карта айĕпе вăрттăн шăтарса кĕрет? Ял старостипе ял хуçалăх кооперативĕн хуçине тата бри-гадира йывăç ларттарма кашни çуркуннех асăрхаттарса тăнă çĕртех... Ял эрозийĕ – пурнăç эрозийĕ епле пысăк хăвăртлăхпа сарăлать. Хамăр çумри çак пĕчĕк фактран анлă пĕтĕмлетӳ туса тĕнче калăпăшĕпе пуçа çавăрттарма пĕлес пулать ăна.

– Ху умăнти çырмана хăвăн йывăç лартса тĕреклетмелле, – тесе Çиçĕм Çинахванĕ малалла таплаттарчĕ.

Тунката Платунĕ ăна хуса çитсе чарчĕ те:

– Аха, сана та килĕшмест асăрхаттару, – терĕ куç айĕн пăх-са. – Çапла вăл канăççăр çын, ăшра капланнине çиеле кăла-расшăн, калаçса, тĕнче илтмелле кăшкăрса çирĕп йĕрке тăвас-шăн, пурнăçа çĕнетсе чечеклентерсшĕн. Тĕнче калăпăшĕпе янратмасан пире кам илтет? Мĕн, Антарктидăра капашсăр мăн пăр ахальтенех катăлса кайнă тетĕн-и эсĕ?..

«Сан хăвăн чĕрӳнти пăр хăвăртрах катăлса каясчĕ, Антар-ктидăри ĕç-пуçпа минретĕн», – тесе тарăхуллăн шухăшласа илчĕ çав вăхăтра Çинахван.

– Илтнĕ пуль, юлашки тапхăрта унта та кунта çĕр вăйлă чĕтренет, вилĕм çил-тăвăлĕ алхасать, тусем çинчен чул-юш-кăн юха-юха анса сиен кӳрет, е шăрăх çĕрте пăрлантарса лар-тать, тĕнче усаллăн кисренет. Ман шутпа, ученăйсем начар...

– Тĕнче тытăмĕнче, çут çанталăк аталанăвĕнче унта темĕнле улшăну та пулма пултарать. Çĕр те чĕрĕ: сывлать, хускалать. Мĕншĕн эс таçти чăтлăха, инçет уçлăхне кĕрсе кайса пустуй чакаланатăн? Куçна çын анкартинелле кăна ан ывăт, каялла çаврăнса пăх та ху хыçăнта мĕн купи ларса юлнине лайăххрах асăрха.

Хĕрсе кайсан сăмахне вĕçне çитермесĕр нихçан та чарăнмасть Платун. Халĕ те каласах пĕтерме хăтланчĕ:

– Тĕнче ыйтăвĕсене те вĕсене йăлтах хамăр ыйтусемпе çыхăнтарма пĕлмелле. Мĕншĕн тесен эпир пурте пĕр çыхăра. Çук, начар ĕçлеççĕ-ха ученăйсем те, нихçан пĕтмен энерги шутласа кăларассипе те американсенчен юлаççĕ, çĕр чĕтреннине те чарса лартаймаççĕ, çанталăка та йĕркелесе тăраймаççĕ, пĕр пĕчĕкçĕ чăмăр çиçĕме те тытса унпа усă кураймаççĕ...

– Эсĕ ăна ху тытса пăх-ха пĕрре, Платун, тыт та çăварлăхла, килĕнте электростанци туса тĕлĕнтер тĕнчене. Нобель премине те илĕн тен. Мĕнле пек, э? – ахăлтатсах кулса ячĕ Çиçĕм.

– Сана кулă, ман вара чун ыратать. Çĕр çывăраймастăп, пуç çаврăнакан пуличчен, ухмаха тухса кайиччен шухăшлатăп. Йĕрке тăвас килет. Акă анчахрах тепĕр хуйхă татăлса анчĕ пуçăм çине.

– Мĕн чĕмери тытрĕ тата?

– «Озон шăтăкĕ». Антарктидăра чи малтан асăрханă тет-и çавна. Хĕвел радиацине чăрмавласа тытса тăракан виçĕ миллиметр хулăнăш чатăр кăна вĕт вăл, урăхла каласан – Çĕр лĕпки. Сарăлса кайсан çав шăтăк? Мĕн тăвăпăр? Сапламалла ăна хăвăртрах. Никаккуй та Чăваш тӳпине çитермелле мар, – карттусне хывса пӳрнипе пуç тӳпине шаккаса кăтартрĕ Платун.

Çав хушăрах çил çавăрттарса килчĕ. Çиçĕм ялтлатрĕ. Хăрушă сасă яла кисретсе ячĕ. Тин хăпрĕ Платун Малтикас çынниччен. Ферма пуçлăхĕ çаврăнчĕ те:

– Эй, Платун, Çĕр чăмăрĕн мар, сан хăвăн тăрри шăтăк пулас унта! – тесе кăшкăрчĕ.

Те илтрĕ лешĕ, те илтмерĕ ăна, çил çĕкленĕ çӳп-çапран сыхланасшăн  пуçне ик аллипе хупласа вăл килнелле чупрĕ. Пӳрте кĕрсен Платун, ывăннипе хашкама ернĕскер, диван çине каска пек лаплатса ӳкрĕ.

Çиллĕ-тăвăллă çумăр таврана кисретсе лӳшкерĕ. Мачча хăми тăрăх майĕпен  куçакан хăнкăлана сăнаса выртакан кил хуçи сасартăк темле йăлтăр-ялтăрскер электричество розеткинчен çуталса тухнине асăрхарĕ. Асамлă чăмăркка хĕмленсе алăк патнелле вĕçрĕ,  кăмака тавра вутланса çаврăнчĕ, диван тĕлне

çитрĕ те, аллисемпе хăлаçланса çĕкленме пуçланă тарлă этем çамкине çапăнса çурăлса кайрĕ.

Малтикас урамĕ леш енчи хăраххăн ларакан кивĕ пӳрт вăраххăн çунса пĕтрĕ. Çине тăрса сӳнтерес текенех те пулмарĕ пулас ăна. Кăмрăкпа, кĕлпе хутшăнса кайнă çын юлашкийĕсем вĕçленмен урăх улшăнăва куçрĕç.

Çут çанталăк тĕлĕнтермĕшĕ – чăмăр çиçĕм – Тунката Платунне тĕнче ыйтăвĕсене татса памашкăн хăех пулăшрĕ.

*2006 ç.*

## ÇАПĂÇУ – ÇУРАÇУ

Кармаçăварпа Туллăр тĕл пулнă. Иккĕшĕ те ансăр кĕпер çинче тăраççĕ.

– Çул пар! Эс – çулпуç мар! – кăшкăрать туллăр. – Пирĕншĕн чикĕ çук.

– Ах, эс тĕнчене явакласа илнĕскер, ман чĕлхене те çыхлантарасшăн-и? Ман чĕлхе – çĕлен чĕлхи. Ман чĕлхе....

– Наркăмăш чĕлхи сан, Кармаçăвар хаспатин, – хăй çумнелле туртать ăна Туллăр. – Акă сана Альп тăвĕсен хӳттине хупатăп та, сăннуна ылтăнпа хуплатăп та... Наркăмăшран çуллă чĕлхе туса хуратăп. Çав чĕлхе сана, Кармаçăвар, кăткă тĕминче çăмарталлă Влаç ятне çавăрса илме пулăшĕ.

– Ай, тавах сана, Туллăр хаспатина, юрать-ха сана, Тинĕс урлă ашса каçнă Çăлăнăçа, çăвара тултарнăшăн, калатăп шантарсах чăвашсене те: пит çăмарти çурăличченех карса хурăр çăвара – Туллăр тăрантарать, пире влаç парать, савăнтарать.

Кармаçăвара чавсипе сирет те Туллăр, тенкĕ çакнă пир тăрăх Чăваш çĕршывне çĕмĕрттерсе кĕрсе каять, хăйне чечекпе кĕтсе илнĕ Шупашпа Кар хулинче хăйĕн Туллăр çĕршывне сарăлтарма тытăнать.

*2006 ç.*

Вăрнар пуçлăхĕсене эпĕ Михаил Иванович Ивановран пуçласа кăшт-кашт астăватăп, вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен вара сахал мар илтнĕ. Халăх асĕнче тăрса юлнă вĕсен ĕç мелĕпе ăс-тăн мехелĕ кашнин кăмăл-туйăмне, пултарулăх шайне пурнăç çаптаркки пек кăтартса парать.

## Михаил Архангел

Пĕррехинче Михаил Иванович Хурăнсур Çармăса тăрантаспа кĕрлеттерсе çитнĕ. Раман арманĕ çумĕнче хĕрарăмсем тырă вырнă. Михаил Иванович сăран аттисемпе тулă хăмăлне чаштăртаттарса пырать те:

– Турă пулăштăр, инкесем, – тет карттусне хывса.

– Турри пурах çав, Санарпуç енне сулăннă çумăр пĕлĕтĕнчен тăрантаспах ярăнса анчĕ, – çурлине хулпуççи çине хурса йăлл кулать вĕсенчен пĕри, ялта Кахал Праски текенни. – Тырă вырас килет-им?

– Килет çав, питĕ вырас килет, инкесем, алă кĕçĕтекен пулчĕ. Турă тенĕрен, турă мар-ха эп, райком секретарĕ çеç. Иванов пулатăп, Михаил Иванович. Илтнĕ-и?

– Курман-илтмен, – куç айĕн пăхать йăм хура çӳçлĕ Праски.

– Хăв мĕн ятлă-ха эс?

– Праски.

– Апла пулсан, паллашрăмăр. Кӳр çурлуна.

Михаил Иванович тĕрленĕ шур кĕпине хывса тĕм çине хурать те васкаса вырма тытăнать.

– Сан лашупа Иртемене кайса килме юрать-и? – ыйтать Праски. – Ваттисене асăнтармалла та...

– Юрать, юрать, кунĕпех чупсан та юрать, – пуçне çĕклемесĕр шӳтлерех калать Иванов.

Праски тăрантас хыççăн тусан мăкăрлантарса вĕçтерет. Кăнтăрла та çитет, кахал апачĕ çывхарать... Кахал Праски çук та çук. Хĕрарăмсем унран тем тĕрлĕ мыскара аса илсе кулаççĕ. Михаил Иванович тырра тĕпĕнчен, типтерлĕ, пĕр пучах кастарса хăвармасăр вырать, анана хĕрарăмсенчен юлмасăр тытса пырать. Хĕвел Кăмаш вăрманĕ тăррине çаклансан тин ял енчен урапа сасси илтĕнсе каять. Тилхепине Кахал Праски тытнă, кăрманĕнче вăрăм çӳçне вĕлкĕштерсе Иртеменкасси пупĕ ларса пырать.

– Ăçта Турри? Хăшĕ Михаил Архангелĕ? – тĕлĕнсе тĕпчет вăл хĕрарăмран.

Авă, – тĕллесе кăтартать тарласа тырă выракан арçын енне Праски.

– Çавă-и? – сăхсăхса илет пачăшкă. – Ара вăл – антихрист. Район кăмунисчĕсен пуçлăхĕ. Эй, турă, усалтан сирех.

– Парам сана антихрист, – куçне-пуçне чалкăштарса илет ямшăк, – çав самантрах хăйсем патнелле çывхаракан Михаил Иванович аллинчи çурлана туртса илет те пачăшкăна тыттарать. – Ме, выр каç сĕмĕ киличчен. Мана паян Турăпа чиркӳ çыннисем пулăшаççĕ. Михаил Архангел аннă ман ума. Пачăшкă та ман алра. Сăпаççипах çӳлти аттемĕре.

Пачăшкă çурлана тытать те çавăркаласа пăхать, унтан ана çумĕнче тăракан Михаил Ивановича каялла тыттарать:

– Вырăр, мана çылăх пулать. Паян ĕçлеме юрамасть. Турăран çылăх. Хăй вара Кăмаш вăрманĕ тăрринче тутар тюпетейкки пек сиккелекен хĕвеле çурăмпа хупласа Канаш еннелле сăхсăхса илет: «Эй, Çӳлти Аттемĕр, Санăн яту хисеплентĕр. Санăн патшалăху килтĕр. Санăн ирĕкӳ çĕр çинче те çӳлти пекех пултăр, паян пурăнмалăх çăкăр пар пире, çылăха ан кĕрт пире, усалтан хăтар пире...»

– Çитет сана кĕл вĕçтерсе, – вăтанмасăрах янрать ӳсĕртерех Праски. – Сана паян кĕрекере савăнма çылăх пулман, ха, уйра пилĕк авма çылăх ăна. Кама ĕненмелле халь пирĕн: кăмунистсен «антихристне»-и е Христос вĕренекенне?

Хĕрарăмсем ăна чарасшăн, Кахал Праски те лăпланмасть:

– Пӳрне пуçĕ пек просвирпа хырăма сапламалла-и пирĕн е ал арманĕ пек çаврака çăкăрпа хырăм тăрантармалла? Тавах Турра. Пĕлет иккен вăл халăха кам ытларах кирлине. Тавах сана, Михал Иванч. Виличчен те манмăпăр сана, Михал Архангела.

Турă çĕр çине янă Михаил Архангел районти коммунистсен вăйне пĕр çĕре пĕтĕçтернĕ хушăрах çĕр ĕçĕнчен те писмен, кирлĕ чухне алла сенĕк те, çурла та тытнă.

## Пĕрремĕш шухвĕр

Виталий Данилович текен шухăшлă çын пурччĕ тата. Данилов колхозсене уазикĕпе хăй тĕллĕн çӳреме юратнă. Сăмахне ылтăн укçасăр илейместĕн унран. Тутине чăмăртаса пырать çапла вăл пĕр кĕрхи кун руль умĕнче. Чукун çул урлă каççан кутамкаллă хĕрарăма хуса çитсе лартнă.

– Чар, шухвĕр! – кăшкăрнă лешĕ Кӳстӳмĕр патне çитерехпе. – Ме сана чей ĕçмелĕх вунă пус.

Виталий Данилович вак укçана илет те, ним кулмасăр кĕсйинчен вунă тенкĕ кăларса хĕрарăма тыттарать. Хĕрарăм хут укçана çавăркаласа пăхать.

– Нимле шофер та мар эпĕ, райком секретарĕ. Пĕрремĕш секретарь! – тесе пуçне сĕлтсе хăй çулĕпе малалла вĕçтерет Данилов.

– Чăнах та пĕрремĕшех пуль çав эсĕ, ырă çыннăм, пĕрремĕш çынах пултăн районта. Ара, кам ухмаххи вунă пуспа вунă тенкĕ улăштарса парать? Тĕнчере пулманни ку! Вăт шухвĕр тĕк шухвĕр эс – пĕрремĕш шухвĕр, – çĕтĕк çăпатине хăйăр кĕнине туймасăр униче патнелле утать кутамкка çакнă хĕрарăм Ершепуç еннелле тусан мăкăрлантарса пыракан машинăна куç-çуллĕ куçĕпе ăсатса.

## Хрущев çулĕ

Тепрехинче Виталий Данилович Данилов Кульцава кайса килме шутланă. Колхоз хуçипе Сергей Ксенофонтович Коротковпа çул-йĕр нушисем пирки калаçмалли пулнă унăн. Машина ямшăкне Илле Иванча килне янă та вăл çула тухнă. Çитмелли çĕре çитсен правлени çумĕнчи лачакара уазикне кĕртнĕ те лартнă: ни малалла, ни каялла. Шоферĕ унăн, хăвăртрах чупма тесе, малти урапасене туртмалли хатĕр-хĕтĕрне кăларса хунă пулнă иккен. Ун пирки хуçине асăрхаттарма маннă. Тарăхса вăрçса илет те Данилов ĕçе пикенет. Çумрах усă чӳрече тулли Коротков саркаланса тăрать.

– Трактор кирлĕ мар-и?

– Тавтапуç, Сергей Ксенофонтович, çиччасах майлаштаратпăр ăна, – пылчăкра чĕркуççи таран ашса утать райком секретарĕ. – Тухатпăр уççа. Кĕçех.

Коротков телефон трубкине тытать те:

– Мускавпа срочнă çыхăнтарăр мана! – тет. – Хрущевпа.

Данилов малти урапасемпе ӳпĕнсех çăрăлать. Колхоз хуçи кĕçех мăнаçлăн калаçма пуçлать:

– Никита Сергеевич! Тăванăм, здравствуй. Сывлăху еплерех? Ташлатпăр, тетĕн-и? Юрать, юрать аплатăк, эпир те хĕмлентеретпĕр-ха. Маххă памастпăр никама та. Кукуруза-и? Хам çӳллĕш иккĕ. Настоящий Сăр вăрманĕ. Пурте пур пирĕн, тулькăăш... çул çук. Чул, асфальт кирлĕ. Эх, мĕн тери йывăр кунта пире, дорогой

Никита, ялта. Курасчĕ сан, тăванăм, тусăм, колхозник мĕнле çăрăлнине. Ял çынни çăрăлнине кăна мар, парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ лапрана путнине курасчĕ. Вĕсем путмаççĕ, шывран та типĕ тухаççĕ, тетĕн-и? Чăнах, акă пĕри хам чӳрече умĕнчех çăрăлать. Лачакара. Çул çук! Халех пыма хатĕрленеп, тетĕн-и? Юрать. Хорошо! Кĕтетпĕр апла. Чул та, асфальт та, тем те пулать, тетĕн-и? Молодец! Турра пуççапнă пек пуççапăп сана, тусăм. Спасибо. Кольцовкăра тĕл пуличчен! Четвĕртпех кĕтсе илĕп.

Вăл вăхăтра Виталий Данилович машинине лачакаран кăларма ĕлкĕрнĕ, шурлăх аттисене хывса сăран пушмак тăханать. Правление кĕрсен ăна Коротков çурăмĕнчен сисĕмлех лăпкаса илет:

– Çапла ĕçлес пулать ăна, секретарь. Эсĕ лачакара çăрăлнă вăхăтра эпĕ Вăрнартан правлени патне çитиччен çул турăм.

– Мĕнле çул? Эпĕ те шăпах çул ыйтăвĕпе килнĕччĕ.

– Асфальтлă çул. Хрущев çулĕ. Никита Сергеевич кĕçех Кольцовкăна килет!

### «Ну, Зайцев-Заяц, пукути!»

Вăрнарта райсовет ĕçтăвкомĕн çĕнĕ çуртне туса лартсан ун умĕнчи анлă çĕр лаптăкне пăха-пăха тĕлĕннĕ çынсем:

– Сад пулать-ши?

– Шупашкарти Хĕрлĕ площаде хăйăр айне тунă хыççăн Хĕрлĕ площадь тумаççĕ пуль те...

– Ахăртнех район патшисен палăкĕсене лартаççĕ.

Халăх пуçа çĕмĕрнĕ хушăрах анлă лаптăк варрине тăваткал чул купи купаланнă.

– Кун çине эпир Ленин палăкне лартатпăр, – алă тытса йышăннă райкомпа райĕçтăвком пуçлăхĕсем.

Район Совечĕн пуçлăхĕ Сергей Степанович Волков çулпуç палăкĕ мĕнлерех пуласси пирки шухăшласа тăнран кайнă. Хăй курни-илтнине те, кĕнеке-хаçат-журнал Ильич палăкĕсем çинчен пичетленине те аса иле-иле вĕсенчен чи лайăххине шыранă. Райком çыннисемпе тавлашса та илнĕ. Купчиков пĕрремĕш секретарь Ленина аллисене çĕклеттерсе чĕнӳллĕн уттарасшăн. Ĕçтăвком председателĕ аллисене хыçалалла тыттарса Шупашкарти пек тарăн шухăша путнăн кăтартасшăн.

– Акă эп сана, мăйракасăр такана, хам тăрса кăтартатăп аплатăк, – тенĕ ӳкĕте кĕме пĕлмен çамрăк пуçлăха тарăхнă

Волков. – Пăхса тăр чӳречерен. Хăй вара çавăнтах хашкаса тухнă та никĕс çине меллĕн вырнаçса тăнă. Çав вăхăтрах унта ача-пăча ушкăнĕ шавласа çывхарнă.

– Ой, çĕрле Ленин атте килсе тăнă. Ёнер çуккăччĕ.

– Ытла интереслĕ çулпуç ку. Пăхăр-ха, пăхăр! Хырăмĕ хуран пек.

– Тупнă тĕлĕнтермĕш. Халь сысна нумай. Умма та. Шаркку çисе шӳнĕ ĕнтĕ вăл. Революци хыççăн çеç Ильич выçăллă-тутăллă пурăннă, хăйне Мускава ярса панă апат-çимĕç вакунĕсене те ачасене панă тет.

– Ха, пуçĕ Хрущевăнни пек.

– Çук, Хрущев пуçĕ Сахара пушхирĕ пек. Ку Ленинăн пуçĕ вара... Пĕлетĕр-и, ачасем, кун пуçĕ пирĕн çуртри Волков мучинни пек. Эпĕр ăна мультикри Волк тетпĕр.

– Мĕншĕн?

– Хулăн сассишĕн. Пĕлетĕр-и, пĕррехинче... Волков мучи пушмакĕсене алăк умне хывса хăварать. Сарайĕнче пирĕн капкăна шăши лекнĕччĕ. Шăши виллине пушмаккин пуçне чиксе хутăм та, вăрттăн сăнама пуçларăм. Тухрĕ те Волк урине пушмака чикрĕ, силлерĕ-силлерĕ те, унтан шăши вилли тухса ӳксен, çурт кисренмелле кăшкăрса ячĕ. Эпĕ чăтаймасăр ахăлтатса кулса тартăм. «Ну, Зайцев-Заяц, пукути сана», – тесе пушмак-кипе вăркăнтарчĕ Волк. Тути-çăварĕ те Волков мучинни пекех сарлака, сăмси те лапчăк. Çиччас пире ак: «Вĕренмелле, вĕренмелле, татах та вĕренмелле», – тет.

– Ха, тути кулать Ленин аттен.

– Эхе, куçне мăч тутарчĕ.

– Ой-ой, çилпе сулланать. Кайса ӳкет пуль. Часрах, Зайцев! Эс ĕç урокĕ валли мăлатукпа пăта илтĕм тенĕччĕ...

– Çиччас.

Зайцев текен хĕрлĕ çӳçлĕ куктирĕллĕ арçын ача сумкинчен хăвăрт мăлатукпа пăта кăларать те «палăк» урине шач! шач! çапса лартма пуçлать. Волков чăтаймасăр сылтăм аллине çӳлелле çĕклесе: «Ай! Ну, Зайцев-Заяц, пукути!» – тесе Вăрнар халăхĕ илтмелле кăшкăрса ярать. Ачасем ахăлтата-ахăлтата шкулалла чупаççĕ. Зайцевĕ çаврăнать те: «Их-ик, пука, Ленин атте, пука, Волков мучи, пука, пук тăвиччен, Волк!» – тесе шăлне йĕрет.

Каçса кайса кулакан Купчиков Волков патне пырать те:

– Ну, мĕнле пек, Сергей Степанович, Ленин вырăнĕнче тăма лайăх-и, – тет.

– Аллине ҫӗклеттерсе хӑюллӑнах уттарар, – килӗшет Волков, тутине пӑрса.

– Ҫапла ҫав вӑл, районти пӗрремӗш ҫын каланине яланах итлес пулать, – хӗвеле хирӗҫ йӑлкӑшса илет Альберт Тимофеевич. – Манпа килӗшнӗ пулсан тӳрех, ҫак мӑшкӑла та курмастӑнччӗ.

– Шкулта ӗҫлесе ӗмӗре ирттернӗ ҫыншӑн вӑл, маншӑн, хӑнӑхнӑ мыскара ҫеҫ. Ачалӑх – шаймӑклӑх. Ап-ап, юн кӑларчӗ мур илесшӗ Зайцев кӳршӗм, – тесе Волков урине хыпашлать. – Ап-ап, пӳлӗме кӗрсе сурана ҫӑвам-ха. Кӗленче тӗпӗнче кӑштах юлнӑччӗ

## Хӑмла секретарӗ

Софья Матвеевна Поляевана парти райкомӗн идеологи секретарьне лартсанах-ха, Хурӑнсур Ҫармӑса кӳршӗ ялтан Ҫӗрпелтен вӑтам шкул учителӗсем пынӑ, Шлыковпа калаҫса кайнӑ. Михаил Степанович, библиотекӑра кӗнеке суйлаканскер, кӑххӑмлатса, сывӑ юлнӑ аллипе шуралнӑ ҫӳҫне якатса илнӗ те:

– «Хӑмлине» суйларӗҫ апла, – тесе ахӑлтатса кулса янӑ. – Хӑмла пек йӳҫӗ идеологи пулать малашне районта... Ха-ха....

Учительсем малтанах ӑнланаймасӑр аптранӑ, темиҫе вӑрҫӑ вучӗ витӗр тухса уксах-чӑлаха юлнӑ аслӑ хресчен, колхоз, ял Совет пуҫӗнче нумай ҫул хушши тӑнӑ хисеплӗ ватӑ каланине пуҫра шӗкӗлченӗ.

– Ан тӗлӗнӗр, ачамсем, – тенӗ вӑл кӑштахран питне туртӑнтарса. – Эсир, ҫамрӑксем, пӗлместӗр. Тахҫан хӑмлаҫӑсен курсӗ пӗтернӗ Поляева тип хӑмла пекех ҫӳле вӗҫсе хӑпарчӗ. Хӑвӑра, вӗрентекенсене вӗрентме пуҫласан, куратӑр ак. Пире те вӑл хӑмла тума вӗрентсе тӑнран янӑ та... Ак, ҫак кӗнекере те ҫырса хунӑ кулӑш пур: «Кӗске Ҫерки, патша еркӗнӗн кӗске йӗмне кӗске пуҫӗ ҫине тӑхӑнтартса, ӑна кӗсрелле ихӗрттернӗ», – тенӗ.

Михаил Степанович кулӑш кӗнекинчи сыпӑка мӗншӗн вуласа кӑтартнине ялти учительсем ӑнланнӑ-ши, ӑнланман-ши, анчах, пӗррехинче...

Районӑн тӗп вӗрентӳҫи (идеологӗ) вӑтам шкула пынӑ. Ҫӗрпелне. Шкул директорӗ Станислав Николаевич Николаев икӗ хутлӑ йывӑҫ ҫуртра пуҫлӑха куҫлӑх хывсах ертсе ҫӳренӗ.

– Коридорта та, классенче те стенасене ӑпӑр-тапӑрпа тултарса лартнӑ, – аллипе хӑлаҫланса кӑтартнӑ секретарь. – Ҫӗка инструкцийӗнче шкул стенисем парти идейисемпе тулӑх пулмалла тенӗ. А кунта мӗн куратпӑр? Темле Сен-Симонсемпе Коменскисем, Песталлюцисем... Пестолковщина.

– Ара... Сен-Симон вăл... – диктор сассипе сăмахсене татса каласа ăнлантарма тытăнать тĕлĕннĕ директор. – Философ...

– Çырма та пĕлмен, ятне хăть чăвашла Çын-Çимун тесех çырмалла пулнă, пĕлеп эп ялти хвилософсене, – касса татать Поляева. – Коменскийĕ тата кам? Ма ăна та йăнăш çырнă? Каменский... Каминский пуль ĕнтĕ вăл, паллă çынах пуль. Камин, кăмака тăвакан...

– Ара... Коменский вăл – аслă шухăшлавçă, дидактика пуçаруçи...

– Эсир хăвăр та калаçма маннă, Станислав Николаевич. Ухмах вырăнне ан хурăр мана. Чухлатпăр эпир те. Всюш, райком секретарĕ. Çитменнине тата – иккĕмĕшĕ! Кампа мĕнле калаçмаллине пĕлес пулать ăна. Мĕн таклататăр. Нимле татактика та мар, тактика вăл, – вĕрентет районăн тĕп идеологĕ шкул пуçлăхне. – Парти тактики. Парти тактики вара паянхи кун çапла: стенасене Цĕка чĕнĕвĕсемпе пуянлатса, вĕрентӳ шайне чи çӳлĕ шая çĕклемелле. Мачча таран. Пĕлĕте çити. А эсир кунта песталлюцисемпе пуçа минрететĕр ачасенне. Пестолковщина!

– Ара... Песталоцци вăл...

– Çук, çук, – каллех алă сулать Поляева, – пестолковщина сирĕн шкулта. Песталлюцисемпе çăкăр çитереймĕн ял ачисене. Цĕка пире шăпах вĕренĕве ĕçпе тачă çыхăнтарма хушать. Эсир вара парти тактикине те темле татактика тесе тăратăр. Ял песталлюцийĕсемпе пестолковщинăна кĕрсе каятăр. Идея енчен вăйлах мар иккен эсир. Бюрора итлемелле пулать сире.

– Ара... Песталоцци вăл... – мĕнпе те пулин ăнлантарасах килет пулас хăй умĕнче мĕнле идеолог тăнине чухласа илнĕ Станислав Николаевичăн пĕчĕк ачасене пуçласа вĕрентмелли теорине пуçарса яракан, шăпах вĕрентĕве ĕçпе çыхăнтармаллине тĕплекен Швейцари педагогĕ çинчен. Аптранă енне вара вăл: – Песталоццин «Акăш юррине» пĕтĕм тĕнче пĕлет, – тесе юрланăн каласа ярать.

Софья Матвеевнăн тарăхнă пит-куçĕ тин кулă паллипе улшăнать.

Паçăрах каламалла та, – тет вара çемçен. – Калап çав ку Песталлюцине ытла артистла сăрласа хунă, хушаматне те ял çыннисем мăшкăлласа тупса панă пуль тесе. Шăпах эпир художественнăй самодеятельность смотрне ирттерме йышăнтăмăр бюрора. Тĕнче пĕлет пулсан сирĕн Песталюццине, вăл хамăр район ĕç çыннийĕсене те савăнтартăр хăйĕн «Акăш юррине» шăрантарса, пилĕк çуллăха срокчен тултарассишĕн ырми-канми, мĕнпур вăй юлмиччен кĕрешме хавхалантартăр. А çапах

та... – портретсем çине тепĕр хут тĕллесе кăтартать идеолог, – КПСС ретĕнчех тăраççĕ-и вĕсем?

– Ара... Вĕсем...

Директора çăвар уçма памасăр вĕçлет райком секретарĕ:

– Ăнланмалла. Сначчăт, партире тăмаççĕ сирĕн Çын-Çимунпа кăмака тăвакан Каминский те, «Атăл юрри» шăрантаракан Песталлюци те... Халех снимать тăвăр портретсене. Тасатăр стенасене. Цĕка чĕнĕвĕсене çырса çапăр. Пестолковщина!

– Эсĕр – хăвăр Писталюццин, апла пире пукулувнă кăпăсăна хўтерсе кĕртесшĕн пулсан, ялти кулувасем те шлепкеллĕ, – тесе пит-куçне упăтелле пăркалантарса юлать юнашар итлесе тăракан кулăш ăсти – шкул хуçалăхĕн аслă çынни Паюк Куçки директора куç хĕснĕ май.

## Халăх çулĕпех

Вăрнар районне туса хунăранпа та парти комитетĕнче тинĕс ишевçи секретарьте ĕçленине никам та астумасть. Халăх ăстăнне хĕвел тухăç – хĕвел анăç, кăнтăр-çурçĕр йĕрĕпе çирĕп тытса пымалли тилхепене алла парсан, Михаил Алексеевич Васильев карап вĕтĕ хум çинче ташланă пек ташласа та илнĕ. Çав хушăрах вăл ăслă пуç кунтăкĕнчи ылтăн тырă пĕрчине шыраса тупнă: тинĕс çынни тĕлĕкре те çĕр курать.

Ишнĕ çапла вăл анлă та хумхануллă пурнăç тинĕсĕнче, халăхпа пĕрле авăснă ăс-тăн кĕсменне. Çичĕ хутлă хум та чарайман ăна, шыв айĕнчи шĕвĕр ту тăрри те путарайман...

Район идеологĕ Васильев шухăшлав тинĕсĕнче, пĕрремĕш секретарь аллинче пулнă пулин те, пĕрремĕш рангри капитанах пулнă. Вăл тытса пыракан ăс-тăн карапĕ çĕршыв çулĕпех малалла ишнĕ. Халăх çулĕнчен пăрăнман Михаил Алексеевич. Никам умĕнче те пуççапса нĕшĕклемен, никама та парăнма шутламан.

## Ял чирĕ

Чăннипех хресчен чунлă, ял пурнăçне тĕнче вăхăчĕн картĕнче пуянлатма пултарнă Василий Игнатьевич Романов, хăйне хуптĕрлесе райком çуртне кĕртсе янă хыççăн, кукашшĕн сăмахне аса илнĕ. «Ху кўлмен лашапа çула ан тух» тени ăна пўлĕм тăрăх уттарнă та каллĕ-маллĕ. «Е эпир ĕçлеме пĕлместпĕр, е эпир – хамăр вырăнта мар» тенине час-часах илтме тўр килнĕ ун чухне пĕрремĕш секретарьпе калаçакансен.

Пĕрремĕшĕ вара... тĕлĕкре Çĕрпел урамĕсем тăрăх çăпата сырса утнă, ял уйĕсенче кирзă атăпа трактор хыççăн хашкаса пынă, хăй ларттарнă культура керменĕнче сăран пушмакпа чăваш вальсĕ ташланă. Колхоз-совхоз пуçлăхĕсене çĕрĕмĕш выговор панă хыççăн Романов хăй агрономра, председательте ĕçленине, райĕçтăвкома ертсе пынине, хăй камсене «хĕненине» аса илсе шухăша путнă, унтан, райком тавра виççĕ утса çаврăннă та... хулăн папкине икĕ хутлă хăрушă çурта манса хăварсах, тăван ялне çурран тухса утнă. Хăй кӳлнĕ лаша çинех ларас килнĕ ял чирĕпе чирленĕ хресченĕн.

## Мыскарасăр кам пурнать

* * *

Иртнĕ ĕмĕр варринче Вăрнарта ВЛКСМ райкомне ертсе пынă Анатолий Емельянов хими заводĕнче ĕçлекен чиперкке активисткăна кăмăлланă. Поселокра çук астармăш хĕр качча хăнана чĕннĕ. Кĕсйине мăйăр пек канфет тултарнă, аллине чечек çыххи тытнă кавалер курнăçма палăртнă çĕре çунатлă ĕмĕтпе вашкăртса çитет, кирлĕ хваттере шыраса тупать.

– Кам эс?! – сасартăк сиксе тухать ун умне тăлпан кĕлетке.

– Пĕрремĕш секретарь...

– А эп кунта – пĕрремĕш кавалер! Пурнас килсен...

Сăмса умĕнче алăк шарт! хупăнать.

Райкома таврăннă Анатолий Викторович хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче тарăхсах сасăпа калаçать:

– Пулмастăп нихăçан та иккĕмĕш: кавалер та, секретарь те!

* * *

Анатолий Емельянов Чăваш писателĕсен Союзне ертсе пынă вăхăтра ун патне хăйсен Мăньял Хапăсĕнчи Сарра Баранова çыравçă пырать.

– Ман та Союза кĕресчĕ, – тет ялташне çамрăк автор документсем кăларса хунă май.

– Урăх яла качча тух, вара илетпĕр хамăр йыша, – куçне чеен йăлкăштарса кулать пуçлăх.

– Мĕншĕн-ши?

– Пĕр ялта икĕ классике пурăнма тăвăр пулма пултарать.

## Така çăмарти касма та пĕлмелле

Альберт Тимофеевич Купчиков райком çуртĕнче çывăрса ĕçлесех çамрăклăхĕпе сывпуллашнă. Ларса курман ĕç пуканĕ икĕ хутри нихăш пӳлĕмре те тупăнман пуль унăн. Çĕрĕпе маяк пек çутатнă вăл ларакан пӳлĕм чӳречи. Купчиков питĕ тăрăшса вĕреннĕ. Кунĕн-çĕрĕн.

Шупашкар урлă Мускава çитсе пуçне ылтăн кăшăлĕпе çавăрса килнĕ хыççăн Альберт Тимофеевич республика калăпăшĕпех ăс парса пурăннă пĕр хушă. Унтан ăна каллех тăван Вăрнарне килсе янă.

Пĕрремĕш секретарь ĕçĕ çăмăл мар. Шупашкар унран пуриншĕн те ыйтать, район халăхĕ унран пĕрмай ыррине кĕтет. Пуçа самаях çавăрттарма, вĕренсе пухнă пĕлӳпе усă курма тивет. Вĕрентесси те, ăс-тăн парасси те пĕрлех. Ыррипе пĕрле тепĕр чухне пăтăрмахĕ те, мыскарийĕ те сиксе тухать.

Акă пĕррехинче вăл Уравăша персе çитнĕ те ял çыннисене Тĕп Комитетăн черетлĕ пленумĕ мĕн йышăнни пирки ăнлантарма пуçланă. Хăйрамасăрах çивĕч чĕлхеллĕ Çтаппан мучи итлет-итлет те секретарĕн шăмăсăр чĕлхинчен юхакан яка сăмахсене, ăна сасартăк ыйту парать:

– Хисеплĕ Альберт Тимофеевич, эсир мĕн-мĕн пĕтернĕ ку таранччен? Питĕ пĕлес килет.

Ăнлантару шухăшне вĕçлемесĕрех Купчиков хаваспах каласа парать:

– Ялти шкултан вĕренсе тухнă. Учительсем хатĕрлекен институтран. Педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Партин аслă шкулĕнче. Обществăлла наукăсен академийĕнчен кандидат пулса тухнă. Историк-политолог. Мансах кайнă, тата...

Тулăксăртарах Çтаппан мучи ăна каллех пӳлет:

– Эй, мĕнле ăслă çын эсир... Ун чухлĕ нумай вĕреннĕ пуçлăх района ертсе пынине эпĕ пĕлменччĕ-ха. Чăвашра пулманах пуль сирнешкелли. Питĕ нумай вĕреннĕ. Çапах та, калăрха, така çăмарти касма пĕлетĕр-и эсир?

Хăйне мăшкăлларах панă ыйтушăн кӳреннĕ пек пулнă Альберт Тимофеевич тутине пăркаласа кулса илнĕ те:

– Пĕрремĕш секретарь çăмарта касса çӳреме тытăнсан, сире коммунизм тума кам вĕрентет, – тет.

Çтаппан мучийĕ те шакла пуçне хыçа-хыçах, лĕхлетсе, пуçлăха урараннах çапса ӳкересшĕн.

– А эп курнă така çăмарти касма пĕлекен кăмиссара.

– Кама?

– Емельянова. Вăт вăл пĕлтĕр çак фермăрах çынсемпе те чунтан калаçрĕ, лаша та хăмлаттарчĕ, ман пата киле пырса така çăмарти те касса хăварчĕ. Чĕлхи те усăллă пулчĕ унăн, алли те.

– Тупнă калаçмалли. Вăл çăмарта касма зоотехникумра ятарласа вĕреннĕ. Унăн ĕçĕ çав – коновалăн. Кирлех пулсан, эпир те... Каласа пĕтерме памарăр-çке мана. Таку пур-и? Çиччас касатпăр.

– Мĕн, академире вĕрентнĕ-им çăмарта касма? – ихиклетсе илет Çтаппан мучи.

– Чăнах та, ырă çыннăм, академирех вĕрентнĕ, анчах... Мускавра мар, ял академийĕнче. Така çăмарти касса, така çăмарти çисе ӳснĕ эпир те, хисеплĕ мучи. Килӳнте касман така пулсан – эп хаваспах.

– Хăйне ăна касса ямалла, кастарман така пек ял тăрăх чупса арăмне макăртнăшăн, – кулса янă итлекенсем.

Çтаппан мучи алă сулнă та вĕсем çине, вара сăмахне вĕçленĕ:

– Питĕ нумай ăс-тăн пухнă та эсир, Альберт Тимофеевич, çав хушăрах çăмарта касма вĕрентекен академие пĕтерме те манман. Хресчен пурнăçĕн наука тухтăрех апла эсир те, Анатолий Виктăрч пекех.

## Çавал сарăлсан

Район комитетне Анатолий Викторович Емельянов ертсе пыма пуçласан, хăшĕ-пĕри ĕççĕр аптăранă.

Нихçан та кăвакал пек кутăн чăмма шутламан Петр Иванович Краснов пĕрремĕш секретарь пӳлĕмне йăпшăнса кĕнĕ те, сăмсине нăшлаттарса, хăюсăррăн ыйтнă:

– Анатолий Викторович, хăçан доклад çырма тытăнмалла сирĕн валли?

– Çавал сарăлсан, – йăл кулса ăсатать оргĕç пайĕн çыннине Емельянов.

– Юрать, тавтапуç оперативлă ĕç хушнăшăн сире. Куракcем килчĕç. Паянах Нурăса тухса каятăп. Çавал сарăлнине тĕптĕрĕс сăнаса ларăп. Эп парти салтакĕ, – тесе кăвапа таран тав туса çухалать Краснов.

Пропагандăпа агитаци пайĕн ĕмĕрхи ĕçченĕ Николай Никитич Мартынов уксахласа кĕрет те:

– Сирĕн ĕç мелне ăнлансах пĕтерейместĕр-ха, Анатолий Викторович, – тет ахаль те яка туранă çӳçне шăлса илнĕ май. –

Унчченхи пĕрремĕшсем пире доклад çыртарса çĕр çыварат-мастчĕç. Сире хăçан çырса памалла?

– Каталнă уйăх тулсан, Николай Никитич, – пит-куçне хĕвел шевлипе чӳхесе илет пӳлĕм хуçи. – Сăна лайăххрах тĕнче уçлăхне.

– Эсир хушнине яланах пурнăçлама хатĕр, Анатолий Викторович. Уйăх тăххăрри тунăччĕ-ха. Çĕр çывăрмасăрах ĕçлĕп ĕнтĕ халь.

«Çавал сарăлсан» чăваш литературин тĕнчинче, «Каталнă уйăх» та тулнă, анчах пĕрремĕш секретарь сĕтелĕ çине Красновпа Мартынов çырнă докладсем пырса выртайман, райком писателĕ вĕсене çав кĕнекесене парнелесен тин ăнланнă парти ĕçченĕсем хăйсем чунтан хисеплекен секретарь мĕншĕн вĕсене доклад çыртарманнине.

Каярахпа, Шупашкартан килкелесе кайнă май, Емельянов вĕсене «Шыв типнĕ çул» Салука улăхĕнче татнă «Хура кăрăçпа» та хăналанă. «Кĕмĕл çилпе» хумханакан хăмăр çӳçне якатса илнĕ те Анатолий Викторович, юлташĕсене «Шăнкăрав курăкĕ» тыттарнă:

– Ку сире мана «Каталнă уйăх» çутипе «Çавал сарăлсан», пурнăç доклачĕ çырма пулăшнăшăн.

## Аслине кĕтсе илни

Комсомол райкомĕнче ĕçленĕ чухне хушăран «Эпĕ районта виççĕмĕш пуçлăх тесе култарма юратакан Анатолий Степанович Малов майĕпен парти райкомĕн иккĕмĕш секретарьне вашкăртса çитнĕ. Юнашарти икĕ алăк витĕр шаккаса кĕмелли анлă пӳлĕме хуçалла майлашăнса йышăнас шухăш та канăç паман пуль хĕрӳ çамрăка. Ара, иккĕмĕш секретарьте ĕçлекен хăть те мĕнле çын та ĕмĕт-шухăшĕпе тĕлĕкре те пулин пĕрремĕш секретарь пулса куратех. Пĕрремĕшĕсем те ухмах мар çав, хăйсен çумĕсен маниловла шухăшне ăнланаççĕ, вара вĕсене темле майпа та пулин çав тĕтреллĕ ĕмĕтрех çемçе пукансăр тăратса хăварма тăрăшаççĕ. Паллах, Малова ятарласа унашкал асаплантарман. Ăна, ăшĕнче тапса тăракан хĕрӳлĕхне кура, район завхозĕ туса хураççĕ. Мĕншĕн тесессĕн, Анатолий Степановичăн паллакан-пĕлекен-пулăшакан çын райкомпа райĕçтăвкомра ĕçлекенсенчен те темиçе хут йышлăраххçке. Çавăнпа пĕрремĕшĕ ăна тӳрех Мускава хăвалать: «Кай, Толя, эсĕ унта ытларах усă паратăн».

Кĕçех Вăрнар чукун çул станцийĕн тавар йышăнмалли лаптăкĕ строительство материалĕсемпе тулса ларать. Тĕп хула-

ран вакун хыҫҫӑн вакун килсе тӑрать. Пропагандӑпа агитаци пайӗнче ӗҫлекенсем хӑнӑхнӑ ӗнтӗ вокзала чупма. Вакунра яланах хаклӑ кӑтарту выртать-ҫке: «КПСС Тӗп Комитечӗн... йышӑнӑвне пурнӑҫласа, «...ялсенче экономика вӗренӗвне йӗркелесе ямалла», «...шкулсенче парторганизаци секретарӗсен семинарне ирттермелле», «...ӗҫке хирӗҫ кӗрешессине вӑйлатмалла», «...курӑнакан агитацие курӑнмалла тумалла», вӗҫӗмсӗрех «лалалла» та «лалалла»

Малова кӗтсе ӑсатасси район пурнӑҫӗнчи чи паллӑ уяв кунӗ пекех шутланать. Акӑ пӗррехинче Николай Никитич Мартынов питӗ хумхануллӑн пӗрремӗшӗн пӳлӗмне хашкаса кӗрсе тӑрать. Чӗлхи ҫӗтнӗ инструктор каланине аран-аран ӑнланса илет секретарь. «Аслипе килетпӗр, ыран кӗтсе илме хатӗрленӗр», – тенӗ Малов.

– Камне каламарӗ-и вӑл? – тӗпчет хуҫа.

– Ҫук, – салтакла татса тавӑрать инструктор. – Тӳрех трубкине хучӗ пулас, телефон пиклетме пуҫларӗ.

«Асли такам та пулма пултарать... Обкомри тӑванӗн ҫывӑх ҫыннине те Цӗкаран канма илсе килме пултарать вӑл... Маловран тем те кӗтме пулать». Пуҫа ҫур кун кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса сылтӑм енне хӗретсех ярать анлӑ пӳлӗм хуҫи. Аптранӑ енне, пысӑк хӑна умӗнче намӑс курас мар тесе, вӑл Шупашкара шӑнкӑравлать. Лерен ирпе «Чайкӑпа» ҫитме шантараҫҫӗ.

Вӑрнарта – нихҫан пулман хӗвӗшӳ. Пур пуҫлӑха та ура ҫине тӑратнӑ. Мартынов мӑн урамри кашни юпа ҫине чӗнӳ хӑми ҫаптарса тухнӑ. Оркестр хатӗрленӗ. Вокзал умне хура вӑрман пек халӑх пухӑннӑ.

Акӑ, кӗтнӗ пуйӑс кӑртлаттарса шавласа ҫитсе чарӑнать станцине. Ҫемҫе вакун алӑкӗ уҫӑлать те... Перрон ҫине Анатолий Степанович ҫӑмӑллӑн сиксе анать, хӑй хыҫҫӑн тухакан самӑр арҫынна анма пулӑшать.

Оркестр хаваслӑ кӗвӗ шӑрантарать. Алӑ ҫупакан ҫынсем ҫӑварӗсене карса пӑрахнӑ.

– Ырӑ сунса кӗтсе илетпӗр Вӑрнарӑн пуян ҫӗрӗ-шывӗнче, хаклӑран та хаклӑ, хисеплӗ хӑнасем, – тесе чӑвашла тумланнӑ чиперккесем вӗсене ҫӑкӑр-тӑвар тыттараҫҫӗ, йывӑҫ алтӑрпа сӑра ярса параҫҫӗ.

– А-а-ах! – тесе пырӗнчен кӑвапи таран аллипе шӑлса илет Малов куркана пушатнӑ хыҫҫӑн. – Тепре ярса парӑр-ха?

Район пуҫлӑхӗсемпе Шупашкартан килнисем пӗр вырӑнта шаках хытса тӑраҫҫӗ Маловпа пӗрле ҫемҫе вакунра ларса килнӗ Краснов-Аслине палласа илнӗ хыҫҫӑн.

– Çакă-и асли сан? Шалта урăххи çук-и? Анатолий Степанч, кала часрах! – тĕпчет район пуçлăхĕ.

Сăра мехлекен Малов пуçа çеç сĕлтет.

– Паллах, çакă. Эпĕ вăл – Асли, тĕнчере пĕр Асли – Краснов–Асли. Чăваш писателĕ, – тесе çĕкленÿллĕн каçăрăлса сылтăм аллипе сарлака кăкăрне çапса кăтартать те Василий Иванович, утма хатĕрленсе тăракан обком секретарьне пĕчĕк чăматанне тыттарать. – Тавтапуç патшана кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илнĕшĕн, атту эпĕ сан кабинетуна кĕресшĕн çур çул тапаçлантăм, – лекеймерĕм. Ух! Епле уçă та кăмăллă ир паян. Вăрнарсем, сывлăх сунатăп сире!

Краснов-Асли пухăннă халăх умĕнче хĕрÿ сăмах калама пуçлать. Хăйне 1929 çулта, коммунистсен Свердлов ячĕпе хисепленекен университетне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, Вăрнар райкомĕн секретарьне яни, вăл вăхăтра мĕнле йывăрлăхра ĕçлени çинчен асăнать.

– Краснов-Аслине мухтав!

– «Вутра» парнелĕр! «Тăвалла...»

Сырса илнĕ халăх шавлать-кĕрлет. Маловпа Краснов-Асли обкомăн «Чайкине» мăнаçлăн кĕрсе лараççĕ.

– Эп суйман, – пăшăлтатать райком секретарĕ çумĕнче тăракан Мартынов. – Аслипе килетпĕр, терĕ Малов. Аслипех килчĕ. Выговор параймастăр.

### Уйрăлми туссем

Кĕркури Илепер сăвăçа уйрăлми тусĕ Ан Шар Ли хаспатин килне ăсатса ярать. Ферма енчен арăмĕ каччă кайнă чухнехи пек хÿхлесе çырма урлă каçать.

– Мĕн пулчĕ, Катюша?

– Председатель хĕнерĕ.

– Мĕн айăпа кĕтĕн?

– Вăл хуçа-ха та, мана, ферма заведующине, сысна çуришĕн пусахларĕ. Вĕсен хăнасемпе шашлык çисе асмалла, ман сыснине темле списать тумалла. Çула урлă тăтăм та, янклаттарса ячĕ. Ну ку пуçтах автана, лай-йăх пар-рап-ха пĕрре хам та...

«Юрать юсакан тупăннă. Чĕлхине ытлашши ирĕке янăшăн хамăн та тахçантанпах алă кĕçĕтсе çÿретчĕ-ха. Çирĕпрех алă та кирлĕ иккен хушăран», – тесе хĕпĕртенипе ăшĕнче хавассăн кулса илет те Кĕркури Михалч, Ан Шар Ли хыççăн кÿрше кĕрсе çухалать.

## Инкек те пулăшать

Шăрăх çанталăкра вăрман хыпса ялкăшнă çитмĕл иккĕмĕш çул йĕпреçсене те самаях пĕçертсе апаплаттарнăччĕ. Шупашкартан васкавлă килнĕ хăватлă тракторсем эрне ытла хăйăрлă çĕре йăштарĕç, халăхпа пĕрле хаяр пушара çăварлăхланă хыççăн та бульдозерсем инкек хуралĕнче сыхă тăратчĕç. Çав вăхăтра район пуçлăхĕсен пуçĕнче ăслă шухăш çуралать: хуралта усăсăр тăракан алă айĕнчи техникăпа усă курса юлмалла! Икĕ енлĕ килĕшӳ тунă хыççăн бульдозерсем çуркунне татса кайнă Хурашыв пĕви тĕпĕнчи ĕмĕрхи тункатасене тăпăлтарса çĕр тĕкме пуçларĕç.

Райсовет ĕçтăвкомне ертсе пыракан Алексей Васильевич Турханов, çур çухрăма яхăн тăсăлакан пĕвене пĕвелесе пĕтернĕ хыççăн шутсăр хĕпĕртенипе, çынсем умĕнчех сăхсăхса илет:

– Пушар пулман пулсан-и?.. Кăçал çак пĕве те çуталса выртас çук. Инкек те пулăшать иккен. Тавах Турра.

## Коммунизм поэмине çыракан

Йĕпреçри пĕрремĕш вăтам шкулта – хальччен пулман тĕркĕшӳ: Лермонтов килет!

Акă кĕçех класа КПСС райкомне ертсе пыракан Николай Григорьевич директорпа пĕрле пырса кĕрет.

Ачасем ура çине тăрса харăссăн сывлăх сунаççĕ. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен хавассăн пĕлтерет:

– Куратăр-и, пирĕн пата Лермонтов хăй килчĕ.

– Лермонтов?.. – тĕлĕнсе каяççĕ вĕренекенсем. – Пирĕн юратнă поэт урам урлах коммунизм поэмине çырса ларнине пĕлмен...

## Пĕрремĕшсем

Александр Петрович Петров утмăл пиллĕкмĕш çулта парти райкомне ертсе пыма пуçласанах Йĕпреç поселокне тĕрĕслесе тухма шутланă, чукун çул урлă каçса вăрманпромхоз лавккисем патнелле çывхарнă. Тĕттĕм кĕтесрен сасартăк ун умне правур йĕкĕтсем сиксе тухаççĕ те, вĕсенчен чи патварри ăна пĕсехерен çулса илет:

– Пурнас килет-и?

– Килет.

– Миçе çул?

– Виличчен.

– Ах, виличченех пурнасшăн-ха эс пире тăн парса Йĕпреçре?..

– А какшĕ? Ман ят кунта хам вилсен те юлать. Эп – пĕрремĕш! Район хуçи вĕт.

– Ах, район хуçи?.. А эп, Корчагин, Йĕпреç авторитечĕ. Тушĕ пĕрремĕш. Манран ку таранччен иртекен пулман-ха таврара. Çиччас паратпăр сана хуçа кучченеçĕ. Виличчен асăнмалăх...

Петров вара çакăн хыççăн йĕпреçсем умĕнче «эп – район хуçи» тесе хăй Шупашкара ĕçлеме куçса кайиччен те çăвар уçман тет.

## Юратнă çĕршыв

Йĕпреçре ыйтусемпе хуравсен каçĕ пырать.

– Хăш çĕршыв сирĕн çуралнăранпа та пуçран каймасть?

КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Николай Григорьевич Лермонтов: – Çĕрпӳ.

Иккĕмĕш секретарĕ Валентин Алексеевич Михатайкин: – Хĕрлĕ Чутай.

Виççĕмĕш секретарĕ Христина Сергеевна Башкирова: – Аслă Каçал.

Райĕçтăвком председателĕ Пантелеймон Михайлович Ермошкин: – Патăрьел.

Председатель çумми Анатолий Петрович Ядровский: – Канаш.

Районти халăх контроль комитечĕн председателĕ Анатолий Яковлевич Кушев: – Ишлей.

Райхаçат редакторĕ Серафим Ефимович Ефимов: – Вăрнар...

Çапла вĕçĕмсĕр асăнаççĕ хăйсем çуралнă район ячĕсене Йĕпреçĕн пысăк-пĕчĕк пуçлăхĕсем.

– Хăш çĕршыв сирĕн куçран каймасть?

– Йĕпреç!!! – пурте харăссăн хуравлаççĕ вĕсем.

## «Туслă кӳршĕсем»

Парти райкомĕн пĕрремĕшпе иккĕмĕш секретарĕсем Сергеевпа Михатайкин юнашар пурăнаççĕ. Ытти çынсенни пекех вĕсен те сыснисем самăрăлса çитнĕ. Пусма халăх тĕрĕслевçисен районти пуçлăхне Яковлева чĕнеççĕ.

Кил хушшинче пĕр-пĕринпе хыçкаланса тăракан мăнтăр чушкасем çине пăхса илет те Семен Тимофеевич, ыйтать:

– Хăшне малтан пусатпăр?

– Паллах, манне, – хăпартланса кулкаланçи тăвать Никонор Андреевич.

– Юрĕ эппин, – килĕшет Валентин Алексеевич. – Ман ун хыçĕнче те, хам пекех иккĕмĕш те... Манне пусиччен малтанхинчен шўрпе пĕçерсе хатĕрлĕç хĕрарăмсем.

Пĕрремĕш секретарь хăйне пăхăнаканĕ çине пăхмасăрах Яковлева хыттăн хушать:

– Атя, яшлаттар хыçалтине. Ман, авă, канма выртасшăн. Шўрпе хыççăн та вăхăт пур...

## Пурпĕрех Николай Григорьевич

Йĕпреçри почта-çыхăну хуçи Николай Григорьевич Григорьев çитмĕлмĕш çулхи çурла уйăхĕнче райком секретарĕпе Лермонтовпа пĕр çĕрте каннă. Григорьев эрне маларах килелле тапать. Çанталăк пăсăлнине пула вăл вĕçекен самолета Свердловска çити хăвалаççĕ. Аэропортра талăк çурă шăл шаккаса ларнă вăхăтра вăл Шупашкартан Йĕпреçе çитме хăварнă юлашки укçапа выç хырăмне саплать. Çанталăк уяртсан вĕçсе çитет курортник Шупашкара. Мĕн тумалла-ха? Нумай шухăшласа тăмасть пассажир, аэропорт кантурне кĕрсе шăнкăравлать:

– Райком-и? Начар илтĕнет. Николай Григорьевич тетĕпçке... Салам пурне те. Хăвăртрах машина ярăр!

Икĕ сехетрен Шупашкар аэропортне хура «Атăл» çĕлен пек чашласа çитет. Палланă номерлĕ автомашина патнелле Григорьев пит чинлă васкаса утать.

– Эсĕ те пыратăн-и? Ăçта Николай Григорьевич? Хупахран тухаймарĕ-им? – хумханса кăсăкланать Василий Михайлович текен ямшăк.

– Эпĕ – Николай Григорьевич! – тет куллине пытарса Григорьев. – Кайрăмăр!

Машина ўхĕрсе тапрансан, шофер тутине пăркаласа илет те, йăлл кулать:

– Калап çав эп вĕсене, сурăхсене, Лермонтов тепĕр темиçе кунран тин килет тесе, вĕсем... Николай Григорьевич шăнкăравланă тесе вĕлереççĕ васкатса. Юрĕ ĕнтĕ, пурпĕрех Николай Григорьевича турттарса таврăнатăп.

– Тавтапуç, – тесе пуçне пĕкет Григорьев. – Нуша темле кулач те çитерĕ...

### Вилесле юрату

Ял хуçалăх управленийĕнче зоотехникра, экономистра ĕçлекен Анфиса Николаевнапа Василий Кузьмич Кузьминсем ытаклашса тула тухатчĕç, хулран хул тытса ĕçе çӳретчĕç, пĕр чашăкран пĕр кашăкпа апат çиетчĕç, хăнара та пĕр пукан çине ларатчĕç... Чипер мăшăрĕ тивĕçлĕ канăва тухсан, хастар упăшки ĕç пӳлĕмĕнче, тунсăхласа, лара-тăра пĕлмест. Пĕррехинче ун патне тусĕ кĕрет те шӳтлеме пуçлать:

– Василий Кузьмич, сирĕн пӳрт çунать.

– Пулма пултараймасть, – пуçне пăркалать Кузьмин.

– Сирĕн ылтăн-доллар арчине йăтса тухса тарнă.

– Çук.

– Сирĕн ĕне çинче сысна утланса чупать.

– Суятăр.

– Сирĕн арăмна вăрласа кайнă.

– Арăма?! – чалтах сиксе тăрать Василий Кузьмич. – Ку вара чăнах та пулма пултарать. Чупас.

### Ят тĕрĕслеççĕ

Çитмĕл тăваттăмĕш çулхи пĕр ирпе Йĕпреçри «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакторĕ Серафим Ефимович Ефимов парти райкомне вашкăртса çитет, блокнотне уçса пĕрремĕш секретарьтен чĕтревлĕрех сасăпа ыйтать:

– Сергеев юлташ, сирĕн ята мĕнлерех çырсан тĕрĕс пулать: Никанор е Никонор?

Район хуçи журналист куçĕнчен çурхи така пек кăнн! пăхать те:

– Эсир хăвăр тата Серафим е Серафима? – тет пӳлĕм туллин кулса ярса Никонор Андреевич.

### Чухлавçă редактор

Парти райкомĕн секретарĕ Сергеев райхаçат редакторне Ефимова хăй патне питĕ васкавлă чĕнтернĕ.

– Серафим Ефимович, юлашки хут асăрхаттаратăп, мĕншĕн ман хушамата юлашки страницăна хĕссе кĕртсе янă? Çав хушăрах Геннадий Романович – умстатьяра. Мĕнле ăнланмалла кăна? Мĕн, ял хуçалăх управленийĕн начальникĕ Яковлев-им районта чи асли?

– Иртнинче канашлура хăвăрах каларăр-çке эсир, Никонор Андреевич, алфавита ăна пурнăç хăех каялла-малалла та çавăрттарма пултарать тесе...

Тем вăхăтран чăн та, каппайчăк пуçлăхăн пуçĕ тăрринче çил-тăвăллă хăрушă пĕлĕтсем капланма тытăнсан, пăрлă çумăр çăвиччен тусĕсем ăна Шупашкарта хăйне майлă ăшă вырăн тупса параççĕ. Умстатьяна лекнĕ Яковлев вара район алфавичĕн пуçне улăхса ларать те – администраци тилхепине шик шăхăрсах вун пилĕк çул хушши тытса пырать

## Виç сăмах

Парти райкомĕн иккĕмĕш секретарьне Мария Ивановна Ивановна Йĕпреçре пурте витĕр пĕлекен пулса çитрĕç. Пĕлмесĕр, хуть мĕнле пухура та сăмах тухса калать-çке вăл. Унăн кашнинчех пĕр ыйту:

– Мана та виçĕ сăмах калама ирĕк парсамăр.

Ăна никам та хирĕçлемест, трибуна умне кăмăллпа кăлараççĕ.

«Докладчик те, тухса калакансем те кунта питĕ лайăх палăртрĕç. Çапах та тепĕр хут тарăннăн чарăнса тăрасшăн эпĕ...»

Ялан çапла пуçласа ярать Мария Ивановна. Хăй вара докладчик каланине йăлтах тепĕр хут асăнать. Унта тухса каланисен сăмахне айăн-çийĕн çавăрттарать.

Ытла нумай пакăлтатнăран президиумра ларакансем графина кăранташпа çине-çинех шаккаса илеççĕ. Вăл, ниме пăхмасăр, шав малалла калать.

– Çитет, кусене паçăрах каларĕç ĕнтĕ, – асăрхаттараççĕ залра ларакансем.

– Эпĕ тĕрĕссине калатăп, мана ан чарăр, – пушшех хĕрет Мария Ивановна.

Доклачĕ çур сехете пулсан, вăл вара пĕр сехет тăрать трибуна умĕнче.

Кашни пухура хывăх авăртни юлашкинчен хăшĕсене йăлăхтарсах çитернĕ. Шухăшласан-шухăшласан, май тупаççĕ хайхи. Кашни пухурах ăна протокол çырма хушакан пулчĕç. Вĕçĕмсĕр çырать вара.

Хăшĕсем юриех шӳтлесе:

– Тен, Мария Ивановна виç сăмах тухса каласшăн? – теççĕ.

– Калаймастăп çав, пушă мар-ха эпĕ, – тет вăл пуçне çĕклемесĕр.

## Юлашки мар

Нумай мĕльюн пĕрчĕрен купаланă КПСС çÿллĕ тăвĕ хăйăр купи пек ишĕлме пуçласан, Йĕпреçри Эдуард Сергеевич Николаев ĕçе çитет те, тĕлĕннипе урайне чутах тÿп кайса ÿкмест. Шăлйĕренсем унăн алăкĕ çине «КПСС Йĕпреç райкомĕн юлашки секретарĕ Э.С. Николаев» тесе çырса çапнă.

Аллинчи район тилхепи татăлнăшăн пуçлăх кулянсах ÿкмест, пÿлĕме питĕрсе тухать те çывăхри Шăрттан ялĕ еннелле каялла пăхмасăр вашкăрттарать. Вăтам шкула кĕрсен вăл «Директор» тесе çырнă асамлă алăк умĕнче тап чарăнать, хăлăпа хăюллăн ярса тытать. Çав вăхăтрах ăна ача купи шавлăн хупăрласа илет. Вĕсемпе хавхаланса пĕлĕте çити çĕкленнĕ çĕнĕ директор Э.С. Николаев ним хуйхăрмасăрах çĕнĕлле ĕçлеме пуçлать, малашне коммунизм керменĕ мар, шкул директорĕ пулнă ашшĕ пекех, ачасемпе пĕлÿ керменĕ купалать. Тăван ялĕнче, паллах, юлашки мар вăл.

## Шайлашу

Райком çуртĕнчен тухсан сулахайра – Владимир Ильич Ленин палăкланса тăрать, сылтăмра – ĕçе кайма тухнă Спиридонов. Йĕпреç сăвăçĕ Геннадий Кузнецов парти çулпуçĕ умĕнчен карттусне хывса иртет те, район администрацийĕн пуçлăхĕн çуммине алă парать:

– Кама кĕтетĕр пит шухăшлăн? Газ ыйтăвĕпех нушаланатăр пуль?

– ЗАГС майрине кĕтетĕп. Газ ыйтăвĕ те кунĕн-çĕрĕн пуçран тухмасть.

– Мĕн, Ульянов пек хушаматна улăштарасшăн мар пуль те?

– Эсир ан кулăр-ха. Унпа ăçтан танлашăн? Вăл манран пур енĕпе те ытла çÿлте тăрать.

– Танлаштарасси-шайлаштарасси мĕн вăл? – Кузнецов тухăмрах райком çуртĕнчен пукан йăтса тухать. – Акă, хăпарса тăратăр та... Ленин: «Коммунизм вăл – совет влаçĕ тата çĕршыва электрификацилесси» тесенех, «Райканашизм вăл – халăх влаçĕ тата Йĕпреçьене газификацилесси» тесе ăмăртса алă ывăтасси çеç юлать сирĕн, хисеплĕ Владимир Ильич.

Спиридонов сăвăç аллинчи карттуса илет те, ăна ăслă пуçĕ çине лартать...

– Капла эсир иксĕр те пĕрешкел, пĕр шайлашуллă – тимĕр пек çирĕп Улатимĕрсем, – тесе йăл кулать çыравçă.

Пуçлăхсен кутне-пуçне çуллама-шăлма юратман Гурий Андреевича пĕррехинче парти райкомне чĕнтернĕ.

– Андреев юлташ, çитет партизанла хăтланса, – хаяр калаçу пуçарать пĕрремĕш секретарь. – Пĕтĕм шалăпă та сирĕн çинчен анчах... Пире кăшласа та çитет. Хуçалăх тилхепине урăх ямшăка персе памалла пуль сирĕн.

Çĕр шăтарса тухнă, уйра хĕвелпе-çилпе писсе çитĕннĕ, Пучинке халăхĕпе пĕрле ура сырнă, тутă хырамлă пулнă, уявра, ĕçкĕ-çикĕре йышпа юрланă-ташланă, çӳл тӳпене Пучинке çăлтăрĕ çакнă хресчен ертӳçи Лермонтова куçран пăхса калать:

– Енчен те эсир хăвăр та, шупашкарсемпе мускавсем те пирĕн, хресченсен ал-урине сăнчăрларăр, пуçа майкăчларăр, куçа хупларăр-тăк, хĕсметлĕ хушу-сĕнӳпе епле пурăнмаллаха? Ярт-ярт утма та, кăкăр тулли ассăн сывлама та çук. Ĕнесысна фермисене, механизаторсен паркне, яп-хула çурчĕсене, яла çыхăнтарнă асфальт çула тата ыттине те эпĕ партизанла хăтланса, финанс дисциплинине пăсса, кĕске вăхăтрах тутарма пултартăм. Укçи-тенки мĕн чухлĕ пĕтнине эпир хамăр кăна пĕлетпĕр. Çавăнти тăкаксене пула пирĕн кăтартусем анарах пачĕç. Анчах ку – вăхăтлăха кăна. Сывлăш çавăрса ятăмăр ĕнтĕ. Тĕп наступление хатĕрленсе çитнĕ. «Красный партизан» чухăнлăха пусарса çĕнтерӳ ялавĕ килсе çакатех райком çурчĕ çине. «Партизансен» сăмахĕ çирĕп, Николай Григорьевич.

– Пирĕн те сăмах çирĕп, пирус тĕтĕмĕпе явакласа илет ăна пӳлĕм хуçи. – Райком бюровĕ сире председательтен хăтарма йышăнчĕ, парти обкомĕ «добро» пачĕ. Сирĕн, обком номенклатуринчи пуçлăхăн, КПССăн демократи тĕп йĕркине пăхăнмаллах. Ыранах пуху пухăр. Пыратпăр.

Пуçлăхра ĕçлесе туптаннă, шывра та путман, вутра та çунман Гурий Андреевич хăраса ӳкмест. Мĕншĕн чĕтремелле ун? Ушкăнлă хуçалăх кĕсйине кĕмен, намăс-симĕсшĕн пите кĕççе çĕлес çук, хайшĕн мар, ял çыннисен ырлăхĕшĕн пытанса çӳренĕ саккунăн вăрттăн сукмакĕсемпе. Пулма пултарнă хирĕçесси-тавлашасси те. Пушăсăр кĕтĕве те йĕркеллĕ тытаймастăн та...

Пучинкене çитиччен Андреевăн тăнлă кунтăкěнче ылтăн пěрчисем пěр кěтессе пухăнаççě...

Кăрлачăн сивě каçне тулли уйăх янкăр çутатать. Культура çуртěнче те çап-çутă. Малти ретсенче – вěр çěнě хитре ăшă тутăр çыхнă хěрарăмсемпе мулкач тирěнчен çěлетнě мутăллă калпак тăхăннă арçынсем, председатель парнишěн мăнкăмăлланса, хăйсен «партизан камантирне» çăвар карсах итлеççě. Отчет тени вěçленет те... Суйлав черечě умěн Лермонтов лăпкă залра çил-тăман кăларма хăтланать. Пуçěсене çěнě тутăр-калпакпа капăрлатнă-çавăрнă хресченсем ура çине кашăлл тăраççě те:

– Пире Гурий Андрейчсăр пуçне урăх никам та кирлě мар! – тесе пěр саслăн кăшкăраççě.

Отчетпа суйлав пухăвě вěçленнě хыççăн пуçлăхсем хăйсен вăрттăн пěчěк пухăвне уçаççě.

– Пултаратăр, Гурий Андреевич, – черкке çěклесе ăшшăн саламлать çěнтерÿçе район пуçлăхě. – партизанла ěçлесех малашне те çирěп тытса пырăр «Красный партизан» тилхепине, йěпреçсен ятне чаплантарăр. Хăвăртан вăйли тупăниччен ăна никам аллине те ан парăр. Паян сире «партизан генералě» ятне тивěçлипех халăх пачě. Ăнăçушăн.

*12.01.2006 ç.*

## Аптрасан та хашкаман

Шереметьев вăрмана темле те, темпе те кайнă. Вăрманпромхозăн тěп инженерěнче ěçленě чухне Николай Захарович Антонов ăна тăрантас ямшăкěнче те лартса çÿренě. Ăслă-пуçлă директортан вăл хуçалла çул уçма, сулнăк-лачакаран сыввăн та типпěн çăлăнса тухма вěренсе юлнă.

Антонова Чăваш вăрманěн тÿпинелле улăхтарнă хыççăн хăйне пуçлăх кÿмине кěртсе лартсан, Анатолий Степановичăн та кăштах уллутланса пăхас шухăш выляма пуçланă пуçěнче. Пěррехинче, КПСС парткомěн секретарě Всеволод Андреевич Алексеев пропагандист дублерěсем вăрманпромхозра епле пысăк усă пани çинчен районта шăв-шав çěклесен, директор пěр шухăша çирěп тěвěлет: мана та вěт дублер пăсмасть – икě ямшăкпа çÿреме шанчăклăрах.

Акă хайхискерсем пěррехинче ирех çула тухаççě. Вăрçă вăхăтěнчи «куб лаши» пек вăйлă ăйăр кÿлнě тăрантаспа. Хуçа

хыҫалта. Ямшӑк ларкӑчӗнче ҫаварӗсене вӑрӑм пирус хыпнӑ партком секретарӗ Алексеев тата профком председателӗ Константин Иванович Таврин тӑвалла хӑпаракан пӑравус пек мӑкӑрлантарса пыраҫҫӗ. Вӑрман касакансемпе хул-ҫурӑма ҫемҫетнӗ, юмахласа чӗлхе-ҫӑвара якатнӑ, хурӑн шывӗпе ӑша кантарнӑ хыҫҫӑн, вӑрманпромхоз экипажӗ Хӗр шывӗ енчен каялла таврӑнать. Ямшӑксенчен тахӑшӗ, те настоящейӗ, те дублерӗ, ӑйӑра купарчаран хӑва хуллипе ҫат! тутарать те, январ тапса сикет, тӑрантаса икӗ тунката хушшине хӗстерет те лартать, турта кучӗсене тӑпӑлтарса, хӑйӑрлӑ ҫулпа кӗҫене-кӗҫене вӗҫтерет.

Анатолий Степанович тарӑхнипе ямшӑксене вӑрманҫӑсен ҫивӗч чӗлхипех ҫулласа илет те ҫав, анчах... мӗн тӑвӑн, урхамах йывӑҫсем хушшинче курӑнми пулнӑ ӗнтӗ.

Мӗнле ҫитмелле Йӗпреҫе? Вӑт шеремет?

Шереметьевӑн «сылтӑмпа сулахай алли» те хӑйӗнчен пӗртте кая мар тавҫӑруллӑ-ҫке. Вӑрмана пӑчкӑ-пуртӑсӑр тухма манман иккен хальхинче те. Костя Таврин икӗ хурамана лачлаттарать та пуртӑпа, Всеволод Алексеев аслӑ коммунист кӑтартӑвӗпе, мӑшӑр турта майлаштарса та хурать.

Чукун ҫул станцийӗ патнелле акӑ вӑрманпромхоз пуҫӗ ҫывхарать: икӗ пӑравус туртакан тӑрантас ҫинче Шереметьев хӑва хуллине вылятса улпутла ларса пырать. Улатӑралла хашлаттарса хӑпаракан пӑравус вӗсене вӑрӑммӑн кӑшкӑртса саламлать.

## Графпа улпут

Вӑрманпромхоз директорӗн Шереметьевӑн ...-мӗш пилӗк ҫуллӑх плана виҫӗ ҫулта пурнӑҫламалла. Ҫавӑн пек сӑмах панӑ. Пурнӑҫламасан, шупашкарсем юман тункати ҫине хурса ҫӑмарта касаҫҫӗ. Вӑл тӗп лесничие чӗнтерет.

– Ӳссе ҫитнӗ йывӑҫ юлмарӗ. Йӗпреҫ тавралла та ҫырма таврашӗнче кӑна, – ӑнлантарать Смирнов.

– Патшалӑх планӗ – саккун. Ҫавӑнпа пӗр йывӑҫ юлмиччен касатпӑр! – хаярланса пырать аслӑ пуҫлӑх.

Ураран кассан та урӑх пӗр делянка та уйӑрса памастӑп. Ҫут ҫанталӑка сыхласси ҫинчен шухӑшламалла. Пулас ӑрусем валли...

– Ӑрусем валли тата ӳсет. Пилӗк ҫуллӑх ҫӗр ҫул кӗтмест.

– Вӗлереп тесен те...

– Ах, эсир патшалӑх планне ҫунтаратӑр? Саккуна хирӗҫ?!

– Саккуна мар, эпӗ – сире хирӗҫ.

– Кам вара эсир, мана хирĕçлекен?

– Вăрман улпучĕ. Вăрман хуçи. Вăрман ӳстерсе йĕркелесе тăракан, Вăрман саккунне – пурнăç саккунне пурнăçлакан.

– А эпĕ кам тата? Кама пăхăнатăр эсир?

– Эсир-и? Эсир – директор. Эпĕ сире пăхăнатăп.

– Тоттă çав. Ман хушамат кама та пулин аса илтернине чухлатăр-и?

– Асилтĕм. Ĕлĕк-авалхи графсене...

– Апла-тăк, Шереметьев граф хушать сире, улпута, пилĕк çуллăха икĕ çул маларах тултармалăх вăрман тупса пама. Тата çакна та систересшĕн: министр иксĕмĕре Шупашкара чĕнет.

– Мĕн пирки? – чĕтреме ерет Смирнов.

– Эсир министерствăна чапа кăларттарас мар тесе ура хурса пынăшăн хыр хăййи кăшлаттарма. Шухăшлас пулать малашлăх пирки те, ачамккă.

– Ураран та кастармастăп, вĕлерме те памастăп, вăрманне касма йăлтах ирĕк паратăп. Тункатисене çеç ан кăклăр. Тунката улпутĕнче те пулин сыхланса юласчĕ, – йăлăнать Вячеслав Иванович.

– Граф хушнине итлемесен мĕн пулса тухассине ăнлантăр-и халь?

– Ăнлантăм.

– Мĕн?

– Крах.

## Чĕç хӳшши те кирлĕ

Аслă хуçа Лермонтов парти райкомĕн бюро ĕçне пĕр тăхтавсăр виç-тăвата сехете е ытлараха та тăсма юрататчĕ. Райĕçтăвком пуçлăхĕпе Алексей Турхановпа иккĕшĕ, чăтаймасăр, лару вăхăтĕнчех пирус мăкăрлантарса яратчĕç. Райком секретарĕ Башкирова пĕррехинче сиксе тăчĕ те, сĕнӳ пачĕ:

– Николай Григорьевич, чĕлĕм пӳлĕмĕнче чĕç хӳшши те кирлĕ тесе йышăнса хăварар-и?

Урăх ыйтупа пуçне минретнĕ пĕрремĕш секретарь Христина Сергеевна мĕн каланине тăнласах юлаймарĕ пулас, çапах, хăйĕн пулăшаканĕ енне шĕвĕр пӳрнине тĕллерĕ те:

– Константин Дмитриевич, хаклă сĕнĕве çырса хурăр, – терĕ. – Кам та кам çак сĕнӳпе килĕшес тет, çавсене алă çĕклеме ыйтатăп.

Чăтăмсăррăн йăшăлтатса ларакан Башкирова пĕç хушшинчен аллине кăларчĕ те ялт! çĕклерĕ, ыттисем ахăлтатса кулса ячĕç.

## Пĕр шăтăка чикмеççĕ

– Сан пек чуна парса ĕçлекен чĕрепе парăннă çын хам çумра ку таранччен курмарăм, – Михалике сарлака çурăмĕнчен лăпкать район администрацийĕн пуçлăхĕ Яковлев.

– Эпĕ те хăйĕн мĕнпур ĕçне ман çине шанса тиекен ăслă пуçлăх хам ĕмĕрте тĕл пулманччĕ. Тавах сире, мана шаннăшăн. Мĕн виличченех çак шăтăкра пĕрле чакаланса пурăнасчĕ, – шăмă хуçасла ыталать уласштарма çук çумĕ хуçине.

– Вилсен?..

– Вилсен пире, хисеплĕ Геннадий Романович, – савăннипе чĕвен тăрать Вячеслав Людвигович, – шел те, пĕр шăтăка чикмеççĕ çав... Тавах Турра.

## Чи пуянни

Унта та кунта пуçлăхра чылай ăнăçлă тăрăшнă Гордеев, хăй суйлавра район тилхепине ярса илейменшĕн кулянсах, чире кайман. Хăйне çĕнтернĕ ялташĕ çӳлти пӳлĕме чĕнсен, вăл унта хавасланах, пулькка пек вĕçтерсе хăпарнă.

– Сан саламна, йышăнса, чĕре çумне хуратăп, Василий Константинович, – лăплантарасла, тимешле ăшшăн калаçнă Яковлев. – Пĕртте кулянма кирлĕ мар, сана эпĕ хамăннинчен те пысăкрах, сумлăрах вырăн парасшăн.

– Геннадий Романович, мĕн, эсир масар пуçне улăштарасшăн мар пуль те?.. – шӳтлеме пăхнă Гордеев.

– Унта пирĕн администраци влаçĕ çитмест. Халех васкар мар-ха революци тума. Итле, малашне эсĕ район çут çанталăкĕпе камантлама пуçлăн. Эпĕ – çынсемпе, халăхпа... Эсĕ...

– Эпĕ – тăрисемпе-ăсансемпе, кашкăрсемпе-упасемпе, калтасемпе-çĕленсемпе... Çапла-и?

– Вăл çеç те мар-ха, уйĕ, вăрманĕ, кӳлли, юханшывĕ – пурте сан аллунта пулать.

– Пĕлĕт те-и?

– Хамăр тавралăхри пĕлĕт те, сывлăшĕ те – пĕтĕмпех сан. Сыхла, савăнтар пире – ĕç чурисене. Паянтан эсĕ – райри патша.

Гордеев, урама тухсан, аллисемпе хăлаçланса сывлăша çавăрса илнĕ те, ассăн сывласа янă:

– Чăн та, районта чи асли, чи пуянни эпех пулас.

## Пĕлсе лармалла

Район экономикине ҫӳлелле мекеҫлентерсе ывăннă Брагин машинăпа техника станцине сулланса ҫитет.

– Пантелеймон Михайлович, – пуҫлăх пӳлĕмне кĕрсен, ӳкĕтлесех ыйтать вăл. – Тĕп инженер та пултăм, сирĕн пукану ҫинче те ларса пăхрăм, район экономикине шăши ҫине капан лартнă пек, ман ҫине каплантарса хучĕҫ те... Уф! Мастерскойра гайка пăрмасăр ман пурпĕрех чун канмасть.

– Ман та эс кунтан кайнăранпах чун канмáсть ҫав, Вадим Иванович, – тет хăйĕн ăслă вĕренекенне Ермошкин, – сан пуҫунти пĕр гайкине вăхăтра пăрса хытарайманшăн. Укҫа-тенкĕ шутласси вăл тимĕр-тăмăр шăкăртаттарасси мар пуль ҫав. Сĕннĕ пукан ҫине пăхса, пĕлсе лармалла.

## Саваласан-саваласан...

Ай пултаратчĕ те тултаратчĕ ĕҫ планне тахҫан авалах та мар хамăр ен тутарĕ Расик Садыкович Алимов Пăвара та, Йĕпреҫре те. Вăл ăҫта – ҫавăнта туслă шăв-шав, тулăх пурнăҫ юрри.

Ҫапах та... Пуҫлăхсен кӳминчи пĕр чăваш тавҫăруллă та вăр-вар, мал ĕмĕт-шухăшлă та чăл-чăл тутар хыҫҫăн саккине пĕрре савалать, виҫҫĕ, виҫҫĕр вăтăр виҫҫĕ... Пĕрмай саваланипе сакки ҫӳхелсе лупашкаланса юлать те, варринчен шарт! хуҫăлать, пуҫлăх пуҫне ик енчен шап! хупласа хурать. Хăлхасăр юлнă пуҫлăхăн куҫĕ ялл! уҫăлса кайсан, пăхать те... Чăваш сак саваланă сава турпассине те ылтăна куҫарнă тутар ҫур Йĕпреҫ ҫурт купаласа лартнă, ĕҫ кĕвви кĕрлеттерме пуҫланă, суту-илӳ вăййи ашкăнтарса янă.

Ларать халĕ чăваш-пуҫлăх хуҫăлнă пурнăҫ сакки ҫинче тутар-ăстаҫа кĕвĕҫсе. Тутар сакки ҫине саваламасăр ан лар, тенĕ тет те ĕлĕк-авал, анчах паянхи пурнăҫра тутар ларнă сак ҫине те тутарпа ытакланса ларма чармасть. Алимов вара чăвашпа та, ирҫепе те, вырăспа та, такампа та телей юмаххи ҫапма хатĕр.

## Купарча конкурсĕ

Район канашне ертсе пыракан Каншел чĕппи пĕчĕк Панька ачаранах шыв-шура юратнă, хăйĕн ҫывăх тусĕсемпе Тилĕсен Кинатипе (Геннадий Айхипе), Ваҫĕлисен Элекҫипе (театр режиссуринче Раҫҫей хисеплĕ ятне кăкăр кĕсйи-

не чикме пултарнӑ Алексей Васильевпа), Карачӑм Ваҫилипе (Чайковскин «Пӗчӗк акӑшсен ташши» балетне Патӑрьел таврашӗнче курма пултараймасӑрах «Пӗчӗк акӑшсен ташши» калав ҫырса чӑваш литературинче паллӑ йӗр хӑварнӑ Ваҫлей Игнатьев писательпе) тата ҫав Пӑла генийӗн шаймӑклӑх вӑхӑтӗнчи чун ҫунтармӑшӗпе Ева Лисинапа ҫара кутӑн шыва кӗнине ӗмӗрне те асран яман. Ачалӑх романтики хастарланса пыракан йӗкӗте анлӑ юхан шыв, тинӗс, укиян еннелле туртнӑ. Майӗ пур чухне вара вӑл ытларах кӑнтӑралла тапнӑ. Унта, хӗртекен хӑйӑр, вак чул ҫинче, тӗнче ҫынни йӑшӑлтатнӑ, хӗртӗннӗ, хӑйӗн ӳт-пӳ илемӗпе нӗрсӗрлӗхне хӗвел питтинче вӑтанмасӑрах йӑлкӑштарнӑ. Чуна килентермелӗх «чӗр тавар» во! мӗн чухлӗ. Таврара хисеп хумӗ сарнӑ, мӑнланнӑ Пантелеймон Михайлович Ермошкин анатоми предмечӗпе те курорт экзаменне чи лайӑх паллӑпа тытма вӗренсе ҫитнӗччӗ ӗнтӗ. Ялан ҫӗннине, чаплине, илемлине шыракан чӑваш арӗ, аякри тӗлӗнтермӗшпе чунне хӗмлентерсе аташтарса ярсан, тӑнлӑ пуҫӗпе Йӗпреҫре те мӗн те пулин усӑллӑ ӗҫ тунӑ-тунах. Йӗпреҫ поселокӗ кӑна мар, пӗтӗм Йӗпреҫ халӑхӗ те ҫамрӑкланса, хӗрсе тӑнӑ вӑл района ертсе пынӑ ҫулсенче. Пуҫлӑх лаҫҫинче вӑл хӑйӗн пулӑшаканӗсене те служба сунталӗ ҫинче сивӗнме памасӑр туптаса тӑнӑ.

Акӑ, пӗррехинче... Йӗпреҫ райпуҫлӑхӗсен улӑштарма май ҫук ӗмӗрхи ҫуммийӗсем хуҫи Хура тинӗс хӗрринчен хуралса килнӗ ҫӗре курӑмлӑ ӗҫ тума палӑртаҫҫӗ. Кӗҫех Водокачка пӗви таврашӗнче шӑв-шав пуҫланать. Чӑваш таврашӗнче ҫук пляж тума пултарнӑшӑн чалт сиксе Йӗпреҫ маччине шӑтарнӑскерсем районта илем конкурсӗ ирттерме йышӑнаҫҫӗ.

Ермошкин курортран таврӑннӑ хыҫҫӑнхи канмалли кун Водокачка пӗви, авалхи пӑравуссене шыв уҫласа тӑнӑ чухнехи пекех, хумлӑн-хумлӑн сывласа ярать. Пляжра улӑх ҫаранӗ пек пин-пин тӗспе йӑлкӑшакан Йӗпреҫ чечекӗсене пӑхса ҫаврӑннӑ май, кӑнтӑр туйӑмӗнчен тасалса пӗтеймен Пантелей патша тарҫисен хӑлхинчен пӑшӑлтатать:

– Хитре купарча хыҫҫӑн ӑнтӑлса ҫӳремӗпӗр тек таҫти ҫӑва патне ҫитиччен. Малашне хамӑрӑн илемпе тӗлӗнтерӗпӗр тӗнчене. Тавах сире купарча конкурсӗ те ирттерме пултарнӑшӑн. Ҫултапӑк ӗҫне хакланӑ чухне чи пысӑк преми лекет.

*3.09.06 ҫ.*



Район администрацийĕн хуçи патне пăхăнаканĕ хашкаса чупса кĕрет.

– Хисеплĕ Геннадий Романович, мĕн тумалла?

– Мĕн, мĕн? Пушар мар пуль те?!

– Çук-ха, пушар планне республикăра тахçанах çĕр те пĕр тулли те саккăр вуннăмĕш процент чухлĕ пурнăçланă. Уншăн Шупашкартан преми панине манса кайрăр-им?

– Манман, пушар сӳнтермелли преми машини çур çул ĕççĕр ларни тата ăна хуçалăх расчечĕ çине куçармалли çинчен иртнĕ эрнере кăна хушу кăлартăмăр вĕт. Сана, пултарулăскерне, ахальтен мар аслă пуçлăхсене пулăшма илтĕмĕр. Тулкки пур. Пĕлес килет, мĕн амакĕ сиксе тухнă-ха тата унта? Кумпульшевиксем каллех пăлхав çĕклемен пуль те? Е эсĕ вĕсене хăв пулăшса пыратăн-и?

– Уншăн хуйхăрса пуçна ан çĕмĕрĕр. Чăваш Тимеш пуçĕ район пуçĕнче те кирлĕ-ха. Хамăрăн шанчăклă камантă урăх пуç шырамасть. Компарти тенĕрен, вăл тахçанах сысна комплексĕн вăлашкине путнă. Мускав артисчĕсем вăлашкине хăйсемех çап-çутă пуличчен тасатнă, тĕпĕнче юлнă ылтăнне те пĕрчĕн-пĕрчĕн çулласа илнĕ.

– Урăх мĕнле архивашнăй кисренӳ пулма пултарать-ха манăн шанчăклă Йĕпреç патшалăхĕнче? Çӳлтен тапăнасран Хурамал чиркĕвĕ ĕмĕрĕпе сыхланă. Ăна пулăшма Йĕпреç ялĕнче тепĕр чиркӳ уçрăмăр. Пĕр пачăшкăн, ют планетăсенчен аçтаха тарелкисем пуç тăрне татăлса анасран çĕрĕн-кунĕн çăлтăр тĕнчине сăнанăран, мăй остеохондрозĕ пуçланнă тет. Шупашкарти чаплă клиникăра пĕрле сывалтăмăр. Мана вăл ют япала чăваш çĕрĕ çине нихçан та ӳкмест тесе кăкăрĕ çинче пӳрнисемпе тем выляткаласах шантарчĕ. Ăна та ĕненмесен?..

Пăхăнаканĕ, чĕтреме ернĕ кĕлеткине хытарсах, хуçаран хăра-хăрах, тытăнчăклăн персе ярать:

– Пук... ан?..

– Ан ухмахлан-ха эс, çын умĕнчех пуклаттарса ларакан марччĕ-çке... Ан, тенĕрен, анма вара хам пукан çинчен виличчен те анма шутламастăп-ха. Мана кунтах райри пек лайăх. Мана... темле арифметика задачи шутлаттарасшăн пуль-ха эс. Е хамăн шанчăклă хаспатинсем ман пукан айне вăрттăн мина çыпăçтарса хунă? – пукан айне йăпăр-япăр хыпашласа пăхать пўлĕм хуçи.

– Эй! – аллине сулать тарçи. — Уншăн хăрасах лармăпăр-ха.

Яковлев иккĕленўллĕн пуçне пăркалать:

– Йăнăшатăн кун пирки, вĕсем ман хыççăн та çак çуртрах сыхланса юлĕç-ха, тата темиçе пуçлăх тарçи те пулĕç. Мĕн кулянас-ха вĕсем хам алра чухне? Мĕн, вĕсен пуçне алăк хушшине хĕстерме вăй çитмест-им ман?

– Çитет, çитет. Район историйĕнче те пулман çак пукан çинче сирĕн пек нумай çул хушши ларни. Чемпион.

– Тот-тă, çавăнпа та камран хăрамалла-ха ман хам алăра район тилхепи чухне? Хамăр районта пурăнакан тутар-ирçине те тыттармарăмăр ăна. Вĕсен вут-çиçĕмлĕ тапăнăвне те пĕрле пит якши сирсе ятăмăр.

– Вăл та, ку та мар тĕлĕнмелли, Геннадий Романович. Акă мĕн хăрушши: администраци çурчĕ умне «партизансем» пĕлĕтрен десант антарнă.

– «Партизансем»?! – ăсне кăларса тартасран хăранă пек ывăçласа илет тăнлă пуçне Геннадий Романович. – Патюшки!

– Çапла, хамăрăн «хĕрлĕ партизансемех» вăрттăн операци пуçарнă пире хирĕç, – алăк аннелле хăравçăллăн пăхса илет пăхăнаканĕ. – Нихçан та никама та шанмалли çук. Мĕнле çывăх çынла калаçатчĕ вăл «Хĕрлĕ партизан» пуçлăхĕ? Кам шутланă ăна сирĕн ума шăтăк чавса хурать тесе? Чисти тăшманла хăтланаççĕ. Астăватăр-и Рус текен чарусăр Хĕрлĕ площаде самолетпа анса ларнине? Гитлер хăйĕн «Люфтваффе» сывлăш-çар вăйĕпе те Мускава илме пултарайманнине пĕр нимĕç диверсанчĕ Раççейĕн патшине те çĕнтерў камичĕ кăтартрĕ.

– Пулнăччĕ унашкал мыскара.

– Вăт çапла хăтланаççĕ чеереххисем те вăльтвальтереххисем.

– Эсӗ, мӗн, пирӗн Йӗпреҫе те тӑшмансем ҫаварса илнӗ тесшӗн-им? Асӑрханулларах калаҫ. Жучоксем ӗҫлеме пултараҫҫӗ. Пирӗн пӳлӗм вӑрттӑнлӑхне пӗлес текенсем те пур пуль.

– Эх-ха-хай. Сирӗн влаҫ еннелле алӑ тӑсакансем пурри ҫинчен тахҫанах асӑрхаттарасшӑнччӗ те ҫав, «Ларнӑ чух хамӑр влаҫра кӑвар сӳнмӗ-ха лаҫра», тесе шӳтлесе ирттерсе ятӑр та, акӑ халӗ... «Хӗрлӗ партизан» командирӗ Анатолий Иванович Петров... Мотодельтаплан сывлӑш флочӗ ахальтен турӗ тетӗр-и эсир ӑна? Генеральнӑй планпа – малалла пӑхса. Ах чее-ҫке. Авӑ, пирӗн пуҫ тӑрринчех явӑнать. Ҫӗр ҫине анма ҫирӗп те шанчӑклӑ лапам тупса хатӗрлемешкӗн радиограмма пачӗ. Ҫавна пӗлтерме чупса килтӗм те.

Усал хыпар илтнипе шурса кайнӑ Яковлев кутран ҫӗлен сӑхнӑ пек чалт! сиксе тӑрать, сылтӑм аллипе сывлӑша хӗҫле касса татать:

– Ҫитет лӗпӗртетсе тӑма! Тревога! Пӗрремӗш нумерлӗ хатӗрленӳ! «Партизансен» авиацине ҫаварса илмелле те, дельтапланран никама та ҫӗр ҫине пустармалла мар. Ларччӑр шӑл шаккаса суйлавччен.

* * *

Район патшине суйламалли кун Йӗпреҫ тӑрӑхӗнче вӑрман кашлавӗн ҫеммипе шавласа иртнӗ хыҫҫӑн пӑхӑнаканӗ хуҫа патне каллех чӗрине тытса кӗрет.

– Хис... Ҫук-ха, кӑххӑм-кӑххӑм! Геннадий Романч, хурлӑхлӑ хыпар: суйлавра «Хӗрлӗ партизан» ҫӗнтернӗ. Район кӗпӗрнаттӑрӗ-генералӗ валли ҫемҫе те ӑшӑ пукан кирлӗ.

Кинати Пӗрремӗшӗ урамалла каснӑ чӳрече еннелле ик куҫне те ывӑтса Патша керменӗ умӗнчи ик ҫунатлӑ дельтаплан ҫинче мӑнаҫлӑн пӑхкаласа ларакан ҫӗнтерӳҫе Петров «партизана» асӑрхать. Хӑйӗн кучӗ айӗнчен самантрах вӗҫсе ҫухалнӑ ҫемҫе ӑшӑ пуканшӑн кулянать. Йӗпреҫ ҫӗршывӗн Анатули Пӗрремӗшне анлӑ пӳлӗм хуҫи, ӑнӑҫу сунса, сарлака сӗтел хушшинчи яваплӑ вырӑнне парӑннӑ чун-хавалӗпе парса хӑварать.

*3.09.06 ҫ.*

## ĔÇРИ ТУС-ЮЛТАША ЕПЛЕ-ХА МАНĂН

Чăваш АССР Журналисчĕсен союзĕн правленийĕ СССР журналисчĕсен Тĕп çурчĕн (ЦДЖ) пропаганда пайĕпе пĕрле хатĕрленĕ план тăрăх (ăна СССР Журналисчĕсен Союзĕн правленийĕ çирĕплетнĕ) республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен яваплă çыннисен пултарулăх семинарĕсене çулсерен Мускавра йĕркелетчĕ. 1979 çулхи кăрлачăн 7-13-мĕш кунĕсенче эпир çавнашкал черетлĕ вĕренӳре-канура хамăра хамăр ăслăлантарса та хавхалантарса пурăнтăмăр тăван çĕршывăн тĕп хулинче. Çавăн чухнехи ушкăн сăнарĕ çак ӳкерчĕкре хăй вăхăчĕн саманчĕпе сыхланса юлнă (сулахайран сылтăмалла): Андрей Михайлов – КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пичет секторĕн пуçлăхĕ, Алексей Белов – «Молодой коммунист», Антип Николаев – ЧАССР Журналисчĕсен союзĕн правленийĕн яваплă секретарĕ, Василий Никитин – Канашри «Коммунизмшăн» хаçат, Николай Кадикин – Тăвайри «Ял ĕçченĕ», Леонид Николаев – Красноармейски районĕнчи «Ял пурнăçĕ», Александр Миллин – Елчĕкри «Колхоз ялавĕ», Аркадий Кустиков – Элĕкри «Ленин çулĕпе», Анна Маркова – Çĕрпӳри «Октябрь çулĕ», Владимир Наумов – Етĕрнери «Ĕç ялавĕ», Куçма Смирнов



– Шăмăршăри «Шăмăршă хыпарĕ», Денис Гордеев – Мур-кашри «Çĕнтерӳ ялавĕ», Никандр Якимов – Комсомольскинчи «Октябрь ялавĕ», Виталий Киданов – Патăрьелĕнчи «Авангард», Михаил Васильев – Вăрнарти «Çĕнтерӳ çулĕ», Ванифатий Андреев – Вăрмарти «Хĕрлĕ ялав», Николай Дубинин – Чăвашрадио комитечĕн пуçлăхĕн çуммийĕ, Владимир Кузьмин – Шупашкарти «Тракторострой», Николай Максимов – Куславккари «Ялав», Иван Ландышев – Хĕрлĕ Чутайри «Колхоз хаçачĕ», Петр Матвеев – Шупашкар районĕнчи «Ленинец».

Кремль стени çумĕнче, Ленин мавзолейĕ умĕнче епле-ха чул кăмăллă та шăн-шăн тăнлă тăмăн! Чĕре те çĕршыв чĕрийĕн таппипе тапать-çке. Хăйсем алă пусса кăларакан редакторсен хаçачĕсен ячĕсем мĕне тăраççĕ: яваплăха ӳстереççĕ. Çапах та...

Хĕрлĕ площадьрен тухсанах вĕсен кăмăл-туйăмĕ ахаль çынланса кунĕленет, чĕлхи-çăварĕ сăнчăртан вĕçерĕнет, кулас та, шӳтлес те килсе каять вара.

Ах, епле манăн-ха пултаруллă ĕçтешсемпе, тус-юлташсемпе пулса иртнĕ камитсене.

### Пушар машинки

Телефонпа калаçса илнĕ хыççăн Николаев пуçлăхне ырă мар хыпар пĕлтерчĕ:

– Журналистсен Тĕп çуртĕнче пушар пулнă.

– Тĕппипех çунса кайман пуль те историне кĕрсе юлнă авалхи чаплă çурт? – куçлăхне виççĕ хывса тăхăннă Крысин. – Вăт инкек. Рак ĕмсе сăра ĕçсе ларма аванччĕ буфетĕнче. Акă мĕн, Антип Николаевич, сӳнтерме пулăшаймарăмăр пулин те... пĕр-пĕр япала илсе юласчĕ. Пушар вăл камшăн хуйхă, камшăн – савăнăç. Пушар хыççăн унашкал çĕрте яланах тем те пĕр списать тăваççĕ. Пичетлемелли машинкăсăр нушаланатпăр, тен... Райхаçат редакторĕсене семинара хăçан илсе каймаллаччĕ-ха сирĕн?

– Çитес эрнере, Павел Афиногенович.

– Ыранах тухса каймалла Мускава. Унсăрăн çывăрса юлатпăр. Цăдăжăн пропаганда пайĕн пуçлăхне Виноградова хăвăртрах шăнкăравлăр та, семинар пирки райкомсене пĕлтерĕр те...

Пушар хăвăртлăхĕпе пухрĕç те пире, редакторсене, чукун рельссен сыпăкĕсене шутласа, тăнкăртаттартăмăр.

Пирĕн Тĕп çурт тĕппипех çунман иккен, хула варринче хăй вырăнĕнчех капăррăн ларать. Ракпа сăра буфечĕ тата

темиҫе пӳлӗм юрӑхсӑра тухнӑ. Крысин шутланӑ пекех, чӑн та юрӑхсӑррипе пӗрле юрӑхли те сахал мар ҫухалчӗ пулас. Виноградов пулӑшнипе Николаев валли те пичетлемелли вӗр ҫӗнӗ машинка пӑсӑлнӑ япаласен шутне кӗнӗ.

Семинартан таврӑннӑ чухне Шупашкара ҫитиччен ҫав машинкӑпа отчет ҫапса пычӗ пирӗн ушкӑн ертӳҫи Павел Афиногенович валли. Ҫапла машинкӑллӑ пулчӗ Союз правленийӗ пуҫлӑхӗн пуҫарулӑхне пула.

Халӗ те Союз правленине кӗрсен сӗтел хушшинче Антип Николаевич пушар машинкипе ӗҫ хучӗсем пичетлесе ларнӑн туйӑнать.



Мускав, Журналистсен Тӗп ҫурчӗ. Сӑнӳкерчӗкре (сулахайран сылтӑмалла): Иван Ландышев – Хӗрлӗ Чутай, Петр Матвеев – Кӳкеҫ, Александр Карлин – Елчӗк, Александр Базанов – Пӑрачкав, Павел Николаев – Вӑрнар, Борис Юдин – Улатӑр, Владимир Кузьмин – Шупашкар, Иван Семенов – Куславкка, Анна Маркова – Ҫӗрпӳ, Михаил Ефимов – Канаш, Андрей Михайлов – КПСС Чӑваш обкомӗн пичет секторӗн пуҫлӑхӗ, Серафим Ефимов – Йӗпреҫ, Антип Николаев – ЧАССР Журналисчӗсен Союзӗн ответлӑ секретарӗ, Ванифатий Андреев – Вӑрмар, Виталий Киданов – Патӑрьел, Иван Прокопьев – Красноармейски, Кронид Прокопьев – Сӗнтӗрвӑрри.

## Ҫӗлӗк-маяк

Мускавра эпир хамӑрӑн пӗчӗк ушкӑна пайланаттӑмӑр: Денис Гордеев, Никандр Якимов, Николай Максимов, Михаил Васильев тата эпӗ. Редакторсен гвардийӗ тесе кулкалатчӗҫ хушӑран пирӗнтен. Пуҫарулӑх, пултарулӑх, савӑклӑх пулнӑ пирӗн хушӑра. Шӑмӑршӑ редакторӗ Куҫма Смирнов пит хисеплетчӗ пире. Пирӗн вара ӑна хушӑран хамӑртан пӑрса хӑварас килетчӗ. Ватӑ енне сулӑн-

наскер вăл хула урамĕсенче яланах пирĕнпе тан ĕлкĕрсе пыраймастчĕ. Эпир вара, кăткă пек халăх хушшинче ку тинех çĕтсе юлчĕха тесе, хамăрăн вăрттăн операцие пуçлатпăр кăна, Смирнов кăштăрт пырса тăрать юнашар. Ахăлтатса кулса яратпăр та хисеплĕ юлташăмăра тулли курка тыттаратпăр.

– Сирĕнпех лайăх мана, ачамсем, пĕртте уйрăлас килмест сирĕнтен. Темле тарсан та... Эпĕ чанккама Никантăрăн пуçĕ çинче сиккелесе пыракан мулкача çивчĕ сăнатăп. Вăл маншăн маяк пек кăтартса малалла чĕнекен паллă вырăнĕнче. Сире тупма шутсăр аван пулăшать. Тавсье! Сывлăхлă пулăр, – тетчĕ вăл кăмăлне çĕклентерсе.

## Уçма пĕлекеншĕн çул – яланах уçă

Муркашра редакторта ĕçленĕ вăхăтра Денис Гордеев автомашина чуптарма кăшт-кашт вĕренкеленĕ пулнă. Чăваш кĕнеке издательствин директорне куçарнă хыççăн вăл мана хăй патне калаçкаласа ларма тесе чĕнчĕ.

– Çиччас Кӳкеçе кайса килетпĕр. Унта ман типографире татса памалли ыйту пур.

– Мĕнпе?

– Хамăрăн лимузинпа. Атя малтан заправкăна кĕрсе тухар.

Юнашарти «Чувашия» хăна çуртĕнчи хупахра çĕр аллăшар янă хыççăн гараж умĕнчи кивĕрех «Москвич» патне пытăмăр.

– Лар кĕрсе! – алăка уçрĕ хĕрӳ юлташăм.

– Шоферĕ ăçта?

– Акă вăл сан çумăнта! – кăкăрне çапса руль умне ларчĕ Гордеев. – Никам та кирлĕ мар пире, хамăрах вĕçетпĕр.

Эпĕ хăра-хăрах ун çумне вырнаçрăм.

Акă мотора тапратса кĕрлеттерсе ячĕ те вăл хăвăртлăх рычакне куçаркаласа илчĕ. Машина сасартăк карт! малалла тапранчĕ, çав самантрах тем пулчĕ, сирена çухăртса ячĕ, ямшăк ун çăварне ниепле  те хуплаймасть, «Каллех замыкани, çухăртăр-и хытăрах, симĕс çул уçса пама пире пушшех лайăх», – тесе алă сулчĕ. Ленин урамне сиксе тухрăмăр та, тăвалла ӳхĕрттерсе хăпаратпăр пысăк хăвăртлăхпа. «02» тата «03» машинисем те хăваласа çитеес çук. Нимле светофор умĕнче те хĕрлĕ тĕсе пăхса тăмастпăр. Пĕтĕм транспорт çул парса аяккалла пăрăнать кăна. Пĕрре чарăнмасăр кĕрлеттерсе çитрĕмĕр Кӳкеçе, пичет çурчĕ умĕнче тин мотор ĕçлеме пăрахрĕ.

– Бензин пĕтрĕ пулас. Хамăн та çăвар типрĕ. Атя тепре заправкăна кайса килер те...

Эпĕ, вирелле тăнă пур-çук çӳçе карттуспа шаккаса пусартăм та, юлташăма тав туса автобус чарăнакан çĕрелле вашлаттартăм.

## Çĕр айĕнчи тĕлпулу

Улатăр районĕнчи «Ленин çулĕ» хаçат редакторĕ Юдин Пăрачкав районĕнчи «Ильич хыпарĕсем» хаçат редакторне Базанова виççĕмĕш çул ĕнтĕ хăнана чĕнет, ăна курасшăн тунсăхласах çитнĕ, анчах лешĕ чикĕ урлă каçса ниепле те кӳрши патне лекеймест. Борис Ивановичăн Александр Ивановичпа чуна уçса калаçмалли пайтах пухăннă.

Телейна пăх та Мускава кай тенĕ пекех вĕсемшĕн те çунатлă сăмах вырăнлă пулса тухать. Акă вĕсем, Шупашкартан пĕлтерсен, хаçат редакторĕсен семинарне иккĕшĕ те икĕ çулпа чуптарчĕç, Мускава çитсен çĕр айне чăмрĕç. Пурте Журналистсен Тĕп çуртне васкаççĕ.

Метро станцийĕн йăлтăркка та илемлĕ ӳкерчĕкĕсене çăвар карса сăнаса утакан Базанов асăрхамасть те, улăп евĕр Юдин çине пăван пек панн! пырса çапăнать. Юлташĕ мрамор урайне ӳкернĕ шлепкине çĕкленĕ май Борис Иванович кӳршин, Александр Ивановичăн чăпар карттусне куçран та аяларах пусса лартать:

– Ну и встреча. Наконец-то состоялась долгожданнная. Привет, дорогой! Смотри в оба, тут брат, не Порецкое, вмиг можно угодить под электричку. Ладно уж, в ЦДЖ поговорим обо всем и о том, как раки зимуют в Суре и буфете Дома журналистов. Ох какой длинный путь у нас с тобой от Порецкого до Алатыря.

## Пулăпа хăналани

Етĕрне редакторĕ Владимир Наумов та ушкăн канăвĕ валли хăналăх апат-çимĕççĕр çула нихçан та тухман. Хальхинче те вăл сĕтел çине пĕр купа типĕтнĕ пулă кăларса хучĕ, кулкаласа, пире активсе пăхма сĕнчĕ:

– Малтан палăртнă пекех, пурне те çитме кирлĕ.

«Атăл шывĕпе» хастарланнăскерсем эпир пурте алăсене унталла тăсрăмăр, пĕрер хĕç пулă çулса илтĕмĕр. Куславкка редакторĕ Николай Максимов çеç, Елчĕк ен пуçтахĕ Александр Миллин икĕ аллине те икшер пулă çавăрса тытнине пула, нимсĕр тăрса юлчĕ. Тусăмпа пирĕн пĕр пулла çурмаран çурса пайлама тиврĕ.

Ĕçтешсене хăналамалли черетлĕ тепĕр тĕлпулу çитсен, Мускавра Халăх çитĕнĕвĕсен куравĕнче шапăлтатса çӳретпĕр. Николай Николаевич, Атăл çыранĕнче пулă тытма вĕреннĕскер, савăнăçлăн пĕлтерчĕ:

– Паян манран тухать.

«Пулă» павильонне кĕпĕрленсе кĕтĕмĕр. Максимова кĕрнеклĕ мăнтăр хĕрарăм ыталаса кĕтсе илчĕ те пире мă-ăнă аквариум еннелле ертсе кайрĕ. Шывра çутă карп шампăлтатса явăнать. Николай Николаевич, куллине çăварĕнчен кăлармасăр, пире тараватлăн сĕнчĕ:

– Иртнинче Владимир Михайлович пире Сăр пуллипе сăйланăччĕ, эпир халĕ сире Атăл пуллипе хăналасшăн. Пирĕн Куславкка районĕнчи «Волга» совхоз пĕве-кӳлĕре карп ĕрчетсе мала тухнă, ВДНХн ылтăн медальне çĕнсе илнĕ. Эсир те, хисеплĕ коллегăсем, шыври ылтăна тытма пултаратăр. Чĕрĕ пулă кашнин валлиех çитет.

Эпир ахăлтатса янипе шыв хумханчĕ, ун çийĕн кулăш киммиишсе кайрĕ.

## Хыткукар Хыткук

Мускава каятпăр. Журналистсен союзĕ йĕркеленĕ вунă кунлăх вĕренĕве – семинарта пĕлӳ, тавра курăм ӳстерме-анлăлатма, канма. Кашни районтанах. Пирĕн пĕр ушкăнĕ Канашра пухăннă. Шупашкар пуйăсĕ çине, ларма вăхăчĕ ытлашширех пулин те, пĕр-пĕрин пушмакĕсене тапта-таптах кĕрсе каятпăр. Проводница пире «сурăхсем» тесе тĕрĕсех каласа хучĕ пулмалла. Ара, купеллĕ вакунра кам йышăнать сан вырăнна?

Яланах çивĕч чĕлхепе палăрнă Аслă Каçал чăвашĕ Тинĕс Асанкас, хăйсен «Октябрь ялавĕпе» варкăштарса, кӳршĕллĕ Елчĕк редакторне Хĕритун Хыткука, ăшалать те ăшалать:

– Таçта çăванаваскать? Черете-мĕне пăхмасăр ĕрĕхсе хăпарса кайрĕ, ухмах. Институтрах тăна илнĕ эс пирĕнне: столовăйра – ура айĕнчеччĕ, гардеробра – тумупа лăшканаттăн, каникулта – автобус патĕнче черетсĕр тĕрткелешеттĕн. Ун чухне студент пулнă темелле, халĕ... Аллăсене хăвалатпăр. Çапах ачалла хăтланатăн, пире намăс кăтартатăн.

Хĕритун Хыткук симĕс шлепкине хывать те, Асанкас сăмахĕнчен пытанса, хăй кăларакан «Колхоз ялавĕпе» питне хуплать, мăкăр-мăкăр тăвать:

– Те вакката тытнă кăна, лăпăртатать. Ни пичу мар эп сан, ни кукку мар.  Хамăнне хам пĕлеп.

– Пĕлен ҫав эс хăвăнне, – чарăнмасть Асанкас. – Пĕлсех пушмаксем ҫийĕн чупан. Кур, мĕн тĕслĕ вĕсем?

– Мускавра атă тасатакан нумай, кĕтсех лараҫҫĕ пуль-ха пире, - кулать Хыткук.

Ĕҫ шалалла кĕрсе кайиччен вĕсене чаратлăр та, япаласене вырнаҫтарса хуратпăр.

Ăсатма тухнă арăмсене алă сулса хул вăйĕ пĕтрĕ ĕнтĕ. Пуйăс тинех тапранчĕ. Пурте лăштах сывласа ятăмăр. Кайсан-кайсан Вăрнара ҫитрĕмĕр, унтан Ҫĕмĕрлерен те иртрĕмĕр. Вакуна хамăр ҫынсем татах та килчĕҫ. Шӳт, кулă, сăмах-юмах... Сисмерĕмĕр те, сĕтел ҫине тахăшин сумкинчен кăкăрне хĕрĕхлетсе ҫыхнă ҫут кĕленче тухса ларчĕ. «Ҫĕнтерӳ ҫулĕпе» ялан малта чупакан Михал Михваҫăн пулчĕ пулас. Ҫавскер пăкă хăлхи тупаймарĕ те, эрех завочĕн рационализаторĕсене ятлама тытăнчĕ.

– Ҫакăнта тимĕр перекетлесе пуяҫҫĕ пуль ĕнтĕ, шереметсем, халăха нуша кăтартаҫҫĕ. Авă, алла кастартăм чакаланса. Мускавран таврăнсанах кайса парап-ха та эрех заводне списать тунă пĕр трактор, – нăч-нăч ĕмет вăл вăталăх пӳрнине.

Ахăра-ахăрах сĕтел ҫине хамăр та туяннă хăлхасăр кĕленчесем, арăмсем парса янă кукăль-мукăльсем кăлара-кăлара хуратпăр. Ĕҫе каймастпăр-ҫке – канма. Ма савăнас мар пĕреххут... Хĕритун Хыткук ҫеҫ, «Колхоз ялавĕпе» витĕннĕ те, курмăш-илтмĕш пулса, вуланҫи туса пырать. Асанкас – эрех ярса парса валеҫекенни. Тултарнă стаканпа чавсинчен кăт тĕртрĕ те вăл ăна, ҫурăкрах сассипе декларĕ:

– Тыт та Хĕритун, ĕҫ те, ан тун...

Пушатнă стакана Хыткук часах Асанкаса тавăрса пачĕ, ĕхлетсе тути-ҫăварне шăлкаларĕ, унтан такамăн тулли автан тукмаккине ҫатăрласа ярса илчĕ. Туххăмра кăшласа, ҫемҫе аша чăмласа ячĕ, тепĕр черете каллех ĕхлетсе ирттерчĕ, ҫăмартине те, ҫуне те, шăрттанне те – пурне те каптăртаттарчĕ.

– Ай, ку тутлă апатпа, аптрамалла, хырăм тирĕ те ырatakан пулчĕ. Паян сирĕннипе хăналантăм ĕнтĕ, ыран... Апачĕ ман та чăматан туллиех-ха, халь ытлашши пулать пуль тетĕп-ҫке, ҫавăнпа кăларас темерĕм. Ҫав кăркка ашне илсе пар-ха, Тинĕс кӳршĕм. Ăна мар, пысăкрах татăкне, – сăмах ҫаптарать Хыткук.

Выҫҫăн ҫунакан алтăр пек куҫне лăплантарас тесе-ши, Асанкас ăна чи мăнтăркка кăркка тукмаккине часрах тыттарать. Алата тутипе сысналла чаплаттарса, шăлĕпе йытăлла шатăртаттарса пĕтĕрекен Хыткук ҫине пăхатăп та шухăшлатăп: «Институтра чухне мĕнле пулнă – ҫаплах юлнă. Кĕлетки ҫеҫ самăрăлнă, куҫĕ пысăкланнă тата. Ĕлĕкех

пирĕн апата юрататчĕ, хăй вара тултармăш тирне те, кушака ҫитерме тесе, яла илсе каятчĕ. Вăт сана Хыткук. Хушаматранах пĕлме пулать ҫынна теҫҫĕ те. Халăхра ахальтенех хыткукартан тухман пуль ку хушамат та. Ай мĕн калăн, кассан та юн тухас ҫук.

Хăлхасăр кĕленчесем, вакун кустăрмисен чĕтревĕпе силленсе, майĕпен пушанчĕҫ пирĕн. «Ленин ҫулĕпе» тӳп-тӳрĕ, типтерлĕ утакан Элĕк ачи Аркаш Кустик та чăтаймарĕ, те юриех, те кирлĕрен, персе ячĕ: «Темскер, ҫитмен пек туйăнать. Урăх никамăн та ҫуккă-и запас? Ҫук пулсан, апла чупам-ха ресторана».

Хаҫатпа хупланнă Хыткук илтмĕше печĕ, эпир укҫа тыттарса янине те «сисмерĕ».

Ҫитменнине ҫитерес текенни часах таврăнчĕ. Эрехпе хутăш сăра та туяннă.

– Вăт мур, ăша хыптарать ку шурри, – илтĕнет «Колхоз ялавĕ» хыҫĕнчен. – Эппин, сирĕн сывлăхшăн, тус-коллегăсем! Икĕ стакан харăсах тултарса ĕҫрĕ те хайхискер, Кустик туянса килнĕ апельсина пикенсех ĕмме пуҫларĕ.

Уҫăлмалла тесе, майĕпен куперен тухрăмăр. Хыткук ҫеҫ, хăрах аллипе хаҫат тытнăскер, тепринпе ҫăварне апельсин татăкки чиксе, выҫлăх кĕвви чаплаттарса юлчĕ.

Мускава ҫитсенех Хĕритун Хыткук ман ҫума ҫыпҫăнчĕ, вакки ҫук тесе, метрона ман укҫапа чăмрĕ. «Ылтăн пучах» ятлă хăна ҫуртне вырнаҫнă чухне каллех уншăн тӳлеме тиврĕ.

Ҫӳретпĕр выставкăра, ҫĕршывăн халăх хуҫалăх ҫитĕнĕвĕсемпе каҫса кайсах паллашатпăр. Курмалли вара! Вăхăтна анчах ан шелле. Вăхăчĕ вара пирĕн пур-ха. Утатпăр павильонран павильона. Ларатпăр анлă пӳлĕмсенче шавласа-хăлаҫланса. Ун пек ҫĕрте пурин те ăслă пулас килет-ҫке. Хĕвел пуҫ тӳпи тăрне хăпарса пĕҫертсен, апатланатпăр. «Пысăк укҫана вакласси, илха мана валли те, кайран унта...» – тет те Хыткук сĕтел хушшине саркаланса кĕрсе ларать. Мороженăй та ĕмес килет унăн, сăра ĕҫес кăмăл та пысăк, киоскран хаҫат-журнал та илсе вуламалла, панорамăллă кино та курмалла, катаччи те чупмалла.. Алăкра чуптунă самантра арăм ҫул ҫине тесе кĕсьене чиксе янă «хĕрлĕ Ильичсем» те алă парсах кĕсьерен тарса пĕтме пуҫларĕҫ. Хыткук ҫаплах анратать: «Ҫав зефира илсе кефирпа ҫиер-ха».

Пирĕн коллега-ачасем, каҫ енне сулăнсан, ҫав тери чаплă гастронома «тĕрĕслес» терĕҫ. Эрех сутакан ҫĕрте, ҫӳлĕксем ҫинчи майрасем ӳкернĕ, иҫĕм ҫырли шереписем ҫыпăҫтарнă, нумай-нумай медаллĕ тĕлĕнмелле кĕленчесене куҫпа суйлатпăр. «Кун пек ăпăр-тапăрпа аппаланмастăп», – терĕ те Хĕритун Хыткук, манран кивҫен укҫа илсе, помидор сĕткенĕ ĕҫме черете тăчĕ.

Эпир вара иҫӗм ҫырли шерпетнех тутанса пӑхас терӗмӗр. Ай, пӗри тепринчен тутлӑ, ӑша кантарать, ӗҫнӗ май арӑмсене аса илтерет. Хыткук та эхлете-эхлетех ӳпӗнтерет эпир тултарса панӑ виноград эрехӗн стаканӗсене. «Кусене-и, – тет упӑте закус-кине – банана – ҫурмалла хуҫса ҫӑварне икӗ аллипе икӗ енчен чыхса тултарнӑ май, киле кайнӑ чухне пурпӗр туянатӑп. Елчӗке банан-апельсинсӑр пырса кӗместӗп».

Сӑмахне кивҫен илмен Асанкас печӗ ячӗ:

– Тыт та Хӗритун, яр та, ан тун. Кӑлар шуррине, ӗҫтер пуррине!

Мускав кӑлпассине хыпнӑ Хыткук сӑмахсӑрах кӗтессисем ҫӗтӗлнӗ чӑматанне уҫрӗ, унтан хутпа чӗркенӗ япала туртса кӑларчӗ. Пирӗн ума пуҫ пӳрне пысӑкӑш эрех кӗленчи тухрӗ выртрӗ. Хӗритун ӑна мӑнкӑмӑллӑн сӗтел варрине шаклаттарса лартрӗ. «Ҫитет сир-ӗнне ӗҫсе, манне, хаяррине, тутанса пӑхар. Закуски те пур. Ӗҫӗр, ҫийӗр, ан вӑтанӑр, коллегӑсем», – терӗ. Сумкинчен, чӑматанӗнчен шӑршланнӑ, пӑнтӑхнӑ кукӑльсем, аш-пӑш тухса выртрӗ. Эпир вара кула-кулах эрехне хӑйнех ӗҫтерсе ятӑмӑр, ҫыртмаллине те тутан-са пӑхмарӑмӑр. Алат юлашкине вӑл, «сыснасем валли кирлӗ пу-лать-ха» тесе, каялла чӑматана чӗркесе хучӗ. Ун хыҫҫӑн ман апель-сина тапӑнчӗ, хуппине каллех чӑматанне чӑмтарчӗ.

Алат ҫинӗ чухне тӗлӗннӗ эпӗ унран. Умри чашӑка, такам тур-тса илесрен сехӗрленнӗн, икӗ аллипе те ҫатӑрласа илет, кашӑк тытсан та сулахай аллине чашӑкран вӗҫертмест. Ахаль те ша-панни евӗр куҫӗ вара ҫамка ҫине тухса ларнӑ пек вӗлтӗр-вӗлтӗр ҫаврӑнать. Апельсина та Хӗритун ҫавӑн майлах выҫҫӑн ҫиет, ҫын-сем сӗтел хушшинчен тухсан та ӗмет, ӗмет тутлӑ, янтӑ ҫимӗҫе.

Киле каяс умӗнхи кун Хыткук пирӗнпе выставкӑна пымарӗ, хула тӑрӑх ҫӳреме юлчӗ. Эпир таврӑннӑ ҫӗре пӳлӗмре япала... «Ӑҫта хурса пӗтерӗ-ши кусене?« – тесе тӗлӗнетпӗр. Хуҫи таҫта кайнӑ, час килмерӗ. Эпир ҫутӑ сӳнтернӗччӗ ӗнтӗ, ҫывӑрса ҫеҫ каяйманччӗ. Хыткук кӑштӑртатса ҫитрӗ, тем мӑшӑлтаткаларӗ-мӑшӑлтаткаларӗ те выртрӗ. Кӑшт вӑхӑт иртсен пӳлӗме апельсин шӑрши сарӑлчӗ. Утиял айӗнчен нӑчлаттарса ӗмнӗ, ват лаша кавленӗ пек сасӑ илтӗ-нет. Вӑрнар Михваҫӗн те, Элӗк Кустикӗн те, ман та ӑмӑртмаллах ыйхӑ вӗҫрӗ. Выртсан-выртсан, чӑтаймарӑм, хуллен ӳсӗртӗм. Сас-са илтнипе, шӑп пулчӗ. Чӳречерен ӳкекен ҫутӑра лайӑххах куратӑп: Хыткук пуҫ ҫинченех витӗннӗ. Кӑшт тӑхтасан юриех харлаттарнӑ пек турӑм. Михалпа Аркаш та хӑрр-хӑрр тутарма пуҫларӗҫ. Утиял айӗнче каллех тем чӗрӗлчӗ, нӑч-нӑч, кӑптӑрт-кӑптӑрт тӑвать., Ир-хине тӑтӑмӑр та, ниҫта пӗр апельсин хуппи курмарӑмӑр.

Мускав мыскарисем вӗҫленчӗҫ. Урӑх кунта пире усрамаҫҫӗ. Килелле – Чӑвашстана ҫул тытрӑмӑр. Эртелпех. Ахлатмалли, охлатмалли, ухлатмалли кашниннех ҫӑвар тулли. Калаҫкаласа пынӑ вӑхӑтра пирӗн сӗтел ҫине Мускавра кӑларнӑ хӑлхаллӑ кӗленчесем тухса ларчӗҫ. Нумай мар ӗнтӗ, кӑшт кӑмӑл уҫмалӑх ҫеҫ. «Колхоз ялавӗ» вырӑнне халӗ Хыткук эп туянса панӑ хуҫалӑх ыйтӑвӗсен кӗнекине вулать, килӗнче нутри ӗрчетме вӗренет. Ҫав хушӑрах стаканне ӳпӗнтерет те ҫӑварне кӑлпасси хыпать, пирӗнтен каҫару пекки ыйтать: «Мӗн тӑвӑн мана, ухмаха, кил валли япала туянсах пур-ҫук укҫана пӗтертӗм. Эсир ӑслӑ та, эрех валли те хӑварнӑ. Юрӗ ӗнтӗ, тепре Мускавра тӗл пулсан манран та тухӗ. Сирӗн сывлӑхшӑн, коллегӑсем!»

Эпӗ ӑна, Тинӗс Асанкас илтмелле, хӑлхинчен пӑшӑлтатса каларӑм: «Тавтапуҫ, кулеккӑ-калека».

Пӗрне-пӗри калаҫса-калаҫтарса ҫӗр турӑмӑр, ҫула май Ҫӗмӗрлере, Вӑрнарта юлташсене антара-антара хӑвартӑмӑр, хамӑрӑн тӑван ҫӗре ҫитнине те сисмерӗмӗр. Канаш пире яланхи пекех канашласа, тӗркӗш кӗтсе илчӗ. Хыткук тамбурта чи мала кайса тӑнӑ. Унӑн ик аллинче икӗ тулли чӑматан, хулпуҫҫисем урлӑ тӑватӑ ҫыхӑ ҫакса янӑ. Хӑйшӗн кирек ӑҫта та пуринчен малтан чупса ҫитме хӑнӑхнӑскер, кунта та кӗптӗр-кӗптӗр шуса анчӗ те вакун картлашки тӑрӑх, йывӑр япалисемпе унталла-кунталла сулӑнчӗ, такам ӑнсӑртран тӗртнипе лак! ларчӗ. Пӗр ҫыххи саланчӗ те, перрон ҫине шапӑрр! юхса тухрӗ апельсин хуппи. Ун ҫине пуснипе темиҫе ҫын пӗр харӑс кӑпӑр-капӑр персе янчӗ. Тӑлпан арҫын ӳкеймесӗр витрине ҫӳлелле ҫӗклерӗ, чалӑштарса ячӗ те Хыткука цемент ӑшне турӗ. Ҫуйхашу, тӗрткелешӳ пуҫланчӗ.

Цемент айӗнчи Хӗритун Хыткук мӑкӑртата-мӑкӑртата упаленет, «Ах, пӗтерчӗҫ, пӗтерчӗҫ, типӗтсен чей ӗҫме лайӑхчӗ» текелесе вараланнӑ апельсин хуппине пуҫтарать.

*1980, 2006 ҫҫ.*

## Хӑна ҫуртӗнчи пушар

Иртнӗ ӗмӗрти пӗр мыскара аса килчӗ. Утмӑлмӗш ҫулсен варринчеччӗ. Элӗкрен Йӗпреҫе куҫарсан мана хаҫат кӑларакансен профсоюз комитетне ертсе пыма суйларӗҫ. Профсоюз обкомӗ тӑн пама пире Шупашкара чӗнчӗ. Хамӑр шайри шаймӑксем чылайӑн пухӑнтӑмӑр. Пирӗн хушӑра Патӑрьел малайӗ Кави Юлдашев йӗплӗ сӑмах перкелесе ҫӳрет.

Лекци-калаҫу тенисем майӗпен хӑлха ҫуммипе шӑхӑрса иртекен пула пуҫларӗҫ. Ҫитменнине тата хамӑрӑн пичет Кашкӑрӗ – вӑрттӑнлӑха сыхлакан комитет пуҫлӑхӗ Никандров ҫитсе яланхи йӑлӑхтармӑш юррине тӑсса ячӗ: «Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӑшмана чарса лартмалли Сӑр ҫыранӗ тӑрӑх чавса хатӗрленӗ сооружени, Йӗпреҫ, Элӗк, Вӑрнар аэродромӗсем...сем... сем ҫинчен район хаҫачӗсенче ҫырма юрамасть...» Ытти тата нумай «вӑрттӑнлӑха» сыхламалли пирки пуҫ ҫӗклемесӗр инструктаж вулать.

Манпа юнашар тӗлӗркелесе ларакан Юлдашев тӑрса анасларӗ те, хулӑнрах сассипе ыйтрӗ:

– Павел Никантӑрч, калӑр-ха тархасшӑн, Патӑрьелӗнчи механизациленӗ арман ҫинчен ҫырма юрать-ши?

Вӑрттӑнлӑхсен Кашкӑрӗ пуҫне хут тӗрки ӑшне чиксенех Кави мана ҫанӑран туртрӗ:

– Атя, чаврӑмӑр-чавтартӑмӑр!

Пирӗн хыҫҫӑн Канашпа Вӑрнар ачисем Василий Яковлевпа Владимир Москвин та уҫҫа сирпӗнсе тухрӗҫ. Виҫҫӗмӗр эпир – хаҫатсен ответлӑ секретарӗсем, Юлдашев – Патӑрьел журналисчӗсен хайлавӗсене тутарла куҫаракан ответлӑ ҫын. «Авангард» икӗ чӗлхепе тухать. Хамӑрӑн хуравлӑха мансах эпир хула тӑрӑх уттартӑмӑр. «Атӑл» ресторан умӗнчен ниепле те куҫ хупса иртеймерӗмӗр. Ҫапах та тӗп хулан тӗп хупахӗнче хуп турттармалла ан пултӑрах тесе Атӑл шывӗпе перекетлӗн кӑмӑла уҫрӑмӑр.

Выртса тӑма пире анчахрах хута янӑ «Чувашия» хӑна ҫуртне вырнаҫтарнӑччӗ. Пӳлӗмсенче вырӑн таврашӗ Китай япалисемпе йӑлкӑшать. Кавир тӑрӑх Кависемпе асӑрханса, ҫемҫен утатпӑр.

– Темскер пыр ярӑнса кайрӗ, – тесе карланкине пӳрнисемпе сӑтӑрса илчӗ Ваҫли Якӑльч. – Ҫанталӑк пӑсӑласса пулас.

Владимир Иванч сӑмси тӑррине шӗвӗр пӳрнипе кӑтӑрт-кӑтӑрт тутарчӗ:

– Те ӗҫке, те вилене ӗнтӗ...

Кави ал чӑматанне уҫрӗ те:

– Аллах пулӑшсан, нимле инкек те пулмасть, шывра та путмастпӑр, вутра та ҫунмастпӑр. Ме, тыт, Улатимӗр, – тесе мана «Столичнӑй» кӗленчине илме хушрӗ.

Сӑмах юххи вӑйланнӑ май алӑсем хамӑр чӑматансем патнелле те туртӑнчӗҫ ҫав...

Яковлевпа Юлдашевӑн тути хӗрринчен пирус татӑлмасть. Кави вырӑн ҫине те пӑравусла мӑкӑрлантарсах сӗвенчӗ.

Тӗлӗкре эпир пурте тамӑк хуранӗ тавра ташлатпӑр пек. Сӑмала хуранӗнче пирӗн вӑрттӑнлӑх сыхлавҫи Никандров вӗтеленет. Шуй-

ттансем вырӑнӗнче хамӑрӑн редакторсем Фомин, Михайлов, Мальцев, Ялгир хуран айне вутӑ хурса лараҫҫӗ. Куҫа тӗтӗм ҫиет. Алӑка шанлаттараҫҫӗ, урапа тапаҫҫӗ, такам «Пушар!» тесе кӑшкӑрать.

– Ҫунатпӑр, ами! Ап-ап! – тесе хыттӑн ҫухӑрса сиксе тӑчӗ те Юлдашев, чӳрече патнелле ыткӑнчӗ.

Тӑваттӑмӗш хутран тӳрех Аллах аллине лекет вӗт! Москвин унӑн ҫунакан тумне графинри шывпа сапса сӳнтересшӗн. Тӳшекӗ мӑкӑрланать, Китай ҫивиттийӗ чӑшлатса ӗнет.

Шалтан питӗрнӗ алӑка уҫса ятӑмӑр та... огнетушитель йӑтнӑ арҫын вирхӗнсе кӗчӗ, кӑпӑкпа сирпӗтме пуҫларӗ. Хӑна ҫурчӗн хуҫисем тата такамсем шавлаҫҫӗ. Акӑ, юман каска пек пӗр ҫын шӑлавар пиҫиххине туртса кӑларчӗ те Кавине ҫурӑм тӑрӑх темиҫе хут туртса ҫапрӗ. Лешӗ пусма хатӗрленнӗ качака путекки пек ҫухӑрать:

– Ах, тархасшӑн ан вӗлер, атте!

Чӑнах ашшех иккен – Патӑрьел районӗн хӑвата ... 

Хуҫасем акт ҫырчӗҫ те Кавие хут тыттарчӗҫ:

– Халех тӳлесен, ниҫта та пӗлтерместпӗр.

– Ман ун чухлӗ укҫа виҫӗ уйӑх ӗҫлесен те пулмасть...

Ашшӗ кӗсйинчен пӗр пачка укҫа сӗтел ҫине кӑларса хурсан ывӑлӗн тӑртаннӑ куҫӗ хура пӗлӗт хыҫӗнчен сиксе тухнӑ хӗвел пек йӑлкӑшса илчӗ.

*2006 ҫ.*

## АРӐМ ЧУПМА ПУҪЛАСАН

ШУПАШКАРТИ “Салма” акционерсен уҫӑ обществинче тӗп бухгалтерта ӗҫлекен Салмин хӗрӗх урлӑ каҫнӑ тӗлелле хӑйӗн кӗлеткине хӑй те паллайми пулса ҫитрӗ. Тӗкӗр ҫине пӑха-пӑха тӗлӗнет. Каччӑ чухне икӗ шитпе унхӑланакан пилӗкӗ ал арманӗ пек сарӑлчӗ. Чӗччисем ывӑҫа кӗми пулчӗҫ. Янах айне ӳссе ларнӑ аш татӑкӗ лӑстӑр-лӑстӑр силленет. Пуҫ тирӗ те хулӑнланчӗ пулас – пысӑкрах шлепке туянса ячӗ. Тумтир пӗчӗкленсе юлнипе аптӑрарӗ Митрухха Митрахванӗ. Арӑмӗ Кӑра Клара ӗҫлекен канфет фабрикине уява каймаллаччӗ – юрӑхлӑ костюм шыраса лавкка-пасар тӑрӑх чупса хӑшкӑлчӗҫ Салминсем.



Тулли хĕрарăм майлăрах пăркаланса утакан Митрахван автобус чарăнакан вырăна çитиччenex пăшти-пăшти сывлакан пулчĕ. Ĕçе çитсен, кунĕпех шăлавар якатса ларать. Кантуртан автобуспа таврăнать те лифтпа улăхса хваттере чăмать, çемçе диван çине майланса выртать, пит-куçне хаçат-журналпа хуплать. Арăмĕ пĕçернĕ апата виççĕ какăриччен çавăрттарнă, полтарашка сăра пушатнă хыççăн вăл çемçе креслă çине месерле кайса ӳкет, телевизорпа каçса кайсах спорт вăййисем курать. “Активлă кану” вуннă-вун пĕрсенче вĕçленет. “Ĕшеннĕ” Митрахван часрах тӳшек çине лаплатать те минтере ыталать. Çывăрмалли пӳлĕме кĕçех пушăлла ĕçлекен трактор моторĕн шавĕ пек сасă тулать.

Пĕр хускалмасăр çывăракан упăшкине вăратмасăрах арăмĕ ирпе анасласа тăрать те спорт тумтирне тăхăнса, урама сиксе тухать. Çывăхри Берендей вăрманĕн сукмакĕ тăрăх вĕтĕ-вĕтĕ юртăпа чупса чунне кантарать. Кашни кун çапла виç-тăватă çухрăм тăвать вăл, ун хыççăн хул-çурăмне çемĕçтерет, лĕп шывра чӳхенет. Утиял айĕнчен вăрттăн сăнаса выртакан упăшки арăмĕн шăратнă евĕр илемлĕ кĕлеткипе киленет.

Арăмĕ ăна хăçантанпа ĕнтĕ пĕрле чупма сĕнет, сывлăхшăн çунакансен ушкăнне чĕнет. Вăл пур кахал чулне ниепле те хăй çинчен сирсе переймест, ĕçе кайса килет те выртать, çиет те выртать. Пĕтĕм утăмне шутласан та унăн кунне пĕр çухрăм тухмасть пуль. Ĕçри ĕçкĕ пĕтерет тата ăна. Салмина пурте хăналасшăн. Ир тăрсан мухмăрпа каккуй чупма унта, пуçа çĕклес килмест. Канăç пурнăç хӳми хыçĕнче хăйне мĕнле чир-чĕр сыхласа тăнине те туймасть-ха Митрухха Митрахванĕ.

Пурăна киле Кăра Клара каçалапа та уçăлса çӳреме, чупма пуçларĕ. Арăмĕ упăшкине хăйпе пĕрле тухма ӳкĕтлесех чĕнчĕха. Митрахван, футбол е хоккей курса выртмалла тесе хăтăлкаласа юлчĕ унран. Уçă кăмăлпа хĕвел пек çиççе кĕрекен арăмне ăшшăн пăхма та самантлăх вăхăт тупăнмарĕ шереметĕн.

Пĕррехинче ун патне тахçанхи тусĕ килсе кĕчĕ, сĕтел çине эрех кĕленчи кăларса лартрĕ. "Хуйха çуса тасатар-ха", – терĕ хăй ассăн сывласа. "Арăму ăçта тата? — ыйтрĕ вăл Митрахванран ларсан-ларсан. "Чупать-ха", – ним пулман пекех хуравларĕ кил хуçи, черккене ÿпĕнтернĕ май. "Хэ-хэ, чупать апла, – чеен кулса ячĕ хăна. – Чупать. Чылайранпа-и?" "Вицĕм çултанпах", – çăварне хăяр татăкĕ хыпрĕ вăл. "Чупкăнран мĕнле таврăнать?" "Ох, курасчĕ сан, унтан ман Клара хĕр чухнехи пек хĕп-хĕрлĕ сăн-питпе, çăмăл шăмшакпа, çунатлă кăмăлпа таврăнать. Ман арăм-çке вăл, о-ох! Ăçта пур-ши унашкал чиперкке? Сан хăвăн та чаплăччĕ-ха арăму. Ма пĕрле илсе килмерĕн? Ман арăм пек чупмасть-и-ха? Чупмасть пулсан, уписательнă чуптар. Кĕлетке илемлĕхне сыхласа хăвармаллах хĕрарăмăн". "Эх, тусăм, – ыталаса илчĕ лешĕ кил хуçине. – Çуккă çав халь ман арăм, çуккă. Вăл та сан арăму пекех чупрĕ-çке. Эпĕ те санашкал çапла диван çинче аяк пĕрчи якатса выртрăм. Вăл, сывлăха çирĕплететĕп тесе, пĕрмаях вĕттĕн юртрĕ. Юртрĕ-юртрĕ те, сукмак çинче тепĕр чупкăн тупрĕ, унпа ыталансах ĕрĕхрĕ, ман енне урăх çаврăнса та пăхмарĕ. Эх, мĕншĕн пĕрле чупмарăм-ши, ма ларса-выртса самăрăлса кайрăм-ши? Мĕн тăвас халь? Чĕре çурăлса тухать. Ăшра вут çунать. Ас ту хăвăн арăму такампа..."

Тусне каласа пĕтерме памарĕ Митрухха Митрахванĕ, пружина тапса янă пек чалт! сиксе тăчĕ те чÿрече патнелле ыткăнчĕ. Урамра йытă уçăлтарма тухнă карчăкпа стариксĕр пуçне никама та курмарĕ вăл.

Тусĕ тухса кайичченех унăн ăш вăрка пуçларĕ. Куçĕ умне тем тĕрлĕ аскăнчăк ÿкерчĕксем туха-туха тăчĕç. Алăкран кĕрсе тăнă Кăра Клара: "Эх, мĕн тери лайăх!" – тесессĕн вăл ун çине сивĕ куçпа пăхса илчĕ те телеэкран еннелле туххăм çаврăнса ларчĕ. Арăмĕ упăшки ăшĕнчи çил-тăвăла пурпĕрех асăрхаймарĕ, юрла-юрла ăшă шывра шăмпăлтатрĕ. Ваннăран тухсан вăл, упăшкине хирĕç ларса, сăмах пуçларĕ: "Эс минтере качча илнĕ-и е мана? Эс хĕрĕхрех ват супнăланасшăн-и е чир-чĕр айне пуласшăн? Эх, çунат пулсассăн халь эпĕ таçта çити вĕçсе каймалла. Чун юрлать, кĕлеткере юн сирпĕнсе тухасла тапать ман. Анчах... сан йÿтеме пуçланă сăну çине пăхатăп та, сан сÿнсе пыракан арçын кĕлетки çумне перĕнетĕп те – йĕрес килсе каять. Тăр-ха, силленсе ил-ха пĕрре, сирсе пăрах юлхав тумтирне. Тух чупма. Хăвала мана..." "Мансăрах кĕтÿпех пуль-ха унта

сан хыççăн юртакан", – шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ упăшки. "Нумай, нумай, тухса кур", – тесе арăмĕ вырăн çине кайса выртрĕ.

Ыйхă пачах килмерĕ çĕрле Митрахванăн, арăмне, тусĕн арăмĕпе танлаштарса, тем тĕрлĕ кĕвĕçсе пĕтерчĕ, вăрттăн еркĕнĕпе ярса илмелли майсене палăрта-палăрта хучĕ. Аптăранă енне, ĕнер Клара сĕнсе панă "Сывлăх" журнала уçкаласа хупкаларĕ. Кĕтмен çĕртен ун умне "Чупни тата арçын проблемисем" ятлă статья тухса тăчĕ. Ăна вăл питĕ тăрăшса вуласа тухрĕ. Унта куçмасăр-хускалмасăр пурăнса шўсе кайни çынна мĕн патне илсе çитернине уçса панă пĕр профессор. Çурăмпа выртакан арăмне ăнсăртран вăратасран шикленсе, Митрахван сывлама та чарăнчĕ тейĕн, ура тупанĕнчи кĕçĕтекен вырăна та хыçмасăрах чăтса ирттерчĕ. Аха, чупу, вĕтĕ юртă мĕнле кăна усă памасть этеме! Юн çаврăнăшне ўстерет, кĕлеткене хытасран çăмăллатма пулăшать. Чупнă вăхăтра хырăмлăх ай парĕсем çемçелсе имленеççĕ... Нервсемпе ăс-тăн çирĕпленеççĕ. Организм ывăнмасăр нумайччен сывă ĕçлет. Кăмăл çирĕплĕхĕ, тимлĕх ўсет. Ăшри хавшаклăх чакать. Лăплантарать, мускулсен вылянчăкне вăйлатать. Çав хушăрах йывăрăша чакарать, кĕлетке илемне сыхласа хăварать. Чĕлĕм туртма, эрех ĕçме пăрахмашкăн та çăмăл-мĕн чупаканăн. "Самăрлакан арçыннăн ар хастарлăхĕ чакса пырать". Çакна вăл темиçе хут вуласа тухрĕ, унтан хăранипе чĕтреве ерчĕ. Авă епле пысăк хăрушлăх умне çитсе тăнă иккен Митрахван! Акă мĕншĕн арăмĕ çурăмпа выртать. Акă мĕншĕн ирĕн-каçăн чупать вăл. Çамрăклăха алăран вĕçертесшĕн мар-ши? Е урăххи... Енчен те вăл, тусĕн арăмĕ пек, такампа чупса кайсан сукмак тăрăх?.. Мĕн тумалла вара?..

Çак шухăшсемпе тĕлĕрсе кайрĕ Митрухха Митрахванĕ. Вăранчĕ те аллине тăсса пăхрĕ, Клара вырăнĕ – пуш-пушах... Васкасах сиксе тăчĕ те вăл спорт тумне шыраса тупрĕ, тумланса усă сывлăша тухрĕ.

Сукмакпа пĕри, тепри чупса иртет. Акă, унăн арăмĕ те çўрен тиха пек çăмăллăн ярăнса пырать. Ун хыçĕнче чăнах та пĕр тăлпан арçын чупать. Митрахван та чăтаймарĕ, вĕтĕ-вĕтĕ юртăпа вĕсем хыççăн лĕпĕстетрĕ. Салмин вĕсене çитетех, паян çитеймесен те, ыран, виçмине... пур пĕр çитет. Ахальтен салма çисе ўснĕ-и? Ахальтен "Салма" кăларакансемпе пĕр хуранта вĕрет-и?

*2006 ç.*

## КАМ ЧЕЕРЕХ?



ХЁЛИП Хёлиппович Шалча çуралнă çĕршывне аякри Кустăрма хулинчен пуйăспа кăлтăртаттарса çитрĕ. Вакунран перрон çине васкамасăр анчĕ те вăл, шлепкине хывса, станцăна саламларĕ:

– Сывă-и, тăван Пăван!

Ăна илтсе-ши, хăрăк тăрăллă хурăн çинче ларакан ула курак хирĕç сасă пачĕ:

– Кра-ак!

Палламалла мар улшăннă урам тăрăх утнă май вăл виçĕ хутлă чул çурт умĕнче чарăнчĕ, алăк тăррине çырса çапнине вуларĕ: “Пăван хулин администрацийĕ”.

Шалча кунта хăйсен ял çынни Иван Селиванович Сурăх хуçа пулса пурăннине пĕлет. Шăна хăваласа ларакан чиперкке майра ăна йышăну пӳлĕмĕнче тытса тăмарĕ, пуçлăх патне тӳрех кĕртсе ячĕ.

– Сывлăх сунатăп, Иван Селиванович! – аллине çӳлелле çĕклесе вăрăм сĕтел патнелле çывхарчĕ Шалча. – Ман телеграммăна илеймен пулас эс. тăванăм, кĕтме никам та тухман.

Куçа-пуçа чарса пăрахнă хула “кĕпĕрнаттăрĕ” сĕтел хушшинчен такăнкаласа тухрĕ, килнĕ çынна алă пачĕ, пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçса, айăпа кĕнĕн, ыйтрĕ:

– Ытла васкаса таврăнтăн-çке “курортран”?

Шалча лăхлатса кулса ячĕ:

– Манран ытла çăмăллăн уйрăлтăн эсĕ, Иван Селиванович, Сăр вăрманĕн хурăнне касса пĕтерейменĕн пулас мансăр. Мана Кустăрмана кустарса янипех пурнăç турăн-и? Акă, хăвăн тахçанхи заместителю Шалча хаспатин çумрах тăрать. Фанера завочĕн коммерци директорĕ. Килĕшӳ тумалли хут-хĕтĕрĕ ак çак чăматанччике аран-аран шăнăçать. Иксĕмĕр каллех малалла пуйма пуçлăпăр. Кустăрма завочĕ “Фин-Герман–Лунтăн” корпорацине кĕнине ан ман. Саншăн эпĕ тĕрме баландине тутанса пăхни вăл маншăн хальхи вăхăтра кăркка тукмаккине туртса ларнă пек çеç пулчĕ. Решетке хыçĕнче те рай – хамăр çынсем. Ай-яй, самаях вăхăт иртрĕ иксĕмĕр пĕрле пулманни... Ăша хыптартăн та. Прокурорпа судйин кĕсйисем

те çурӑлса кайрӗç пуль эс чыхса тултарнӑ туллӑрсемпе... Эп вӗсене хурламастӑп, вӗсен – ӗçӗ çав. Пирӗн вара... малаллах кустармалла хамӑрӑн пуçланӑ ӗçе. Хӑвах пӗлен, халӗ пур хуçа таултавçӑ. Тӗрӗслӗх – йӑлтах хамӑрта. Пурте — хамӑр алра. Сана эпӗ тӗнче шайӗнчи килӗшӳ тума чӗнетӗп. Пӑван хулине те, Чӑваш çӗршывне те пӗлӗте çити вӗçтеретпӗр. Раççей хаçатӗнче вулани аса килчӗ. Шупашкарти пӗр вӗçкӗн пуçлӑх Атӑл хӗрринче чӗç тумалли путвал йышши мӑжӑ пӳлӗмӗсене уявра уçнӑ чухне "ку вӑл тӗнчери пилотла событи" тесе Мускав корреспондентне интервью панӑччӗ. Эпир те çавнашкалах пилотла вӗçме пуçлӑпӑр малашне пилот çӗршывӗнче хамӑрӑн çак килӗшӗве алӑ пуснӑ хыççӑн. Хамӑн гендиректора çиччас пӗлтеретӗп. Вӗçер юрласа: "Первым делом, первым делом, самолеты. А девушки, а девушки, потом".

Тахçан аран-аран хӑпӑннӑ улшуç-заместительне ытахальтен ыталаса илнӗ Сурӑх пуш сӑмахне вӗçтерчӗ:

"А девушки, а девушки, сейчас".

"Девушкӑсем" те çиччасах тупӑнчӗç, майрисем те... "Кӗпӗрнаттӑр кӗпӗрнинче" виçӗ кун асса-канса пурӑннӑ хыççӑн пилотлах вӗçрӗ Шалча тӑван çӗршывӗнче. Сурӑхпа иккӗшӗ Кустӑрмара тӗл пулма тесе калаçса татӑлчӗç. Сурӑха Мӑкла Така канашлӑва чӗннӗччӗ те, Шалчана вокзал çумӗнчен ула курак кӑна ӑсатса ячӗ:

– Крак! Крак! Крак!

– Сывӑ юл, тӑван Пӑван!

Калаçса татӑлнӑ вӑхӑтра Иван Иванович Сурӑх Кустӑрмана кайма пуçтарӑнчӗ. Завод пуçлӑхӗсене парнелеме тесе пӗр мӑн чӗрес пыл, аш-какай комбинатӗнчен шӑрттан шакӑрчисемпе хаклӑ йышши кӑлпасси тата тем тӗрлӗ тутлӑхлӑ апат, шучӗсӗр укçа хатӗрлеттерчӗ. Хайӗн хырӑмне шӑлакан массажисткӑпа, çурӑмне пруньпе хуплакан утаманпа Сурӑх Кустӑрмана кустарса çитрӗ, завод кантурӗнче гендиректорӑн снабжени енӗпе ӗçлекен заместительне (урӑхла ӑна коммерци директорӗ, теççӗ) шырама пуçларӗ. Ун пӳлӗмне тупрӗ те алӑка шаккаса кӗчӗ. Ӑна хирӗç сӗтел хушшинчен тулли кӗлеткеллӗ хӗрарӑм тухрӗ, хӑнана алӑ пачӗ:

– Эсир ман пата-и?

– Çук-ха, элӗ Шалча господина шыратӑп. Коммерци директорӗ кирлӗччӗ те мана. Эсир унӑн секретарӗ пуль-ха. Хӗлип Хӗлиппович хӑй ӑçта-ши?

– Мӗнле Шалча? Мӗнле Хӗлип Хӗлиппович? – тӗлӗнчӗ хӗрарӑм. – Мӗнле ыйтупаччӗ эсир?

– Эпӗ, эпӗ... мӗн... Мана Шалча господин хурӑнпа фанера килӗшӗвӗ çине алӑ пусма чӗннӗччӗ те. Пуласлӑх пирки хытӑ шантарнӑччӗ. Пӗрле ӗç ӑнтарсан, сире те ылтӑн катӑкӗ лекме

пултарать. Мĕн, ăна урăх çĕре, çӳлерех куçарнă-им? Генеральнăй директора лартма хатĕрленеççĕ, тесе калаçатчĕ те...

– Такампа пăтраштаратăр пуль эсир. Нимле Шалча та ĕçлемен ман вырăнта. Коммерци директорĕ вуннăмĕш çул эпĕ пулатăп. Каçарăр, халĕ питĕ васкатăп, аэропорта вăхăтра çитмелле. Мускав урлă Лондона вĕçетĕп. Тепĕр вунă кунран ман пата кĕме пултаратăр. Ун чухне вăрманне те касăпăр, фанерне те çапăпăр.

Пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçса тăрса юлчĕ Сурăх вăрăм коридорта. Ентешĕ хăйне мĕнле чике тăршшĕ лартнине тин тавçăрса илчĕ. Çапах вăл Шалчана курмасăр киле таврăнма шутламарĕ, кадрсен пайĕнче унăн хушаматне шыраттарса тупрĕ-тупрех. Шалча нимле инженер та, директор заместителĕ те мар иккен, тĕрмерен тухнă хыççăн аран-аран хуралçа вырнаçнăскер.

Урама тухсан Сурăх хуйхăрса пыратчĕ. Пуçа çĕклесе пăхрĕ те шартах сикрĕ. Тимĕр карта леш енче, склад çумĕнче, чанккама Шалча тăра парать.

– Салам, ултавçă! – шлепкине хывса сывлăх сунчĕ Сурăх.

– Салам, салам, чунилли! Раççей президенчĕ çумĕнчи академие пĕтернĕ хыççăн, вăрă наукисен докторĕ те пултăн пуль-ха. Ăнать сан пурнăçра. Ырă сунса кĕтсе илетпĕр, — пуçне пĕкрĕ Шалча.

– Хăмла шалчи пекех тăратăн эс хуралта – “коммерческий директор”, – тарăхнипе тутине пăрса илчĕ Сурăх. – Шалча Хĕлипĕн ачи шалчах пулнă-иç?

– Çапла çав, улми йывăççинчен аякках ӳкмест-мĕн, “хаклă тусăм-ентешĕм”. Сурăх Селиванĕн ывăлĕ те сурăхах пулса çитĕннĕ, – лĕх-лĕх кулчĕ Шалча.

*2006 ç.*

## ПАЯНОВ-БАЯНОВ КУМ ОРКЕСТРĔНЧЕ

ХАЛĔ тар кăларса ĕçлес текен сахал. Пурте пуçлăх пулса янтă пурнăçра пуясшăн. Юлашки вăхăтра пирĕн Ӳпре хулинче те ӳпре пекех хунаса кайрĕç вĕсем. Хамăр патра бюрократ çитми пулнăран-ши, таçтан аякран та, ташĕ Мускавран килсе камантлама пуçларĕç пирĕнпе. Акă, “Мунча” ЗАОна ертсе пыма Шупашкартан Никифор Ильич Паянов-Баянов мăкăрлантарса çитрĕ. Акционерсен хупă обществин хаклă хучĕсене çавăрса илнĕскер, вăл чи малтан хăйĕн ĕç укçине пуринчен те ытларах ӳстерме алă çĕклеттерчĕ, унтан ЗАОна пăхăнакан хăна çуртĕнче савăшу номерĕсем уçрĕ.

Пĕррехинче вăл ман пата гаража пырса кĕчĕ. Тĕлĕнтĕм кайрăм, эпĕ ыттисем пек тĕрлĕ пысăк ыйтусем татса паракан начальник те мар-çке, тетĕп ăшăмра.

– Лайăх çынсем эсир, паллашас килет сирĕнпе, – шлепкине хывса алă тăсрĕ мана. – Нумай тăма вăхăт çук. Паян-ыран йыш хутшăнмалла, кумне сирĕн пек ырă çынсене тумасан ара...

Кĕтмен хăна тухса кайсан, ăшра хĕпĕртенĕ пек пултăм: ара, мунча директорĕ кум тăвать мана, бензозаправка шоферне. Килте арăма чаплă хыпар пĕлтерсе савăнтартăм. Ятлă-сумлă çынсемпе кĕрекере саркаланса ларма япăх-им, терĕмĕр те ача парниневаскасах илсе хутăмăр.

Тĕттĕмленерех парсан, Никифор Ильич хыçран такам хăваланă пек хашкаса çитрĕ.

– Кум, Шупашкара кайса килер-и? Çĕнĕ хваттере шăкăр-макăра куçармалла-çке. Кум, çапла-и? Кумма чармасть вăл, эх, эсир, манăн пĕртен-пĕр юратнă кумсем, – шăлать те шăлать майĕпен.

Хирĕçлеме шухăш пур-и пирĕн? Пĕрле пурăнмалла-çке. Çĕр хута тĕп хулана хамăр машинăпа кайса килтĕмĕр.

Тепĕр темиçе кунран каллех вĕçтерсе çитрĕ хайхискер.

– Кум, савнă кум, чи юратнă кум? Сирĕн бензин шыв пек юхать, тархасшăн ман ачана, студента, Мускава çитерсе ярсамăр. Ахаль тумăп. Кĕçех Мускавран чи хитре çĕрлехи лĕпĕш гастроле вĕçсе килмелле. Ман фирмăпа çур çуллăх килĕшӳ тунă. Таврари мул хуçисемпе пуçлăхсенчен чи малтан песплат выляса савăшма пултаратăн çав йыт пуллипе. Кумма сиссе юличчен. Так шту, çула май астаруçă чиперккене лартса килетĕн.

Никифор Ильичăн çапла кашни кун мĕн те пулин тупăнса пырать. Чупатпăр та чупатпăр кумпа. Арăмĕпе пĕчĕк пепкине те ача çуратмалли çуртран хамăнах илсе таврăнма тӳр килчĕ.

Ача ĕçкине каймалли кун бензозаправка станцийĕнчен час таврăнаймарăм. Арăм кĕтсе ывăннă, мăкăртатать: "Сансăр та, мансăр та ача ĕçки пуçламаççĕ ĕнтĕ, намăс куратпăр".

Палăртнă вăхăта çитейменшĕн хам та пăшăрханатăп, анчах хавасланма каяс умĕн арăм кăмăлне хуçма шутламастăп, чĕнместĕп. Эпир кĕнĕ чухне анлă хваттерĕнче шав. Сĕтел таврă çын. Кухньăран Никифор Ильич сиксе тухрĕ.

— Ай-яй, сире, хаклă кумсене, — хăлаçланать хăй. — Ятлас пулать кая юлнăшăн. Арăм, тух-ха кунта, камсем килчĕç — кумсем.

Кĕрекене лекеймерĕмĕр пулин те, иксĕмĕре пĕр пукан çакланчĕ. Арăм вăтанать, "çак килпетлĕ, пысăк çынсем хушшинче мĕнле ĕçсе ларас", тет хăлхаран пăшăлтатса.



– Патша кушакĕ сывă юлнă ятпа! В.ПЕТРОВ

Чăнах та, сĕтел тавра пухăннисем район калăпăшĕпе ирттерекен канашлури пекех. Пĕр енче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ӳпре мэрĕн арăмĕпе питĕ çуллăн, кушак аçилле пăхкаласа пуплет. Курортран тин кăна таврăннă аш-какай комбиначĕн генеральнăй директорĕ “Шанăç” кооператив пуçлăхне Хура тинĕс хĕрринчен илсе килнĕ кулăшсемпе астарса ларать. Райпульницан тĕп тухтăрĕпе Шупашкартан килнĕ тухатмăш çамрăклăха сыхласа хăвармалли меслетсене сӳтсе яваççĕ. Икĕ “ООО” пуçлăхĕ хăймапа сăра ĕçтерсе, райхаçат редакторне ар хастарлăхĕ хушса парасшăн ăмăртмалла вăшталанаççĕ.

Никифор Ильич ача тытнă арăмне сĕтел пуçне хăйпе юнашар лартрĕ те черкке çĕклерĕ:

– Нил Палыч кум, Иван Ильич кум, Тихон Михалч кум, Валерий Артамоныч кум, Анфиса Ильинична кума, Венера Мироновна кума... Вун икĕ кум хыççăн ман ят та тухрĕ.

Унтан кил хуçи ывăлĕн сывлăхĕшĕн шалт ĕçрĕ, пире те çапла тума хушрĕ. Кумсем пĕчĕк ачана черетпе алăра тытса пăхаççĕ, тем тĕрлĕ çулăмлă сăмах калаççĕ.

Хăнасем тĕнчери лару-тăру çине куççанах эпир хуçасем сисиччен тухса шăвăнтăмăр. Алăкра çар комиссарĕпе çапăнтăмăр. Арăмĕ пысăк тĕркепе сăмах чĕнмесĕр пирĕн “кумсем” патне кĕрсе кайрĕ. Хамăр çурт тĕлне çитес чух милици начальникĕпе алă тытмалла пулчĕ.

– Халь вăхăт çук-ха, _васкатать арăмĕ. _ Ыран калаçăр. Никифор Ильич патне чупмалла. Кĕтсе лараççĕ пуль, кум тăватпăр терĕç те, айта-ха часрах, çитсе пичке пуçлар.

Киле кĕрес умĕн банк управляющине тĕл пултăмăр. Кум пулма хыпăнаççĕ кусем те. Вĕсем хыççăнах район прокурорĕ арăмĕпе хирĕлсе вăшлаттарса анса кайрĕ. Иккĕшĕ те сехечĕ-

сем çине пăха-пăха мăкăртатаççĕ: "Куммисемсĕр пичке пуçламасăр тăраççĕ ĕнтĕ..."

Хваттерте сив шыв ĕçсе çемçе пукан çине лартăм. Арăм манран кулать: "Вăт сана кум, юратнă кум, хисеплĕ кум – вун виççĕмĕш кум. Миçен-ши вара эпир? Пурăнма пĕлет Никифор Ильич. Эс мар вăл".

Тепĕр кунне Паянов-Баянов яланхи пекех васкаса çитрĕ, тӳрех машина ыйтрĕ. Министерство семинар ирттерет иккен. Республикăри йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекенсем "Мунча" ЗАО опытне вĕренме Ӳпрене пухăнаççĕ. Хăнасене пăхма, çӳретме манăн та хутшăнмалла, тет.

– Çапли çапла пуль те, – ал шăллине шывпа йĕпетсе пуç тавралла çавăрса çыхрăм. – Чирлерĕм, кум.

– Пулать вĕт ăнăçсăр кун, – кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ "Мунча" пуçлăхĕ. – Ахальтен каламан çав вун виççĕмĕш ăнăçсăррине.

Вара кула-кулах куçран каларăм:

– Тĕрĕс пуль çав. Никифор Ильич, тĕрĕсех. Эпĕ те вун виççĕмĕш кум пултăм та – ăнăçсăр кум... Сирĕн оркестрта сассăм ĕнерӳлĕхне çухатрĕ пулас. Мансăрах кĕрлеттерĕр пурнăç концертне, Паянов-Баянов кумăм.

*2006 ç.*

## ÇĔНЕЛНĔ КĔВĔ

Муза музейне вăрă-хурах тустарни çинчен милици уйрăмне хăрушă хыпар çитнĕ.

Следователь: Гаф-гаф Муçкă композиторăн сăнне кам вăрлама пултарнине чухлама пултаратăр-и эсир? Тĕрĕссине калаймăр-ши?

Музей директорĕ: Тĕп-тĕрĕссине эпĕ юратнă упăшкама та нихçан та каламан та... Ку ыйту пирки... Пирĕн хуралçăн йытти питĕ вăйлă чухлать шăршă-марша. Мăкалнă-шăршланнă мусăкçăсенчен тасатас тенĕ пуль çав чăн-чăн чăваш композиторĕсемпе юрăçисен храмне. Хуралçă йытти те Воробьев — Павлов — Хирбю — Асламас — Лукин кĕввипе карăнтарнă чăваш кавирĕ тăрăх уттарас терĕ пуль итлекенсене.

Следователь: Эсир ăна мĕнле фактсемпе çирĕплетсе пама пултаратăр?

Çав вăхăтрах чăвашран ĕмĕр-ĕмĕр уйрăлман Кампур лĕслеттерсе çитет те, çăварĕнчи Упана пуçлăх умне кăларса пăрахать.

Директор йытта хăйĕн ачине савнă пекех ачашлать:

— Ăслă çав эсĕ, Кампур, пирĕн патра кам пуррипе-çуккине те шăршпах чухлатăн. Юрать, юрать Гаф-гаф Муçкă портречĕ вырăнне Упа утаманăн сăнне çакăпăр. Ăна хăй вырăнĕнчен хăпăтма никам та хăяймĕ.

Илем керменĕ халăх кĕввиллĕ, вăрман шавĕллĕ хавас музыкăпа тулчĕ.

## КИННЕ ТИНЕХ ЮРАРĔ

Çатракассинче пурăнакан амăшĕ патне Çимун арăмĕпе курма-канма персе çитрĕ. Укахви инке ывăлĕпе кинĕшĕн мĕн тери хĕпĕртенине сăмахпа та каласа параяс çук. Ара, виçĕ çул ытла пулман-çке Çимун ялта. Вăл вăхăтра мăшăрланнă. Акă мĕнле савăнăç йăтăнса инчĕ Укахви инке пуçĕ çине, савăнăçĕпе пĕрлех — хуйхи те.

Иртен пуçласа каçченех хăна пăхать вăл: ывăлне те, кинне те ытлашши ĕç тутармасть. Вĕсем тăнă çĕре урайне сĕрсе каять, лаççа тухса апат пĕçерет, сĕтел хатĕрлет, пуçтарать, кашăк-чашăк çăвать... Сисет-ха амăшĕ, кинне апат килĕшсех каймасть пулмалла: яшкине те çиелтен кăна сыпать, шаркку-пăттине те сире-сире хăварать. Сурăх пустарса шăрттан туса пĕçернĕччĕ, эрнерен ку пĕтрĕ. Аптрарĕ килти повар. Урăх мĕнле тутлă апат хатĕрлĕ. Мĕнпе юрĕ кинне!

Ывăлĕпе кинĕ калаçнă чун ун хăлхине «чахохбили» сăмах ăнсăртран кĕрсе кайрĕ. «Аха, — тавçăрса илнĕ пек пулчĕ вăл, — ăнлантăм, «чăхăпĕли», шур чăх пуль-ха. Пусса çитерес».

Акă ĕнтĕ Укахви инке лаçра ăшталанать, чăх тĕкĕ татма вĕри шыв хатĕрлет. Кÿршĕри Паюç Куçки тем сăлтавпа каçрĕ. Ăна вăл сăра ярса пачĕ, хăй те унпа шаккасах пĕр курка ĕçрĕ.

— Ма пит васкатăн çак? — хыпăнакан хĕрарăмран тĕлĕнсе ыйтрĕ Куçкă.

— Кин чăхăпĕли те чăхăпĕли тет, пĕçерсе парас тетĕп-çке, — хуравларĕ Укахви инке. — Шур чăх ашĕ çиес килнĕ пек ăнлантăм та хама май, пĕлместĕп-ха, те яшкалла тумалла, те шаркулла. Куçкă, хула майрисене мĕнле ытларах кăмăла каять-ши? Пувăрта ĕçленĕскер, эс лайăхрах пĕлен.

Ялан çынран кулма юратакан Паюç Куçки «вĕрентрĕ» кўршине майра апачĕ пĕçерме.

— Тин ăнлантăм, — лăштах пулчĕ Укахви инке, — ялти хĕрарăм нимĕн те пĕлмест-чухламасть тесе ан шухăшлатăр кин, ăнкаратпăр эпир те чăхăпĕли мĕнне.

Куçкă тухса кайсанах вăл кил хушшинче кăтиклесе çўрекен шур чăхсене сарайне йыхăрса кĕртрĕ, самăртараххисене иккĕшне тытса пусрĕ. Повар вĕрентнĕ пек, вĕсен урисене пакăлчакĕ таран татса илчĕ, çатма синче услам çупа сап-сарă пуличчен ăшаларĕ, унта пĕçернĕ çĕрулми, хĕрлĕ помидор, симĕс сухан хушрĕ. Вăрăмрах чăх тĕкĕсене кăшт ĕнтрĕ, çиеле урлă-пирлĕ хучĕ.

Витнĕ сарлака çатма хĕрринчен пăс мăкăрлантарса кĕрсе кайрĕ Укахви инке пўртелле. Савăннипе хăй ăшра юрă ĕнĕрлет: «Кўршĕре, кил урлă, савнă Куçкă пур...» Сĕтел хушшинче пĕрпĕрин куçĕнчен кулкаласа пăхса ларакан ывăлĕпе кинĕ умне шакăрт лартрĕ çатмана.

— Çийĕр, ачамсем, чăхăпĕли пĕçертĕм, тутлă пултăр апачĕ, — терĕ те вăл, чўлмек йăтса, нўхрепе сăра ăсма тухрĕ.

— Симунушка, пăх-ха? Мĕне пĕлтерет ку?! — çатмине васкаса уçнă кин, аллине пĕçертнипе хуппине урайне ўкерчĕ, çавăнтах тутине пăрчĕ. — Каларăм сана Вăрнар ресторанĕнчех чахохбили илсе çиетпĕр тесе. Эс пур, килти чăхха пуссан йўнĕрех ларать, терĕн. Ай, ап-ап.

— Чăн та мыскаралла апат ку, — мăшăрĕн аллине вĕревĕре тĕлĕнет упăшки. — Анне ашне хĕрхенет-ши вара? Е чееленме шутларĕ? Хăв пулăшмастăн та ăна.

Арăмĕ упăшкине чунтанах ăнлантарать:

— Тем пулчĕ мана, пĕртте апат анмасть. Çие юлчĕ-ши. Хуняма ку вырăс кин чăваш апатне тиркет, тет пуль. Пулăшасси-качки... Хăвах каларăн-çке, «эпир канма килнĕ, ĕçлеме мар», терĕн. Эс çи-ха, эп хатĕрленем, уяв каçне кая юлатпăр.

Çимуна арăмĕ сĕтел хушшинчен çинĕ-çимен хăваласа тухрĕ. Пўрте кĕрекен амăшĕнчен кăкшăм илсе кăпăклă сăра ĕçрĕç те, чупрĕç урамалла. Укахви инке ним калама аптăраса тăрса юлчĕ. Сĕтел çинче çатма туллиех апачĕ, такăшĕ кăшт тутанса пăхнă пулас, улмине пăтраткаланă та, ыттине тĕкĕнмен. Çшаланă урасемпе ĕнтнĕ тĕксем анăç енчи чўречерен сăрхăнса кĕрекен хĕвел шевлипе ылтăн тĕслĕн ялтăртатса выртаççĕ. Лаках ларчĕ вăл вăрăм сак çине.

«Мĕн кирлĕ-ши ку кине? Чăвашăн авалхи тутлă апачĕпе, шăрттанпа хăналарăм. Чăхăпĕли текелерĕç — пĕçерсе лартрăм. Мунча чулĕ кирлĕ-им тата? Хăйсем тытса пĕçерес темеççĕ...» Сасăпах пуплешкелесе кил хуçи сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ, чăх урине кăшлама пуçларĕ. Ăшаланă сап-сарă тир хытти те шăмă çеç, урăх ним те çук ĕнтĕ. Аптăранă анне, сăра ĕçрĕ, шухăша кайрĕ.

«Ненай, ку чăхăпĕли-качки хырăма тăрантарма та, тăраннă хырăма саплама та каяс çук. Ашсăр-пăшсăр мĕн апачĕ пултăр Паюç Куçки хыççăн кайсах намăс куртăм пĕртен-пĕр юратнă кинĕм умĕнче».

Тарăхнă Укахви инке каллех пахчана, лаç умне тухрĕ. Карта леш енче Паюç Куçки шăл йĕрсе тăрать:

— Мĕнле унта чăхăпĕли. Майра кинне юрарăн-и?

Хăйĕн авалхи савнийĕ ятлаçнине пăхмасăр Куçкă карта урлă сикрĕ те, кўршине лăплантарма пикенчĕ:

— Тупнă хирĕлмелли те кулянмалли. Кинў пуçу çине вĕри çатма тăхăнтартса лартмарĕ пуль-ха? Тăхта эс, тăхта? Вĕсем таврăннă çĕре иксĕмĕр чăн-чăн чахохбили, грузинсен чи юратнă апатне, пĕçерсе хурăпăр. Пар-ха кунта чăх ашне?

Укахви инке хăлтăклансах кайрĕ:

— Каллех чăхăпĕли! Сана, эсреле, култарам тăлăх арăмран. Хăвах çи, кăшла чăх урине. Круçинсен юратнă апачĕ тесе епрен-ха тата. Чăх урипех пурăнаççĕ пуль ĕнтĕ вĕсем...

Авăк шăрчĕ иртсе кайнă Укахви инке майĕпен кăмăлне çемçетрĕ, улах каçтакине сăра анчах мар, шур эрехне те кăмăллăнах ĕçтерчĕ. Тытăнчĕç вара ĕçе...

Повар темерĕн, питĕ çаврăнăçуллă Паюç Куçкин аллисем. Пулăшма ĕлкĕреймест ăна Укахви. Шăтăр-шатăр вакларĕ те вăл чăх тушкисене, хурана ярса çупа ăшаларĕ. Унтан икĕ стакан пĕçернĕ какай шўрпи, симĕс сухан, томат, пăрăç, уксус, тăвар ячĕ, кĕленчерен шур эрех кăшт силлерĕ, сехет çурă хуллен вĕретрĕ, тăрсан-тăрсан, туранă хĕрлĕ помидор хушрĕ.

Акă, Çимунпа арăмĕ культура çуртĕнчен самай выçса таврăнчĕç. Вĕсем пўрте кĕнĕ çĕре сĕтел çинче виçĕ чашăк пăсланса ларать. Укахви инке ывăлĕпе кинне апата чĕнет:

— Ларăр, ларăр хăвăртрах, ачамсем, ăшаланă чăх ури мар халь, чăн-чăн шур ашах, чăхăпĕли мар, чăн-чăн хамăрăн ча-хох-би-ли.

Ирпе Укахви инке тӗлӗнчӗ. Вӑл тӑнӑ ҫӗре ҫӑка хӑмаран сарнӑ урай та шап-шуррӑн йӑлтӑртатать, лаҫри хуранра та шӳрпе лӑкӑртатса вӗрет... Ҫимунпа арӑмӗ пахчара пуҫ ҫӗклемесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

«Ытла та сиплӗ пулчӗ-ҫке ку чӑхӑпӗли тени. Паюҫ Куҫки вӗрентнипе тинех кине юрама пуҫларӑм», — хӗпӗртӳллӗн пӑхса тӑчӗ вӑл вӗсем ҫине.

Аслӑк ҫинчен вӗҫсе аннӑ шурӑ чӑх, хуҫи тавра кускаласа, чарӑнма пӗлмесӗр юрларӗ: кӑ-кӑ-кӑ, ӑхӑ-хӑ...

## ГЕНЕРАЛЬЧИК

Ача ашшӗпе калаҫать:

— Атте, мӗншӗн генеральнӑй директор мар эс, «Тӑмана» кооперативӗн ахаль директорӗ кӑна?

— Ма апла ыйтатӑн, ывлӑм?

— Пирӗн класри ачасен ашшӗ-амӑшӗ пурин те генеральнӑйсем те...

— Ачамккӑ, эп генерал пуҫлӑх пулмасан та укҫа миххи-миххипе пухатӑп аннӳпе иксӗр валли.

— Тавтапуҫах сана, атте. Анчах та анне...

— Мӗн тет-ха аннӳ?

— Ах, манӑн юратнӑ генеральчикӗм, — тесе пуҫран ачашлать вӑл мана, — ытла аҫу пекех пултӑн: каснӑ-лартнӑ гварди генералӗ. Сан кооперативна та гварди ятне параҫҫӗ-им. Вӑт савӑнӑҫ! Ырантанах эпӗ гварди генералӗн ачи тесе мухтанма пуҫлатӑп.

## ҪӐКӐР-ТӐВАР ХИРЕ-ХИРӖҪ

Хамкин профессор ӗҫрен тухсан вӑрман хӗррипе уҫӑлса ҫӳреме юратать. Вырӑнӗ питӗ илемлӗ-ҫке, хулан симӗс паркӗ чуна ҫӗклентерсе ярать. Кӑмӑл пусӑмне хӑпартмалли капӑр ҫурт кашни утӑмра тенӗ пекех. Пӗрне кӗрсе пӗр стакан пушатать те теприн патне щӑхӑркаласа юрласа ҫитет. Эртел ҫинче тӑп-тӑрӑ пуҫпа курӑнакан хисеплӗ ҫын тепринчен тата теприн патне хавхаланса утнӑ май хальхинче те самаях хӗрчӗ, пӑхать — ун умӗнче прапорщик пакунлӗ виҫӗ

мент тăра парать. Мĕнле-ха капла. Куçа хупсан та, уçсан та виççĕшĕ та Хитров. Пуçа пуçлăх каланă сăмахсем ыраттарса ячĕç: «Хамкин коллега, тем, эсир юлашки вăхăтра ытла та тĕлĕнтермелле тытакан пултăр хăвăра-хăвăр, тен, психиатрпа канашласа пăхатăр?» Сывах-ши тесе вара вăл хăлхине чĕпĕтсе пăхрĕ: самаях ыратать. Туйăм пĕтмен-ха. Çапах та, ялан ĕлкĕрсе пырайман чее студент, университетран кăларса янă хыççăн, асамçă пулса тăнă-шим? Хамкин ăна хăй ертсе пыракан факультетран кăларса çапассишĕн тарăхсах тăрăшнăччĕ, сĕннĕ укçана та илмерĕ. Акă халĕ виçĕ Хитровĕ те аллисене карттус сăмси çумне çĕклесе куларах ыйтрĕç:

— Ăçталла çул тытатăр, хисеплĕ Профссор?

— Кил-ле-лле, Хитров. Çсатса ямăн-ши?

— Хавасах.

— Тав-та-пуç сана, ман-на ман-ман-шăн.

Хитров прапорщик хăйĕн тахçанхи вĕрентекенне машинăна кĕртсе лартрĕ те, Фучик урамĕнчи паллă çурта тĕрĕс-тĕкелех илсе çитерчĕ.

— Халлĕхе сирĕн кил çакăнта пулать, — каллех кулса сывпуллашрĕ сыхлавçă.

Урăлтаркăчра каннă хыççăн Хамкинăн тухтăр патне те каймa кирлĕ пулмарĕ, ректор ăна хăйĕн пӳлĕмĕнчех «сиплерĕ». Тек ĕнтĕ вăл факультет пуçлăхĕ мар, пуртвĕль йăтса çӳрекен профессор кăна. Хуйха çуса тасатас тесе каллех хăйĕн савăк çулĕпе пырать. Хыр урамĕнче куçĕ умне каллех виçĕ Хитров тухса тăчĕ, виççĕшĕ те пĕр саслăн саламларĕç:

— Хэлло, хисеплĕ профессор, çăкăр-тăвар хире-хирĕç.

## ЧУН КАНИЧЧЕН КУЛĂР

Ăш чир-чĕрĕн пĕр пайне медицинăра терапи теççĕ. Терапи тухтăрĕсем этеме ӳт-пĕвне касмасăр эмелпе сиплеççĕ. Пурнăçра çавăн пекех кулă терапийĕ те пур иккен. Кунта вара чи хаклă эмел...

Акă, иртнĕ ĕмĕрте çамрăк американец Норман Казинс психотерапевт кĕтмен çĕртен пурнăçпа вилĕм çулĕсен умне çитсе тухнă. Никам сиплеме пултарайман коллагеноз чирĕ ăна вилĕм çулĕ çинелле кула-кулах туртнă. Норманăн унта

кĕрес килмен, мĕн пур ăс-тăн вăйĕпе вăл пурнăç çулĕ патнех тапаçланнă. Хăйĕнчен куç кĕретех ахăрса мăшкăллакан чире кулăпа çĕнтерме тĕв тытнă. Нимĕн чухлĕ те усă паман сĕнӳ-эмеле аяккалла вашлаттарса сирнĕ те çулталăк тăршшипе пĕр сиктермесĕр камит фильмсем курса чунне кантарнă. Тĕлĕнтермĕш мар-и? Вырăнпа выртакан шанчăксăр çын ура çине тăнă, уççăн сывласа янă. Вăл хăрушă вилĕме кулăпа çĕнтернĕ! Халиччен тĕнчере пулман çĕнĕлĕх сиплевçĕсене кăсăклантарсах янă. Çăмăл меслетпе мĕншĕн ăслайлăн усă курмалла мар-ха? Медицина ăсчахĕсем ăна туххăмрах хăйсен аллине çавăрса илеççĕ. Кĕçех больницăсенче клоун-тухтăрсем ĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ, кулăш семинарĕсем йĕркелесе яраççĕ. Чарăнаймасăр вар хытиччен ахăлтатса кулакан семинаристсем клоун-тухтăр пулăшăвĕсĕр те чирлĕ ытти çынран васкаварлăрах та ăнăçлăрах сывалаççĕ-мĕн. Вĕсем чĕрĕ хаваспа ĕçе тытăнаççĕ, пĕрле тăрмашакансене кулă терапийĕпе хастарлантарса яраççĕ.

Кулăш – ĕçре пулăш тени пурнăçăн чи хăватлă пайĕ пулса тăнине Норман американец наука çывăхнеллех илсе пынине ăнланса, атьăр-ха ĕç коллективĕсенче кулăш тухтăрĕсем хатĕрлер. Клоун е методист пулать-и вăл, ячĕ пур пĕрех, анчах хамăр хушăра çав тухтăр ăмăр çанталăка çут хĕвеллĕ ăшă кунпа улăштарма, усал сывлăш çавра çилне, çиллес кăмăл самантне, салхулăх-пусăрăнчăк хура пĕлĕтне сирсе яма пулăштăр.

Енчен те эсир нумайрах тата сывă пурăнас, пултаруллă хĕрӳ ĕçлес, ĕçре киленӳ тупас, çĕкленӳллĕ, хаваслă канас тетĕр пулсан, ăшри çуралнă ăшă кăмăл-туйăма ан тартăр, яланах хăвăрăн киммӳнте кулă тинĕсĕнче ишнĕн туйма тăрăшăр. Пĕр-пĕрне хирĕç кулкалăр. Сăмахран, пĕр-пĕр профессор-доцента лекци итлекен студентсем харăссăн чĕлхе кăларса кăтартсан та тарăхса вĕсене ятласа ан тăкăр, питĕ ăслă чĕлхӳне хирĕçле çеç евĕклĕн кăтартăр. Вара пӳлĕмре çуралнă кулă пурне те ыйхăран вăратĕ, сирĕн те сехет çине пăха-пăха пуçа çĕклемесĕр текст вуламалла пулмĕ, академи сехечĕ те сисмесĕрех иртсе кайĕ. Студентсен те, сирĕн те кăмăл-туйăм çиччĕмĕш пĕлĕте çити ахăлтатса вĕçĕ.

Пĕлес-тĕк, савăк та пуçа усман çын вăл пур çĕрте те яланах тухăçлă ĕçлет, ыттисенчен сахалрах чирлет, нумай-



рах пурӑнать те. Сӑлтавӗ акӑ мӗнре иккен. Кулӑ-кулӑш-ахӑрав чун хаваллӑхӗн ӳт-пӳри шалти секреци текен парсене (гормон) – эндорфинсене кӑларса пуянлатма пулӑшать. Гормон-эндорфин вара сывлӑша уҫать, чӗре таппине, юн пусӑмне йӗркене лартать. Кулма пӗлни-пултарни ӳпкен вӗркӗчне кал-кал ҫеммӗн хашлаттарать, ҫавна май юна ытларах кислород хутшӑнать. Ӳпке хӑех ҫемӗҫӗнсе, чӗррӗн сывлать. Ҫакна Норман Казинс тухтӑр медицина енӗпе те, кулленхи пурнӑҫ нушипе те ӑнланмаллипех ӑнланнӑ, ҫавӑнпа та пурнӑҫ ҫулӗн юппинче татӑклӑ шухӑшне ҫирӗплетнӗ – ӗмӗрне тӑснӑ.

Атьӑр-ха эпир те, аялти хутран патша хутне ҫитиччен, пӗрне-пӗри чи малтан кулӑ парнелӗр, хаваслӑх, ыр кӑмӑллӑх тӗнчинче савӑнса пурӑнӑр.

# Тупмалли

Тивсырма кимĕнĕ ... 3
Ача такамран та пулать ... 6
Пурăнатпăр малялля ... 8
Мухмурдини ... 11
Чапайкăпа Чупайка ... 14
Суйлавçăсемпе депутатсем хушшинче ... 19
Сĕлĕхлĕ-шапаллă ылтăн енчĕкĕ ... 20
Пуринчен те чи-чи ... 23
Ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкĕ ... 24
Пурнăçра пурте хăй майлă-хăймаллă ... 28
Васкаман «васкавлă пулăшу» ... 29
Ял-ял тăрăх ялт сиксе ... 36
Çивчĕ сăмах чĕлхе çинчех ... 44
Пурнас йытта вĕлерсе ... 45
Янсарина сасси ян каять ... 49
Çылăхлă тутăр ... 51
Шуйттан мăйраки шӳрпи ... 55
Тавах Турра! ... 59
Çăлăнăç ... 61
Вăрăм çул телейĕ ... 64
Çыравçăсен палкавĕнчен ... 67
Çурăк валашка умĕнче ... 69
Сыхлăх хуралĕнче ... 72
Миллион хут кулсан ... 73
Кулăш лавĕ пуçра тулсан ... 75
Ака туйĕнче – «Хыпар» уявĕнче ... 76
Мăлатукла çапма пĕлсен, сунтал та кĕвĕллĕн янăрать ... 78
Пĕлтеру усăллă — пулăшать ... 80
Çĕраллă Павăлĕ ... 83
Чăваш эзопла калаçать ... 86
Эзоп чăваш лачакинче те путман ... 89
Хумсем хăш çырана çапаççĕ ... 90
Тамăк хуранне вăрлани ... 93
Виталий Енĕшĕн кулăш тĕнчи вĕçĕ-хĕррисĕр анлă ... 96
Чăмăр çиçĕм пулăшăвĕ ... 100
Çапăçу - çураçу ... 103
Виç Çавал кулли ... 104
Йĕпреç ен кулать чеен ... 118
Ĕçри тус-юлташа епле-ха манăн ... 134
Арăм чупма пуçласан ... 145
Кам чеерех ... 149
Паянов-Баянов кум оркестрĕнче ... 151
Çĕнепнĕ кĕвĕ ... 154
Киннетинех юрарĕ ... 155
Генеральчик ... 158
Çăкăр-тăвар хире-хирĕç ... 158
Чун каниччен кулăр ... 159



## Владимир Прокопьевич Кузьмин

# КАК УКРАЛИ АДСКИЙ КОТЕЛ

Издается в авторской редакции

Технический редактор *Михайлова ИёОё*
Компютерная верстка *Смеловой Н.Ю.*

Оригинал-макет издательства «Новое время»

Подписано к печати 15.12.2006.
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Физ.-печ. л. Тираж 3000 экз. Заказ № 2.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г.Чебоксары, ул.М.Павлова, 50/1. Тел.: 41-27-98, 46-43-46.

# ОАО СК "ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА

INSURANCE "CHUVASHIA-PODDERZHKA" JSC

г. Чебоксары, пр. Мира, д.90 корп.1,
Тел.: (8352) 56-95-17; 56-94-84; Факс: 56-98-73
E-mail: podderjka@nchk.ru




ПРЕЗИДЕНТ И ГЕНЕРАЛЬНЫЙ ДИРЕКТОР КОМПАНИИ BUSINESS INITIATI DIRECTIONS ХОСЕ Э. ПРИЕТО ВРУЧАЕТ ПРИЗ МЕЖДУНАРОДНОЙ ЗВЕЗД ЗА КАЧЕСТВО В ПЛАТИНОВОЙ КАТЕГОРИИ ГЕНЕРАЛЬНОМУ ДИРЕКТОР ОАО СТРАХОВАЯ КОМПАНИЯ "ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА" З. В. ВОРОБЬЕВ

# ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА СТРАХОВЩИКОВ

ОТКРЫТОЕ АКЦИОНЕРНОЕ ОБЩЕСТВО СТРАХОВАЯ КОМПАНИЯ «ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА» УСПЕШНО РАБОТАЕТ НА СТРАХОВОМ РЫНКЕ ЧУВАШИИ С 1992 ГОДА. В ОТЛИЧИЕ ОТ МНОГИХ СТРАХОВЫХ ОРГАНИЗАЦИЙ ОНА ИМЕЕТ СТАТУС ЮРИДИЧЕСКОГО ЛИЦА И ЗАРЕГИСТРИРОВАНА В ЧЕБОКСАРАХ. БЛОКИРУЮЩИЙ ПАКЕТ АКЦИЙ КОМПАНИИ (28,47 ПРОЦЕНТА) НАХОДИТСЯ В СОБСТВЕННОСТИ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ. КОМПАНИЯ НЕ ТОЛЬКО ДИНАМИЧНО РАЗВИВАЕТСЯ И ИМЕЕТ УСТОЙЧИВОЕ ФИНАНСОВОЕ ПОЛОЖЕНИЕ, НО И УЧАСТВУЕТ В РЕАЛИЗАЦИИ ПРАВИТЕЛЬСТВЕННЫХ РЕШЕНИЙ, НАПРАВЛЕННЫХ НА ПОВЫШЕНИЕ ЭКОНОМИЧЕСКОГО ПОТЕНЦИАЛА РЕСПУБЛИКИ. ОДНИМ ИЗ ПРИОРИТЕТОВ В ДЕЯТЕЛЬНОСТИ КОМПАНИИ ЯВЛЯЕТСЯ СТРАХОВАНИЕ УРОЖАЯ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫХ КУЛЬТУР. БОЛЕЕ 90 ПРОЦЕНТОВ СЕЛЬХОЗПРЕДПРИЯТИЙ РЕСПУБЛИКИ ЗАКЛЮЧАЮТ С КОМПАНИЕЙ ДОГОВОРЫ СТРАХОВАНИЯ УРОЖАЯ, В ТО ВРЕМЯ КАК ПО РОССИИ ЭТА ЦИФРА СОСТАВЛЯЕТ ОКОЛО 20 ПРОЦЕНТОВ. КОМПАНИЯ ЯВЛЯЕТСЯ РЕГИОНАЛЬНЫМ СТРАХОВЫМ КООРДИНАЦИОННЫМ ЦЕНТРОМ ФЕДЕРАЛЬНОГО ГОСУДАРСТВЕННОГО УЧРЕЖДЕНИЯ «ФЕДЕРАЛЬНОЕ АГЕНТСТВО ПО ГОСУДАРСТВЕННОЙ ПОДДЕРЖКЕ СТРАХОВАНИЯ В СФЕРЕ АГРОПРОМЫШЛЕННОГО ПРОИЗВОДСТВА» ПРИ МИНСЕЛЬХОЗЕ РОССИИ ПО ОРГАНИЗАЦИИ СТРАХОВАНИЯ В АГРОПРОМЫШЛЕННОМ КОМПЛЕКСЕ НА ТЕРРИТОРИИ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ.

В 2004 ГОДУ «ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА» НАГРАЖДЕНА «ЗОЛОТОЙ КОРОНОЙ КАЧЕСТВА» — МЕЖДУНАРОДНЫМ ПРИЗОМ ОБЩЕСТВЕННОГО ПРИЗНАНИЯ ЗА ЗАСЛУГИ И ДОСТИЖЕНИЯ В ЛИДЕРСТВЕ В УПРАВЛЕНИИ БИЗНЕСОМ, КАЧЕСТВЕ УСЛ ИСПОЛЬЗОВАНИИ ПЕРЕДОВЫХ ИННОВАЦИОННЫ ТЕХНОЛОГИЙ. В МАЕ 2005ГОДА НА 22-ОЙ МЕЖДУНАРОДН КОНВЕНЦИИ WORLD QUALITY COMMITMENT КОМПАН ВРУЧЕН ПРИЗ МЕЖДУНАРОДНОЙ ЗВЕЗДЫ ЗА КАЧЕСТВО ПЛАТИНОВОЙ КАТЕГОРИИ. «ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖК ЯВЛЯЕТСЯ ЧЛЕНОМ МЕЖРЕГИОНАЛЬНЫХ, ФЕДЕРАЛЬН И МЕЖДУНАРОДНЫХ ОБЩЕСТВЕННЫХ ОБЪЕДИНЕН СТРАХОВЩИКОВ.





"ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА" ИСПОЛЬЗУЕТ ИННОВАЦИОННЫЕ ТЕХНОЛОГ